№ 4010

# ТĂВАН АТĂЛ

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН СОЮЗĔ
КĂЛАРАКАН АЛЬМАНАХ

## 31
КĔНЕКЕ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Всесоюзной Книжной Палате
7 февраля 1948 г.
№ 122

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар—1947

# Аслă Мускава

***Чăваш поэчĕсен саламĕ***

*Тăванран тăван хуламăр,*
*Мĕнпур халăх чĕринчен*
*Юратса салам яратпăр*
*Аслă Атăл хĕрринчен!*

*Кĕрлесе тăр, савăнса тăр,*
*Сакăр çĕр çулхи Мускав!*
*Ĕмĕрсем хушши эс паттăр,*
*Тавтапуç сана, мухтав!*

*Авалтан эс хӳтĕленĕ*
*Чăваш халăхне, пире,*
*Ху ачу пек хисепленĕ*
*Яланах историре.*

*Пĕрре мар, вут та кăварлă*
*Вăрçăсем пынă чухне*
*Вилĕмрен çăлса хăварнă*
*Çĕршыври халăхсене.*

*Çавăнпа та пирĕн халăх*
*Чи таса кăмăлĕнчен*
*Хунă ĕмĕр асăнмалăх*
*Юрăсем Мускав çинчен.*

*Шĕкĕр хулана таптасшăн*
*Тăшмансем хăпса килсен,*
*Вырăспа пĕрле чăвашăн*
*Тухнă харсăр ачисем.*

*Таврана хăрушă çулăм*
*Хыпнă-ялкăшнă чухне*
*Чăвашсем те паттăр çулнă*
*Хапсăнчăк хурахсене.*

*Пирĕн халăх ырă ячĕ*
*Пĕрре мар историнче*
*Çырăннă Мускав хăвачĕн*
*Авалхи кĕнекинче.*

* * *

*Тăванран тăван хуламăр,*
*Мĕнпур халăх чĕринчен*
*Юратса салам яратпăр*
*Аслă Атăл хĕрринчен!*

*Тăвăллă Октябрь вучĕ*
*Пусмăра шăлса тăксан,*
*Халăх кĕтнĕ ирĕк хучĕ*
*Килчĕ çута Мускавран.*

*Кремльте юратнă Ленин*
*Алă пуснă ун çине.*
*Вăл пире çырса пилленĕ*
*Автономи декретне.*

*Ленин пурăннă Мускавăн*
*Çуттисем чăваш хирне*
*Çитнĕ кун эпир мухтавлăн*
*Тухрăмăр тĕнче умне.*

*Çут хĕвел, телей кăварĕ,*
*Ылттăн тăрлă Кремльтен*
*Тухрĕ те вара анмарĕ*
*Янкăр уçă пĕлĕтрен.*

*Çавăнтан вара пуçланчĕ*
*Тулăх пурнăç тăвасси,*
*Çавăнтан вара çухалчĕ*
*Хурлăхпа инкек сасси.*

*Мускавра Ленинпа Сталин*
*Пирĕншĕн тăрăшнипе*
*Малалла çул тытрĕ халăх*
*Пур хастарлă вăйĕпе.*

* * *

*Тăванран тăван хуламăр,*
*Мĕнпур халăх чĕринчен*
*Юратса салам яратпăр*
*Аслă Атăл хĕрринчен.*

*Юратса эпир çыратпăр.*
*Çырăва шăратнă май*
*Санăн ырлăхна, хуламăр,*
*Мухтама сăмах нумай.*

*Кӗнеки пулман чӑвашӑн*
*Ывӑлӗ-хӗрӗсене*
*Чӗнсе лартрӑн эс ачашшӑн*
*Вӗренӳ сакки ҫине.*

*Ҫамрӑксем ҫӗршер-пиншерӗн*
*Хатӗрленчӗҫ тӑрӑшса.*
*Агрономӗ, инженерӗ*
*Кирлӗ пулчӗ чӑваша.*

*Савӑнчӗ чӑваш ҫӗршывӗ*
*Заводсем кӗрленипе,*
*Машинсен янравлӑ шавӗ*
*Хир-хир тӑрӑх кайнипе.*

*Хӑмӑш пек ӑнса хумханчӗ*
*Ылттӑн тӗшлӗ тырпулли,*
*Кӗрсерен кӗрсе капланчӗ*
*Ялсенче пӳлме тулли.*

*Тӗрлӗрен нумай професси*
*Илтӗмӗр, Мускав, санран.*
*Пирӗн летчиксем вӗҫеҫҫӗ*
*Пӑрлӑ тинӗссем таран.*

*Йышлӑн ӳсрӗҫ пирӗн халӗ*
*Композитор та артист.*
*Вӑййисен юрри-хавалӗ*
*Мускавра та илчӗ чыс.*

*Каласа иртесчӗ пирӗн*
*Ҫакӑ пӗчӗк ҫырура:*
*Эс куллен пӑхса ӳстертӗн*
*Шӑллуна — Шупашкара.*

*Вырӑс халӑхӗн культури*
*Ҫулленех вӗрентнӗрен*
*Пирӗн халӑх пурнӑҫ турӗ,*
*Хӑтӑлчӗ тӗттӗмлӗхрен.*

*Ҫавӑнпа та пирӗн халӑх*
*Хапӑллать Мускав ятне.*
*Тав туса калать вӑл халӗ*
*Хӑйӗн пысӑк саламне.*

*Пархатарлӑ пулӑшнишӗн*
*Тавтапуҫ сана, Мускав!*
*Ирӗк ҫулшӑн, ҫутӑ куншӑн*
*Аслӑ Сталина — мухтав!*

* * *

*Тăванран тăван хуламăр,*
*Пĕтĕм халăх чĕринчен*
*Юратса салам яратпăр*
*Аслă Атăл хĕрринчен!*

*Пĕлĕт пек фашист эшкерĕ*
*Каплансан Мускав хирне,*
*Ăмăрткайăк пек çĕклерĕ*
*Пирĕн халăх хăй йышне.*

*Атăл хумĕ пек пĕр харăс,*
*Пĕр килте çуралнă пек,*
*Çапăçма çĕкленчĕ вырăс,*
*Белорусс, чăваш, узбек...*

*Çĕр те каç татти-сыпписĕр*
*Пытăмăр тăшман çине.*
*Хиртĕмĕр кана пĕлмесĕр*
*Фашистла хурахсене.*

*Ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалăх*
*Вирлĕн çапăçнă чухне*
*Пурнăçларĕ пирĕн халăх*
*Аслă Сталин приказне.*

*Ĕмĕтсĕр фашист эшкерĕ*
*Тупрĕ хăй валли çăва,*
*Таптаймарĕ, кĕреймерĕ*
*Пирĕн паттăр Мускава.*

*Çăлтăрсем çаплах çунаççĕ*
*Ватă Кремль çийĕнче,*
*Салютсем кунта янраççĕ*
*Уявсем вăхăтĕнче.*

* * *

*Тăванран тăван хуламăр,*
*Мĕнпур халăх чĕринчен*
*Юратса салам яратпăр*
*Аслă Атăл хĕрринчен!*

*Сан чапна тăшман илеймĕ.*
*Эсĕ çулăм! Эс вĕри!*
*Эс, Мускав, тĕнче илемĕ,*
*Чи хăватлă çĕр чĕри.*

*Сакӑр ҫӗр ҫулта та эсӗ*
*Ҫамрӑк та чипер, хитре.*
*Сан пек хӳхӗм ҫӗр кӗтесӗ*
*Ҫук ниҫта та тӗнчере.*

*Мускавра ҫырса кӑларнӑ*
*Сталин халӑх ӗмӗтне —*
*Тӗнчери чи пархатарлӑ*
*Аслӑ Конституцине.*

*Хутӑмӑр чи лайӑх юрӑ*
*Купӑспа кӗсле ҫине.*
*Савӑнса телейлӗ пурӑн*
*Ӗмӗр-ӗмӗр малашне!*

*Сан яту ялан ҫуталӗ,*
*Вӑй выляне чӗрӳнте,*
*Ма тесен аттемӗр Сталин*
*Пирӗн шанчӑк — Кремльте.*

**Халӑх поэчӗ Семён ЭЛЬГЕР,**
**УЙАП Мишши,**
**Александр АЛГА,**
**Аркадий ЭСХЕЛЬ,**
**Яков УХСАЙ,**
**Стихван ШАВЛЫ,**
**Илья ТУКТАШ,**
**Николай ЕВСТАФЬЕВ.**
**Иван МАЛГАЙ.**

КУЗЬМА ТУРХАН

# Йӑмраллӑ ял

*роман*

## ПӖРРЕМӖШ КӖНЕКЕ

Яла тухсан—ят аслӑ,
киле кӗрсен—чыс аслӑ.
*Ваттисен сӑмахӗ.*

### I

Фронтовиксене парне леҫме делегаципе кайнӑ Кӑтра Михалана колхозниксем кунӗн-ҫӗрӗнех кӗтрӗҫ. Вӑл кайнӑранпа ик эрне ытла иртрӗ ӗнтӗ, старик ҫук та ҫук. Вӑл ҫавҫавах правленине пыманнине кура ялти ҫынсенчен хӑшӗ-пӗрисем Михала арӑмӗ Кӗтерне инке патне киле пыра-пыра кайрӗҫ. Мӗнле те пулин сӑлтавпа кӗреҫҫӗ те тӳрех ун пирки ыйтаҫҫӗ.

— Михала пичче халӗ те килмерӗ-и ҫак?

— Ҫук-ха.

— Ӑҫта ҫухалчӗ вӑл? Нимӗҫсем вӗлермерӗҫ-и ӑна?

— Вӗлермен пулӗ-ха, килет пулӗ-ха, — терӗ Кӗтерне инке кашнинчех. Анчах вӑл хӑй те упӑшкине самаях сехӗрленсе кӗтме пуҫларӗ. „Чылайӑшсем ҫапӑҫава кӗреймеҫҫӗ тесе калаҫаҫҫӗ, фронта ҫитиччен ех бомба айне пулса вилеҫҫӗ, тет. Нимӗҫ фронталла каякан эшелонсене питӗ тапӑнать, тет. Михала ҫапла пӗр тӑрлавсӑр ан пӗттӗр“, — пӗрре ҫеҫ мар шухӑшларӗ вӑл ӑшӗнче.

Михала пиччен фронта колхоз председателӗ Левентей выранне кайма тиврӗ. Хӑйне районран чӗннӗ кун йӑмшакрах сывлӑхлӑ Левентей аптраса ӳксе вырӑн ҫинчех выртатчӗ, ҫавӑнпа та иккӗмӗш хутӗнче делегаципе кайма колхозри чи лайӑх бригадира Кӑтра Михалана чӗнсе илчӗҫ. Унчухне пӗтӗм колхозниксем хулана каякан ҫул хӗрринче урпа ҫумлатчӗҫ. Михала пичче фронта каять тенине илтсенех вӗсем, пурте ҫул хӗррине тапса тухрӗҫ те старике вӑрҫа каякан ҫынна ӑсатнӑ пек ӑсатрӗҫ. Кун хыҫҫӑн вара ӑна ял ҫыннисем чунтанах кӗтрӗҫ.

Кӑтра Михала шӑп хӑйне кӗтмен сехетре — тул ҫутӑлсан ҫитрӗ. Ҫемьи ирхи апат ҫисе ӗҫе кайма хатӗрленнӗччӗ, ҫав хушӑра алӑк уҫӑлчӗ те, пӳрте ҫул ҫинче ывӑнса халтан кайнӑ Михала кӗрсе тӑчӗ.

— Ак çухалнӑ çын çитрӗ, — терӗ Кӗтерне инке.

— Çухалнӑ çын? Эсир мана çухатнӑччӗ-и?

— Ара. Эпир сана тахçанах вилнӗ тесе шутлатпӑр. Ик эрне ытла иртрӗ те ӗнтӗ...

— Апла мана асӑнса икерчӗ те пӗçерсе çирӗр пулӗ? — кулчӗ Михала.

— Паян пӗçерес тенӗччӗ.

— Вот пӑх та кур: эпӗ, кусем маншӑн çунаççӗ пулӗ-ха тесе, çӗрхута килтӗм, кунта ман ятпа икерчӗ çиме васкаççӗ.

Вӗсен хӗрӗсем, Анушкапа Укахви, ашшӗпе амӑшӗн яланхи пекех шӳтлерех тухакан калаçуне ним чӗнмесӗр итлесе тӑчӗç. Ашшӗ салтӑннине пӑхса тӑракан Анушка çакна асӑрхарӗ: паян ашшӗн шӳт тума ытлашши кӑмӑл та çук, вӑл çав тери ывӑннӑ, сасси те ун кӑшт хӑрӑлтатарах, самаях вӑйсӑррӑн тухать. Кӑна Кӗтерне инке те сисрӗ пулас, каннӑ хыççӑн каçхине калаçӑпӑр тесе вӑл упӑшкинчен нимех те ыйтса пӗлсе тӑмарӗ, сӗтел çине апат хатӗрлесе пачӗ те хӗрӗсене ӗçе кайма чӗнчӗ.

— Ак кунта тинкӗле пур, çикеле, çывӑрма чаршав хыçне тух, эпир васкатпӑр-ха, — терӗ вӑл, алӑк патнелле утса.

— Тӑр кӑнтӑрла çывӑрса выртас-и ӗнтӗ манӑн? — ал çума пикенсе çиллессӗн каласа хучӗ Михала пичче.

— Ывӑннӑ хыççӑн çывӑрмасӑр? Пӑртак кан ӗнтӗ...

— Тавах ыр сӑмахушӑн...

Аслӑ хӗрӗ Анушка ашшӗн ку сӑмахӗсенчен тата вӑл çак сӑмахсене каланӑ май çаврӑнса амӑшӗ çине куç шуррисемпе пӑхса илнинчен тӗлӗнсех кайрӗ. „Çук, ку ывӑннинчен мар, атте темле ывӑнсан та кун пек тарӑхса калаçакан марччӗ, — терӗ вӑл. — Ун кӑмӑлӗ фронтри йывӑрлӑхсене курнӑран пӑсӑлнӑ пулас“. Кӑна вӑл хӑйӗн ӑсӗпе çапла ӑнланчӗ: вӑрçӑ пӗтесси курӑнмасть-ха, фронтра ӗçсем начар, савӑнӑçлӑ хыпарсем кӗтме иртерех-ха.

Хӗрарӑмсем яракуна ӗçре irттерчӗç. Амӑшӗ фермӑра хӑйӗн ӗнисемпе айкашрӗ, хӗрӗсем çырма хӗрринче купӑста çумларӗç. Кӑтра Михала чӑнах та апат çисенех хӑйӗн бригадине кайрӗ. Вӑл унта мӗн каç пуличченех ӗçлетчӗ пулӗ, анчах кӑнтӑрла тӗлӗнче ӑна Левентей правленине чӗнни çинчен пырса каларӗç.

Левентей ялта Кӑтра Михалан чи юратман çынни пулнӑ. Çак вӑтам пӳ-силлӗ, тирпейлӗ, хитре сӑнлӑ тата япшар чӗлхеллӗ çамрӑка вӑл нимле ӗçе юрӑхсӑр çын тесе шутланӑ. Вӑл лайӑх тумланса çӳренӗ, хӑйне такшин умӗнче те чипер тытма пӗлнӗ, пурин кӑмӑлне те кайма тӑрӑшнине пула ытлашши никампах та вӑрçман. Вӑрçӑччен вӑл вулав çуртӗн заведующийӗ пулса ӗçленӗ, унтан ялхуçалӑх институтӗн пӗрремӗш курсне кайса кӗнӗ. Институт ӑна кӑмӑла кайман, вӑл темиçе уйӑхранах яла таврӑннӑ. Ку вӑхӑтра шӑп кӑна колхоз председателӗ фронта тухса кайнӑ пулнӑ, колхозниксем вара ӑна,

ухсахскерне, вăл пурпĕрех вăрçа каяс çук тесе, председателе суйласа лартнă. Кăтра Михала ун чухне районра виç эрнелĕх курсра пулнă, çавăнпа та вăл ку ĕçе пĕлмесер тăрса юлнă. Тен, Кăтра Михала татăклă сăмах каланă пулсан, Левентее суйлас та çукчĕ пулĕ. Колхоз çав-çавах нимле ĕçре те кая юлманнине курса, çынсем Левентее хурласа калаçсах кайман. Вăл района канашлусене çӳренĕ, унта сăмахсем тухса каласа хăйĕн колхозне ырланă, ялта пухусем туса иртіернĕ. Уя вăл нихçан та тухса курман, çуракине бригадирсем ертсе пынă, фермăра унсăрах йĕрке пулнă. Кăтра Михала кунтан тĕлĕнмен: колхозра хăйсен ĕçне юратакан, колхоз хуçалăхĕшĕн çунакан çынсем сахалах пулман, вĕсем ĕçе никам пырса хăваламасăрах йĕркеллĕ тунă. Çапах та ĕç нумай вăхăт хушши хăй тĕллĕн пулса пыма пултарайман, колхозра унта та кунта йĕркесĕрлĕх палăра пуçланă. Çынсем ĕлĕкхи председателе час-часах аса илнĕ, Кăтра Михала пек хăюллăраххисем Левентее ĕçе кăйттăм-кайттăм туса пынăшăн куçкĕретĕнех вăрçнă. Начар председатель пулнине, халăх ăна юратманнине Левентей хăй те пĕлнĕ, анчах вăл ĕçрен тухма васкаман, тĕрĕссипе каласан, ку вырăн ăна чылай енчен кăмăла кайнă. Ытла йывăр чухне тата кампа та пулин урлăрах пулнă чухне вăл ĕçе пăрахса вĕренме каяссипе хăратнă.

Левентейĕн Михала пиччене кăмăла кайман чи начар енĕ хăйне пуçлăх вырăнне хурса ĕçлĕ çынсене вĕçĕмсĕр правленине чĕнтерни пулнă. Çынсем хăйсем ун патне пыма юратман, мĕншĕн тесен, вĕсем Левентей кирли нимех те калас çуккине лайăх пĕлнĕ. Кăтра Михала тепĕр чухне, хăйне чĕнсен, ун патне каймасăр та тăркаланă. Анчах кунниче каяс пулать: халĕ вăл фронта епле кайса килни çинчен пĕлесшĕн ĕнтĕ.

Вăл пырса кĕнĕ чухне Левентей пĕчченех кĕнеке вуласа ларатчĕ. Кăна курсан старик çав тери тарăхса кайрĕ, вăл ăна нимĕн çинчен те каласа памастăп тесе сăмах пачĕ.

— Вулатăн? — терĕ Михала пичче, кăмăлсăррăн алă тытса.

— Пĕр интереслă кĕнеке тупрăм та вулатăп-ха.

— Кунта вулама чылай сулхăн пулмалла. Шăна та çыртмасть.

— Эс мĕнле кайса килтĕн, çавăн çинчен тĕплĕрех каласа кăтарт-ха, — сăмаха пăрса яма тăрăшрĕ Левентей.

— Аван кайса килтĕм. Бомбăсем тăкăннине куртăм. Эх, çакна Левентее кăтартасчĕ, вара вăл ĕç вăхăтĕнче кĕнекесем вуласа лармĕччĕ тесе шухăшласа тăтăм бомбăсем ӳкнĕ чухне.

— Эс ялан шӳт тăвассипе.

— Çук, эп санпа пĕрре те шӳт тума шутламастăп.

— Ну, кала часрах, епле кайса килтĕн?

— Аван кайса килтĕм, — пĕр сăмахпа тавăрчĕ Михала пичче. — Эсĕ мана паян пуху пуçтарса пар, манăн делегаципе

фронта кайса килни пирки колхозниксене каласа кӑтартас пулать. Шупашкарта ҫапла хушрӗҫ.

— Уншӑн пуху пухса чӑрманма кирлӗ-ши? Мӗнех калӑн эсӗ вӗсене? — терӗ Левентей, ун ҫине чее куҫӗсемпе пӑхса.

— Тупатӑп каламалли, эс пухса ҫеҫ пар, — ҫине тӑчӗ Михала пичче.

— Пухмаллах пулсан, пухӑпӑр.

— Пух, пух, ҫавӑнпа председатель те эсӗ.

— Мӗн эсӗ, Михала пичче, паян пит хиврe? — терӗ Левентей, старик ирӗксӗртен калаҫнине кура. — Председатель... председатель. Пул эппин ху председатель! Эп пӗркунах ыйтрӑм-ҫке сиртен мана часрах кӑларӑр тесе.

— Ан васка, суйлавӑ тӑк — ӗҫле, айккинелле ан пӑх, — татса каларӗ Михала пичче.

— Ӗҫлеместӗп, пурпӗрех вӗренме каятӑп. Мӗн тума кирлӗ мана сирӗн колхозӑр? Председатель пулмасан, эп халь алла кӗсъене чиксе кӑна ҫӳремелле.

— Эпир сана агронома тухма вӗренме янӑччӗ-ҫке, мӗншӗн вӗренмерӗн?

— Ҫер хурчӗ пулмастӑп эпӗ, Михала пичче.

— Курӑпӑр мӗн хурчӗ тухӗ санран, ӗҫ ҫине капла пӑхсан.

— Мӗн те пулин тухать, ан васка.

— Иртерех-ха апла? — виртлешме чарӑнмарӗ Михала пичче. — Ман шутпа, ҫирӗм пиллӗкрен иртнӗ ӗнтӗ, вӑхӑт. Ҫунатсем сарӑлнӑ пек. Ахальтен мар председателе суйланӑ...

— Эс кун пек калаҫакан марччӗ-ҫке нихҫан та, ялан шӳт тӑваканччӗ. Паян мӗн пулнӑ сана? Чӗрре кӗрсе кӑна тӑратӑн.

— Лаши май пушши, ҫынни май сӑмахӗ, теҫҫӗ. Ҫемҫе сӑмахсем ниепле те чӗлхе вӗҫне килмеҫҫӗ санпа калаҫнӑ чух.

— Ну, юрӗ, ан вӑрҫ, каламаллине пухура каласа парӑн, — килӗшӳ сӗннӗ пек ҫемҫен сӑмах хушрӗ Левентей.

Михала пичче ӑна пӗр тытӑннӑ чухне ытларах вӑрҫасшӑнччӗ, никам ятламаннине ятласа, намӑслантарса пӗтересшӗнччӗ, анчах унтан мӗн усси пулӗ? Вӑл пурӗ-пӗр сӑмаха чӗре патне хума пӗлмест, пӗр хӑлхипе итлет те тепӗр хӑлхинчен кӑларса ярать. Тепӗр ҫын ҫакӑнта ун вырӑнӗнче хӑмач пек хӗрелсе, ним чӗнеймесӗр лармалла, Левентей пур тем каласан та хӑнк та тумасть, вӑл вырӑнтан та хускалмарӗ, кӗнекине те аллинчен пӑрахмарӗ.

Каҫхине, тӗттӗм пулас умӗн, колхозниксем пурте правлени ҫурчӗ умне пуҫтарӑнчӗҫ. Ытла пӑчӑ пулнӑран ҫынсем пӳрте кӗрес мар терӗҫ, Левентей пӳлӗмӗнчи сӗтеле илсе тухрӗҫ те, пуху тултах пуҫланчӗ. Михала телейне колхоза районран лектор килнӗ иккен. Вӑл халӑха пӗтӗм тӗнчери лару-тӑру ҫинчен каласа пачӗ, ун хыҫҫӑн тин вара сӑмах Кӑтра Михалана тиврӗ.

— Эпĕ каласма ăстах мар, сире нумаях тытмăп, — терĕ Кăтра Михала хăйне сăмах парсан.

— Çук, эс пире тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтарт, — сăмах хушрĕ такăшĕ.

— Йăлтах кала, йăлтах!

— Хамăр ялсем мĕнле çапăçни çинчен кала!

— Фрицсене хăвăн куçупа куртăн-и эс унта, Михала пичче?

— Генералсемпе мĕнле ĕçрĕн?

— Ан кăшкăрăр, чарса тăратăр!

Çав хушăра пухăва çырма леш енчи Турикасри „Çĕнĕ пурăнăç" колхозран та çирĕм-вăтăр çын килсе тухрĕç. Вĕсем вырăнаçса ларсан вăра Михала пичче, сăмси çине йĕс кăшăллă куçлăхне лартса ячĕ те, хăйĕн кăтра çӳçне якаткаласа, сăмахне пуçларĕ.

— Республикăри малта пыракан çынсемпе пĕрле мана фронта кайса килме тӳр килчĕ. Делегацине колхозсенчен, хулари заводсенчен чи лайăх ĕçлекен çынсене янă. Пурте тенĕ пекех орденоносецсем, мана, орденсăр-мĕнсĕр çынна, вĕсем хушшинче çӳреме аван та мар пулчĕ темелле. Çапах, пĕрлешсе кайнă хыççăн, ыттисенчен катăк тытмарăм хама. Тата çыннисем те пурте лайăххисем пуçтарăннă: калаçаççĕ, кулаççĕ, мана, старик тесе, пыра-пыра пулăшаççĕ, пурте простой çынсем, ик эрне хушшинче мухтанса каланă пĕр сăмах илтмерĕм. Пуçлăх пирĕн чăвашах, Шупашкарта аслă вырăнта ĕçлекен Зоя Ананьевна текен хĕрарăм пулчĕ. Калама çук кăмăллă хĕрарăм.

Ну, халь фронта епле çитни çинчен йĕркипе каласа парам. Канашра эпир вагонсене темĕн чухлĕ япала тиерĕмĕр. Пĕтĕмпех парне памалли япаласем: кĕрĕк-пиншак, алшыш, шаритленĕ чăх, колбаса, табак, типĕтнĕ шур çăкăр, хуткупăс тата леш, баян текенни, темиçе. Пĕр каçхине пирĕн вагонсене çар поездĕнчен кăкарса ячĕç. Часах пĕтĕм эшелон тапранса та кайрĕ. Пире, делегаципе каякансене, Канашри завод юри туса хатĕрленĕ вĕрçĕнĕ вагона вырăнаçтарчĕç. Унта выртма та, ларма та лайăх вырăнсем пур. Анчах пирĕн вырттас та, ларас та килмест, эпир вĕçĕмсĕр чӳречерен пăхатпăр. Эпĕ çĕрле те, кăнтăрла та куç хупаймарăм. Пĕр командирĕ мана: „Ай, канăçсăр старик пулмалла эс, колхозра та çапла ыйăхна вĕçтерсе ĕçлетĕн-и?" тет. „Вăй çитнĕ таран ĕçлетĕп, иртнĕ çул ман бригада гектартан 100 пăт ытларах ыраш туса илнĕ" тетĕп. „Хăш колхозран?" тет. „Молотов ячĕпе тăракан колхозран" тетĕп.

Кăнтăрла пĕр станцăра чылайччен чарăнса тăтăмăр. Салтаксем шыв илчĕç, çул çинче çырнă çырăвĕсене ярса хăварчĕç. Хăйсем, вăрçа каяççĕ пулин те, пĕрре те пуç усмаççĕ, юрăсем юрлаççĕ, хĕрсене култараççĕ. Станцăра икĕ енĕпе те нимĕçсен çĕмрĕк танкĕсемпе тупписене тиенĕ составсем иртеççĕ. Çакна лайăх астăватăп: пĕр паровоз юнашарах

„Казанская железная дорога“ тесе ҫырнӑ ҫӗмрӗк паровоза илсе пырса лартрӗ. Ӑна темиҫе ҫӗртен тупӑпа персе шӑтарсӑ пӗтернӗ. Нимӗҫсем, вырӑсла ҫырнине хураткаланӑ та, хӑйсен чӗлхипе „ку нимӗҫ ҫарӗн“ тесе ҫырса лартнӑ. Ӑна пире пӗр командир куҫарса пачӗ. Йӗксӗк нимӗҫӗсем, пирӗн япалана алла кӗнӗ-кӗменех хӑйсен туса хунӑ!

Мускава поезд ирхине, тул ҫутӑлнӑ вӑхӑтра ҫитрӗ. Окружная ҫул ҫинче чылай чарӑнса тӑмалла пулнӑран эпир Хӗрлӗ площаде кайса курма шут тытрӑмӑр. Эпӗ ӑна юлашки хут вӑрҫӑ умӗн ялхуҫалӑх выставкине кайсан курнӑччӗ. Хӗрлӗ площадь халӗ те унчченхи пекех хитре те чаплӑ. Халӗ те унта Мининпа Пожарский халӑха Раҫҫей тӑшманӗсемпе кӗрешме ченеҫҫӗ. Ҫавӑнтах эпир Кремль сехечӗсем ҫапнине итлерӗмӗр, мавзолее, чул стена ҫумӗнчи чӑрӑшсене пӑхса ҫӳрерӗмӗр.

Вӑрҫа мӗн иккенне пирӗн Наро-Фоминск текен хуларан иртсен курмалла пулчӗ. Чугун ҫул икайккипе те ҫунса кайнӑ ялсем тӑра-тӑра юлаҫҫӗ. Ҫӗмӗрелмен ҫурт пӗрре те ҫук. Пур ҫӗрте те чул купи, хутран-ситрен ҫурт вырӑнӗнче кӑмака мӑрьи пӗлӗтелле тӑлӑххӑн кармашса тӑрать. Ман ку вырӑнсене курсан куҫран куҫҫуль юхса анчӗ. Пурӑннӑ ҫаканта халӑх, ҫуртсем лартнӑ, выльӑх ӗрчетнӗ, ача-пӑча ӳстернӗ, ак, нимӗҫ килчӗ те пӗтӗмпех аркатса тӑкрӗ, тетпӗр. Мӗн ҫитмен ӑна, эсремете? Мӗншӗн вӑл хӑй пуянлӑхӗпе пурӑнасшӑн мар, ҫын пуянлӑхне те алла ҫавӑрса илесшӗн, хӑй ӗҫӗпе тӑранасшӑн мар, ҫынна та хӑйӗншӗн ӗҫлеттересшӗн? Хуласемпе ялсене ишни мӗн-ха, ҫынсене вӗлерет нимӗҫ. Пӗр станцӑра пирӗн вагон патне суккӑрлана пуҫланӑ карчӑк пырса тӑчӗ. Эпир ӑна ҫимелли патӑмӑр, командир машинӑпа таҫта лартса ячӗ. Пӗлетри вӑл пире мӗн каласа пачӗ? Ун ҫемьине — старикне, кинне, кинӗн виҫ ачине нимӗҫ мурӗсем пӗр ҫурта хӑваласа кӗртнӗ те пӳрт алӑкӗпе чӳречисене хӑмапа ҫапса лартнӑ, вара пӳртне вут тӗртсе янӑ. Вугран пӗри те хӑтӑлайман, пӗчӗк ачине тытса сиксе тухма тӑнӑ кинне нимӗҫсем автоматран персе пӑрахнӑ.

Фронт ҫывӑхӗнчи хулана ҫитсен, эпир штаба кайрӑмӑр. Ҫул ҫинче пире темиҫе ҫӗрте патрульсем тытса чарчӗҫ. Малтан тытса чараҫҫӗ. парнесем пама килнӗ делегаци иккенне пӗлсен, ҫул парса ӑшшӑн саламласа юлаҫҫӗ.

Тепӗр кунне кӑшт каннӑ хыҫҫӑн эпир сасартӑк сирена сассине илтрӗмӗр. Чӳречерен пӑхатпӑр — нимӗн те курӑнмасть. Тулалла тухрӑмар — инҫетре те мар мотор сассисем илтӗнеҫҫӗ.

— Ав вӗҫсе килеҫҫӗ, — терӗ Кольцовка ҫынни, хӗвеланӑҫнелле кӑтартса. Чӑнах та унта темиҫе самолет куранса кайрӗ. Кунтан пӑхсан вӗсем питех те майӗпен килеҫҫӗ пек. Зенитчиксем хӑйсен тупписемпе пулемечӗсене самолетсем еннелле ҫавӑрчӗҫ, часах пӗтӗм таврара вӗсен сасси ҫеҫ шатӑртатса тӑма пуҫларӗ. Самолетсем пӗр-перинчен уйралчӗҫ

унта та кунта бомбăсем пăрахса каялла тарма пикенчĕç. Çавăнтах пĕри, хура тĕтĕм кăларчĕ те, çунакан çăмха пек аялалла вăркăнчĕ.

— Ак эсир пĕрремĕш хут çапăçура пулса куртăр та,— терĕ пире ĕнерех курнă пĕр салтак. Эпир пурте кулса ятăмăр.

Ун хыççăн пире генерал патне илсе кайрĕç. Вăл çав тери ăшшăн йышăнчĕ. Пăртак калаçнă хыççăн генерал пире дрезина çине лартрĕ те фронт патне тата çывăха илсе кайрĕ. Çырма хĕррине окопсем туса тултарнă. Окопсенче пур çĕрте те салтаксем. Эрне каялла кунта нимĕçсем тăнă, анчах пирĕннисем, атака туса, вĕсене çырма леш енне хăваласа янă.

Генерал пире окопсем тăрăх илсе çӳрет. Салтаксем делегацине хăйсен хĕçпăшалĕсене кăтартаççĕ. Мĕн каласси пур, юлташсем, пăшалĕсем чăнах та чаплă ĕнтĕ. Минометчиксем вĕрçĕнĕ миномет кăтартаççĕ. Командирĕ мана мина тыттарчĕ те „авăрла“ тет. Эп авăрларăм. Вăл: „Акă сире Чăваш республикинчен кучченеç“ тесе персе ячĕ. Улатăр районĕнчен пынă колхозник ĕлĕк артиллерист пулнă иккен те, тупă патне пырса ăна питĕ ăстан авăрларĕ. Унтан „Фашистла çĕлен-калтасем çинелле!“ терĕ те, расчет снаряда персе кăларса ячĕ.

Каçпа хулана каялла таврăнтăмăр та, пире Царицын çинчен кино кăтартрĕç. Кино хыççăн малти позицирен килнĕ салтаксемпе командирсем хăйсем нимĕç мурĕсене епле пĕтерсе пыни çинчен нумай каласа пачĕç. Матур çапăçаççĕ пирĕн ачасем фронтра. Вĕсенчен хăшпĕрисем 50-шар нимĕçе леш тĕнчене ăсатнă. Пĕр чăваш ачипе эп хам та калаçрăм, вăл вăтăр икĕ нимĕçе вĕлертĕм, тет. Хăйне те вара пĕр орден та икĕ медаль панă. Паллах, вăл киле герой пулса таврăнать.

Тухса килес умĕн командирсем делегацине тепре йышăнчĕç. Вĕсем салтаксене пĕр уçланкăра ункă пек тăратса тухрĕç те, пирĕн Зоя Ананьевна чи матур салтаксемпе командирсене грамота пама тытăнчĕ. Пурте „смирно“ командăпа тăраççĕ, салтак тухать те алла хĕрлĕ питлĕ кĕнеке илет:

— Служу Советскому Союзу!—тет кашниех тав тăвас вырăнне.

Юлашкинчен пĕчĕкрех кăна салтак пуриншĕн те тав тума тухрĕ. Пĕр-ик сăмах каларĕ те мĕскĕн, пăтрашса кайрĕ.

— Çук, нимĕн те тухмасть манăн,—терĕ ал сулса.—Çавна çеç калам: нимĕçсене Берлина çитиччен хăвалатпăр!

— Пирĕнни пек мăка чĕлхе унта та çук мар пулĕ çав,— сăмах хушрĕ такăшĕ.

— Сан аптрамасть-ха, сана чĕлхерен турă панă,—терĕ тепри, ăна тĕртсе илес шутпа.

Çынсем савăнăçлăн кулса илчĕç. Михала, кăтра çӳçне тепре тӳрлеткелерĕ те сывлăш çавăрса сăмахпе малалла тăсма

хатĕрленчĕ. Тĕрĕссипе каласан, пĕлтермелли урăх нимĕн те çук ĕнтĕ унăн, калас пеккине пурне те каларĕ.

— Михала пичче, пĕр фрица та пулин куртăн-и хăть?— ыйтрĕ хыçалтан çамрăк сасă. Докладчик ку ыйтăва кăмăллăнах йышăнчĕ, мĕншĕн тесен вăл тыткăна çакланнă нимĕçсене курни çинчен калама мансах кайнă.

— Юрать-ха аса илтертĕн, курмасăр, курнă. Килес умĕн пире халех кунта Гитлер путсĕрĕсене илсе кĕреççĕ тесе пĕлтерчĕç. Пӳрте çĕтĕк-çатăк тумланнă, мăръе тасатакан пек варланса пĕтнĕ, тем хулăмĕш тĕплĕ ботинкăсем тăхăннă икĕ нимĕç кĕрсе тăчĕç. Çӳçĕсем иккĕшĕн те тирĕк мунчали евĕр— хĕрлĕ те тирпейсĕр. Хăйсен этем сăнĕ те юлман, çынсем çине выçă кашкăрсем пек пăхаççĕ.

Командир вĕсене ыйтусем парать, лешсем, унталла-кунталла пăхса, васкамасăр ответлеççĕ.

— Мĕншĕн парăнтăр?—тет командир.

— Тӳсме çук вăйлă печĕç, сирĕн тупăсем нумай,—теççĕ нимĕçсем.

— Эсир вырăссен тупăсем çук тесе шутланă-и?

— Пире Хĕрлĕ Çарăн пилĕк салтак пуçне пĕр винтовка çеç тесе ăнлантаратчĕç.

— Миçе çынна асаплантарса вĕлертĕр?

— Эпир тивмен...

Çĕр çăтасшĕсене çавăнтах пырса çутăлтарса ярас килет. Вĕлермен, теççĕ. Командир нимĕç писателĕсем пирки ыйтса пĕлчĕ—калаймаççĕ, эпир кĕнеке тавраш̆ĕпе сахал интересленнĕ, теççĕ.

— Ну, халĕ ĕнтĕ генералпа шаккаса ĕçни çинчен кала.

— Çук, юлташсем, суйман-суйманах пултăр, генералпа шаккаса ĕçеймерĕм. Унпа юнашар аслăраххисем ларчĕç. Ташланине куртăм, ку тĕрĕс. Ташласса вара манран пĕрре те кая ташламасть. Ну, эпĕ те маххă памарăм. Пушă вăхăт пулсанах хамăр та сирĕн пата пыратпăр, терĕç. Ун чухне, тен, генералĕ пирĕн колхоза килсе чыс тăвас пулсан, эпĕ çеç мар, эсир те шаккаса ĕçĕр. Сăмаха вĕсене епле кĕтсе илесси çинчен каланипе вĕçлесшĕн те эпĕ, юлташсем.

Чаплă çынсем ӳстерчĕ совет влаçĕ, тăванăмсем. Вăйлă тăраççĕ вĕсем фронтра колхозлă пуранăçшăн. Машина, танк, тупă тени вара фронталла эшелонĕ-эшелонĕпе каять. Темле вăрă-хурахла килсе тапăнса хур кăтартрĕ пулин те, нимĕç кĕлмĕçĕнех мăшкăла юлмалла пулĕ. Анчах пире çапла каласа ячĕç: çăмăллăн çĕнтерессе ан шавăр, фронта мĕн вăй çитнĕ таран пулăшăр, терĕç. Хăвăршăн та, вăрçа кайнисемшĕн те ĕçлĕр, терĕç. Мĕн каласси пур, вăрçă харушă ĕнтĕ, тăвансем. Мĕн чухлĕ çын вилет, мĕн чухлĕ ялпа хула кĕл пулса юлать. Пире хур тăвас тесе çапла пĕтерет ĕнтĕ нимĕç. Пирĕн тăвансем нимĕçе хирĕç пăшалпа çапăçĕç, эпир мĕнпе çапăçăпăр? Çавăн çинчен шухăшласа пăхăр. Пирĕн нимĕçе ĕçпе

çапас пулать, колхозра тăрăшарах ĕçлесе, ытларах тырă туса фронта пулăшас пулать. Пирĕн колхоз нихçан та кая юлса пыман, вăрçă вăхăтĕнче пушшех те кая юлмăпăр, тетĕп эпĕ. Ваттисен сăмахне çĕлĕке хул айне хурса итлеме хушнă, теççĕ. Эпĕ, ват çын пулса, çапла калатăп: вăрçа кайнă тăванăрсем çинчен пĕр минутлăха та ан манăр, ирхине нимĕçе тĕп тăвас шухăшпа çывăрса тăрăр, каçхине нимĕçе тĕп тăвас шухăшпа çывăрма выртăр. Колхозра кашни чи çăмăл ĕçе мар, чи йывăр ĕçе тутăр. Пирĕн ĕç—тăшманшăн хĕç. Çапла ман сăмахăм.

Михала, яланах васкамасăр, пăртак шухăшларах, хĕрсе каймасăр калаçаканскер, куннинче сăмахне самаях хĕрӳллĕн вĕçлерĕ. Унăн хĕрӳллĕхĕ итлесе ларакансем çине те куçрĕ пулас. Вĕсем ăна пĕр хускалмасăр итлерĕç, юлашкинчен тĕттĕм пулса çитнĕ урамра вăйлăн алă çупни кĕрлесе кайрĕ.

II

Анушкана ашшĕ тепĕр кунне те çиллес кăмăллă пек туйăнчĕ. Çывна тӳрех калас выранне сăмаха ялан йӳптерсе те куларах калаçма юратаканскер, вăл халь шӳт тума пачах манса кайнă пулас. Тутисем çинче те яланхи кулă паллисем таçта кайса çухалнă. Темшĕн Анушкана ашшĕн куçĕсенче халиччен нихçан çунман вут çути тĕлкĕшсе çуннă пек курăнчĕ. Апат çинĕ чухне вĕсенчен нихăшĕ те ытлашши калаçмарĕ. Мĕн те пулин ыйтсан ашшĕ кĕскен çеç ответленине кура хĕрарăмсем хăйсене айăплă пек тытрĕç. Вĕсем сĕтел хушшинче ашшĕ хыттăн хăтăрса тăкасса, начар ĕçлетĕр тесе ятласса кĕтнĕ пек ларчĕç. Килтисенчен хăшĕ те пулин вырăнсăр сăмах калас пулсан, Михала пичче чунне уçмалла вăрçнă та пулĕччĕ, анчах кăна валли чăп-чăн сăлтав тупаймарĕ. Сăлтавсăр вăрçас йăла ун çук, кăна пурте лайăх пĕлеççĕ. Ара, фермăра чи лайăх ĕçлекен Кĕтерне инкене, колхозра пур ĕçре те малта пыракан Анушкапа Укахвине начар ĕçлетĕр тесе епле вăрçăн? Ун пек сăмах Кăтра Михала çемьинче пулман, ан та пултăр. Ун çемьи ĕçре яланах ыр ятлă пулнă, ялти çынсем хăйсен ачисене ăса вĕрентнĕ чухне тӳрех Кăтра Михала ачисем çине тĕллесе кăтартнă. „Ав Анушка, Укахви епле ĕçлеççĕ, çавсенчен те пулин кăшт намăса пĕлĕр“, тенĕ. Çук, ĕç пирки вăл вăрçма пултараймасть.

Кĕтерне инке, куç айĕн пăхса упăшкине сăнаса ларчĕ-ларчĕ те юлашкинчен чăтса тăраймарĕ, чĕлхе вĕçĕнчи сăмахне каласа хучĕ:

— Хĕрсем, эсир сăнатри, сирĕн ачăр фронтран епле çиленсе таврăннă?—терĕ.

Хĕрĕсем ун çине „Мĕн тума каларăн, вăрçтаратăн ак“ тенĕ пек пăхса илчĕç.

Ашшĕ вăрçмарĕ, чăн япалана хăех йышăнчĕ.

— Ăна эсир те асăрханă-и? Чăнах мана тем çитмест, ăш тулашса кăна тăрать,—терĕ.

— Ху мĕншĕн тулашнине пĕлетĕн пулĕ ĕнтĕ, мĕн те пулин пулнă пулĕ,—терĕ Анушка.

— Мĕн пултăр? Нимĕн те пулман. Чĕрене вăрçă вучĕ ĕнтсе илчĕ курăнать, çавă çеç.

— Лăпланăн-ха, манăн-ха,—терĕ Кĕтерне инке, ăна алшăлли парса.

— Çук ĕнтĕ, вăрçă пĕтиччен лăпланаймастăп, ан та кĕтĕр, сире те ытла лăпка пурăнма памăп. Ăнлантăр-и?

— Пирĕншĕн ан хăра,—пурин хутне те кĕчĕ Анушка.— Эпир çынтан ӳксех юлмăпăр.

— Халиччен намăс кăтартманччĕ, малашне мĕнле пулĕ. Штоп сирĕн çинчен сăмах илтмелле ан пултăр, тăрăнса ӳкиччен ĕçлĕр.

Анушка ĕçре кунĕпе ашшĕн ĕнерхи тата паянхи сăмахĕсем çинчен шухăшларĕ. Пуринчен ытла ун пуçĕнчен „Халь пирĕн çăмăл ĕç шырамалла мар, кашнинех хăй çине чи йывăр ĕç илмелле“ текен сăмахсем тухма пĕлмерĕç. Мĕнле ĕç чи йывăр еç вăл Анушкашăн? Хăш ĕçрен пăрăнса тăнă вăл халиччен? Киле таврăннă чухне вăл пиччĕшне асаилчĕ те ун пуçне сасартăк çĕнĕ шухăш пырса кĕчĕ: „Алексей çара кайиччен тракторист пулнă, манăн мĕншĕн ун вырăнне тракториста вĕренес мар?“ Ку шухăш Анушкана тата ака мĕншĕн кăмăла кайрĕ: унăн тантăшĕ (савниĕ теме хăяймасть-ха вăл) трактористра ĕçлет, тен, ун па не çакланма та тӳр килĕ. Вара ĕç кайĕччĕ, вара вăл Карачăмпа ăмăртнă пулĕччĕ!

Ашшĕ хĕрĕн шухăшне хирĕç пулмарĕ, анчах амăшне Анушка ун пек шут тытни пĕрре те кăмăла каймарĕ.

— Эс ĕççĕр мар пулĕ вĕт?—терĕ вăл.—Мĕн сĕтĕрĕнсе çӳремелле çавăнта. Вăл ĕçĕн ним йĕрки те çук, паян пĕр колхозра, ыран тепĕр колхозра, паян пĕринпе, ыран тепринпе...

Анушка амăшне ăнланчĕ: вăл ӳссе çитнĕ хĕрне алран вĕçертесшĕн мар, вăл ăна хăй куçĕ умĕнче ĕçлеттересшĕн.

„Ан хăра, анне, сан ятна варламăп, хама тытма пĕлĕп“, терĕ вăл ашра.

Левентей Анушкана ĕненесшĕн те пулмарĕ.

— Çук, ниçта та каймастăн, ĕçлес тесен, колхозра та ĕç нумай. Эс аçу хыççăн ан кай, вăл пăртак...

Тем каласшăнччĕ Левентей, Анушка халь ăна-кăна итлесе тăмарĕ, вăл Левентейрен тем пулсан та хăйне трактористсен курсне яни çинчен справка илме шутларĕ.

— Эп каятăпах, Левентей. Халь колхозра тыр вырма тухиччен нимле ĕçех те çук.

— Менле çук? Çум çумламалла, утă çулмалла.

— Çум çумлама ăна пĕчĕк ача та пултарать. Ман пеккисем тракторпа ĕçлеççĕ.

ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА

— Эх, Анушка, Анушка,—терĕ Левентей ун ҫине ытараймасăр пăхса.—Таса мар ĕҫ вĕт вăл тракторпа ĕҫлесси. Сана вăл ĕҫ килĕшмест те. Сана ялта хитре хĕр Анушка теҫҫĕҫке, хĕрĕм. Варланса пĕтĕн те, каччăсем пăхми пулĕҫ, ҫавăнтан хăратăп.

— Пăхаҫҫĕ, ан хăра. Часрах справка пар, ман вăхăт ҫук.

Левентей, тем пек турткалансан та, Анушкана курса яма килĕшрĕ-килĕшрех. Анушка ҫавăнтах телефонпа курс хăҫан пуҫланассине ыйтса пĕлчĕ, тата виҫĕ кунтанах пуҫланассине пĕлсен, Левентее тав туса, хăйĕн савăнăҫне тантăшĕсене пĕлтерме тухса чупрĕ.

Каҫхине вăл урамра пĕр каҫлăха киле таврăннă Карачăма шыраса тупрĕ.

Карачăм—лутрарах кăна пӳллĕ, сарлака хулпуҫҫиллĕ, хупхура ҫӳҫлĕ, питех те ҫамрăк сăн-питлĕ каччă. Вăл ҫулпа та ҫамрăк-ха, унăн янах ҫинчи ҫемҫе мăйăх пĕрчисене бритва та лексе курман. Хăй утнă чух васкамасăр, ӳркенсе тенĕ пек, енчен-енне сулланарах утать. Малтанлăха ăна питех те наян сын выраăнне йышăнма пулать. Чăнах та вăл ĕҫчен сын та мар, темле васкавлă ĕҫе те хыпăнса ӳкмесĕр, ытлашши хавхаланмасăр тăвать, ҫавăнпа хăй колхозра ĕҫленĕ чух хĕрсем унтан кулма та пăхатчĕҫ. Ҫулталăк каялла Карачăм МТС-а кайса кĕчĕ. Унта вăл малтан мастерскойра ĕҫлекелерĕ, кайран тракториста вĕренсе сывăхри пĕр колхозра ҫураки турĕ.

Анушка ҫамрăксем патне ҫитсен, Карачăм ăна курман пек пулчĕ, ун аллинчи купăсĕ ытларах нăйкăшма тапратрĕ. Хĕр хăй патне пырса тăрсан, каччă, купăсне чарса, Анушка ҫине айăплă сын пек пăхса илчĕ.

— Аван-и?—хăюллăн алă пачĕ ăна Анушка.

— Аван-ха.

— Ман санпа калаҫмалли пур.

Карачăм „ку сăмахсене кам-кам илтрĕ-ши" тенĕ пек хăй сисмен ҫĕртенех ҫамрăксем еннелле ҫавăнса пăхрĕ. Мĕне пĕлтерет ку? Нихҫан алă тытман хĕр сынсен умĕнчех алă тытрĕ, ҫитменнине тата хăйĕнпе калаҫма чĕнет. Кун хыҫҫăн пĕр вăхăт хушши купăс инҫене илтĕнмелле янрарĕ, купăсҫă урисем паҫăрхинчен хытăрах тăпăртатрĕҫ, унтан купăс, юлашки хут нăйкă турĕ те, чаранчĕ.

Вĕсем Анушкасен мунчи умне ҫитсе ларчĕҫ. Юнашарах сад пулнăран кунта акаципе ҫĕмĕрт шăрши кĕрет. Урам леш енче хĕрпе каччă мăкăртатса калаҫни илтĕнет. Карачăм, Анушкапа калаҫма сăмах тупаймасăр, ҫав-ҫавах купăсне юсам пек тăвать. Тĕрĕссипе каласан, Анушкан та паҫăрхи хăюллăхĕ таҫта кайса ҫухалнă ĕнтĕ. Вăл та ӳпре-шăна сыртман ҫĕртенех урисене ҫĕмĕрт ҫулҫисемпе ҫатлаттаркаласа ларать (питĕ йывăр ҫак Карачăмпа калаҫма, хăюсăр вăл, анчах ҫав вăхăтрах унпа ларма кăмăллă, Анушка унпа пĕр калаҫмасăр ҫĕр каҫах ларĕччĕ).

— Эп санпа пит хăюллă пултăм-ха, эс ман çинчен темскер ан шухăшла,—терĕ вăл, Карачăм купăсне тӳрлетсе пĕтернине курса.—Çапах та ун çинчен никампа та мар, санпа калаçмалла: эс ялта пĕртен-пĕр тракторист.

— А Алексей?—терĕ Карачăм.

— Алексей вăрçăра ĕнтĕ вăл, ăна мĕн шутламалли пур, тен, халиччен ун шăмми витĕр курăк та шăтса тухрĕ пулĕ...

— Ун пек ан кала, вилмен вĕт-ха, таврăнĕ.

— Таврăнать-и, таврăнмасть-и—вăл ун телейĕ. А эпĕ ун вырăнне тракторист пулас тетĕп. Кала-ха, Карачăм, мана, пултарайăп-и? Е аппаланса та çӳрес мар-и?

— Паллах, пултаратăн. Мĕн пултармалла марри пур унта?

— Çапах та йывăр ĕç. Сухапуç мар вĕт-ха вăл—трактор.

— Вĕренсен ним те мар.

— Вĕренейĕп-и? Унта пин пай та пулĕ те.

— Пир тĕртессинчен йывăр мар ĕнтĕ,—хăй кĕтмен çĕртен каласа хучĕ Карачăм.

— Ну, танлаштартăн. Пир тĕртесси вăл мĕ-ĕн...

— Ку та çавах.

— Апла эсĕ хушатăн? Атте те хирĕç мар, справка та хатĕр ĕнтĕ манăн. Тата виçĕ кунтах района каятăп.

— Юрать, юрать. Пĕрле ĕçлеме хаваслăрах пулĕ.

— Пире пĕрле ямĕç.

Анушка Карачăмран трактористсем пирки темĕн те пĕр ыйтса пĕлчĕ. Вăл каланă тăрăх, ăна тракторист ĕçĕ пĕрре те хăй тума пултарайман ĕç пек туйăнмарĕ. Вĕреннĕ чухне йывăр пулĕ ĕнтĕ, пĕр вĕренсе тухса хăй тĕллĕн ĕçлеме тытăнсан, Анушка çынтан юлас çук, тем тесен те, Карачăмран начар ĕçлес çук.

Карачăм малтанах Анушка хăйĕнпе ĕçлессе шанса çав тери савăнса ӳкнĕччĕ, ăна хĕр шухăшĕ питех те кăмăла кайнăччĕ, анчах, Анушка пире пĕрле ĕçлеме ярас çук тенине илтсен, унăн савăнăçĕ çийĕнчех сĕврĕлчĕ, унăн Анушкана урăх бригадăна яриччен ялтах хăварас килсе кайрĕ. Ялта юлсан, çу каçиччен килсе курма пулать, урăх бригадăна пĕр-пĕр каччăпатне çаклансан вара—сывпул Анушка!—темелли çеç юлать. Вăл апла та, капла та шухăшласа пăхрĕ, çапах та хăйĕн шухăшне Анушкана палăртмарĕ, сăмахпа ăна пасăрхи пекех трактористсен курсне кайма хистерĕ.

— Апла эс хирĕç мар?—çине-çине ыйтрĕ унтан Анушка.—Сан шутпа эп тĕрĕс тăватăп?

— Ара эп ăçтан хирĕç пулам-ха. Эпĕ сан... пиччӳ мар вĕт. Маншăн пулсан, ял хĕрĕсем пурте тракториста тухчăр.

— Пурне те ан илсе кай-ха эс, малтанлăха мана çеç илсе кай. Эп начар ĕçлесен—ыттисене чĕн...

... Анушка пасăрах пӳрте кĕнĕ ĕнтĕ, ун чӳречинчен лампа çути йăлтăртатни курăнать. Карачăмăн урисем итлемеççĕ, çук каясшăн мар вĕсем çак çурт умĕнчен. Ак сад, çӳлĕ тĕкме,

чӳрече умӗ. Карачӑм Анушкана ҫывӑхранах курать, вӗсен хушши—икӗ утӑм ҫеҫ, вӗсене уйӑрса тӑраканни хупӑ кантӑк ҫеҫ. „Уҫ, сар хӗр, чӳречӳне, пачӑ вӗт сана“ тет ӑшра каччӑ. „Ҫук, ан уҫ, лар ҫапла ҫӗрӗпе, эп сан ҫине ху сисмен ҫӗртен сехечӗ-сехечӗпе пӑхса тӑрам“ тет вӑл ҫавӑнтах.

Садри йывӑҫсем хӑйсен шурӑ чӗнтӗр евӗр чечекӗсене нумай пулмасть ҫеҫ тӑкнӑ пулин те, самсана ҫӗмӗрт шӑрши, панулми шӑрши киле-киле ҫапать. Питкуҫа нӳрлӗ ҫулҫӑ сӗртӗнет, йывӑҫсем, Карачӑм ҫинчен вӑрттӑн калаҫнӑ пек, пӑшӑлтатса илеҫҫӗ. Каччӑ ӑна-кӑна нимӗн те туймасть, унӑн пӗтӗм тимлӗхӗ хӗр ҫинче.

Анушка, аллине хулӑм кӗнеке тытнӑ та, ӑна сирет те сирет. Страницӑсем хушшинчен сӑнӳкерчӗксем, ҫырусем, таса хут таткисем тухаҫҫӗ. Вӑл кашнине майлаштарса хурса кӗнекене малалла пӑхать. Карачӑмӑн: „Ан шыра, ҫук унта ман сӑн, ӳкерттерейменӗмӗр“ тес килет. Анчах такшӑн санне шырать ха, такшӑн ҫинчен шухӑшлать-ха Анушка? Ак вӑл аллине пӗр ҫыру илчӗ те ӑна малтан пуҫласа вӗҫне ҫитиччен вуласа тухрӗ. Кам ҫырӑвӗ вӑл? Паллах, Карачӑмӑн мар. Ҫырман вӑл ун патне пӗр ҫыру та. Ак Анушка, кӗнекине сирсе тухса, аллине лӗчӗк тӗкӗр тытрӗ. Чылайччен пӑхрӗ вӑл ывӑҫ тупанӗ пек тӗкӗр ҫине, ун хӗр шухӑша кайнине пӗлтерекен хурлӑхлӑ куҫӗсем хӑйӗн пулса ҫитнӗ панулми пек сӑн-питне пӗрремӗш хут курнӑ ҫынна сананӑ евӗр сӑнарӗҫ.

Миҫе сехет тӑчӗ ҫапла Карачӑм? Тата миҫе сехет тӑрӗччӗ вӑл, Анушка лампине сӳнтерес пулмасан? Анчах Анушка лампине сӳнтерчӗ те, пӳлӗм алӑкне хупса, вырӑн патнелле утрӗ.

„Чипер юл, Анушка! Тутлӑ ыйӑхпа ҫывӑр, тӗлӗкре Карачӑм тракториста кур! Эп санпа калаҫса тӑранаймасӑр вӑрӑ пек сирӗн сада кӗнӗшӗн каҫар“.

Вӑл тӗкме урлӑ мӗнле ҫӑмӑллӑн сиксе кӗнӗ, ҫавӑн пекех матуррӑн каҫса кайрӗ. Унӑн Анушкана хӑй кунтине систерсе купӑсне мӗнпур вайран тӑсса ярасси килчӗ, анчах кӑна тума хаюллӑхӗ ҫитеймерӗ. Урам кукӑрне ҫитсен ҫеҫ шӑпланнӑ урамра уйрӑманах янӑравлӑн вылянакан купӑс сассийӗ ҫывӑрса кайнӑ ҫынсене те чылайӑшне вӑратса хӑварчӗ.

## III

Атӑл хӗрринчи ҫинҫе сукмакпа ҫар тумтирӗ тӑхӑннӑ ҫын утать. Вӑл аллине ҫеҫепе якатса тунӑ кукӑр патак тытнӑ, ҫурӑм ҫинче ун—симӗсрех сарӑ кутамкка. Ҫын патакки ҫине таянса хыта ухсахласа пырать. Те утма питӗ йывӑр пулнӑран, те ывӑннӑран, хӑй пӗрре те васкамасть, хутран-ситрен чылайлӑхах чарӑна-чарӑна тӑрать, куҫӗпе тем шыранӑ пек, йӗри-тавра ҫаврӑна-ҫаврӑна пӑхать.

Ҫывахарах ҫитсен ҫынна асӑрхама пулать: ҫыннӑн сулахай урине чӗркуҫҫирен татнӑ та, ун ҫумне йывӑҫ ура лартнӑ. Кӳлепе

йывӑрӑшӗ ҫак ура ҫине куҫнӑ чухне ҫарҫынни кашнинчех кӗске патак ҫине таянать.

Сӑн-питрен ҫарҫынни самаях имшеркке, кӗлеткинчен вара питех те тӗреклӗ. Хай тин ҫеҫ госпитальрен таврӑнать пулмалла. Ҫапах та ҫак вӑхӑтра ун пит-куҫӗ савӑнӑҫлӑн ҫутӑлса тӑрать, ҫакӑнтан тата йӗри-тавралӑха ҫапла пит пӑхкаласа пынинчен вӑл уйӗн тӑван уйхирӗ тӑрӑх пынине чухласа илме пулать. Апла пулсан, вӑл халь чунтан савӑнать ӗнтӗ. Пӗрикӗ ҫул ӗлӗкрех тухса кайнӑ та вӑл тӑван кӗтесрен, халь акӑ, вӑрҫӑ вучӗ витӗр тухса, кунта каялла таврӑнать. „Тӑван кӗтес, ырӑ кӗтес! Мӗнле юрататӑп эпӗ сана, сан мӗнпур ҫырма-ҫатруна, тӑван вӑрманпа улӑха, ҫак чуна кӑмӑллӑн хумхантаракан тавралӑха тата ӑна витсе тӑракан кӑвак тӳпене!" тенӗ пек мӑкӑртатаҫҫӗ ун тутисем.

Ҫын пӗрре хӑйсен ялӗ еннелле, тепре Атӑл ҫинелле пӑха-пӑха илет. Хӑй ӗнтӗ Атӑл хӗрринчи чи чӑнкӑ вырӑна ҫитнӗ Кунтан шыв темиҫе ҫухрӑм тӑршшӗ курӑнса выртать. Унпа юнашар, Атӑлӑн сулахай енӗпе, хитре сатин тӑрӑхӗ ҫумне ҫӗленӗ симӗс пусма пек, йӑлӑм вӑрманӗ тӑсӑлать. Ку енче унта та кунта лапамсене, ҫырма кукӑрӗсене ларса тухнӑ ялсем курӑнаҫҫӗ. Июльре, ҫӗршыв чӗрӗлсе ҫитнӗ вӑхӑтра, уйхирпе вӑрман мӗнле илемлӗ пулма пултарать, ҫавӑн пек пӑхса тӑранмалла мар илемлӗх сарӑлса выртать ун умӗнче. Вӑл ҫак ытарма ҫук картинӑна килениччевех пӑхса тӑрас терӗ пулас, ҫурӑм ҫинчи кутамккине вӗҫертрӗ те, ҫерем ҫине выртса канма хатӗрленнӗ пек, хӑйӗн умне хучӗ. Унтан картусне хывса ҫап-ҫутӑ та сарлака ҫамкине алтутрипе шӑлса типӗтрӗ.

Ҫапла чылайччен тӑрсан, сасартӑк ун куҫӗсем пӗлӗт ҫинелле ӳкрӗҫ. Вӑл шартах сикнӗ пек пулчӗ, мӗншӗн тесен, хӗвеланӑҫ енче пӗлӗт тӗксӗмленме тытӑннине асӑрхарӗ. Йӗри-таври шурӑ пӗлӗт тӑрӑхӗсем шӑваҫҫӗ, йӑлӑм ҫинче ҫумӑр пӗлӗчӗсем, ҫунӑ хыҫҫӑн типме тухса ҫакнӑ кӗпесем пек, йывӑррӑн ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Кун пӑсӑлассa сиснӗ пек, Атӑл та тӗсне улӑштарнӑ. Паҫӑр вӑл ҫӳлти кӑвак тӳпе пекех лӑпкӑн юхатчӗ, ун кӑтра хумӗсем ҫыран хӗрринче ҫеҫ кӑшт палӑратчӗҫ, халӗ ак Атӑл варринче кӗреш пек хумсем йӑваланаҫҫӗ. Шыв йӳҫсе чылай ҫӳлелле ҫӗкленнӗ пек.

Ҫын, кутамккине алла илчӗ те васкамасӑр малалла ухсахларӗ. Халь ӗнтӗ вӑл час-часах хӑйӗн хыҫнелле, ҫумӑр пӗлӗчӗсем йӑсӑрланса килекен еннелле пӑхма тытӑнчӗ. Вӑл ҫумӑр пуҫланиччен тӑван килне ҫитсе ӳкме васкарӗ пулас.

Кам пӗлет, тӑршшӗпех ҫуран утнӑ пулсан, вӑл, тен, ҫумӑр айне пулнӑ та пулӗччӗ, анчах ун телейне часах ҫула май лав тупӑнчӗ. Тӑван ял ҫинчен, ывӑлне кӗтсе тӑракан ватӑ амӑшӗ ҫинчен сӗтеклӗн шухӑша кайса пыракан ҫарҫынни хӑйӗн хыҫӗнче урапа сасси илтрӗ. Урапа ҫинче хӗрарӑм ларса пырать. Малтан тилхепине турткаласа чуптарса килекенскер, вӑл ҫул ҫинчи ҫын тӗлне ҫитсен лашине хӑвалама пӑрахрӗ, хӑйӗн

умĕнчи çын çине тинкерсе пăхрĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне иккĕш те пĕр таруках палларĕç.

— Ятман!

— Кĕтерне инке!

— Ятман, эс киле таврăнан пулĕ-çке?

— Киле таврăнатăп, Кĕтерне инке,—терĕ Ятман.

— Çапла, чĕркуççи таран урапа килмелле пулчĕ-и ĕнтĕ?

— Çапла килмелле пулчĕ...

— Лар, лар часрах. Ха, эп чуть çеç чуптарса иртсе кайман.

Вăл, лашине тăратрĕ те Ятмана вырăн хатĕрлесе пачĕ. Леш хăпарса ларсан, малтан саппун аркипе шăлса илсе, ăна алă тăсрĕ.

— Аван-и?

— Аван-ха. Хăвăр мĕнле пурăнатăр?—алă пачĕ ăна Ятман.

— Эпир мĕн? Пурăнатпăр эпир килте. Пирĕн кунта бомба пăрахмаççĕ. Эс пристаньрен килтĕн пулĕ-ха? Мĕншĕн телефонпа чĕнсе илсе лав ыйтмарăн?

— Халь çĕртме вăхăчĕ те, чăрмантарасси терĕм.

— Лашасем пурччĕ, ыйтмаллаччĕ. Но-но,—хăваларĕ лашине Кĕтерне инке.—Çумăр айне пулас мар, ав епле хупăрласа килет. Ну, Ятман, ăçтарахран килетĕн-ха? Хăш енче çапăçрăн?

— Украинăра çапăçрăм, Кĕтерне инке.

— Хăрушă пулĕ? Халь те тапăнса килет-и-ха?

— Хăрушă. Вăйлă хĕсет нимĕç, урса кайсах талпăнать. Атăл çине тухасшăн.

— Атăл çине тухасшăн. Айтур-тур, апла вăл кунта та çитет пулĕ?

— Кунтах çитме памĕç. Халь малтанхи пекех çăмăллăн кĕреймест ĕнтĕ. Пирĕннисем те хаярланчĕç, унченхи пек чакмаççĕ.

— Тахçан пĕтĕ, тахçан пĕтĕ,—терĕ Кĕтерне инке.

Кун хыççăн вĕсем пĕр вăхăт хушши каласмасăр пычĕç, вăрçă хăрушлăхне кашниех хăй пĕлнĕ пек тавçăрса илме тăрăшрĕ пулмалла. Кĕтерне инке тусанлă урисене шаккаса урапа çине хăпартса хучĕ, япаласем тĕрĕсех пыраççĕ-и тесе урапа хыçнелле çаврăнса пăхрĕ. Ятман ку хушăра куçĕсене хупрĕ те асар-писеррĕн урса тăракан вăрçă хирне, хăй пулнă юлашки çапăçăва аса илчĕ. „Хăрушă" тесе ответлерĕ вĕт-ха вăл Кĕтерне инке ыйтăвĕ çине. Анчах çак „хăрушă" сăмах вăрçăн чăн-чăн хăрушлăхне мĕн чухлĕ каласа парайтăр? Вĕсем ăна курман, пĕлмеççĕ, ăнланмаççĕ. Ку хăрушлăха пăртак та пулин пĕлес тесен, вăрçа хăвăн куçупа курас пулать. Ак Ятман ăна манас тесен те манаймасть. Вăл ăна аса илмесĕрех аса килет, юлашки çапăçусем ун куçĕ умĕнче ĕнер каçхиве çеç курнă хăрушă тĕлĕк пек тăраççĕ.

— Ялта мĕн çĕнни пур?—вăрçă çинчен аса илнисене хăваласа ярас тесе ыйтрĕ Ятман.

— Мӗн пултӑр ялта? Пурӑнатпӑр ҫапла. Кунӗн-ҫӗрӗн нимӗҫе ыл ханатпӑр. Председательте пирӗн сан вырӑнта Левентей ӗҫлет, счетоводра леш Куҫсӑр Куҫма. Эп ак ӗлӗкхи пекех фермӑра айкашатӑп. Бригадирсем, Михалана шутламасан, виҫҫӗш те хӗрарӑмсем. Ҫапла-ҫке, Ятман, хӗрарӑм вӗҫне юлтӑмӑр. Пӗтерчӗ вӗт ку Гитлер, мӗнпур вӑйпитти арҫын вӑрҫа кайрӗ. Йывӑр, паллах, вӗсемсӗр, мӗн тӑвас тен, тӗрмешкелетпӗр ҫапах та, макӑрса ларман. Макӑрнипе пире никам та ҫӑкӑр килсе тыттарас ҫук. Пирӗн ҫемьере пурте сывах-ха, Алексейран ҫеҫ уйӑха яхӑн ҫыру ҫук. Анушка темиҫе кун каялла кӑна тракториста вӗренме кайрӗ. Сан аннӳ пӗр майлӑ пурӑнать. Кинӗ вилни пӗтерчӗ ҫав ӗнтӗ карчӑка, унсӑрӑн кун пекех йывӑр пулмастчӗ пулӗ те...

Кӗтерне инке ял пурӑнӑҫне йӗркипе, кӗнеке вуланӑ пек, каласа парать. Тепӗр чухне, мӗн ҫинчен те пулин каласа панӑ май, хӑйӗн шухӑшне каласа хурать: „тӑрӑшать-ха, аншӗ-амӑшӗ пекех пулать пулмалла" е „темскер ӗҫӗ ӑнмасть", „пултарсах каймасть". Ку кӗске сӑмахсенчен Ятман ҫакна ӑнланать: вӑл лайӑх ӗҫлет, ку начар ӗҫлет. Кӗтерне инке йӑнӑшмасть ӗнтӗ, тӳрӗ кӑмӑллӑскер, мӗнпур ӗҫе тӗплӗ тӑваканскер, ҫынна питех те тӗрӗс хак парать.

Калаҫса тата шухӑша путса пыракан Ятман туйман та, вӗсен хыҫӗнчен хӑрушӑ хура пӗлӗт ҫӗкленнӗ иккен. Вӑл Атӑл тӗлӗнче, те йӑтӑнса анас, те сынҫен сехрисене хӑпартса малалла каяс тенӗ пек, ҫакӑнса тӑрать. Йӑтӑнса анас пулсан, ҫакӑнта чӗреслетсе ҫумӑр ҫумалла. Пӗлӗт пуҫ тӑрринчех пулсан та, вӗсен ҫине пӗр тумлам та ӳкмерӗ, унтан пӗлӗт икке йӳпленсе шӗвелсе кайрӗ.

—Ҫук, кунта ҫумасть,—терӗ Кӗтерне инке, Ятман пӗлӗте сӑнанине асӑрхаса. Вӑл кӑна каласа пӗтернӗ-пӗтерменех таврара ҫиҫӗм ҫиҫсе илчӗ, унтан аслати кӗрслетрӗ.

— Ак ҫак ҫумӑр пӗлӗчӗ хупӑрласа килнӗ пек капланса килчӗ ӗнтӗ нимӗҫ,—хӑйне валли каланӑ пек каласа хучӗ Кӗтерне инке. Вара ҫине тӑрсах тилхепине туртрӗ.— Ну, ну, яра пар. Часрах киле ҫитес.

Кил инҫе юлман ӗнтӗ. Ҫывӑхрах йӑмра тӑррисем те палӑра пуҫларӗҫ, ял вӗҫӗнче ултӑ ҫунатлӑ ҫиларманӗ курӑнса кайрӗ. Ятман куҫӗсемпе икӗ ҫула яхӑн курман тыр пуссисене, улӑха, ҫывӑхри мӗнпур япалана тинкерет.

Ак сӗлӗ пусси пӗтнӗ хыҫҫӑн тулӑ пусси пуҫланчӗ. Анчах мӗн ку? Тулӑ пусси сап-сар. Малтан вӑл тулла мӗнле те пулин ҫӗнӗ культурӑпа хутӑш акнӑ пулӗ тесе шутларӗ, ҫавӑнтах тата ку ҫулсеренех уйхире пусса илекен сар чечек пулнине тавҫӑрса илчӗ.

— Кӗтерне инке, асӑрха-ха. Кӑна эсир илемӗшӗн ӳстеретӗр-и?

— Ан та кала, Ятман,—терӗ Кӗтерне инке.—Хамӑн та кашни иртсе каймассерен чун ыратать. Темиҫе кун каялла

канашлуран таврӑннӑ чухне Левентее кӑтартрӑм та, аллине кӑна сулчӗ. Ҫумласан та, ҫумламасан та пурпӗр пулмасть пирӗн хирте тулӑ. Ӑна эпир районра ан вӑрҫчӑр тесе ҫеҫ акнӑ, терӗ.

— Ҫаплах каларӗ-и?

— Ҫаплах.

— Тӗлӗнмелле. Халь ӗнтӗ ҫумламастӑр та пулать?

— Ҫук ӗнтӗ. Ҫумлас-тӑк маларахах ҫумласа тасатмалла пулнӑ ана.

— Ку тӗрӗс. Халь ав тулӑран ҫӳлӗ. Ҫапах та кая юлса та пулин ҫумлас пулать. Тулла сая яма юрамасть.

„Калаҫса пӑхӑпӑр, мӗн тейӗ Левентей. Ӗлӗк ман сӑмахран иртекен марччӗ. Тен, халь аслӑ ҫын пулса кайнӑ пулӗ. Тем тесен те, малта пыракан колхоз председателӗ“.

Ҫапла шутларӗ те вӑл, урӑх ним те чӗнмерӗ, халӗ ӗнтӗ часрах тӑван ялне курасшӑн пулчӗ.

Ял патне ҫывӑхарса пынӑҫемӗн унӑн илемлӗхӗ куҫ умне ытларах тухса пырать. Чӑваш ҫӗршывӗнче илемлӗ ялсем татах нумай пулӗ, анчах Атӑлкасси пекки Ятман урӑх ниҫта та курман. Атӑлкасси хитререн те хитре. Вӑл икӗ ҫырма пӗрлешнӗ ҫӗрте, лапамра ларать. Аякран пӑхсан, Атӑлкасине ял теме те йывӑр, йӑмрасен айне путнӑскер, вӑл вӑрман кати пекех курӑнать. Йӑмрисене пурне те пӗр вӑхӑталла лартнӑ пулмалла, вӗсем пурте пӗр пек ӳссе ҫитӗннӗскерсем. Йӑмрасемсӗр пуҫне кунта сад нумай, кашни пахчарах улма йывӑҫҫи, чие, ҫӗмӗрт ӳсет. Панулми пулнӑ ҫул вара тулли ҫимӗҫлӗ туратсем карта урлӑ урамаллах усӑнса тӑраҫҫӗ,—татса ил те ҫи. Шӗшкӗлӗх юнашар пулсан та, нумайӑшӗсем пахчана шӗшкӗ йывӑҫҫисем лартса тухнӑ. Ятман ҫара кайнӑ ҫул майӑр йышлӑ пулнӑччӗ те, пахчасенче чӑмакки чӑмаккипе сар майӑр ҫакӑнса тӑратчӗ. Кашни килӗнчех кӑмака ҫи тулли майӑрччӗ, кам патне те пулин пырса кӗрсен, сана чи малтан майӑрпа хӑналаса хисеп тӑватчӗҫ.

Ҫырма яла икӗ пая пайлать: Атӑлкасси тата Турикас. Таврари ҫынсем вӗсене пӗр ял вырӑнне хураҫҫӗ, анчах турикассем вӑрҫӑ умӗн Атӑлкассинчен уйӑрӑлса хӑйне уйрӑм колхоз турӗҫ. Колхоз председателӗ пулнӑ май, Ятман вӗсене уйӑрассине хирӗҫ нумай ҫапӑҫрӗ, ҫапах та унпа килӗшмерӗҫ, ҫырма леш енче тепӗр пӗчӗк те тирпейлӗ колхоз пулса тӑчӗ. Ятман шутланӑ тӑрӑх алтнӑ, икӗ ялне те илем кӳрсе тӑракан пысӑк кӳлӗ вара Турикас колхозӗ аллине тӑрса юлчӗ. Нумай тарӑхрӗ вӑл куншӑн, Турикас колхозӗн председателӗпе Катрам Иванӗпе нумай харкашрӗ, анчах ним тума та пултараймарӗ. Халь те пулин унӑн хӑйне итлемен Ивана вӑрҫас килет...

Урапа укӑлча хапхи патне ҫитсе пынӑҫемӗн Ятманӑн чӗри хӑвӑртрах тапма пуҫларӗ. Акӑ вӑл тӑван ял! Фронтра пурӑнса мӗнчухлӗ асаилмен-ши ҫак яла? Мӗнле аса илмелле

пулман-ха ăна: вăл унта çуралса ӳснĕ кăна мар, вăрçă пуçланиччен икĕ çул ытла колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ, çак колхоза çĕклесшĕн темĕн чухлĕ вăй хунă, унти çынсемпе тăвансем пек пĕр шухăшпа, пĕр ĕмĕтпе пурăннă. Халь ял чылай улăшăннă пулĕ ĕнтĕ, çыннисем те улăшăннă пулĕ.

— Акă çитрĕмĕр,—терĕ Кĕтерне инке, лашине колхоз картишнелле пăрса. — Эп çак хута правленине кĕртсе парам, вара сана килне çитиччен леçсе хăварăп.

— Çук, çук, кирлĕ мар, киле çуран та çитĕп. Тавах лартса килнĕшĕн,—терĕ Ятман, анма хатĕрленсе.

Кĕтерне лашине чарсан, вăл аран-аран лав çинчен анчĕ те, тумтирне тусантан шаккакаласа илсе, укăлча патнелле ухсахларĕ. Йĕри-тавралла çаврăнса пăхрĕ—никам та курăнмасть. Укăлча патне çитсен çеç ун патне мунча хыçĕнчи çамрăк хурăнсем хушшинчен икĕ тулли витре йăтнă хĕр тухрĕ. Çул çине Ятманран маларах тухнă май, хĕр ăна курса витрисене лартсах ун çине пăхма пуçларĕ. Ятман та паллас тесе хĕр çине пăхса илчĕ. Кам ку? Ятман ку хĕрачана пĕлмест.

— Эп телейлĕ пулмалла-ха, тулли витреллĕ хĕрачана тĕл пултăм,—терĕ Ятман.

Хĕрача пăртак хĕрелчĕ, пĕвĕпе малалла ӳпĕнчĕ, унтан сăмах хушрĕ:

— Эсир ăçта каятăр вара?

— Киле таврăнатăп.

— Хăш ялсем эсир?

— Кӳршĕ ялсем. Ав, курăнать ман ялăм.

Ятман хĕрача тухнă еннелле, виçĕ çухрăмра ларакан кӳршĕ ял çинелле тĕллесе кăтартрĕ. Хăй кулса ярса тепре хĕрача çине пăхса илчĕ. Вăл кивĕ кăна хĕрлĕ блузка тăхăннă, пуçне пĕчĕк çеç тутăр чĕркесе янă, тутăр айĕнчен хăйĕн йĕтĕн сӳсĕ пек сарă çӳçĕсем курăнса тăраççĕ. Питрен хĕрача пиççе çитнĕ хурăн çырли пек. Анчах кам хĕрачи ку? Ăна вăл халиччен тĕлĕкре те курман. „Ялта çĕнĕ учительсем пулĕ-ха, çавсен хĕрачи пулĕ“ шутларĕ Ятман ăшĕнче.

— Ăçтан таврăнатăр эсир?

— Вăрçăран таврăнатăп, йăмăкăм.

— Аманса таврăнатăр-и?

— Аманса.

— Вăрçă час пĕтет-и?

— Ăна калама пултараймастăп, йăмăкăм.

Хĕрача ун кăкăрĕ çинчи аманнине пĕлтерекен симĕс-сарă нусма таткисене сăнаса пăхрĕ (ордена вăл хăрах куç хӳрипе çеç пăхрĕ, ăна курман пек пулчĕ), унтан унăн кăвак куçĕсем таçта айккинелле пăрăнчĕç, çавăнтах вăл кĕтмен çĕртен ыйту пачĕ:

— Эсир унта ман пиччене курмарăра?

— Курнă та пулĕ, хăш фронтра вăл?

—Украинăра. Пĕлтĕр Украинăра çапăçатчĕ, халь пĕр çыру

та çырмасть, пĕлместĕп. Тен, вилнĕ те пуль. Икĕ орден илнĕччĕ, çав тери паттăр ачаччĕ.

— Мĕншĕн эс ăна вилнĕ тесе шутлатăн-ха, чĕрĕ çын çинченех апла шутлани аван мар вĕт?

— Аван мар та, ман мĕн тăвас-ха?

— Эс ăна паттăр тетĕн. Паттăрсем вăрçăра вилмеççĕ, çĕнтерсе каялла таврăнаççĕ. Кĕт, çакăнта тулли витрӳпе тухкала, тен, шăпах манпа хирĕç пулнă пек хирĕç пулăн.

— Тавах ыр сăмахушăн.

Вăл, те кӳренчĕ, те калаçса йăлăхрĕ, илемлĕ çамрăк шăмшакĕпе пĕшкĕнчĕ те витрисене алла илчĕ. Çавăнтах тата вĕсене кĕтмен çĕртен каялла лартрĕ.

— Итлĕр-ха, çар çынни, пирĕн пата кĕрсе тухмастăр-и? Пирĕн сăра пур. Кăмăл тăвăрсамăр. Юрать-и?

—Çук, юрамасть,—куларах таврчĕ Ятман.—Тĕттĕм пуличчен киле çитмелле. Мана килте ватă анне куç пек кĕтсе тăрать.

— Ну, тепĕр чух кĕрсе тухăр апла. Эпир ак çакăнта пурăнатпăр,—шăп хĕрринчи киле тĕллесе кăтартрĕ хĕрача. Ятман пушшех тĕлĕнсе кайрĕ. Ара ку Куççăр Куçма çурчĕ вĕт? Кам килнĕ вара ун патне? Кам пулчĕ вара ку саркайăк пек юрласа калаçакан хĕрача?

Çак шухăшсемпе вăл çырма урлă каçса колхоз итемĕ патнелле çул тытрĕ. Итем çинчи улăм урисем хушшипе вăл хăйĕн икĕ чӳречипе урамалла пăхса ларакан пысăках мар пӳртне те курчĕ ĕнтĕ. Пурт мăрьинчен тĕтĕм тухать, апла пулсан, амăшĕ те килтех, ĕçрен таврăнса каçхи апат çакса янă пулĕ-ха. Итемваррине çитсен вăл ун пĕр хĕрринче машинăсем ларакан сарай патĕнче çынсем мĕкĕлтетнине асăрхарĕ. Çыннисем те ăна курчĕç пулас, паллакан сасă „Ятман!" тесе кăшкăрса ячĕ. Вăл вара килне кĕрес вырăнне вĕсем патнелле пăрăнчĕ.

— Аван-и Ятман?—терĕ варланнă аллине пусма таткипе шăлса тăракан Кăтра Михала.

— Аван-ха. Хăвăр мĕнле?

— Каларăм вĕт çавă тесе!

— А эп сана аякранах палларăм.

— Мĕн, машина юсас терĕр-им?—ыйтрĕ Ятман.

— Тырăсем кĕпçене ларма тытăнчĕç, часах вырмалла та пулĕ, машинăсене юсас пулать,—терĕ Кăтра Михала.—Ниепле те юсаймастпăр. Халь ак тĕттĕмленчĕ те, куççем те курми пулчĕç.

— Мĕнĕ пăсăлнă?

— Барабанĕ çĕмĕрĕлнĕ.

— Ну-ка, кăтартăр-ха.

Ятман, патаккине таянтарса хурса, машина пур пайĕсене те тĕрĕслесе тухрĕ, унтан барабан патне кĕрсе кайрĕ.

— Ҫапла, барабан пӑсӑлнӑ. Мана эсир хатӗрсем илсе парӑр, халех юсатпӑр.

Анчах ҫавӑнтах ӑна темиҫе ҫын пӳлсе каласа хучӗ:

— Ан чӑрман, Ятман.

— Килне ҫитмен, ӗҫлеме тытӑнасшӑн.

— Ӗлӗк юсани те ҫитӗ, ӗлӗк те мӗн те пулин пӑсӑлсан ху юсаттӑнччӗ.

— Нимех те мар,—терӗ Ятман.—Пӑсӑлнӑ япалана юсас пулать.

Вӑл барабана часах юсаса пӗтерсе тесе шутланӑччӗ, анчах ӗҫ самаях вӑраха кайрӗ. Тӗттӗм пулса ҫитрӗ, таврана каҫ сулхӑнӗ ҫапрӗ, ҫынсем хӑшпӗрисем канма тесе килӗсене кайрӗҫ, Ятманпа Кӑтра Михала тата икӗ ҫын ҫав-ҫавах авӑн ҫапмалли машина патӗнче тӑрмашаҫҫӗ-ха. Ятман пикенсех ӗҫлет, хӑй ҫав вӑхӑтрах колхозри ӗҫсем ҫинчен ыйта-ыйта пӗлет. Ӑна тахҫан хӑй ертсе пынӑ колхозри мӗнпур япала интереслентерет: хӑш пусӑра тырӑ мӗнле пулнӑ, ӑҫта вӑрлӑх участокӗ тунӑ, выльӑх мӗнчухлӗ хутшӑннӑ, мӗнчухлӗ чакнӑ, колхозниксенчен кам ӑҫта ӗҫлет, мӗнле ӗҫлет. Кӑтра Михала ӑна пурин ҫинчен те тӗплӗн каласа пачӗ. Вӗсем ӗҫрен чылай ҫӗрле пулсан ҫеҫ пушанчӗҫ. Юсаса ҫитерсе ҫу янӑ хыҫҫӑн хускатса ячӗҫ те, машина кӗрлесе кӑна кайрӗ.

— Ну, вот, пулчӗ те,—савӑнчӗ Ятман. Авӑн ҫапмалли машинӑна юсаса ӗҫе яни ӑна фронтра ҫӗмрӗк самолета юсани пекех туйӑнчӗ.

— Ҫитӗ. Пӗтерейменнине ыран пӗтерӗпӗр. Халь айтӑр ман патӑма каяр.

— Кеҫӗр пымасан та юрать пулӗ, сывӑрма вӑхӑт.

— Айтӑр, айтӑр, унсӑрӑн мана анне, ухсах тесе, йышӑнмӗ те.

— Аннӳ ратлансах йышӑнӗ-ҫке.

— Эсир утӑр, эпӗ киле кӗрсе тухатӑп та пыратӑп,—терӗ Кӑтра Михала, Ятманран фронтри ӗҫсем ҫинчен тӗплӗнрех ыйтса пӗлме ӗмӗтленсе.

Ятман пӳртӗнче ҫав-ҫавах вӑйсӑр ҫутӑ тӗлкӗшет, амӑшӗ каҫхи апат ҫинӗ курӑнать те, сывӑрма выртма ӗлкӗреймен-ха. Ятман чӑтаймасӑр чӳрече патне утса пычӗ, пӳрт умӗнчи тӑпра ҫине хӑпарса пӳртелле пӑхрӗ. Амӑшӗ сӗтел патӗнче пӗҫернӗ улма шуратса тӑрать. Аллисем хӑйӗн пӑртак чӗтреҫҫӗ пек. „Мӗскӗн, мӗнле начарланса кайнӑ карчӑк! Аллисенче те, питӗнче те пӗр хӗрлӗ йӗр те ҫук, шӑнӑр ҫеҫ, шӑнӑр ҫеҫ. Ялан ман ҫинчен шутлать пуль, ялан хуйхӑрать пуль, мӗскӗн. Анчах сӗтел ҫинче мӗн тирӗкӗсем лараҫҫӗ унта? Пӗҫернӗ апат вӗт, пӗҫернӗ апат. Пивушлӗ вӑл эп тавраннине пӗлнӗ? Пӗлнӗ, паллах, кам та пулин килсе систернех ӗнтӗ. Апла пулсан, мӗн кӗттереп-ха эп ӑна? Кӗрес, часрах кӗрес“...

Ятман, чӳрече патӗнчен пӑрӑнче те, ури ыратнине манса кайсах кӗҫӗн алӑк патне васкаса утрӗ. „Вӑл мана кӗтнӗ, куҫ пек кӗтнӗ“...

## IV

Кĕтерне инке Ятманран уйрăлсан лашине колхоз правленийĕ еннелле пăрчĕ. Правленинче никам та çук иккен—алăкне çăраççипех питĕрсе илнĕ. Правленине памалли хута каялла хĕве чиксе хурса, Кĕтерне инке тӳрех колхоз картишнелле чупрĕ. Картишĕнче тислĕк купи патĕнче ĕçрен тин çеç килсе янă икĕ лаша тăрать. Тепĕр лаши тата клевер ани патне тухмалли алăка уçма хăтланать. „Ăçта манăн Сехре Иванĕ? Лашасене те йышăнмасть"—шутларĕ Кĕтерне инке.

— Иван, лашасем ĕçрен таврăннă вĕт, курмаснам?—кăшкăрчĕ вăл. Анчах вăл кăшкăрни çине конюхсем пурăнакан пӳртрен никам та тухмарĕ. Кĕтерне инке чăтаймасăр пӳрте хăй кĕрсе кайрĕ.

Сехре Иванĕ, кутник сакки çине шапа пек сарăлса ӳкнĕ те, харлаттарсах çывăрса выртать. Вăл пӳрте сын кĕнине те туймарĕ. Темме Кĕтерне инке çак вăхăтра Ятман вăрçă çинчен каласа панине, нимĕçсем Атăл патнелле тапаçланаççĕ тенине аса илчĕ, вара çав тери хаяр сасăпа кăшкăрса пăрахрĕ:

— Сехре, мĕн наяна персе выртатăн эсĕ кунта!

Сехре Иванĕ шартах сиксе вăранса кайрĕ.

— Мĕн?—терĕ вăл ыйăх тĕлĕшпе. Кĕтерне инке ăна тата тем те пĕр каласа вăрçса тăкасшăнччĕ, анчах, малтан хăй кăшкăрнинчен те хăраса кайнăскер, майĕпен çеç, çиллессĕн ыйтрĕ:

— Иван, эс вăрçăра пулнă-и?

— Пулнă. Вара мĕскер?

— Унта та çапла çывраттăна?

— Çук, унта капла çывăрсан вĕлерсе те каяççĕ.

— Кунта вĕлермеççĕ те, кăчтăр кунĕнче те сăвăр пек çывăрса выртма юрать эппин? Лашасене камăн пăхмалла? Ав лашасем ĕçрен килнĕ, эс тухса та пăхмастăн. Мĕнле лартнă сана лаша пăхма? Эс виç уйăх хушшинче мана йăлтах тарăхтарса çитертĕн. Ак халь Ятман таврăнчĕ, каласа парам-ха, сана кăларса çапчăр.

Капла каласан, Сехре Иванĕ йăпăр-япăрах сиксе тăчĕ. Çӳçне пӳрнисемпе якаткаларĕ те, урайĕнче выртакан чĕнпушăна çекĕлтен çакса ярса, Кĕтернерен хăранă пек ыйтрĕ:

— Ятман таврăнчĕ тетне?

— Таврăнчĕ çав. Ак халь манпа ларса килчĕ.

— Ну, апла ку мана алла илет. Ятман мана юратмасть.

— Мĕн юратмалла сана, наяна? Тăрпалтай вĕт эсĕ?

— Ун пекех ан кала-ха, Кĕтерне. Эсĕ вĕт мана тăхлач пулатăн...

— Ну, сан тăхлачу-масарупа. Тăхлач тесе ман саншăн кунĕн-çĕрĕн ĕçлемелле-и? Ĕнисене пăх тата, Сехре çыврать тесе, лашисене те манăнах пăхмалла иккен. Ĕçленĕ пул, унсăрăн тупата туршăн кăларттаратăп сана.

— Ан хăтлан, Кĕтерне, ан хăтлан,—ӳкĕтлесе каларĕ Сехре, унтан кăштăртатса лашисем патнелле тухрĕ.

„Пулать кахал çын,—шутларĕ вăл тухсан Кĕтерне инке.— Колхозра пурте çапла ĕçлесен, мĕн пулса тăрать-ха ĕнтĕ? Вот пуранать этем тĕнчере: ни çемьи, ни чипер хуçалăхĕ, ни ĕçĕ çук. Арăмĕ вилсен, темиçе сурăх та юлнăччĕ, чăхчĕп те пурччĕ, наянĕпе йăлтах пĕтерчĕ вĕт, мĕскĕн. Халь пĕтĕм килĕпе те пĕр качака кăна пулас. Авлантарса ярас пулать, унсăрăн хĕрарăмсăр йăлтах тискерленсе каять. Хĕрарăм, тем тесен те, арçынна ытлашши пăсăлма памасть вăл".

Килте каçхи апат вăхăтĕнче Кĕтерне хăй Сехрене мĕнле ятлани çинчен Укахвине Турикасран ун патне калаçма пырсаларнă Липăна каласа кăтартрĕ. Аппĕ, Кăтра Михала, çукчĕ, çавăнпа га хĕрарăмсем ытлашши никамранах та вăтанса тăмасăр Сехререн каçса кайсах кулчĕç. Укахвипе Липа ун çинчен самаях пĕлеççĕ иккен, чылаях кулăшла япаласене аса илчĕç. Сехре çинчен калаçса кулма чарăнсан, амăшĕ хĕрсене хыпар пĕлтерчĕ:

— Калама мансах кайнă, манпа пĕрле Ятман ларса таврăнчĕ.

Лешсем, ĕненмен пек пулса, Кĕтерне çине пăхса илчĕç. Унтан Укахви куç хӳрипе Липа çине тинкерчĕ. Липа, ку кĕтмен хыпара илтсен, кашăкне чуть кăна аллинчен ӳкеретчĕ. Вăл хăй хумханнине систересшĕн пулмарĕ, анчах, темле паларгасшăн мар пулсан та, питрен хĕрелсе кайрĕ, пĕр вăхăт ни Укахви çине пăхма, ни тирĕкрен яшка ăсса илме аптраса тăчĕ.

— Мĕн эсĕ Липа çине пăхатăн?—кулса, анчах çиллессĕн пек ыйтрĕ амăшĕ.

Укахви, çăкăр чĕлли касса илнĕ май, паçăр Сехререн кулнă пекех ахăлтатса кулса ячĕ.

— Э, ухмах,—терĕ ăна амăшĕ.—Мĕн эсĕ паян пит ахăратăн?

—Аря, Ятман таврăннă тесе манăн макăрмалла-им-ха?—таврăчĕ Укахви.

Вĕсем вара Ятман çинчен урăх калаçмарĕç.

## V

Колхоз правленийĕн çурчĕ çырма хĕрринче. Турикас кӳлпине хирĕç, ытти çуртсенчен уйрăмтарах ларать. Ăна пилĕккултă çул каялла ятнех правлени валли тесе тутарнă. Чӳречисем унăн пысăк та çӳлĕ. Пӳрт таррине радиомачта сывлăшалла кармашса тăрать. Ĕç çук чухне правленинче кунĕнçĕрĕн халăх хĕвĕшетчĕ, паян ак унта никам та çук. Петĕм халăх хире çум çумлама кайнă. Правленинче колхоз счетовочĕ Куçсăр Куçма пĕчченех ларать. Вăл кунта ирех килет те ниçта тухмасăр ĕçлет,—хутсемпе чакалашать, счет шăр-

çисене вĕçĕмсĕр каялла-маялла шутарать. Ĕçĕ ун нумай: вăл çак чылаях пысăк колхозăн учет ĕçне пĕчченех туса пырать. Çапах та Куçсăр Куçма ӳпкелешмест, ĕçлет. Вăл сынни çавăн пек: ытлашши калаçмасть, вĕçĕмсĕр ĕçлет. „Пирĕн счетовод тĕплĕ çын, ахаль пулсан, колхозра нимле йĕрке те пулас çук“ теççĕ ун çинчен ялта. Унăн куçĕ те ытлашши витĕрех мар, иртнĕ тĕнче вăрçинче вăл куçран аманса кăшт çеç суккăр пулса ларман. Тепĕр çын вăл куçпа сулхăнра çеç чĕлĕм туртса, такама вăрçса лармалла. Куçма ун пек пурăнма пултараймасть. Çук, вăл ĕççĕр пĕр минут та лараймасть. Калас пулать, кăмăлтан вăл ытлашши уçă çын мар, унтан виçĕ сăмах илтесси те теме тăрать, çапах та вăл вăрттăн этем те мар. Вăл чунĕпе питĕрĕнсе çӳрени Куçма хăй пурăнăçĕнче çынсенчен инкек нумай курнинчен килет пулмалла. Вăрçăччен Куçма вунтăхăр çулхи хĕрĕпе иккĕш пурăнатчĕ, вăрçă пуçланнă хыççăн хĕрачи хăй ирĕкĕпе фронта медсестра пулса кайсан, вăл пĕр-пĕчченех юлчĕ. Куншăн та ӳпкелешмерĕ Куçма, хĕрачине çара пĕр тумлам куççуль кăлармасăр ăсатса ячĕ. Нумайăшĕсем вăл хĕрачине капла ăсатса янинчен тĕлĕнчĕç те. „Кай, мĕнле кăмăл вара çав Куçман, пĕртен-пĕр хĕрачине ăсатнă чухне те макăрмасть“, терĕç. Кăтра Михала ăна çапла ăнлантарчĕ: „Куçсăр Куçма нимĕçсемпе çапăçса курнă çын. Вĕсем ун чунне витернĕ. Унăн нимĕçсене хăйне уйрăмăн тавармалла, çавăнпа вăл хăй каяйман енне хăйĕн хĕрне çара ярать“, терĕ.

Хуран-ситрен правленине телефонпа шăнкăравласа илеççĕ. Куçма телефон патне васкамасăр утса пырать те, кăшкăрса калаçакан çынна пĕр-ик сăмахпа типпĕн тавăрать, унтан „кансĕрлетĕр çав ĕçлеме“ текен кăмăлпа каялла хăйĕн вырăнне кайса ларать. Ак телефон тата тепре шăнкăртатса илчĕ.

— Алло, Атăлкасси итлет,—терĕ Куçма, трубкăна тытса.

— Атăлкасси? Кăна райзоран калаçаççĕ. Сирĕн унта миçе гектар çумлана? Миçе? Паян кăна тухнă тетне?

— Паян тухнă!—тепре хыттăн каларĕ Куçма.

— Кам ыйтать ăна?—илтĕнчĕ хыçра паллакан сасă. Вăл, çаврăнса пăхрĕ те, хăйĕнчен пĕр утăмра Ятман тăнине курах кайрĕ.

— Ятман!

— Мĕнле пурăнать счетовод?—ала тăсрĕ Ятман. Ăна курсан, Куçман çиллессĕн туйăнакан кăмăлĕ самаях çемçелнĕ пек пулчĕ, вăл питрен те пĕчĕк ача пекех çуталса кайрĕ.

— Хăçан çитнĕ эсĕ?

— Каçхинех çитнĕ.

— Пирĕн Людмила ĕнер урамра пĕр çарçыннине куртăм терĕ, орденпа терĕ, апла вăл сана курнă пулĕ-çке?

— Мĕнле Людмила?

— Ман патăмра пĕр украинка пурăнать, çавăн хĕрачи.

— Çапла, çапла, курнăччĕ, шыв ăсса килетчĕ,—терĕ Ятман укăлча патĕнчи тĕлпулăва аса илсе.

Куççăр Куçма Ятмана ывăлне кĕтсе илнĕ ашшĕ пек пуренчен те тинкерсе пăхрĕ. Ятман кивелерех панă симĕс гимнастеркăпа. Гимнастерка айĕнчен çухави çумне çĕлесе лартнă шурă пусма илемлĕн курăнса тăрать. Сывă урине çап-çутă çутатса янă атă тăхăннă. Сăнран вăл чылай ырханланнă, урине татнăран пулас, пÿрен чылай пĕчĕкленнĕ пек. Куçĕсем варă ĕлĕкхинчен çутăраххăн пăхаççĕ тата нумай пысăкланнă пек. Калаçасса хăй унччен евĕрлех ăпкăн калаçать, ĕлĕкхинчен те ăпкăнрах пулĕ.

— Мĕнле сывлан-ха, Куçма пичче?

— Пурăнатăп çапла. Кунĕпе кунта ларап, ĕç питĕ нумай. Килте ĕнтĕ ман никам та çук, хĕрача çара кайрĕ. Çавăнпа эвакуаципе килнĕ украинка çемьине кĕртрĕм. Вот çапла пурăнатăп пĕр майлă.

Ку сăмахсене те Куçма типпĕн, счет шăрçисеневаскамасăр шутара-шутара хунă пек, калать, вăл мĕнле каланинчен Куççăр Куçма чăнах та питĕ кичем пурăнăçпа пурăннине туйса илетĕн. Çиелтен пăхсан, çак этем ĕнтĕ пурăнăçра урăх нимшĕн те тăрăшмасть пек, ун нимĕнле ĕмĕт те çук пек. Анчах вăл ĕçре калама çук чăтăмлă, шухăш ун çирĕп. Апла пулсан, вăл ĕмĕтне çухатнă çын мар: вăл кашни çынпа пакăлтатма пултараймасть, çынна тÿрех чĕрине уçса памасть, çапах та хăйне кура унăн та чунĕ те, чĕри те пур, хăйне кура вăл савăнма та, хурланма та, тарăхма та, хăпартланма та пултарать. Ăна та хăшпĕр çынсем кăмăла каяççĕ, хăшпĕрисене вăл тÿсме пултараймасть. Кăна вăл куç умĕнчех каламасть, çапах та сисет, курать. Ак вăл Ятмана калама çук юратать. Ыйтас пулсан, мĕншĕнне уççăнах каласа пама та пĕлес çук, çапах та ăна вăл хăйĕн тăван ывăлне савнă пекех савать. Унпа вăл икĕ çул ытла пĕрле ĕçленĕ, çак икĕ çул хушшинче çилеимеллипех çиленсе курман. Ĕçре Ятман яланах Куççăр Куçмана кирлĕ пек тĕплĕ пулнă, çынсемпе кăшкăрса мар, Левентей пек чĕлхе вылятса та мар, ĕçлĕ калаçнă, вăл çынсен кăмăлне никамран лайăх пĕлсе тăнă, çавăнпа та кашни çын вăлли унăн хăйне уйрăм сăмах тупăннă. Ялта мĕнпур çын кăмăлне кайма çуках ĕнтĕ, темле ырă пулсан та, сана хурлакан тупăнатех, çапах та Ятмана ялта пурте тенĕ пекех юратнă. Чи усал хĕрарăмсем те ун çине нумай вăхăт хушши çиленсе çÿреме пултарайман, вăл хăтăрарах, вĕрентерех каланă чух шăрт-март тукаласа илнĕ, çавăнтах килĕшÿ ыйтнă пек „юрĕ-çке, Ятман, эс каланă пекех тăвăпăр-çке" тесе каласа хунă. Ăна ват çынсем те хисепленĕ, мĕншĕн тесен, вĕсем Ятман колхоза вăйлатассишĕн мĕнле тăрăшнине курса тăнă. „Вăл, çамрăк пулсан та, ăслă, хуçалăха тытма пĕлет" тетчĕç ялан. Куçма, правленинче-пĕрле ĕçлесе, ун кăмăлне пур енчен те вĕренсе çитнĕ, ăна çур сăмахран ăнланса,

вӑл хушнине вӑхӑтра туса пынӑ. Куҫма колхоза та Ятман ӗҫнипе кӗнӗ. Унчухне вӑл ӳссе ҫитмен ача кӑначчӗ, ҫапах та Куҫмана виҫӗ кун хушши мӑн ҫын пекех ӳкӗтлерӗ, юлашкинчен, унӑн иккӗленӳне ҫӗнтерсе, ӑна хӑй аллипе ҫырса хатӗрленӗ заявление алӑ пустарчӗ. Вӑрҫӑ пуҫланас ҫул ҫуркунне Ятман ӑна ҫенӗ ҫере, Карелине, кайма ӗнчӗ.

— Эпӗ эсӗ ӗҫнипе колхоза кӗтӗм, йӑнӑшмарӑм, халь сан хыҫҫӑн пӗр иккӗленмесӗрех тӗнче хӗррине те пыратӑп,—тенӗччӗ вӑл.

Анчах вӗсем ҫӗнӗ ҫӗре каяймарӗҫ, тепӗр икӗ уйӑхран вӑрҫӑ пуҫланчӗ. Ятман фронта кайсан, Куҫма ӑна яланах ырӑ ятпа аса илнӗ, Левентей ҫине ҫиленсен кашнинчех: „Эх, Ятман пулсан ҫакӑнта пачах урӑхла тӑвӗччӗ ӗнтӗ, ҫук, ун пек лайӑх председатель пирӗн колхозра тек пулас ҫук ӗнтӗ“ тесе шутлана. Ак вӑл хастар, ват ҫын пек ӑслӑ руководитель каллех ун умӗнче тарать.

— Эс мӗнле, Ятман, каллех председатель пулатна?—тет ӑна Куҫма.

— Мӗнле вӑл „председатель“? Сирӗн суйласа лартнӑ председатель пур вет?

— Сана та суйласа лартатпӑр. Эс уншӑн ан хӑра.

— Ҫук, эп председатель пуласшӑн мар, Куҫма пичче. Хӑвах куратӑн, эп епле таврӑнтӑм. Йывӑр пулать...

—Ман сана каллех председатель тӑвас килет.

— Левентеех ӗҫлетер.

— Ҫук, ун тухмасть,—аллине сулать Куҫҫӑр Куҫма.— Вӑл мана вӗчесӗр ҫын пек туйӑнать, чӳпӗк.

— Мӗншӗн апла?

— Ман ҫын ҫинчен каласа парас йӑла ҫук, хӑвах куран ак.

Ҫав вӑхатра алак яриех уҫӑлчӗ те, пӳрте сӑмах ҫинех Левентей кӗрсе тӑчӗ.

— Эп сана шырап-шырап, ниепле те тупаймастӑп. Килне ҫитрӗм, итем ҫинче пултӑм!—кӑшкӑрса ячӗ вӑл. Унтан ҫинҫе те вӑрӑм пӳрнисемпе Ятман аллине ярса илсе чӑмӑлтарӗ.—Таврӑннӑ ятпа тата орден илнӗ ятпа саламлатӑп. Ав, Атӑлкассисем фронтра мӗнле ҫапӑҫҫӗ, пӑх та савӑн. Пӗ и орденпа таврӑнать, тепри медальпе таврӑнать. Анчах пӗрне те уараран шаккаса ярӑҫҫӗ-ха. Сана та уараран амантрӗҫ-и?

— Урараи.

— Нумай пулмасть Тимуш госпитальрен килсе кайрӗ. Ӑна та ураран амантнӑ. Эс пехотӑра пулна-и?

— Пехотӑра.

— Ну, вот хайхи пехота пуҫтарӑнать. Унсӑрӑн пӗччен йывӑрччӗ-ха. Халь наступлени пуҫлатпӑр ӗнтӗ. Сана каллех командир тӑватпӑр пулӗ?

— Ҫук,—терӗ Ятман.—Кунта эп рядовой пулатӑп.

— Командир пул-ха, унсӑрӑн эпӗ ывӑнтӑм. Мана пӑртак кантармалла.

— Çапла каларĕ те вăл, аллинчи патакне кăтăр çавăрса илчĕ. Кун хыççăн тин Ятман Левентей аллинче çав тери илемлĕн картласа тунă самаях сулмаклă патак пуррине асăрхарĕ. „Патакĕ шăп Левентей пек вĕçкĕн çын валли ĕнтĕ, тума ўркенмен“ терĕ ăшра Ятман.

Левентей килсе кĕрсенех правленинче шавлă пулса тăчĕ. Ку шав малтанлăха кăмăла каять, капла кичем мар пек туйăнать, анчах ялан ун пек калаçсан, çын йăлăхса çитет. Ятман та Левентейĕн янравлă сассипе кăмăллă куллине малтан савăнса итлесе тăчĕ, унăн илемлĕ питне киленсе пăхрĕ. Часах кў ытлашши пек туйăнчĕ, вăл кăшкăрса калаçни хăлхана кăтăклантарма тапратрĕ.

— Ну, айда, кĕрсе ларар, калаçар, ĕлĕкхине аса илер, ĕлĕк эпир санпа пит туслăччĕ вĕт, астумасна?—терĕ Левентей.

Вĕсем председатель пўлĕмне кĕчĕç. Ятман ăна фронтри йывăр лару-тăру çинчен, хăй мĕнле аманни çинчен кĕскен каласа пачĕ; Левентей малтанхи пек ытлашши шавламасăр колхозри ĕçсем çинчен пĕлтерчĕ.

— Иртнĕ çул тырă вăйлă пулчĕ, ĕçкунĕсем тăрăх нумай валеçрĕмĕр,—терĕ вăл.—Ытла вăрçсах каймаççĕ-ха. Çуракине пуринчен малтан тенĕ пек иртертĕмĕр, тыр вырма тухма хатĕр. Пĕр сăмахпа каласан, ĕçлетпĕр, çынсенчен кая юлмастпăр. Кун пек ĕçлесен, куçса çўрекен Хĕрлĕ ялава та хамăрах илетпĕр пулĕ-ха.

— Темĕн-çке.

— Чăнах, чăнах, Ятман. Эс мĕн тесе шутланă? Эпир кунта алла усса е кĕрĕк арки йăваласа ларатпăр тетĕн-и?

Ун сăмахĕсем Ятманшăн витĕмлĕ пулмарĕç, анчах вăл ăна хирĕç нимĕн те шарламарĕ. Левентей каласа панинчен вăл çакна ăнланчĕ: колхозра ĕçсем начарах пымаççĕ. Çуракине лайăх иртнĕ, тырă ăнса пулнă, ĕç вăйĕ пур. Малтан Ятман колхоз ĕç вăйĕ çитменнипе хăшкăлать пулĕ тесе шутланăччĕ, Левентей каланă тăрăх, ĕç вăйĕ те, лаша та çитет иккен. Апла пулсан, паллах, колхозра ĕçсем начарах пымалла мар.

Малалла сăмах Ятман колхозра ăçта ĕçлесси çинчен пычĕ.

— Командир пуласшăн мар апла?—терĕ Левентей, çав-çавах шавлăн калаçса.—Хăвăн кăмăлу, манăн сана ирĕксĕрлес шухăшăм çук. Анчах халĕ ĕçлемесĕр пурăнма çав тери кансĕр, ăна ан ман, тусăм. Чи лайăх ĕç ĕнтĕ вăл саншăн, ухсах çыншăн, кладовщик ĕçĕ. Килĕшетĕн-и? Ыранах колхоз пурлăхĕн хуçи пулатăн. Хуралçă та тума пулать, анчах эс ăна хăвна мăшкăлани вырăнне хурăн, çавăнпа сĕнместĕп.

— Çук,—татăклăн каларĕ Ятман.—Эпĕ, хăрах урасăр юлнă тесе, кладовщик та, хуралçă та пулмастăп. Ан хăра, эпĕ пур ĕçре те ыттисемпе тан ĕçлетĕп. Ăнлантăн-и?

— Ăнланасси-масарĕ...—пуçне айккинелле пăрса каларĕ Левентей.—Куç умĕнче ĕнтĕ. Чĕркуççи таран татнă та, çынпа тан ĕçлетĕн пулать. Пĕлетни, мĕн калам эп сана, Ятман. Эп

те ухсах, çапах та сан пекех ухсах мар, çăмăллăнах утса çӳреме пултаратăп. Эпĕ хамăн ухмах пуçăмпа çапла шутлатăп: пирĕн, санпа иксĕмĕрĕн, хулана тапас пулать. Тем тесен те, иксĕмĕр те техникум пĕтернĕ, темле ĕç те тупма пултаратпăр. Ак сана ман канашăм: кай та Шупашкара, пĕрпĕр лайăхрах çĕре вырăнаç, эсĕ пысăк начальникех пулатăн. Кунта ĕçлени мĕн парать сана? Нимĕн те памасть. Тăрăнса ӳкиччен ĕçле, çапах та никам та сана тав тумасть.

— Çук, эс мана ăнланмастăн,—терĕ Ятман.—Мĕншĕн тесен саншăн тăван колхоз хаклă мар, маншăн вăл темрен те хаклă.

Тек ун Левентейпе калаçасси те килмерĕ, вăл темле сăлтав тупрĕ те, правлени çуртĕнчен тухса кайма васкарĕ.

Каçхи кӳлĕме Ятман колхозра тĕрлĕ çĕре çитсе ирттерчĕ. Фермăра пулчĕ, кӳлĕ хĕррине аҫса хăпарчĕ, шкула çитсе курчĕ, юлашкинчен, мĕнпур çынсенчен, вĕçĕмсĕр паракан ыйтусенчен пĕр сехетлĕхе те пулин хăтăлас ĕмĕтпе хирелле тухрĕ. Кунта вăл, кун каçиччен курни-илтнине пуçпа тавçăрса илес тесе тата ывăннă шăмшакне пăртак кантарас тесе, ешĕл çерем çине тăсăлса выртрĕ. Капла выртма ытла та канлĕ. Таврара тĕрлĕ чечексем ырă шăршă сарса лараççĕ. Вăрман катинче куккук авăтать. Пуç тăррипе тем тĕрлĕ кайăксем чĕвĕлтетсе иртеççĕ. Тĕрĕссипе каласан, çакăн пек чух нимĕн çинчен те шухăшлас килмест, тĕнчери мĕнпур ырăпа усала манса кайса вĕçĕмсĕр кăвак пĕлĕтелле пăхса выртас килет. Ятман та малтан ним çинчен те шухăшламарĕ, йĕри-таврари илемпе киленсе, чечексен пуçа çавăрттаракан тутлă шăршипе ăнтăхса кайнă пек, пĕр хускалмасăр выртрĕ. Унтан пуçĕнче тĕрлĕ шухăшсем çурала пуçларĕç, курнă сăнсем тепре куç умне тухса тăчĕç, илтнĕ сăмахсем тепре хăлхара янра-янра кайнăн туйăнчĕç. Вăл паян курнипе кăмăллă та, кăмăллă та мар. Çынсем—ĕçре, паян вăл вăрçăччен хи пек сулхăнра чĕлĕм туртса ларакан е „темскер вар пăсăлнă пек-ха" тесе выртакан çынна курмарĕ. Фермăра та ĕçсем япăхах мар. Тем тесен те, Кĕтерне инке тăрăшатех çав. Тырă кăçал та хĕвĕнсе пулать. Çаксем ăна çырлахтараççĕ. Анчах вăл паян ăна çеç курмарĕ вĕт-ха? Ăна хăй икĕ çул каялла тума пуçланă электростанцине кăтартрĕç. Вăл çаплипех ларать, ун пури çине Ятман кайнăранпа пĕр пĕрене те хуман. Ăна тата пĕлтĕр колхозăн виçĕ гектар ытла çĕрулми юр айне юлни çинчен каласа пачĕç. Кăна вăл ниепле те ăнланма пултараймасть. Виçĕ гектар çĕрулми юр айĕнче! Кун пек япала вăл Атăлкасси историйĕнче пулман. Лартнă, çумланă, ӳстернĕ çĕрулмине мĕнле чунпа юр айне хăварнă-ха? Ăçта пулнă ун чух Левентей? Тата паçăр икĕ сехет калаçса ларнă чухне мĕншĕн вăл мана ун çинчен пĕр сăмах та каламарĕ? „Вăхăтра акатпăр, вăхăтра тирпейлетпĕр". Çак вăхăтра тирпейлени пулать-им ĕнтĕ?

Ун куç умне ĕнер курнă сар чечек сырса илнĕ тулă пусси тухса тăчĕ. Ку асаилӳ ăна пушшех тарăхтарчĕ. Çав тулла

епле сая ямалла? Левентей, председатель пулса, çавна епле чăтма пултарать-ха? Вăл Кĕтерне инкене çав сăмахсене епле калама пултарнă-ха?

Ятман ăшра хăйне çапла ыйтусем парса чылайччен шухăшласа выртрĕ. Юлашкинчен, ăш вĕçнипе, ура çине тăчĕ те каялла яла кĕчĕ. „Анне кĕтет пуль, таврăнчĕ те, килне мансах кайрĕ тесе вăрçать пуль". Паян вăл курас пеккине пурне те курчĕ, пĕр çынна çеç, Кăтра Михалана çеç тĕлпулаймарĕ. Вăл фронта кайса килни çинчен каласа пама пилĕк çухрăмри пĕр колхоза кайнă, терĕç.

Килелле таврăннă чухне ăна Кĕтерне инке ферма çуртне чĕнсе кĕртрĕ.

— Эп сана фермăна кăтартрăм, анчах калас пеккине калаймарăм,—терĕ вăл Ятмана ларма тенкел сĕнсе.

— Мĕн каласшăнччĕ?

— Мĕн каласси... Начар çынсем панă мана. Эп вĕсемпе ĕçлеме пултараймастăп, Ятман. Кăларăр мана кунтан.

— Сăмахран, кам начар çын?

— Сехре Иванĕ! Çав çын пулать-и вăл? Ăна эпĕ пăхма лаша мар, анчăк та шанса памастăп. Кунĕн-çĕрĕн çывăрать, лашасем выçă...

— А эсĕ ун пирки мĕн мана калатăн, Кĕтерне инке? Эп председатель мар вĕт.

— Эс, председатель пулмасăр, кам тата?

— Ахаль çын кăна, колхозник.

— Пĕлместĕп кама каламалла, Левентей итлесшĕн те мар. Сехрепе ĕçлеме çуках, кăна эпĕ тĕрĕс калатăп. Унпа ĕçличчен эпĕ пĕр-пĕр пĕчĕк ачапа ĕçлетĕп!—çирĕппĕн каларĕ Кĕтерне.

— Юрĕ, Левентейпе калаçса пăхăп.

— Калаç-ха, калаç. Унсăрăн эпĕ кунĕн-çĕрĕн çапăçатăп кунта, ниепле те итлеттерме пултараймастăп. Пулать те хăлăхсăр этем...

Ятман Сехре Иванĕ çинчен нумай ыйтса пĕлме те тăрăшмарĕ, мĕншĕн тесен, вăл ăна ахаль те питĕ лайăх пĕлет. Сахал мар айкашнă унпа ĕлĕк те. Ăнлантарнă, ÿкĕтленĕ, ятланă та. Тĕрĕс калать Кĕтерне инке: хăлăхсăр çын. Мĕн тесе лаша пăхма хушмалла пулнă-ха ăна?

Анчах чее те ăслă хĕрарăмăн калас пекки малта пулнă иккен-ха.

— Ак урана çухатса килтĕн, килте те ватă аннÿсĕр пуçне никам та çук,—терĕ вăл, Ятманăн çамрăклах çарала пуçланă сарлака çамки çине пăхса.—Мĕн каласси пур, пĕччен пурăнаç кичем япала вăл. Никампа чуна йăпатма çук... Кам пĕлнĕ ун пек пуласса. Арăму лайăх хĕрарăмччĕ çав та, ачи ăнăçлă çуралмарĕ. Вилмен пулсан, виççе каятчĕ ĕнтĕ, „атте" тесе чупса пыратчĕ. Ача çуратнă чух хĕрарăм вилесси пулкалать

вăл, йывăр япала вăл çуратасси. Шел, ытла çамрăкла вилчĕ, çитменнине сана валли ачине те хăвараймарĕ.

— Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ, телейĕм çавăн пек пулчĕ курăнать,— ним калама аптраса сăмах хушрĕ Ятман.

— Тепре авланас пулать,—татса каларĕ Кĕтерне инке. Вăл Ятман патне çывăхарах шуса ларчĕ, ўкĕтлекен саспа хăвăрттăн-хăвăрттăн калаçма тытăнчĕ.—Арăм вилнĕ тесе ĕмĕр хусахла пурăнас тетне? Аннўне вилес умĕн те кăшт канлĕх парас мар тетне? Çамрăках мар ĕнтĕ, хăвах пĕлетĕн. Уруна татнăшăн ытлашши чĕрўне йывăра ан ил, эсĕ ĕçе юрăхсăр çын мар. Тата, тепĕр тесен, ăна эс вăрра кайса таттарман, вăрçăра таттарнă. Эп илтрĕм ĕнтĕ, пĕр хĕр саншăн çунмаллипех çунать.

— Кам вăл?—кулса ыйтрĕ Ятман.

— Турикас хĕрĕ.

— Çапах та кам?

— Липа. Астăватăн пулĕ вĕт ăна?

— Астумасăр,—шухăшларах каларĕ вăл.—Анчах çук, Липа пирки сăмах та пулма пултараймасть. Çук, çук...

— Мĕншĕн?

— Ытла чаплă. Ăна хăрах урапах хăваласа çитеймĕн.

— Эс итле,—чарчĕ ăна Кĕтерне инке.—Чапли-масарĕ, эс ху та начар çын мар-ха. Таврара шырас пулсан, эпир унтан чаплине тупатпăр. Ĕç унта мар. Ун кăмăлĕ ытарма çук лайăх. Хитри—хитре вăл, анчах пĕрре те мăнкăмăллă та, вĕçкĕн те мар. Пуринчен хакли—ĕçре матур. Ай, ĕçре пултарать вара! Çавна качча илмесен, ухмах пулатăн, каларĕ тесе калăн.

Ку калаçу Ятмана тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ. Липа ăна кăмăллать иккен. Ĕненес килмест. Пулма пултараймасть ку. Хăй вăл ун çинчен час-часах шухăшланă, пĕррехинче фронтран çыру та яма тăнăччĕ, çырнăскерне çурса пăрахрĕ, анчах Липа Ятманпа интересленет тенине ĕненес килмест. Левентейшĕн çунать тесен, ĕненме пулатчĕ, ун пек хитре те вĕçкĕн арçынпа çўреме пултарать вăл. Вăрçăччен çўрекелетчĕç те. Астăвать Ятман: Турикаса пĕрле каятчĕç: вăл—Лисук патне, Левентей—Липа патне. Кайран сивĕнчĕç, анчах хăшĕ хăшне пăрахрĕ, ăна вăл пĕлмест. Те хăйĕнчен аслăрах пулнăран, Липа Ятмантан питĕ вăтанатчĕ, Левентейрен вара Лисукпа иккĕшĕ те тăрăхласа кулма пăхатчĕç. Паллах, халь вăл çитĕнсе çитнĕ хĕр. Халь, тĕлпулсан, Липа мар, Ятман вăтанмалла.

Кĕтерне инке ĕнер Укахви куллине ахаль хăварман иккен. Липа хăйсем патĕнчен тухса кайсан, вăл хĕрĕнчен мĕн пĕлмеллине пĕтĕмпех ыйтса пĕлнĕ. Липа Ятман пирки калаçма питех те юратать имĕш. Амăшĕ Ятмантан çыру илсен, вăл Укахвирен унта мĕн çырни çинчен ыйтса пĕлет. Пĕррехинче Анушкапа Укахви Ятман амăшне çыру çырса панă чухне хă-

йĕнчен салам та çыртарнă пулнă, анчах çавăнтах, аван мар тесе, каялла хураттарнă. Тепрехинче Анушкана Ятман амăшĕ патне кил-çурт тирпейлеме кайма сĕннĕ имĕш. Çакăнпа та пĕчĕк япаларах пысăк япалана чухласа илме пĕлекен Кĕтерне инке çакна Ятмана уçса пама шутланă. Вăл кăна пытарса тăма Ятман çамрăк каччă мар тата вăхăчĕ те вăрçă вăхăчĕ, тенĕ. Унăн хăй хисеплекен Ятмана çийĕнчех авлантарасси килнĕ тата, тепĕр енчен, вăл ăна ыттисем урăх хĕрарăм тупса парасран хăранă.

Ятман киле таврăнсан та Кĕтерне инке сăмахĕсем пиркиех шухăшларĕ. Чăнах та, вăрçăран таврăннă май пурăнăçра ун умне пысăк ыйтусем тухса тăчĕç. Кам пулать вăл колхозра? Мĕнрен пуçламалла ялти ĕçе? Епле йĕркелемелле килти пурăнăçа? Ĕнер вăл колхоз председателĕччĕ, кашнине ĕç хушма пултаратчĕ, кашнин пурăнăçĕпе нушине пĕлетчĕ. Председателĕн çитменнине çитермелле, пĕлменнине вĕрентмелле, итлеменнине итлеттермелле пулнă. Вăл кашнин пурăнăçне мĕн чухлĕ те пулин хутшăннă. Халь ак председатель пулмасть, тейĕпĕр. Çапах та вăл колхоз ĕçĕнчен аякра тăма пултараймасть-çке-ха? Мĕн тумалла унăн? Мĕншĕн çунмалла? Ятман сасартăк Кĕтерне инке Сехре Иванĕ çинчен каласа кăтартнине асаилчĕ. Вара ăна ку ыйтăва татса пама питех те çăмăл пулчĕ. „Вăрçă çинчен шухăшламалла! Сехре пеккисем вăрçă пыни çинчен манса кайнă. Вĕсене вăрçă çинчен шухăшлама вĕрентмелле. Нумайĕшсем, хăйсен тăванĕсене фронта ăсатнă та, вĕсем çапăçаççĕ, эпир вăрçăра мар тесе шутлаççĕ. Вĕсем хăйсем те вăрçăра, фронт линийĕ Дон патĕнчен çеç иртмест, кашни çын чĕри патĕнчен иртет!—çынсене çакăн çинчен ăнлантарса памалла".

## VI

Тепĕр кунне Ятман ирех Левентей патне кайрĕ. Вăл пынă çĕре лешĕ ирхи апат çисе ларатчĕ, амăшĕ те, инкĕшĕ те килте çукчĕ. Ятман вĕсене колхоза ĕçлеме кайнă пулĕ тесе шутларĕ. Вăл Левентее сывлăх сунчĕ, хăй пахча енчи чӳрече патне вăрăм сак çине ларчĕ. Часах пӳрте Левентей амăшĕ кĕчĕ. Амăшĕ, калаçма вашават хĕрарăм, ăна ал тытса çавăнтах сăмах пуçласа ячĕ.

— Калап Левентее кам та пулин аманса таврăнать тесе. Виçĕм кун тĕлĕк куртăм. Пирĕн кушак шăши тытнă пек те, эй, вылять пек, эй, вылять пек. Пăхап—хăй юнланса пĕтнĕ. Ман тĕлĕк вăл яланах тĕрĕс пулать.

— Ну, юрĕ тĕлĕкӳпе,—чарчĕ ăна ывăлĕ,—эс пире луччĕ сăра ăсса пар-ха.

Амăшĕ часах тĕпсакайне анса пĕчĕк витрепе сăра ăсса тухрĕ.

— Çуттине ямасни?—сĕнчĕ Левентей Ятмана.

— Çук, ирхине ĕçме юратмастăп. Ирхине ĕçсен каçчен хамран хам йĕрĕнсе çÿретĕп вара.

— Ну, кирек те мĕн ту, эп пĕр черкке яратăп,—шкапран бутылка кăларчĕ лешĕ.

— Ĕçме вĕрентĕнем?—ыйтрĕ Ятман.

— Салтак арăмĕсем ĕçтереççĕ те, ирĕксĕрех ĕçес пулать.

— Темскер, ĕçке ерсе каfive-и-ха пирĕн Левентей, ялан сăра ĕçет, эрех ĕçет,—каллех калаçма пуçларĕ амăшĕ.

Ятман пĕр-ик курка уçă сăра ĕçрĕ, анчах калаçăва ытлашши хутшăнса каймарĕ. Çак Левентейпе амăшĕ сăнпа та хитре, чĕлхерен те яшшар, килен-каяна та питĕ тараватъ, çапах та вĕсен çынна йăлăхтаракан темле ытлашши енĕ пур. Темле лайăх пулсан та, чун туртмасть çак çынсем патне. Ятман мĕн çамрăкранпах Левентейпе пĕрле ÿснĕ, унпа пĕрле вăл выртма кайнă, техникумран вĕренсе тухнă, вăрçăччен ялта та, кÿршĕ ялсенче те улахсене çÿренĕ. Сăнран ун пек хитре арçын тупма та йывăр, таса та шурă питлĕ, çÿçĕсем вăрăм та кăлкан пек çемçен явкаланса тăраççĕ, пĕвĕ çÿлĕ те тĕреклĕ. Кун пек арçынна кирек-мĕнле хĕрарăм та савмалла. Сăнран илемлĕ пулнăран ăна ялта хитре Левентей тесе чĕнеççĕ. Хĕрарăмсем тата ăна пакăлти Левентей те теççĕ. Вăл хăвăрт калаçать, ун сăмахне чăх та сăхса ĕлкĕрес çук. Ун кăмăлĕнчен тĕлĕнсех каймалла: вăл пуринпе те лайăх, пуринпе те пĕр пекех кăмăллăн калаçать. Тĕлпулать сана урамра—çавăнтах чарса ăçти-çук çинчен каласа пама тытăнать. Вăл яланах савăнăçлă, инкек е хуйхă мĕнне, тен, пачах та пĕлмест пулĕ. Ун пурăнăç çулĕ яка пулнă, ăна пурăнăçра нимле йывăрлăх та кÿрентерсе курман. Мĕнпур инкек унăн пĕчĕкрех чухне пÿрт тăрринчен ÿксе урине хуçни пулнă пулĕ. Çавна пула вăл ĕмĕрлĕхех ухсах пулса юлнă, çара та каяйман.

— Айда, хире тухса çÿрер,—чĕнчĕ Ятман апат çисе тăраннă Левентее.

— Халех каятпăр. Эп аннене кăнтăрла валли апат пĕçерме калам-ха.

Çавăнтах вăл пÿрт алăкне уçрĕ те, амăшне чĕнсе илсе хушусем пара пуçларĕ:

— Анне, эсĕ Куççăр Куçмаран виç кĕрепенкке çу ил. Кăнтăрла валли çăмарта шаритлесе пĕçер. Илтрĕне?

— Юрĕ, ывăлăм, юрĕ,—юрланă пек тавăрчĕ амăшĕ.

Ятман чăтаймарĕ, пачăрах чĕлхе вĕçне килнĕ сăмахне персе ячĕ:

— Сан аннÿ çум çумлама каймасть-им вара?

— Çук, каймасть. Ытлашши сывах та мар та... Тата пирĕн çимелĕх пур та-ха, мĕн ытлашши асаплантарас.

Ку сăмахсемшĕн Ятман ăна çиййĕнчех вăрçса тăкасшăн пулчĕ, анчах тăвăлса килнĕ çиллине вăйпа тытса чарчĕ те нимĕн те шарламарĕ. Ăшĕнче çеç шутласа илчĕ:

„Пăх-ха, председателĕн çиме çитет те ĕнтĕ, ун амăшĕ ĕçлеме тухмасăр та тăма пултарать, ман утмăл икĕ çулхи аннен çиме çитмест те, унăн ĕçлесех пулать. Нивушлĕ вăл хăй мĕн каланине ăнланмасть? Нивушлĕ вăл, председатель пулсан та, колхозри ĕç çине çапла пăхать?" Кăна унăн ĕненес килмерĕ, вăл ăна Левентей çăвар вылятса каласа хучĕ пулĕ терĕ. „Е чăн пулсан? Е Левентей чăнах та çавăн пек çын пулсан? Вара эп унпа килĕшсе тăма пултараймастăп, Темле пулсан та, вăл ман ĕлĕкхи юлташ пулсан та, эп ăна хирĕç вăрçă пуçлатăп".

Хирте те, колхоз правленинче те вĕсен сăмах çыхăнмарĕ. Халĕ ĕнтĕ, Левентей тĕлĕшĕнчен пĕрре иккĕленӳ çуралнă хыççăн, Ятман ăшра унăн кашни сăмахне чĕрре кĕрсе пычĕ. Председатель калаçни ăна пĕрре те кăмăла каймарĕ. Вăрçă çинчен калаçма тапратать-и, колхозри ĕçсене сӳтсе-явма тытăнать-и, уйрăм çынсем çинчен сăмах хускатать-и—пур ыйтăва та ачапчалла, çиелтен, ытти мĕнпур ыйтусенчен уйăрса илсе лартать. „Вăл халъхи лару-тăрăва нимĕн те ăнланмасть, вăл вăрçă мĕн икенне нимĕн чухлĕ те пĕлмест"—шутларĕ Ятман.

— Мĕн эс кăмăлсăр? — терĕ ак Левентей, Ятман ун çине çатвери тарăхса пынине тин çеç сиссе.

— Эп санпа кăмăлсăр,—персе ячĕ Ятман, правленинчен урама тухсан.—Эс ĕнер пит мухтантăн. Эп ĕçсем чăнах та начар мар пыраççĕ тесе шутланăччĕ. Тĕрĕссипе сан ĕçсем начар, Левентей.

— Мĕнтен начар вара?

— Мĕнтен начар? Ху курмастăн-и çавна?

— Тупата туршăн курмастăп.

— Ку вара пушшех начар. Çын, хăй çитменлĕхне курсан, ăна пĕтерме тăрăшать, курмасть пулсан, путнăçемĕн путса, пĕтнĕçемĕн пĕтсе пырать. Эс тулă пуссине тухса курнă-и?

— Курнă. Вара мĕскер?

— Вăл тулла халиччен мĕншĕн çумлаттармарăн?

— Эй, Ятман, пурăнса пăх-ха ялта, курăн,—ал сулчĕ Левентей.—Эс ĕлĕкхи аршăнпа виçетĕн. Халь вăрçăчченхи мар çав. Пахча-çимĕçсене те аран-аран çумларăмăр. Ал çитмест, тусăм.

— Ĕненместĕп.

— Пурăнса пăх, ĕненĕн. Эс вăрçă ялти пурăнăçа мĕнле йывăрлатнине пĕлместĕн-ха.

— Эп пĕлетĕп-и, пĕлместĕп-и—урăх сăмах, ман шутпа, эс пĕлместĕн. Мĕн вăл вăрçă—эс ăна ăнланмастăн. Халь пĕтĕм çĕршыв вутри пек çунса, вĕресе тăрать. Вăрçă кашнин чĕрине хускатнă. Сан хускалнă-и вăл? Хыпашласа пăх-ха. Эс вăрçăччен те ĕçес, çиес ĕмĕтпе кăна пурăннă, халĕ те çав ĕмĕтпе кăна пурăнатăн.

— Этеме тата мӗн кирлӗ?—Ятман чарӑнса тӑнипе усӑ курса ыйту пачӗ Левентей.—Этемле пурӑнма май пур чухне этемле пурӑнас.

— Çук, этеме вӑл кӑна кирлӗ мар,—хӗрӳлленсех калама пуçларӗ Ятман,—халь эпир кашни харпӑр-хӑй хырӑмӗ çинчен кӑна шутласан, нимӗç пире çакӑнтах таптаса кайнӑ пулӗччӗ.

— Эс, Ятман, доклад ан ту, ӗçсем мӗнтен начар, çавна кала.

— Ӑна эс колхозницӑсенчен ыйт. Эп икӗ кун кӑна пурӑнап, вӗсем мана чылай япала çинчен каласа пачӗç.

— Вӗсем калӗç. Пирӗн колхозниксем хыççӑн каймалла мар. Колхозник вӑл—колхозник, а эпир—руководительсем. Руководитель массӑран çӳлте тӑмалла, тет Сталин.

— Ахаль мар сана çынсем „пакӑлти Левентей" теççӗ. Каçар, эп санпа шултра сӑмахсемпе калаçма тытӑнатӑп. Эс руководитель массӑран çӳлте тӑмалла текен сӑмахсене вӗреннӗ, анчах çак сӑмахсен пӗлтерӗшне нимӗн чухлӗ те ӑнланман. Пӑх, ав сан жнейка ларать. Ӗнер эпир çак тӗлтен иртсе кайттӑмӑрччӗ те, пӗр ватӑ колхозник мана калать: „Çак жнейкӑна юсаттарас тесе Левентее миçе каларӑм, пурпӗр итлемерӗ", тет.

— Юсама май çук ӑна,—татӑклӑн каларӗ Левентей.

— Çук, юсама май пур. Кӑтра Михалана кӑна хуш, вӑл сана тем те юсаса парӗ. Кирлӗ пулсан, хам та юсаса паратӑп. Вырма та унпа хамах вырма пултаратӑп.

Ятман, кӗсъинчен сӑмса тутри кӑларчӗ те, унпа çамкине шӑлса илчӗ. „Фу, нервӑсем пӗтнӗ хамӑн, ӑна вӑрçса вӗриленсех кайнӑ"—шутларӗ ӑшра. Халиччен чӑх сӑхнӑ пек калаçакан Левентей Ятман калаçма чарӑнсан та нимӗн те шарламарӗ. Ятман, пӗр пуçланӑскер, ӑна мӗн калас пеккине йӑлтах каласа тӑкма шутларӗ.

— Пӑх-ха, ав мӗнле тӑлӑххӑн ларать эп тума пуçланӑ гидростанци çурчӗ,—кӑтартрӗ вӑл çырма хӗрринчи тӑррине витмен пысӑк çурт çине.—Ӑна çурри ытла тунӑ вӗт ӗнтӗ. Мӗн чухлӗ укçа, вӑй пӗтернӗ. Эс çавна та тутарттарса пӗтермен.

— Ху пуçланӑ, хӑвах туса пӗтер ӗнтӗ,—те шӳтлесе, те чӑнласах каласа хучӗ Левентей.

— Çапла пӑхатпӑр çав эпир ӗç çине, çав пӗтерет те,—çиййӗнчех тавӑрчӗ Ятман. Вӑл иртнӗ кӗркунне çӗрулмине юр айне туни çинчен те каласшӑнччӗ, анчах хӑйне тытса чарчӗ, каламарӗ.

„Мӗн калан ӑна, пурпӗрех сӑлтав тупать. Вӑл кашни япалана хӑйӗн евӗрлӗ ӑнлантарса пама пӗлет".

— Итле-ха, Левентей,—килӗшӳ сӗннӗ пек каларӗ вӑл.—Ман санпа пӗрре те вӑрçас килмест. Манӑн хамӑр колхозра пур çӗрте те йӗркелӗх тӑвас килет. Çавӑ çеç. Йӗркесӗрлӗхе курсан чун ыратать. Тулла, акнӑ тӑк, çумлас та пулать. Эп сан-

шӑн пуҫлӑх мар, ахаль колхозник ҫеҫ. Ҫапах та итле: ҫумлаттар ҫав тулла, кая юлса та пулин ҫумлаттар.

Хӑйӗн тӗлне ҫитсен, Левентей ӑна сӑра кӗрсе ӗҫме чӗнчӗ. Ятманӑн ӗҫесси те килетчӗ, анчах, кӑмӑл туртманнине кура, вӑл килӗшмерӗ, Левентее ал пачӗ те, каҫчен Турикас колхозне ҫитсе килес шутпа ҫырма еннелле ҫул тытрӗ.

Ҫул ҫинче ун пуҫне хӑрушӑ шухӑш пырса кӗчӗ: мӗн шутларӗ Левентей хӑйӗнпе ҫапла хивре калаҫнӑ хыҫҫӑн? Хӑйӗн вырӑнне каллех председателе кӗресшӗн темерӗ-ши? Ҫавна ҫеҫ ан шутлатӑр. Вӑл эп мӗн каласшӑн пулнине ӑнланчӗ-и ?Унтан хӑех каласа хучӗ: ҫук, ӑнланмарӗ, нимӗн чухлӗ те ӑмланмарӗ. Ыттисем тӗрӗс ӑнланӗҫ-ши манӑн шухӑш-кӑмӑла? Ыттисем тӗрӗс ӑнланӗҫ-ши?

Ятман хӑйӗн пӗр пысӑк ҫитменлӗхне тахҫанах, ҫара кайиччене пӗлет. Ун ҫинчен вӑл ҫарта та нумай шухӑшланӑ, ак вӑл халь те шухӑшлаттарать. Астӑвать-ха, ҫарта капитан ӑна хыттӑнах каланӑччӗ: „Лайӑх командир эсӗ, Капитонов, кирекмӗнле ӗҫе те чунтан тӑватӑн, ҫынсемпе ӗҫлеме те пӗлетӗн, вӗсем сан пек пулма тӑрӑшаҫҫӗ. Анчах сан пӗр тӑшман пур: эс кирлӗ мар ҫӗрте вӗриленетӗн. Ой, ӑна пӗтермесен, санран начар командир пулать. Час ак кӑшкӑрма тытӑнӑн. Халь те эсӗ тепӗр чухне патака ытлашширех авнӑ пек туйӑнать. Пӑрах эс ҫав вӗриленес йӑлана", тенӗччӗ.

„Ку йӑла пӗтмест иккен-ха. Паян Левентейпе ҫапла калаҫмаллаччӗ-и? Тем тесен те, вӑл колхоз председателӗ. Сана, ӗлӗк председатель пулнӑ тесе, фронтовик тесе, ӑна ҫапла ятлама никам та ирӗк паман. Каламаллине кала, анчах ан вӗрилен. Вӑл сан вӗренекенӳ мар, эс учитель мар"...

## VII

Ик колхоз ҫаранӗ ҫинче те паян иртенпех ӗҫ вӗрет. Ҫырма икӗ айккипе те ҫава сасси янраса тӑрать. Кам кӑна ҫук кунта: арҫынсем, хӗрарӑмсем, ваттисем, ачасем. Ӑҫта пӑхан—унта куҫ тулли чечек: шурри, хӗрли, сарри, кӑвакки. Хӑлхара савӑнӑҫлӑ юрӑ янӑраса тӑрать, улӑх айккинчи вӑрманта куккук авӑтать, кайӑкӗ юрлать, курӑк ӑшӗнче шӑрчӑкӗ чӑриклетет, пур ҫӗрте те ҫава чашлатать, лапатка янрать. Ҫавапа лапатка янравӗ ҫынсен сассипе хутӑшса каять. А-у!—кӑшкӑраҫҫӗ леш вӗҫӗнче.—А-у!—йӗкӗлтенӗ пек тӑсса ответлет вӑрман. Пӗри ҫаврака сӑмах калать, вара пӗтӗм улӑх, пӗтӗм тавралӑх кулса ярать. Хи-хи-хи!—ихӗреҫҫӗ хӗрӗсем. Ха-ха-ха!—ахӑраҫҫӗ арҫыннисем. Мӗн уҫать-тӗр ҫынсен кӑмӑлне—янкӑр уяр ҫанталӑкпа улӑх илемӗ-и е пӗрлешӳллӗ ӗҫӗн савӑнӑҫӗ—кашни утӑмра хаваслӑ кӑмӑл вылянине куратӑн. Кунта кичем ҫын та кулать, наян ҫын та ҫӗкленсе ӗҫлет, ҫамрӑк ача та вӑйпитти ҫынпа ӑмӑртать. Урӑхла ӗҫлеме май та ҫук, мӗншӗн тесен, кашни ҫыннӑн кӑмӑлӗ куҫ умӗнче, кашни ҫыннӑн ӗҫне халӑх курать. Ҫавасем пӗр канмасӑр чашлатаҫҫӗ.

Ҫынни ахӑрать, кулать, ҫави ҫав-ҫавах малалла шӑвать, паккус хыҫҫӑн паккус утӑ хӑварать. Хытӑран та хытӑ, хытӑран хытӑ илӗнеҫҫӗ ҫавасем. Хӑшӗ ӑмӑртать унта—ҫави ӑмӑртать-и, ҫынни-и? Умра куҫа шартарса чечексем лараҫҫӗ: шуррисем, кӑваккисем, хӗрлисем; хӗрлисем, кӑваккисем, шуррисем. Ваттисем курмаҫҫӗ те пулӗ вӗсене, ҫулаҫҫӗ те тӑкаҫҫӗ, хӗрсем, хӗрсем вара каҫса кайнӑ. Юратаҫҫӗ хӗрсем чечеке! Юратаҫҫӗ хӗрсем хитре япалана!

— Укахви, Укахви, теп, пӑх-ха, мӑкӑнь чечекӗ пекки ларать.

— Чӑнах та.

— Татса ил.

— Мӗн тӑвас унпа?

— Пуҫ кӑшӑлӗ тӑватпӑр, кӳлле яратпӑр.

Хӗрсем мӗнпур хитре чечеке татаҫҫӗ. Ӗнтӗ вӗсен темиҫе пуҫкӑшӑлӗ тумалӑх та пуҫтарнӑ, татах татаҫҫӗ.

— Тарье, Тарье, тетӗп, ҫавна та хӗрхенмерӗн-и?

— Мӗн хӗрхенес ӑна?

— Ил, ил эс вӑл чечеке.

— Мӗн тӑвас ман унпа?

— Упӑшкуна илсе кайса пар.

— Эсир савнисем патне чиксе ярӑр ӗнтӗ, пире чечексӗр те юрӗ.

Миҫе хутчен аса илнӗ Ятман колхозра ҫапла пӗр йышпа хаваслӑ ӗҫленисене! Нимех те ҫук пек кунта—шуйӑхаҫҫӗ, йӗплӗ сӑмахсем калаҫҫӗ, ахӑлтатса кулаҫҫӗ, ҫавӑ ҫеҫ. Анчах пӗрре колхозра пурӑннӑ ҫын ют ҫӗрте ку ӗҫшӗн пит тунсӑхласа ҫитет иккен, вӑл унта мӗн чухлӗ ытларах пурӑнать, ку ӗҫ уншӑн ҫавӑн чухлӗ хаклӑрах пулса тӑрать иккен.

Ятман каҫма ҫинчен ӗҫлекенсем патне каҫрӗ.

— Вӑй патӑр, утӑ ҫулакансем!

— Сана кунта патӑр!—харӑссӑн кӑшкӑрчӗҫ хӗрсем.

Кӑтра Михала ахӑлтатса кулать,

— Ҫав хӗрсене мӗн кирлӗ? Вӗсене каччӑ хирлӗ, ҫавӑ анчах.

— Каччӑсемсӗр пурӑнма та йывӑр ҫав!—хӗрсен хутне кӗчӗ Тарье.

— Тӗрӗс, Тарье инке.

— Каччӑсем пулнӑ пулсан, халь ҫакӑнта вӗсемпе ӑмӑртса ҫулаттӑмӑрччӗ.

— Сана ҫава парас мар-и?—тет Ятмана Кӑтра Михала.—Ак ман виҫӗ ҫава, суйласа ил.

— Ҫук, ӗнтӗ, манран тек утӑ ҫуласси пулмарӗ. Хӑйрама—давай.

Кӑтра Михала ури патӗнче виҫӗ ҫава выртать, аллинче ун тепӗр ҫава, ӑна вӑл лапаткапа хӑйраса тӑрать. Хӑй пӑртак маларах хӗрсемпе ӑмӑртса ӑш пиҫиччен ҫулнӑ пулмалла—кивӗ сӑран картусӗ айӗнчен тар тумламӗсем пӑчӑртатса тухаҫҫӗ. Ҫӑварпа хӑй темле ташӑ кӗвви калать, сылтӑм урипе ҫак кӗвӗ тӑрӑх ташлам пекки тӑвать.

— Ну, хĕрсем, кам çави мăкалчĕ тата? Калăр, пĕрре чуптумаллах хăйраса паратăп.

— Кил, кил, тепре ăмăртар, ав каçалăку юлать!—кăшкăрaççĕ хĕрсем.

Кăтра Михала лапаткине Ятмана парса, алла çава тытать. Çавăнтах ун патне хăйĕн çавипе Тарье чупса пырать, вара вĕсем, пĕтĕм халăха култарса, Михалан юлнă каçалăкне хăвалама тапратаççĕ.

— Айда, Тарье, кăтартар çамрăксене мĕнле çулмаллине!

— Çамрăк чухнехи пек чашлаттарар-ха пĕрре!

Хăвăрт илĕнеççĕ вĕсен çависем. Тикĕссĕн тăкăнаççĕ вĕсен çивĕчĕшĕпе касăлнă курăксем. Михала Тарье çави çине, лешĕ Кăтра Михала çави çине пăхать. Михала çавине кăшт сулăмлăрах сулса ярсан, лешĕ те çави хăвăртлăхне ÿстерет, çапла вĕсем çависене килĕштерсе ывăтса пыраççĕ. „Ăста çулать, çавăнпа хăйĕн ĕçне халăха кăтартма вăтанмасть", тет ăшра старик.

— Пăрăнăр, хĕрсем, таптаса каятпăр!—кăшкăрать вăл.

— Асту, Михала пичче, такăнса ÿкен, ак кунта тĕмеске пур

— Майпентерех! Урана касатăн!

Пĕри, хăранă пек пулса, хыттăнах çухăрса ярать, ыттисем пĕтĕм улăх илтмелле ахăлтатса кулаççĕ. Улăх кулăпа чĕтресе тăрать.

Часах Кăтра Михала патне хĕрелсе кайнă Анушкапа Карачăм пырса тăчĕç.

— А эсир мĕн çынсем ĕçленĕ чухне кăллĕн-каллĕн утса çÿретĕр?—ятланă пек хыттăн каларĕ Кăтра Михала.—МТС-ра ĕçлес пулать!

— Киле таврăнатпăр, ман çимелли пĕтрĕ,—айăплăн сăмах хушрĕ Анушка.

— Ну, кунта килнĕ тĕк, ĕçлемесĕр каймастăр. Тытăр та çава, пуçлăр çулма.

Çамрăксем пĕлеççĕ: Кăтра Михала çапла татса каларĕ тĕк, турткалашса тăни намăс курни кăна пулĕччĕ.

— Çулас, эпир ĕмĕр çава тытман çынсем мар вĕт.

Анушка аллине çава илет. Анушка Карачăмпа юнашар тăрать. Пăхать те, пăхмасть те вăл Карачăм çине. Тутисене вăл тирпейлĕн пуçтарса илнĕ—те кулаççĕ вĕсем, те кулмаççĕ. Пичĕ паянхи хĕвеллĕ кун пек таса та çутă: унта ура айĕнчи чечек те, çÿлти кăвак тÿпе те палăрать пек, куçĕсем курăнмаççĕ, вĕсене хĕрача вăтаннипе аялалла тинкернĕ. Пăхса илĕччĕ Карачăм вĕсенчен, сăнĕччĕ пĕр тапхăр вĕсем мĕнле ялкăшнине, сăнама май çук. Ак Анушка çава аврине ик аллипе тытрĕ, ак пĕвĕпе çăмăллăн ыткăнса сулса ячĕ, вара хавасланса пĕр чарăнмасăр çулма пикенчĕ. Карачăм малтан иккĕленсе тăчĕ, унпа тан çулма пултараймăп, терĕ, анчах çавăнтах, халь ĕнтĕ турткаланса тăма, пĕр алла тытнă çавана нăрахма юраманнине туйса илсе, каçалăк умне тăчĕ.

— Пуҫла, мӗн пӑхса тӑратӑн,—терӗ Анушка.
— Ӗлкӗрейӗп-и эп сан хыҫҫӑн?
— Эс мана пӑрахса та хӑварӑн-ха,—кулчӗ лешӗ.
— Ну-ка, ну-ка,—хавхалантарчӗ вӗсене Михала пичче те.— Ӑмӑрт-ха, Анушка, каччӑпа.

Вӑл вара пуҫларӗ. Мӗнпур пӗлӳлӗхне пуҫтарчӗ, мӗнпур вӑйне кӳлчӗ. Икӗ ҫава чылайччен чашлатрӗҫ. Вӗсен айккинче ытти ҫавасем сулӑнаҫҫӗ, анчах Анушкапа Карачӑм вӗсене курмаҫҫӗ, ку ҫавасен сассине илтмеҫҫӗ. Вӗсем пӗр-пӗрин ҫави сассине ҫеҫ илтеҫҫӗ, ку вара вӗсене хӑлхара темле илемлӗ юрӑ янраса тӑнӑ пек, пӗр-пӗрин чӗри таппине илтнӗ пек туйӑнать. Лайӑх кун пек ӑмӑртма, лайӑх. Ал ҫава аврине туймасть, ҫава курӑка перӗннине туймасть, ура ҫӗре туймасть.

— Карачӑм,—тет ҫавана сулса янӑ чух ун еннелле пӑрӑнса Анушка,—эпир нумай иртсе кайрӑмӑр, ҫитӗ, аван мар.
— Вӑтанатӑн-им вара?
— Аван мар. Сан хӗрӳсем кӗвӗҫме пултараҫҫӗ.
— А-ха, хӗрсем кӗвӗҫесрен хӑратӑн,—чарӑнать Карачӑм.

Вӗсем ҫулма пӑрахаҫҫӗ те, ҫависене хулпуҫҫи ҫине хурса, ыттисем патне пыраҫҫӗ. Ыттисем ҫав-ҫавах ҫулаҫҫӗ-ха. Ҫӑмӑллӑн илӗнеҫҫӗ ҫавасем, харӑссӑн шӑваҫҫӗ урасем, шапӑрах тӑкӑнаҫҫӗ илемлӗ чечексем. Ӗнтӗ ҫаран вӗҫне тухасси те инҫе мар,—тепӗр ҫӗр метр яхӑн ҫеҫ, ав ҫавӑнта хӑвалӑх патне ҫитмелле те—унта ҫулмалли улӑхӑн вӗҫӗ.

— Эсир мӗн пӑрахрӑр, Карачӑм?—кӑшкӑраҫҫӗ хӗрсем.
— Ҫулӑр-ха, сире хӑваласа ҫитетпӗр.
— Курӑпӑр!
— Курӑпӑр!

Ҫапла шуйханса ӗҫленӗ хушӑра сисӗнмест те кӑнтӑрла ҫитет. Кану вӑхӑтӗнче ҫынсем сулхӑна тӗмӗсем айне ларса апат ҫиеҫҫӗ. Кунта кашни ушкӑнта хӑйне евӗр калаҫу пуҫланать: ваттисем килти ӗҫсем ҫинчен сӑмахлаҫҫӗ, ҫамрӑксем ҫав-ҫавах пӗр-пӗринчен тӑрӑхласа кулаҫҫӗ. Кӑтра Михала патне пӗр кӗтӳ ача пуҫтарӑннӑ, вӗсем старик ертсе пынипе кӳлле сӗрекепе пулӑ тытма кӗме хатӗрленеҫҫӗ. Ятман хӑйӗн планшетӗнчен пысӑках мар карттӑ кӑларчӗ те халӑха политинформаци итлеме чӗнчӗ.

— Ну, мӗн ҫӗнни пур унта? Каласа пар-ха, Ятман,—терӗ политинформацисене ялан тимлесе итлекен Сахрун пичче.

Ятман Совет Информаци бюровӗн ӗнерхи сводкине илчӗ те, ӑна вуласа, ӑнлантарса пачӗ. „Воронежпа Ворошиловоград тата Цымлянск районӗнче пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен атакисене сире-сире янӑ. Тӑшман урса кайса малалла талпӑнать, пирӗн ҫарсем ӑна ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем кӳреҫҫӗ. Крымра тата Ленинград фронтӗнче те хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ“. Унтан Ятман „Правда“ аҫатӑн „Гитлеровецсем совет халӑхне мӗнле пурӑнӑҫ тусапараҫшӑн?“ ятлӑ статьине вулать. Пӗр вунӑ минута яхӑн ҫын-

сем ним чĕнмесĕр итлесе ларaççĕ. Анчах вуласа пĕтерес умĕн унта та кунта сăмах хушса хуни илтĕнме пуçлать, „Ав мĕн шутлать вăл!" „Пăх-ха, мĕн тума ĕмĕтленет, йĕксĕк!" теççĕ ватăраххисем. Хăшпĕрисем нимĕçсене вăрçса шултрарах, хивререх сăмахсем те кала-кала хураççĕ.

Ятман каласа пĕтерсен вара политинформаци хăй тĕллĕнех шавлă пуху пулса кайрĕ. Кунта тĕрлĕ ыйту хускатрĕç. Малтан ытларах фронтри ĕçсем çинчен калаçрĕç, унтан сăмах тыр вырасси çине куçрĕ.

— Тыр вырасси çинчен каласа парăр-ха,—терĕ пĕр хĕрарăмĕ.—Мĕнле йĕрке пулать кăçал? Аванс парасси пирки çĕнĕ саккун тухнă темест-и?

— Ăçта председатель?

— Левентей ăçта?

— Мĕншĕн вăл пире пухса калаçмасть?

— Ан кăшкăрашăр!—чарать çынсене Тарье.—Ав Михала пичче каласа патăр, вăл правлени членĕ вĕт!

Вара Михала мĕн пĕлнĕ таран колхозниксене аванс памалли йĕрке çинчен, правлени тыр вырас ĕçе мĕнле йĕркелеме палăртни, тырпула лайăх пуçтарса кĕртме колхозра мĕнле ĕç хатĕрĕ, мĕнчухлĕ ĕç вăйĕ пуррипе мĕн çитменни çинчен каласа парать.

Ятман ăна итлесе савăнса кăна тăрать. „Ха, епле ăнлантарать старик. Епле хăнăхса çитнĕ вăл халăх ĕçне! Ӳсеççĕ иккен çынсем. Государство деятелĕсем пек калаçаççĕ. Тĕрĕссипе председательте Левентей мар, çакă ĕçлемелле".

Итленĕ хушăрах вăл çырма леш енне, Турикас колхозникĕсем ĕçленĕ çĕрелле, пăхать. Лешсем апата ларма васкамаççĕ-ха, çав-çавах çулаççĕ. Вĕсен йышĕ пысăках мар, ĕçлессе те вĕсем хăйсен кӳршисем çине пăха-пăха ытлашши шуйăхмасăр ĕçлеççĕ. Хĕрарăмсем хушшинче Ятман тĕрленĕ вăрăм кĕпе тăхăннă, пуçĕ çине сарлака улăм шлепке пусса лартнă Катрам Иванне курать. Унпа юнашар шурала пуçланă симĕс кĕпе тăхăннă лутрарах кăна хĕрарăм çулать. Ăна Ятман паçăрах пал-ларĕ, ку—Липа. Липа та ăна вăл кунта килсе тухсанах палларĕ." Ĕлĕк пĕрлеччĕ, ак халь колхоз уйрăлнă хыççăн пĕрле те ĕçлейместпĕр. Эс ĕнтĕ пирĕншĕн ют ял çынни" терĕ вăл хăй тĕллĕн. Липа Ятман темиçе минутлăха та пулин хăйсем еннелле каçасса кĕтрĕ, çук, леш каçмарĕ. Апат хыççăн паçăрхи пекех аллине лапатка тытрĕ те, унпа вĕçĕмсĕр çава хăйраса тăчĕ, каçчен тек вĕсем еннелле пăхмарĕ те темелле. Липа çапла кун каçиччен канăçсăррăн ĕçлерĕ. Ăшра вăл Ятмана пĕрре çеç мар вăрçса илчĕ. „Эс çуккăччĕ те, ман чĕрем лăпкăччĕ, эп никам çинчен те шухăшламастăмччĕ. Ак халь эпĕ каçсерен ыйăха çухатрăм, кăнтăрла та канлĕ ĕçлейми пултăм. Хăçан иртет ку манăн? Эсĕ мĕншĕн ним те пĕлми пулатăн, Кĕтерне инке темиçе кун каяллах каланă-çке сана?" Кашни чарăнмассеренех Липа куçне ялкăштарса çырма

леш енне пăха-пăха илет, ун куçĕсем: „Ну, мĕн çамрăк ача пек вăтанатăн, мĕншĕн çавтериех кĕттеретĕн, хăюллăрах пул та каç ĕнтĕ", тенĕ пек туйăнаççĕ. Анчах ак вăл леш енне пачах пăхми пулать, ун куçĕсем çавана çеç тинкереççĕ, пичĕ хĕрелнĕçемĕн хĕрелсе пырать: вĕсен енне Ятман каçать.

Улăхра паçăрхи пекех çава-лапатка сасси янраса тăрать. Халь ĕнтĕ хĕрсе кайнă çынсем ирхи кӳлĕмринчен те хастарлăрах ĕçлеççĕ. Çавасем сулмаклăрах ыткăнаççĕ, вĕсем пĕрре кассах пĕр сенĕклĕх утă-курăк хăвараççĕ. Ваттисем ĕнтĕ халь çамрăксен шуйханăвне пит хутшăнса каймаççĕ, çамрăксем вара паçăрхи пекех шавлă, паçăрхи пекех чарусăр. Вĕсем кăшкăрашни, такам чĕрине те хускатмалла каçса кайса кулни пĕтĕм улăх тăрăх янраса кайса Атăл хĕрринчи вăрман катине çитсе çапăнать, вăрмантан, вĕсене йĕкĕлтенĕ пек, хирĕçле сас янраса килет. Çапла—нумайччен, мĕн каç пуличчен.

Хыçалтан анма хатĕрленсе лутра йывăçсем тĕлне çитнĕ хĕвел хĕртет. Хĕвел шевлисем çавасем çине ӳкеççĕ те, вĕсем вара тĕкĕрсем пек йăлтăртатса каяççĕ. Тарлă çурăма уçăлтарса лăпкă çил вĕрет. Çӳлте паçăрхи пекех кайăксем хăйсен юррине шăрантараççĕ. Татса кайнă пĕве патĕнче тата пĕр кĕтӳ ача пуçтарăннă, вĕсем çăка шăхличсемпе темтĕрлĕ кĕвĕ те калаççĕ. Темиçе ача шыва кĕрсе кайнă та, кăвакалсем пек, вĕçĕмсĕр шыв айнелле чăмаççĕ. Вĕсем кунта ашшĕ-амăшсемпе пĕрле ирех килсе тухнă та, мĕн каçченех çапла выляççĕ: шыва кĕреççĕ, çырла тataççĕ, шăхлич тăваççĕ, киле илсе кайма шыв хĕрринче шапа хуранĕ пек япаласем пуçтараççĕ. Ав, ашшĕ-амăшсем, çулса пĕтерчĕç те, килелле пуçтарăнма тытăнчĕç.

— Коля, ăçта эсĕ?

— Санька!

— Çӳппи, киле каятпăр!—чĕнеççĕ хăйсен ачисене.

Часах кун каçиччен ĕç поэзийĕпе янраса тăнă улăх пушанать.

Ĕнтĕ унта халь юрă та, çава сасси те, савăнăçлă кулă та илтĕнмест. Улăх шăп. Этем кăна мар, каç енне кайсан кайăккĕшĕк те лăпланать. Шывра çеç карма çăвар шапасем такамран кулнă пек виçерен тухса ахăраççĕ.

— У, мурсем, хăйсен сассинчен хăйсем те йĕрĕнмеççĕ,—шывалла чул ывăтать Ятман.

— Йĕрĕнсе мар, вĕсем киленсе, пĕр-пĕринпе ăмăртса кăшкăраççĕ,—тет Липа.—Эс кама кĕтен, Ятман? Вăл кайрĕ вĕт, эс çухалса юлтăн пулас?

— Çухалса юлман. Кам пирки калан вара эс вăл кайрĕ тесе?

— Ах, пĕлмĕш пулать тата. Людмила пирки.

— Мĕн, çавине лапаткаласа панăшăн çыпăçтаратни мана ун çумне?

— Асту, уншăн кăна-ши вара?

— Тата мĕншĕн пултăр? Эп унпа паллашма та ĕлкĕреймен-хă, эсир ун çумне çыпăçтаратăр та.

— Ан пытар ĕнтĕ,—кулчĕ унтан Липа,—уй куçлă. ял хăлхаллă, теççĕ. Хĕрачи вăл лайăх; çӳре, çӳре, Ятман. Эпĕ хам украинкăсене питĕ юрататăп. Вĕсем кăмăлтан çав тери уçă пулаççĕ.

— Ну, çитĕ, çитĕ агитацилеме. Хамах куратăп.

— То-тă.

Вĕсем çаран çинчен чи юлашкинчен тухрĕç. Ятман ухсахланине кура Липа питĕ майĕпе утса пычĕ, çавăнпа икĕ çухрăм çукрах çула вĕсем мĕн тĕттĕм пуличченех утрĕç.

— Мĕнле пурăнатăн, Липа, каласа кăтарт-ха,—терĕ Ятман, Липăн çав-çавах вăтанчăклă пичĕ çине пăхса.

— Пурăнатпăр пĕр майлă. Вăрçă вăхăтĕнче мĕнле курăнасси паллă.

— Каччăсем тĕлĕшĕнчен мĕнле?

— Каччăсем вăрçăра,

— Ялта юлнисем пăхмаççĕ-и вара?

— Ман ялта никам та çук.

—Ĕлĕк сан патна Левентей çӳрекелетчĕ, халь сивĕнчĕ-и тата?

— Ой, вăл тахçанах вĕт. Ăна эп çӳрени вырăнне те хумастăп. Сирĕн çумăрта çăвар вылятса ларнă çеç.

— Хăшĕ хăшне килĕштермерĕр?

— Иксĕмĕр те,—ку калаçу хăйне кăмăла кайманнине палăртса татса каларĕ Липа.—Çавăнпа çӳриччен пĕр-пĕр старик тупатăп.

Ятман вара, вăл чăнах та Левентее кăмăлламаннине туйса, ун пирки тек ыйтусем памарĕ. „Паллах ĕнтĕ, вĕсем хушшинче нимĕнле юрату та пулма пултарайман, юратнă пулсан, çак çулсенче вĕсем тахçанах пĕрлешмелле. Çакăн пек тирпейлĕ те хитре, ăслă та ĕçчен хĕрача Левентей пек çăмăлттай çынна ăçтан юраттăр? Кĕтерне инкепе калаçнă чухне эп ун пирки тĕрĕс мар шутларăм".

Вăл самаха вăрçă çине куçарчĕ, вара Липа унтан вăл ăçта çапăçнине, епле аманса госпитальре епле сывалнине тĕплĕ ыйтса пĕлчĕ.

— Халь мĕн тăватăн ĕнтĕ?—терĕ вăл юлашкинчен.

— Колхозра ĕçлеме тытăнатăп.

— Эп сана таçта хулана каять пулĕ тесе.

— Хулана мĕн тума каяс манăн? Эп канцеляринче ĕçлесе ларма çуралман, ман вырăн—колхоз. Ак, вăрçă пĕтет те, колхозра унччен хитререх пурăнăç пуçланать. Фронтран çынсем таврăнаççĕ, мĕнчухлĕ çĕнĕ япала тăватпăр!

— Чăнах,—унпа килĕшрĕ Липа.—Анчах эпир Укахвипе калаçрăмăр та, вăл ялта юлас çук, аманса килнĕ çын мĕн тума колхозра асаплантăр, терĕмĕр. Халь унччен пек мар, кунта ĕçлеме йывăрланчĕ те...

— Э-э, хĕрсем, эсир мана пачах ăнланмастăр,—тăсарах каларĕ Ятман.—Темскер пек йывăр пултăр, ниçта та каймастăп. Ак электростанцине туса пĕтерсе ĕçе яратпăр. Тата мĕн те пулин шутласа кăларатпăр, сирĕн Катрам Иванĕ пăхса кăна тăтăр. Пирĕн колхозран уйрăлнăшăн пĕрре кăна мар ўкĕнĕр-ха эсир.

— Хамăра кура эпир те тапаçланапăр. Катрам Иванĕ сирĕн Левентейран йĕрĕрех-ха. Вăл çĕрле те çывăрма пĕлмест, тĕлĕкре те хăйĕн колхозне курать. Часах вăл сиртен иртсе каяс тейĕ-ха.

— Ну, ăна курăпăр.

Вĕсем Ятмансен пахчи вĕçне çитрĕç. Çынсенченименсе пулас, Липа, Ятман тем пек чĕнсен те, ялалла кĕме килĕшмерĕ.

— Мĕн вăтанатăн, эпир утă çулса таврăнатпăр вĕт!—терĕ Ятман.

— Утă çулакансем ĕнтĕ киле çитсе тахçанах апат та пĕçерсе çирĕç пулĕ.

Ку сăмахсем Ятманшăн хăйне çурăмран пушăпа çапнă пекех пулчĕç. Акă хайхи пĕрремĕш ўпкевлĕ сăмах! Çынран катăк пуласси çавă вĕт вăл—ĕмĕр çын сăмахне илтсе пурăнас пулать. Чăлах çынна кашни утăмрах эсĕ чăлах тесе, ухсаха эсĕ ухсах тесе асаилтерсе тăраççĕ. Ятман пытарса тăмарĕ, хĕрачана тўрех каларĕ:

— Ухсах çынпа çўресси çавă ĕнтĕ вăл, Липа,—терĕ.

— Ун пек ан кала,—айăплăн пăхса илчĕ ун çине утма чарăннă Липа.—Эс мана тĕрĕс мар ăнлантăн е юриех мана кўрентересшĕн. Эп сана çын пек утаймастăн тесе каламарăмçке, каç пулнă, никам та пире утă çулса килекенсем тесе йышăнмĕ, терĕм. Эс аманнă çын-çке-ха, çавна та ăнланаймасть тетĕн-и ĕнтĕ мана, Ятман?

Вăл ун çине тепре халь-халь макăрса ярас пек пăхса илчĕ. Тинех ăнланчĕ Ятман: ун умĕнче çав тери таса чунлă хĕрача тăрать, вăл хăйĕн чăркăшне пула ăна ахалех кўрентерчĕ.

— Ан çилен,—ал сĕнчĕ Ятман.—Каçхине урама тух. Ĕнер Укахвисем тухнăччĕ.

— Сирĕн пата çўреме инçе, хăвăр пырăр.

Çапла вĕсем калаçса татăлаймасăрах уйрăлчĕç. „Паллах килмест, —терĕ Ятман,—хам эпĕ çырма урлă çўрес çук. Тата вĕсен кĕперĕ те ишĕлчĕк". Унтан мĕнпур калаçăва пăсса пăрахнăшăн хăйне вăрçма пикенчĕ.

„Мĕнчухлĕ каланă эпĕ хама пули-пулмишĕн вĕриленме пăрахас тесе. Çук, пăрахаймастăп. Мĕнле пĕтерес çав йăлана? Вăл мана ялан сиен кўме пултарать, мана çеç мар, ĕçе те сиен кўме пултарать. Иртнинче Левентейпе вĕриленсе илтĕм, халь Липăна çилентертĕм. Çара кайиччен Катрам Иванĕпе çапла хиврелленĕччĕ. Вăл уншăн халь те çиленсе çўрет пу-

лас. Кун пек эп нумай çынпа вăрçса пĕтĕп-ха. Юлашкинчен вăра: „Ятмана ăна никам та юрас çук, унăн кăмăлĕ çавăн пек, пурне те тиркекен кăмăл“ тейĕç. Чăнах та, Липăпа вăрçмарăм ĕнтĕ, çапах та хам ун сăмахĕсене тĕрĕс мар ăнланса вырăнсăр кўреннине палăртрăм-палăртрăмах.

Темĕн чухлĕ шухăшласан та, Ятман ку шухăш вĕçне тухаймарĕ. Часах ун куçĕ умĕнче амăшĕ ăна кĕтсе çутса лартнă шăши куçĕ пек çутă курăнса кайрĕ. Ку çутă вара унăн мĕнпур шухăшне чăлпар сапаласа ячĕ.

Килте ăна Левентей кĕтсе ларать иккен. Вăл паçăрах килнĕ пулнă, анчах Ятман амăшĕ ăна Ятман халь çитет, халь çитет тесе тытса тăнă.

— О-хо, фронтовик ĕçлеме тытăнчĕ те,—терĕ вăл Ятман кĕрсенех.

— Çук, эп ĕçлес тесе мар, курма çеç...

— Мĕнле, пĕтерчĕç-и çулса?

— Çырма пĕр кукăрне пĕтерчĕç, тата тепĕр кукăр юлчĕ.

— Апла ыран пĕтереççĕ.

— Эс паян ăçта çухалса çўрерĕн? Сана эп правленире те, улăхра та курмарăм.

— Эс хушнине пурăнăçларăм,—терĕ Левентей, кулса.— Пĕр бригада илтĕм те, çав тулă участокне кайса çумларăмăр. Вăрçтарас мар терĕм ĕнтĕ сана.

— Ху та çумларăн-и?

— Çумламасăр.

— Апла аллусем йăлтах шыçăнса кайрĕç пулĕ?—кулчĕ Ятман.

— Шыçĕç те, сар çеçкерен ытла пиçен нумай унта.

— Эп вăрçасран кайрăм тетĕн?

— Камшан пултăр тата? Халхана йĕрĕнтерсе çитерчĕç, пурте: Ятман сана çав çумламан тулăшăн питĕ вăрçать, теççĕ. Кайса килес, терĕм. Ĕçĕ унта пĕр кунлăх. сăмахĕ çĕр кунлăх.

— Сăмахсăр май çук,—терĕ Ятман.—Вăрçас темесен те, ху вăрçтаратăн эсĕ. Ак халь те тем калаçатăн, ăнланма та йывăр сана: эп аларăм та—çумларăн пулать, каламан пулсан—çумланмасăрах юлатчĕ ĕнтĕ тулă. Шутласа пăх-ха, мĕн тени пулать вăл? Маншăн турăн-и ха вăл ĕçе? Тупата туршăн, председатель пек калаçмастăн эсĕ, чи кая юлнă колхозник пек калаçатăн, Левентей.

— Ан çилен ĕнтĕ, эп кулса каларăм,—терĕ Левентей.

— Пĕлместĕп эп: те шўт тăватăн эсĕ, те шўт тумастăн. Асту, кун пек шўт тунипе ĕç каймасть санăн.

— Ан вăрç, эп сан патна ыр сăмахпа килнĕччĕ.

— Мĕнле сăмах?

— Халь фронтовиксене пулăшма калаççĕ. Сана, аманнăскерне, тырă памалла пулĕ. Мĕнч‿л кирлĕ пулать?

Ятман, хайĕн пўлмере тырă пĕтменнине пелсе, çийĕнчех шимĕн чухлĕ те кирлĕ мар тесе каласшăнччĕ, анчах амăшĕ

Левентей сӑмахӗсене илтсен чӳлмек йӑтса тула тухма хатӗрленнӗ ҫӗртен алӑк патӗнче мӗшӗлтетсе тӑма тытӑннине курса, сӑмах хушма тӑхтаса тӑчӗ. Амӑшӗн вара ывӑлӗ миҫе пӑт тырӑ кирлӗ пулни ҫинчен каланине илтмесӗрех тухмалла пулчӗ.

— Халлӗхе нимӗн те кирлӗ мар-ха мана, ҫимелли вӗҫне ҫитсен пырӑп, унчух пулӑшӑн,—терӗ Ятман алӑк хупӑнсан.

— Ан калаҫса тӑр. Паракантан ил, ҫапакантан тар, теҫҫӗ.

— Ҫук, тырӑ кирлӗ мар, пама май пулсан, пыл пӑртак парӑр, пирӗн колхозӑн пыл нумай пулаканччӗ.

Тепӗр кунне вӑл правлени хучӗпе складран виҫӗ кило пыл кайса илчӗ. Ку пыл ӑна питех те вырӑнлӑ пулчӗ. Ытлашши уткаласа ҫӳренӗрен тата ҫанталӑк вӳрленнӗрен унӑн сасартӑк ури сурма пикенчӗ, вӑл пуҫ ыратнипе аптрарӗ, вара темиҫе кун хушши ниҫта та тухса ҫӳреймерӗ. Амӑшӗ ӑна ку хушӑра пыл янӑ вӗри чейпе те симпылпа сиплерӗ.

## VIII

Кӗтерне инке иртнинче вӑрҫнӑ хыҫҫӑн Сехре пӑртак иртлекен пулать пулӗ тесе шутланӑччӗ. Уншӑн хӗрарӑм калани нимех те мар иккен. Паян ак вӑл Сехрене тепре пӑсӑрлантарса илчӗ, анчах хальхинче те усси пулмарӗ. „Юрӗ ӗнтӗ, Кӗтерне, ан ятла, куҫа хупнӑччӗ те, ҫывӑрсах кайнӑ" —текелесех ирттерсе ячӗ. Тата икӗ сехетрен, ӗнесене суса килсен пӑхрӗ те, Сехре ун чухне те ҫывӑрса кӑна выртать. Ну, мӗн тӑвӑн ӗнтӗ эс ӑна?

Кӗтерне инке лаша витине кӗрсе пӑхрӗ. Витине Сехре темиҫе кун тасатман, унта тем хулӑмӗш тислӗк тулса ларнӑ. Апат валашкисенче тахҫанхи апат юлашкисем выртаҫҫӗ.

— Иван пичче, эс каллех ҫывӑрса выртатни?—кӑшкӑрчӗ Кӗтерне инке ӑна хӑлха патӗнчех.—Мӗнле тухать вӑл сан ыйӑх? Кунӗпе ҫывратӑн.

— Кӑнтӑрлахи апат хыҫҫӑн кӑшт куҫ хупса илес терӗм,—тӑрса ларчӗ Сехре.—Калавӑ вӗт ваттисем, апат хыҫҫӑн начар улпут та выртса канать, тенӗ.

— Кай, аҫа та ҫапмасть сана пӗреххут.

— Мӗн тума аҫа ҫаптӑр мана? Эп ҫылӑхсӑр этем.

— Ҫылӑхсӑр! Сан ҫылӑхна турӑ каҫарса та пӗтерес ҫук.

— Ҫавӑн пекех нумай тетни?

— Нумай пулмасӑр.

Сехре сентре ҫинчен тураман табак аври илчӗ те, ун ҫулҫине алтупанӗ ҫинче ватма тытӑнчӗ. Кӗтерне инке ӑна та асӑрхамасӑр хӑвармарӗ:

— Табак турама та ӳркенетӗн вӗт эсӗ? Ай, хам сан арӑму мар, Иван, эп сана пӑртак ӑса вӗрентмелле.

— Илес пулсан та, эпӗ сан пек усал хӗрарӑм илместӗп ҫав, йӑваш арӑм тупатӑп. Штоп мана ан вӑрҫтӑр.

— Сан пек наяна вăрçмасăр епле чăтатăн-ха? Пĕлместĕп, мĕнле арăм сана вăрçмасăр пурăнма пултарĕ-ши?—кулать Кĕтерне инке.

— Тупăнать. Хĕрарăмсем тĕрлисем пулаççĕ. Санăн, сăмахран, хĕрарăм мар, арçын пулмалла пулнă, сан упăшкун, Михалан, хĕрарăм пулмалла пулнă. Вăл—хĕрарăм кăмăллă арçын. Пăхатăп та, эс ĕçлессе те арçын пек ĕçлетĕн. Çапла-и?

— Пулĕ те. Сан пек кăнтăр кунĕнче çывăрса выртмастăп ĕнтĕ, хам хырăма хам тăрантма пултаратăп.

Вĕсем çапла чылайччен сăмахпа перкелешсе ларчĕç. Сехреваскамасăр чĕлĕм туртать, Кĕтерне инке хăйĕн çурăлса кайнă саппувне çĕлет, унтан пўрт ăшчиккине тирпейлеме пуçлать.

— Эп çывăрас çук та, пуçтарса парам ĕнтĕ.

— Кирек те мĕн ту,—терĕ Сехре. Вăл чўречерен пăхрĕ те колхоз картишнелле Ятманпа Левентей килнине курах кайрĕ.

— Кĕтерне инке, кунта пуçлăхсем килеççĕ.

— Кампа кам?

— Ятманпа Левентей.

— Левентейне Шупашкара кайнă терĕç-çке?

— Таврăннă пулĕ.

— Кунтах килеççĕи?

— Кунтах.

— Ну, тух апла. Вĕсем кĕриччен пуçтар хуть витўне.

Сехре кĕлет патĕнче тăракан Левентейпе Ятмана курмăш пулса тўрех витене кĕрсе кайрĕ, кĕреçе илсе часрах тислĕк ывăтма тытăнчĕ. Анчах вăл лешсем пырса кĕриччен нимĕн чухлĕ те хыраймарĕ. Тепĕр çын пулсан, нимĕн те асăрхаман пулĕччĕ, ĕçлекен çынна саламласа кăна иртсе кайнă пулĕччĕ те, колхоз хуçалăхне алри пилĕк пўрнене пĕлнĕ пек пĕлсе тăракан Ятман пĕр купа тислĕк мĕне пĕлтернине çийĕнчех чухласа илчĕ. Вăл Сехре çине тинкерсе пăхрĕ, ун ăна вăрçса тăкас килсе кайрĕ, анчах çавăнтах, ĕнер амăшĕ „сана çынсем хаярланнă теççĕ" тенине аса илчĕ те, хăйне тытса чарчĕ. Вĕсем хăмăт-пăявсем çакăнса тăракан çĕре иртрĕç.

— Вăл конюх-им сан?—ыйтрĕ Ятман Левентейрен.

— Конюх.

— Пăртак лаша пăхма пĕлекен çын тупман-и вара эсир унсăр?

— Çук вĕт çынсем. Хĕрарăма лартасси терĕмĕр.

— Ман шутпа темле хĕрарăм та лашасене Сехре Иванĕнчен лайăх пăхать.

— Ўпкелешекенсем пур-ха, улăштармалла пулĕ,—терĕ Левентей.

— Юхăнать иккен хуçалăх,—васкамасăр каларĕ Ятман, умра çакăнса тăракан хăмăт-пăявсене сăнаса.—Пăхса савăн, председатель: ак ку хăмăтăн пĕр пăявĕ чĕн, тепĕр пăявĕ пу-

шăт, ак ку тилхепере сахалтан та вунпилĕк сыпăк пур, ав çав йĕвене пăх-ха тата... Мĕн, сирĕн çакна явмалах сÿс çук-и, пушăт çук-и?

— Явакан çук, çынсем ниепле те пушанаймаççĕ,—тет Левентей.

— Унтан килмест вăл,—хирĕçлет Ятман.—Вăл йăлтах конюхсемпе бригадирсенчен килет, эпир ыйтма пĕлменнинчен килет.

Сехре хырать-хырать те хутран-ситрен пуçне çĕклесе вĕсем мĕн калаçнине итлет. „Вĕçĕмсĕр тĕрĕслет, вĕçĕмсĕр тĕрĕслет,—тет вăл ăшра Ятман пирки.—Ĕлек те çавахчĕ. Ĕлек хуть председатель пулнă, а халь? Ларасчĕ килĕнче. Çук, вăл лармасть, ялан тĕрĕслесе çÿрет". Ятман Сехрене куçкĕретĕнех вăрçса курман, çапах та Иван пичче темшĕн хăрать унтан, юратмасть ăна. Сисет, хăйне те юратмасть ăна Ятман.—„Палла ентĕ вăл, мĕнле пăхнинчен палла. Вăрçаччен уй хуралçине лартнăччĕ. Кăларттарчĕ вĕт, çав Ятман кăларттарчĕ. Çук, юратмасть вăл мана. Ав епле хăмăт пăявĕ таран тустарать".

Каçхине, киле таврăннă чухне, Сехре Иванĕ Ятманпа Левентее урамра правлени çывăхĕнче курчĕ. Вĕсем унта тыр вырмалли машинапа айкашакан Кăтра Михалапа калаçса тăратчĕç. Сехре çывăхара пуçласан, лешсем иккĕш те çÿлелле, Турикас еннелле хăпарса кайрĕç.

— Мĕн, сана председательсем ĕç парса хăварчĕç-им, Михала?—ун патне машина юсанă çĕре пырса тăчĕ вăл.

— Ĕç парса хăварчĕç-ха,—терĕ пуçне çĕклемесĕрех Кăтра Михала.

— Икĕ председатель ĕнтĕ халь пирĕн, Михала. Паçăр ман пата та пырса тĕрĕслесе кайрĕç. Левенетйĕ нимĕн те шарламасть, ку вара ну тиркет, ну тиркет. Юхăнать иккен хуçалăх. тет. Вăрçă вăхăтĕнче хуçалăх юхăнмасăр вăл? Хăçан юхăнман вăрçă вăхăтĕнче хуçалăх? Астăватна, иртнĕ вăрçăран таврăнтăмăр та, пĕтемпех пĕтнĕччĕ. Ни сÿри çук, ни сухапуçĕ çук, ни вăрлăхĕ çук. Унта тата хуралт тăррисем çĕрсе кайнă. Кайран юсарăмăр. Ку вăрçă хыççăн та кайран юсатпăр. Ун саккунĕ çавăн пек.

— Тĕрĕсех мар пуль çав вăл сан саккуну,—хирĕç сăмах хушрĕ Кăтра Михала,—тĕрĕсех мар пулĕ çав...

— Мĕн тĕрĕс марри пур унта?

— Халь хуçалăха вăрçă вăхăтĕнче те юхăнтармалла мар, теççĕ. Вăрçа пулсан та, вăй çитет вĕт-ха çак вĕт-шака тирпейлеме?—машина çине тĕллесе кăтартрĕ Кăтра Михала.—Ятман каларăшле, мĕншĕн ĕççĕр лартас-ха ăна кунта? Юсас та ĕçе ярас. Миçе çын пушанать ăна ĕçе ярсан! Машина вĕт-ха вăл, тем тесен те...

— Юсама май пур-и вара?—килĕшÿ сĕннĕ пек ыйтрĕ Сехре Иванĕ.

— Пулмасăр. Ыран ак Ятманпа иккĕн тытăнатпăр та каçчен касаса та лартатпăр. Ятмана эс ахалех хурлатăн, вăл ĕç çине тĕрĕс пăхать.

— Мĕн тĕрĕс пăхни пултăр? Кам пит хушать ăна пур çĕре те сăмсана чикме? Ĕçлетĕр кашни хăй пĕлнĕ пек. Çук, вăл сана пырса тĕрĕслетех.

— Вăл та тĕрĕслемесен, урăххи те тĕрĕслемесен, ытла наянланса каятпăр-çке, тусăм. Камăн та пулин тĕрĕслемеллех ĕнтĕ. Çавăнпа колхоз та.

„Ха, ку та мĕнле çаптарать,—тет ăшра Сехре.—Арăмĕ пекех. Мĕн шуйттана пуçларăм ку калаçăва? Халĕ вĕçне тух ĕнтĕ“. Вăл, Кăтра Михалана çĕнтерес çуккине кура, сăмаха часрах пĕтерме шутлать.

— Ну, юрĕ-ха, эпĕ уттарам-ха. Сывă пул.

— Сывă пул,—тет Кăтра Михала, ун еннелле пăхмасăр.

## IX

Юлашки вăхăтра Кĕтерне инке калаçура час-часах хăйĕн ывăлне, Алексее, асăнакан пулчĕ. Липăпа калаçса ларать-и, кӳршĕсемпе сăмахлать-и—ялан Алексей çинчен мĕн те пулин каласа хурать. Тĕлĕк каласа парать тĕк, пĕлсех тăр—Алексей пирки калать, тĕлĕкре вăл ăна курнă, кам та пулин çыру çинчен асăнать тĕк, Кĕтерне инке Алексейрен çыру кĕтни çинчен сăмах хушать, ялта вăрçăра кам та пулин вилнĕ текен хыпара илтсен, ывăлне асăнса хуйхăрать: „Çав таврăнтăрччĕ, çав ан вилтĕрччĕ“. Пĕр эрне каялла çурлçсем шăллаттарнă чухне ыттисемпе пĕрле Алексей çурлине те кайса пачĕ: „Тен, кирлĕ пулĕ, тен, тыр вырма та ĕлкĕрĕ“. Унччен маларах ывăлĕ çинчен кӳршĕ хĕрарăмĕпе, Матĕрнепе, нумайччен калаçса ларчĕç. Матĕрне ывăлĕ Тимуш, пĕр уйăх каярах çеç ăсатнăскер, çапăçăва кĕмен иккен-ха, фронт çывăхĕнчи пĕр хулара лейтенанта вĕренет.

— Ман çапăçăва икĕ хутчен кĕрсе тухнă ĕнтĕ, ăна-кăна курма ĕлкĕрнĕ,—мăнкăмăллăн каларĕ Кĕтерне инке.

— Ăçтарах çапăçать вара вăл, сан ывăлу?

— Таçта Мускав леш енче, тет. Темле шыв хĕрринче тăратпăр, тет.

— Медаль та илме ĕлкĕрнĕ пулĕ апла вăл сан?—ыйтрĕ Матĕрне инке.

— Пĕрре кăна мар, иккĕ те илнĕ, тет,—каллех мăнкăмăллăн каласа хучĕ Кĕтерне инке.

Матĕрне тухса кайсан, вăл медаль çинчен калаçнине тепре аса илчĕ. „Мĕнле медаль çинчен сăмахларăмăр çак эпир? Ăçтан чĕлхе çаврăнчĕ вара манăн ăна çапла суйса хума? Алексей çырура нимĕнле медале те асăнмастчĕ-çке? Ăна çав тери аван мар пек туйăнса кайрĕ. „Кур-ха, ватă пуçпа суйса хутăм пулать. Мĕн тума кирлĕ пулчĕ-ха ку мана? Епле персе ятăм-

ха ӑна?“ Ахаль пулсан Кĕтерне инке пит ӳкĕнес те çук та, ӑна çавӑнтах Алексей киле таврӑнас шухӑш пырса кĕчĕ, ку вара ӑна пĕрре савӑнтарчĕ, çавӑнтах хӑратса та пӑрахрĕ. „Ну, килти ӑçти-çук çинчен суйма пулать, вӑл хĕрарӑмӑн пулатех, эп ывӑл çинчен суйса хутӑм-çке? Е çакӑнта килсе кĕрсен? Вара Матĕрнене мĕн калас?“ Ӑна хӑйĕн ывӑлĕ медальсем илни çинчен Матĕрне çийĕнчех ытти çынсене каласа парассӑн туйӑнчĕ. Вара ун çинчен пĕтĕм ял пĕлет. Матĕрнене каланӑ япала ку хыпар, паллах, пĕтĕм ялĕпех саланать. Ӑçта кайса чикес вара намӑса?

Кĕтерне инке çийĕнчех Матĕрне патне тухса чупас, ӑна ывӑл пирки ытлашши калаçса ан çӳре тесе асӑрхаттарас тесе те шутларĕ, анчах кӑна тума вӑл ниепле те хӑюллӑх çитереймерĕ. „Мĕнле калан ĕнтĕ ӑна? Мĕн шутлать вара вӑл ман çинчен, ват карчӑк çинчен? Тен, киле таврӑниччен чӑнах та илме ĕлкĕрĕ-ха медаль? Пĕрре кӑна мар, иккĕ те илĕ. Ав, Ятман та илсе таврӑннӑ, ман Алексей унтан мĕнтен кая вара?“.

Вӑл хӑйне çапла каласа лӑплантарчĕ те ывӑлĕ пирки шӑпӑртах пулчĕ. Çак кунсенче Матĕрне ун патне тек килсе лармарĕ. Кĕтерне инке хӑй те ытлашши ниçтах та тухса çӳремерĕ. Пĕррехинче çеç кĕтӳ хӑваланӑ чухне вӑл тепĕр кӳршĕ хĕрарӑмĕпе ытларах калаçса тӑчĕ. Мĕн çинчен калаçчĕрха ĕнтĕ вĕсем, вӑрçӑ çинчен, фронтри ывӑлĕсем çинчен калаçмасӑр? Кӳршĕ хĕрарӑмĕ упӑшки пилĕк уйӑх çухалса шарламасӑр пурӑннӑ хыççӑн çыру яни çинчен пĕлтерчĕ. „Кашни кун макӑраттӑм, вилнех пулĕ тесе шутланӑччĕ. Ачасем малтан ялан çыру кĕтетчĕç, почта килессе кӑна сыхлатчĕç, кайран вĕсем те кĕтми пулчĕç. Виçĕмкун кĕтмен çĕртен Куççӑр Куçма çыру тыттарчĕ. Вуласа пачĕ те, савӑннипе макӑрса ятӑм“, терĕ вӑл. Унтан уйрӑлас умĕн каласа хучĕ: „Алексее салам çырса яр, эп ӑна яланах асӑнатӑп. Вӑл сан медаль та илнĕ пулас. Матĕрне хĕрĕ çапла терĕ“.

— Çырса ярӑп, салам çырса ярӑп,—вӑл тата тем каласран хӑранӑ пек васкаса каларĕ Кĕтерне инке.

Çакӑн хыççӑн ӑна хӑй шухӑшласа кӑларнӑ медаль пушшех канӑç памарĕ. Вӑл ĕнтĕ çĕрĕн-кунĕн çак медальпе аташма тапратрĕ. „Ӑна ĕнтĕ халь пĕтĕм Атӑлкасси пĕлет. Пĕтĕм ял умĕнче ывӑл ятне яратӑп. Вот мухтан, вот мухтан. Кĕтерне инке çавӑнтах тата пĕркун упӑшки каласа панӑ мыскараллӑ япалана аса илчĕ. Иртнĕ çуркунне пĕр яла хӑйсен ялĕ ачи аманса таврӑннӑ, тет. Унӑн нимле орден та, медаль та пулман, çапах та вӑл хӑйне „эпĕ герой“ тесе калать, тет. „Часах ак Калинин Указ кӑларать те, мана орденсем, ылттӑн çӑлтӑрсем пама Мускава чĕнеççĕ“, тесе калать, тет. Колхозра (районра та) кӑна илтсен савӑнсах кайнӑ: хӑйсен ялĕнче герой пур-çке-ха! Ун валли çĕнĕ çурт тума тытӑннӑ, ӑна çӑнӑх, какай, çу, пыл парса тултарнӑ. Пĕр уйӑх иртет, ик уйӑх ир-

тет,—ӑна чӗнмеҫҫӗ. Ҫырса яраҫҫӗ—ку нимле герой та пулман иккен, юри улталанӑ иккен.

Ҫакна аса илчӗ те вӑл, пушшех хӑракана ерчӗ. „Медаль илнӗ тесе суйрӑм та, ак Алексей медальсӗрех таврӑнать. Михала пӗлсен тата, вӑл мана ҫисех ярать вӗт"...

Темиҫе кунтан Укахви чылай ҫӗрле пулсан ҫыру илсе таврӑнчӗ.

— Алексейрен,—терӗ те лампа ҫутса вулама ларчӗ.

„Юратнӑ атте-анне, Анушка тата Укахви! Каҫарӑр, юлашки вӑхӑтра эп сирӗн пата вӑхӑтра ҫыраймарӑм. Мана чылаях йывӑр амантрӗҫ те, эпӗ халь сиртен инҫех мар госпитальре выртатӑп. Ҫитес вӑхӑтрах киле курма пыратӑп. Анне, тырру пулсан, пӑртак сӑра туса хур"...

— Ҫавӑн пекех ҫырать-и вара?—ӗненмесӗр ыйтрӗ Кӗтерне инке.

— Ҫавӑн пекех пулмасӑр.

— Килетех-ши?

— Килет, паллах. Килеп тесе ҫырать вӗт-ха.

Амӑшӗ ҫавӑнтах хыпаланса ӳкрӗ, унӑн пӗтӗм ӑшчиккине, чунне-чӗрине сӑмахпа каласа памалла мар савӑнӑҫ тулчӗ. Вӑл халь мӗнпур хуйхи-суйхине манса кайрӗ, ӑстӑна, ӗмӗте вӑл ҫеҫ, Алексей ҫеҫ кӗрсе вырӑнаҫса ытти мӗнпур шухӑша хӑваласа ячӗ. Алексей киле таврӑнать, унӑн пӗртен-пӗр ывӑлӗ киле таврӑнать. Ҫырӑвӗнче вӑл „мана чылаях йывӑр амантрӗҫ" тесе пӗр пытармасӑрах ҫырать пулин те, амӑшӗ ун ҫинчен те манса кайрӗ. Ӑна илтмесӗр юлма пултараймарӗ ӗнтӗ вӑл, анчах аманни мӗнех вара? Урасӑр алӑсӑр таврӑнтӑр, таврӑнтӑр ҫеҫ.

Алексей нумай кӗттермерӗ. Пӗр каҫхине, тӗттӗм пулас умӗн, Кӗтерне инке ыраш пуссине кайнӑ Михалана кӗтсе улма шуратса ларнӑ вӑхӑтра алӑк уҫӑлчӗ те, пӳрте ҫӳлӗ кӑна ҫарҫынни кӗрсе тӑчӗ. Амӑшӗ шуратма пуҫланӑ улмине тирӗке хурса пӑхрӗ-пӑхрӗ ӑна, ниепле те палласа илеймерӗ. Амӑшӗ тӗттӗмре паллайманнине кура Алексей малалла иртрӗ.

— Паллаймасним, анне?—терӗ вӑл амӑшӗн ватӑлса кайнӑ пит-куҫне сӑнаса.

— Алексей!.. Чунӑм!.. Эсӗ пултӑн-и вара ку, Алексей?.. Эп пӑхап-пӑхап, тӗттӗмре ниепле те паллаймастӑп.

Алексей тепӗр утӑм иртрӗ те, амӑшӗн ҫӳлӗ, анчах ҫинҫешке шӑм-шакне хӑйӗн ытамне илчӗ. Амӑшӗ ывӑлӗн сарлака кӑкӑрӗ ҫине таянса ӗсӗклесех макӑрма тытӑнчӗ.

— Ну, вот, ҫаврӑнса ҫитрӗн, ывӑлӑм. Халь ӗнтӗ мана нимӗн те кирлӗ мар...

— Атте ӑҫта? Анушкапа Укахви ӑҫта?

— Аҫу хирте, Укахви купӑста шӑварать пулас. Анушка районра, вӑл тракториста вӗренет пирӗн. Ку мӗн сан? Сан аллуна ҫыхса янӑ мар-и?—асӑрхарӗ вӑл сасартӑк.

Амăшĕ хăйĕн никамăннинчен те çемçе те ачаш аллисемпе ывăлĕн бинтпа хулăмăн çыхса янă хулне хыпашласа тупрĕ, вара ывăлĕ ниçтан та мар, хулран аманнине чухласа илчĕ. „Ку нимех те мар, ку нимех те мар“,—терĕ вăл хăй ăшĕнче. Унтан куçĕсене саппун аркипе шăлса типĕтрĕ те, пĕр-ик утăм каялла чакса, ывăлне çĕртен пуçласа пуç тӳпине çитиччен куçпа виçрĕ.

— Ӳссе кайнă эс, Алексей. Татах ӳссе кайнă.

— Ялан ӳсме эп пĕчĕк ача мар вĕт ĕнтĕ, анне.

— Ӳснĕ пек,—терĕ амăшĕ çав-çавах

Çапла-çке пирĕн аннесем, пирĕн çине вĕсем ялан ачасем çине пăхна пек пăхаççĕ, вĕсене эпир ялан ӳсетпĕр пек туйăнать. Кĕтерне инке ывăлĕн пит-куçне пахать, унта вăл пĕчĕк чухнехи тăван паллăсене шырать. Аллисем каллех ывăлĕ патне туртăнаççĕ. Вĕсем ăна ачашласшăн, амăшĕ хăйĕн пĕчĕк ачине ачашланă пек ачашласшăн.

— Чим-ха кутамккана хывам-ха,—терĕ Алексей.

Амăшĕ вара тинех ăнкарса илчĕ: ывăлĕ урай варринчех тăрать вĕт-ха, вăл кутамккине те хывман вĕт-ха.

— Кӳр хам хывам, кай, эс хăрах алпа хываймастăн,—кармашрĕ ывăлĕн çӳлĕ хулпуççийĕсем патнелле вăл. Кутамккине хывас тесе çаврăнкаланă май Кĕтерне инке ывăлĕн пaçăр хăй лăпчăнса макăрнă сарлака кăкăрне курах кайрĕ. „А медальсем?—çиçĕм пек килсе кĕчĕ шухăш.—А медальсем ăçта?“—Ун аллисем чĕтресе кайрĕç, вăл ывăлĕ умĕнче калама çук пысăк айăпа кĕнине туйса илчĕ. „Харани чăнах пулчĕ вĕт, ывăла пĕтĕм ял умĕнче намăслантаратăп вĕт. Çук, медальсем çук. Ав, темле сарă-хĕрлĕ тăрăхсем пур, пĕр медаль та çук. Эй, Алексейрен пулать-и ăна медаль илесси! Тем пек сехĕрленсе ӳкнĕ пулсан та, Кĕтерне инке хăйĕн пăшăрханăвне ывăлне систересшĕн пулмарĕ. Ун кутамккине çурăм хыçĕнчен сӳсе илсенех вăл çимелли хатĕрлеме тĕпелелле чупса кайрĕ, унтан ывăлĕ валли пĕр кăкшăм ăш сĕт йăтса пычĕ.

— Ак, ĕç ывăннă çинчен сĕт. Пит усăллă пулакан.

Алексей кăкшăма илсе кăпăкланса тăракан сĕте нумайччен кана-кана ĕçрĕ.

— Ну, куншăн тавах, анне. Килениччен ăш сĕт ĕçменни нумай пулатчĕ.

— Юрĕ, ывăлăм, юрĕ,—терĕ амăшĕ.—Сăрапа мĕн тăвас: халех ăсса тухас-и е пăртак тăхтас?... Çыруна илсенех сăра туса хутăм.

— Тăхта-ха, анне,—терĕ Алексей.—Эп кăшт тирпейленем: çăвăнам, сухал хырам, тусантан тасалам.

— Тасал, ывăлăм, тирпейленкеле. Çынсем те килĕç тата. Эп наччас апат çакса ярам-ха эппин.

Амăшĕ витре илсе картишне шыв ăсма чупрĕ, Алексей унăн витри тăпсисем чĕриклетнине çеç илтсе юлчĕ. Вăл

шкапран хӑй ҫара кайиччен хӑварнӑ бритва хатӗрӗсене илчӗ те, сӗтел хушшине пысӑках мар тӗкӗр умне ларса, сухал хырма пикенчӗ. Ҫапла вӑл чылайччен аппаланса ларчӗ, юлашкинчен, типӗлле хырма май ҫуккине кура каллех тӗпелте айкашакан амӑшӗнчен вӗри шыв ыйтса илчӗ.

— Пур, пур вӗри шыв, ме,—терӗ амӑшӗ. Унтан шывне панӑ чухне ывӑлӗ ҫине кӑмӑллӑн пӑхса, кулараӗх:

— Ӗнтӗ сухал хыракан пултӑн-и, ывӑлӑм?—тесе хучӗ.

— Пултӑм, анне,—терӗ Алексей.—Ӗнтӗ вӑрҫа кайса килтӗм те, сухал хырма та вӑхӑт. Эс мана ҫав-ҫавах ача тесе шутлатни вара?

— Ара, эс нумай пулмасть кӑна шкул ачиччӗ те-ха. Ҫарран ҫӳреттӗнччӗ. Аҫу атӑ илсе панӑччӗ те, эсӗ ӑна пысӑк тесе ниепле те тӑхӑнасшӑн марччӗ. Хӑюсӑрччӗ тата. Ҫын патӗнче апат ларса ҫиме те вӑтанаттӑнччӗ.

Часах Алексей тула тухса пит-куҫне ҫурӗ те, амӑшӗ пӑтаран ҫакса хунӑ кутамккине салтса, унтан вӗрҫӗнӗ салтак гимнастерки кӑларчӗ. Ӑна тӑхӑнса ярса ҫӳҫне-пуҫне тирпейлерӗ, салтакла хытӑ туртса пиҫиххине ҫыхса ячӗ. Ахаль те яштака та илемлӗскер, ку тумпа вӑл уйрӑмӑнах матур каччӑ пулса тӑчӗ.

— Ну, вот, халь мана, анне, сӑра пар, эп хатӗр,—терӗ вӑл амӑшӗ умне пӗтӗм кӳлепипе тухса тӑрса. Амӑшӗ ун ҫине тулли куҫлӑн савӑнса пӑхса илчӗ: мӗнле тӗреклӗ арҫын пулса тӑчӗ ун ывӑлӗ! Чи хитре хӗре суйласа ил те авлантар. Питкуҫсем мӗнле, хулпуҫҫисем, кӑкӑрӗ епле сарлака. Анчах чим, тӑхта, мӗнсем кусем ун кӑкӑрӗ ҫинче? Мӗнле илемлӗ япаласем вара—куҫа шартарса тӑраҫҫӗ? Медальсем мар пуль те? Амӑшӗ нихҫан та медаль курман та, вӑл мӗнлине те пӗлмест.

— Кусем мӗнсем сан, Алексей?—терӗ Кӗтерне инке, тата ҫывӑхарах пырса пӑхса.

— Ак ку—орден, ак ку—медаль,—аллипе кӑтартрӗ ывӑлӗ.—Кӑна Мускав патӗнче ҫапӑҫнӑ чухне илнӗ, ку орденне нумай пулмасть пачӗҫ.

Амӑшӗ нимӗн калама та пӗлмест. Тем каласшӑн, темле питех те пысӑк шухӑш каласа парасшӑн, анчах чӗлхе ҫавӑрса калаймасть. Чӗрере калама ҫук ӑшӑ туйӑм ҫӗкленет, куҫсем такама тав тунӑ пек пӑхаҫҫӗ, алсем ывӑлӗн тӗреклӗ кӳлепи патнелле туртӑнаҫҫӗ. „Ара, эп кӑна малтанах пӗлнӗ, ӳссен вӑл ҫакӑн пек маттур ывӑл пулассине малтанах пӗлнӗ".

— Сӑра ӑсса пар ӗнтӗ,—терӗ Алексей, амӑшӗн куҫҫульпе ҫутӑлса тӑракан савӑнаҫлӑ куҫӗсенчен пӑхса.—Ав, ҫынсем те ӗҫрен таврӑнаҫҫӗ. Атте те килет пулӗ.

— Килет пулӗ ӗнтӗ. Эп халех сӑра ӑсса тухатӑп. Эс чӗн унта юлташусене, кӑшкӑр. Матӗрне инкӳ иртсе кайнине курсан, ӑна чӗн. Эп халех...

Вӑл самаях пысӑк чара илчӗ те тӗпсакайне сӑра ӑсма кӗрсе кайрӗ.

Ашшӗне Алексей шӑп алӑкра тӗлпулчӗ. Ывӑлӗ пӳртрен тулалла тухасшӑн, ашшӗ, Алексей таврӑннине пӗлнӗскер, васкаса пӳртелле кӗрет.

— Ну, ну, ват çын çулне пӳлмеççӗ,—шӳт турӗ Михала. Алексей ӑна çул парса каялла кӗрсен, вӑл ӑна ыталаса илсе виçӗ хутчен чуптурӗ.

— Таврӑнтӑм, тетӗн? Нумайлӑха-и?

— Çула май çеç, атте. Госпитальрен фронта каятӑп,—терӗ хӑюллӑн ывӑлӗ. Вӑл салтакла калаçни ашшӗне кӑмӑла кайрӗ,— „Ак тӗнче курса килчӗ те, епле хӑюллӑн калаçать. Вӑрçа кайиччен манпа хирӗç тӑрса калаçма пултарайматчӗ",—терӗ вӑл ӑшра.

— Тӗрӗс, сывалнӑ пулсан, мӗн тумалла халь килте,—татӑклӑн каласа хучӗ ашшӗ те.

Часах амӑшӗ сӗтел тирпейлерӗ, Анушкасӑр пуçне пӗтӗм çемье сӗтел хушшине кӗрсе ларчӗ. Пурне те черкке тултарса парсан, ашшӗ ывӑлӗ çине пӑхса: „Эс таврӑннӑ ятпа" терӗ те, унпа пӗр харӑс пушатса хучӗ. Унтан амӑшӗ пӗрер курка сӑра тултарса пачӗ. Арçынсем ӑна та сывламасӑр ӗçрӗç...

— Амӑшӗ, пӑх, ывӑл çапӑçма та, ӗçме те вӗреннӗ,—терӗ Михала пичче, Кӗтерне инке еннелле куç хӗссе. Çавӑнтах сӑмахне тӳрлетсе хучӗ:

— Анчах иртерех ырламастӑп-и—çапӑçма вӗренейнӗ-и вара?

— Пӗлместӗп ӗнтӗ,—терӗ Алексей.

— Çапӑçма пӗлменрен орден паман пулӗ ӗнтӗ,—пиччӗшӗн хутне кӗчӗ çӳçене-çӳçене эрех ӗçекен Укахви.

— Орденӗ хӑйӗн вырӑнӗнче пултӑр-ха вӑл,—терӗ ашшӗ.— Çапах та çапӑçма вӗренеймен вӗсем. Унсӑрӑн ялан каялла чакмӗччӗç. Çапла-и, ывӑлӑм?

— Тӗрӗс,—терӗ Алексей.

— Ничево, вӗренӗç-ха, нуша кулач çиме вӗрентнӗ, тет. Халӗ те çав-çавах вӑйлӑ тапӑнса кӗрет-и?

— Вӑйла тапӑнать.

— Шала кӗресшӗн тапаçланать. Нивушлӗ çӑтса ярӗ çакӑн пек ысӑк çӗршыва?

— Çатасса çӑтаймасть-ха та, çынна нумай пӗтерет, пире йӑлтах юхӑнтарса хӑварать.

— Эп те çапла шутлатӑп çав. Анчах хӑй çӑтнине хӑçан кӑларма тытӑнӗ-ха вӑл? Часрахчӗ...

— Пӗр çӗмӗрме тытӑнсан çӗмӗрӗç-ха та ӑна. Халь урать-ха.

— Саранча пек килсе кӗчӗ,—терӗ Михала пичче, черккесене тепрер тултарса.—Саранча пӗр пӗтсен кӗтӗвӗпе пӗтекенччӗ-ха. Ку та çавӑн пек пулать... Ну, тепре тыт, юлашки. Манӑн правлени ларӑвне каймалла.

— Пӗррелӗхе каймасан та юрӗ, ывӑл таврӑннӑ тесен, вӑрçмӗç,—чарма тӑчӗ Кӗтерне инке.

— Сана юрать те çав, карчӑкӑм, мана юрамасть,—кулса каларӗ Михала. Унтан Алексейшӗн каласа хучӗ:—Каясах пулать, Ятман электростанцие туса пӗтересси пирки ыйту

лартнӑ. Вăйлă тавлашу пулать кĕçĕр. Пĕрисем тумалла, теççĕ, теприсем вăрçă пĕтиччен тăхтамалла, теççĕ.

Ашшĕ тухса кайсан, Укахви патне Липа пырса çитрĕ, вара вĕсем Алексейпе нумайччен калаçса ларчĕç.

Амăшĕ ывăлĕ валли паçăрах çемçе вырăн хатĕрлесе хунă ĕнтĕ, ывăлĕпе хĕрсем çав-çавах калаçаççĕ-ха. Уçса пăрахнă чӳречерен каçхи сулхăн кĕрет, çывăхрах хĕрсем майпен юрлани илтĕнет, пӳртре валак çинче шыв юхса выртнă пек лăпкă калаçу пырать. Амăшне ку калаçу шыв юххи пек кăна мар, сĕмпыл юххи пек туйăнать. Вăл хăй пит калаçсах каймасть, хутран-ситрен çеç пĕр-ик сăмах хушса хурать, итлессе вара пĕр сăмахне сиктермесĕр итлет. Вăл ывăлĕ калаçса ларнине халь виçĕ çĕр татти-сыпписĕр итлеме пултарĕччĕ.

— Çитĕ ĕнтĕ, выртса кан, Алексей,—тет хăй çапах та.— Ыран кун пур вĕт, ыттине ыран калаçăр.

— Халех, анне,—тет Укахви, хăй Алексее малалла калама хистет:

— Вара, вара.

Алексей хăй пулнă çапăçусем çинчен, тыткăна лекнĕ нимĕçсем çинчен, Мускав çинчен кала-кала кăтартать.

— Фронтра хĕрарăмсем пур-и?—ыйтать Липа.

— Пур.

— Чăваш хĕрĕсем пур-и?

— Чăвашсем те пур. Эп хамах темиçе хĕрачана курнă.

— Хамăр енчи çынсенчен фронтра кама куртăн?

— Ятмансен Сантăрне çеç, урăх никама та курман.

Кăна илтсен, Липăпа Укахви тĕлĕнсех каяççĕ.

— Ятмансен Сантăрне? Фронтра çавна куртăна вара?

— Курнă. Ара эп ун çинчен сире çырса янăччĕ-çке?

— Çук, ун пек çыру илмен эпир. Çук, çук...

— Лайăх астăватăп, çырса янăччĕ. Юлашки вăхăтра эпир унпа пĕр чаçрах пулнăччĕ. Эп аманнă чухне çапăçура та пĕрлех пултăмăр. Кайран эп ăна çухатрăм.

— Мĕнле çухатрăн?

— Çаплах. Вăрçăра сынна çухатасси мĕнех вăл. Ăна ăçта та пулин куçарчĕç пулĕ, эп амантăм.

Алексей хăйне малтанах никам умĕнче те Сантăр çинчен асăнмастăп тесе сăмах панăччĕ. Халь çавна аса илчĕ те хăйне вăрçса тăкрĕ. „Мĕн тума персе ятăм-ха эп кăна. Юрамасть вĕт-ха ăна пĕлтерме, юрамасть", терĕ.

— Эс темскер ăнланмалла каламастăн, Алексей,—терĕ Укахви.—Ху амантăм тетĕн, çавăнтах ăна урăх чаçа куçарчĕç тетĕн. Амансан эс чаçна çакланман вĕт-ха?

— Çакланман.

— Апла эс ăна урăх çĕре куçарнине ăçтан пĕлен?

Алексей пĕр вăхăтлăха иккĕленсе тăчĕ. „Калас-и, калас мар-и? Тен, каласан авантарах. Кайран пурĕ-пĕрех пĕлеççĕ вĕт? Паян-ыран, тен, вилнĕ хучĕ те çитет".

— Эп амантăм, Сантăр çав çапăçура вилчĕ,—терĕ вăл аран-аран.

— Сан куç умĕнчех вилчĕ-и?

— Ман куç умĕнчех.

„Ав мĕнле начар салтак эпĕ,—вăрçса илчĕ Алексей хăйне.— Каламастăп тесе таврăнтăм та, тӳрех персе те ятăм. Ыран хăйсем те пĕлеççĕ ĕнтĕ. Эп каламан пулсан, тен, вăрçă пĕтсен тин пĕлетчĕç-ха“.

— Сире каларăм, анчах çемьине калама кирлĕ-и, ытлашши хуçăлса ӳкмĕç-и?—терĕ вăл, пĕрре Липа çине, тепре амăшĕ çине пăхса. Липа ун ыйтăвĕ пирки пĕрре те иккĕленсе тăмарĕ курăнать, тӳрех каласа хучĕ:

— Пĕлтермесĕр. Мĕн тума пытармалла вара ăна?

— Вилнĕ япалана эс каламасан та пĕлеççĕ ĕнтĕ, ывăлăм, пĕр вилнĕ çын таврăнмастех ĕнтĕ,—тсрĕ амăшĕ те.—Темиçе уйăх çыру çырман япала ахаль те вилнĕ тесех шутлаççĕ пулĕ. Пĕркун амăшĕ кĕчĕ те, асли таврăнчĕ те-ха, кĕçĕнни вилчĕ пулмалла, тесе калаçса ларчĕ.

Вара тăваттăн канашларĕç те Сантăр вилнине çемьинчен пытарса усрас мар тесе шут тытрĕç.

Тепĕр кунне Алексей патне Ятманпа амăшĕ хăйсем пычĕç. Арçынсем пĕр-пĕрне салтакла саламларĕç те, Ятман ăна тӳрех ыйту пачĕ:

— Ман шăллăма пытарса хăвартăн апла?—терĕ.

— Хăвартăм, Ятман,—терĕ Алексей, ассăн сывласа.—Ялан пĕрлеччĕ, юлашки çапăçура... вилчĕ...

Ятман пырне темле йывăр япала тулса пынине, куçсене йӳçек пуçтараннине туйрĕ, пĕр вăхăт вăл çак пыра ларнă япалана çăтса ярасшăн асапланакан çын пек турткалашса ларчĕ. Темле йывăр пулсан та, вăл Алексее куççуль кăтартмарĕ, тăвăлнă кăмăлĕ иртсен ăна йăлтах каласа пама хушрĕ.

— Алексей, вăл мĕнле вилнине йăлтах каласа пар. Мĕнле çапăçрĕ, мĕнле вилчĕ—йăлтах. Пĕлтĕр анне ывăлĕ мĕнле вилнине.

— Лайăх çапăçрĕ, лайăх вилчĕ, çавна çеç калама пултаратăп.

— Эсир курсра та пĕрлех пулнă вĕт-ха унпа?

— Пĕрлех. Лайăх вĕренчĕ. Фронта каяс умĕн ăна взвод пачĕç, ача пачах улăшăнчĕ.

— Вилнĕ чухне вăл взвод командирĕ пулнă-и?

— Взвод командирĕ. Пĕр çĕрте пире нимĕçсем танксемпе тинкене илчĕç. Темĕн чухлĕ персе çĕмĕретпĕр—татах пĕр кĕтӳ килет. Вĕсем пирĕн соединенине çавăрса илесшĕн пулнă курăнать, эпир вырăнаçнă сăрт урлă каçасшăн çунаççĕ. Йывăр вăхăт пулчĕ чăнах та... Пирĕн батальонăн пĕр рубежа талăк хушши тытса тăма тиврĕ. Çапла приказ павăччĕ. Вăл вăхăтра

дивизи урăх позици йышăнмаллаччĕ. Дивизи çырма ку еннелле чакать, эпир çырма леш енчи пĕр яла йышанса тăратпăр. Пире: „Тем пулсан та яла ыранччен тăшмана пама юрамасть" терĕç. Приказ—закон, ăна, вилсен те, пурăнăçлас пулать. Çапла, эпир окопсем чавса тултартăмăр та, тăшман килсе тухасса кĕтсе выртатпăр. Пирĕн пысăках мар тупăсем, танка хирĕç пемелли пăшалсем пур, гранатăсем те нумай. Часах юнашар окопра „танксем!" тесе кăшкăрса ячĕç. Капла кăшкăрса яни вăл çынна вĕри шывпа сапнипе пĕрех. Çын пĕтĕм шăмшакĕпе, пĕтĕм нервипе, юлашки юн тымарĕпе çапăçăва хатĕрленсе тăрать.

— Ав, килеççĕ, мурилесшĕсем,—терĕ мана Сантăр. Чăнах та умра, пĕр çухрăмра, танксем курăнса кайрĕç. Вĕсем, пĕрре лапамалла анса, тепре чĕвен тăнă пек сăрт çине хăпарса, ӳсĕр çын пек тайкаланса пирĕн пата çывăхараççĕ. Чи усал япала вăл танка кĕтсе выртасси. Хăвăн вилĕмне кĕтсе выртатăн-çке-ха. Нимĕç броня ăшне пытанса сан валли вилĕм илсе килет. Çывăха çитсен, малти машина çине пĕр харăсах темиçен персе ятăмăр. Малти танк кустăрмисем çинчи гусеница, шуса килекен çĕлен çинчен тирĕ сĕвĕнсе аннă евĕр, çĕрелле ӳкрĕ, танк, хăрах гусеница çинче çеç юлнă май, хăяккăн çаврăнса ларчĕ. Вара ăна çавăнтах персе тивретсе ятăмăр. Ытти машинисем, кăна курмăш пулса, малаллах шăваççĕ.

— Ав çавна,—тетĕп Сантăра.—Эп ак кăна, сулахайрине тĕллетĕп.

Сантăр танка пĕрре персех тивретрĕ. Савăнса кайнă:

— Пăх-ха, Алексей, пăх-ха, эп пĕрне тивретрĕм!—тесе кăшкăрать. Эпир темиçе танка чартăмăр. Вĕсем татах килеççĕ. Хăш-пĕрисем пирĕн окопсем патнех çитрĕç, çывăхранах пирен çине переççĕ. Пĕр пысăк танкĕ юнашар окоп çине кĕрсе кайрĕ, унти темиçе çынна çĕр айне тĕшĕрсе хучĕ.

— Кӳр гранатăсем!—кăшкăрчĕ Сантăр.—Айăккинчен гранатăпа!

Эп лайăхах куртăм: вăл, окопран пилĕк таран çĕкленчĕ те, пĕр тăруках темиçе граната ывăтрĕ. Çавăнтах хăй каялла тĕшĕрĕлсе анчĕ, ăна нимĕç пулеметпа çулса тăкнă иккен. Эп упаленсе çитрĕм те итлесе пăхрăм—вăл сывлама та пăрахнă.

Алексей калама чарăнчĕ. Вăл, темле йывăр япалана хулпуççи çинчен антарнă хыççăнхи пек, ассăн сывласа ячĕ. Пӳртре никам та нимĕн те чĕнмерĕ. Юнашарах ĕсĕклесе макăрни илтĕнчĕ. Алексей чарăнсан, Ягман амăшĕ хăйне ниепле те лăплантараймасăр хыттăнах ӳлеме тытăнчĕ.

— Макăр, анне,—терĕ ун еннелле çаврăнса Ятман.—Макăрмалла. Анчах мухтанмалла та. Ун пек ывăлпа мухтанас пулать.

## X

Пăчă пӳлĕмре лампа çăтăртатса çунать. Лампа йĕри-тавра пысăк кăна симĕс шăна явкаланса çӳрет. Вăл пĕрре уçă чӳ-

рече патне вĕçсе каять, тепре хăйĕн вилĕмне шыраса каллех вут çине пырса çапăнать.

Ятман сăмахне малалла чăсать:

— Электростанци тунă çĕре колхоз вăй та, укçа-тенкĕ те нумай хунă. Мĕншĕн çĕртсе лартмалла-ха ун пурине? Çурри ытла тунă япалана пирĕн кăçал тем тесен те ĕçе ямалла. Эпĕ ку ĕçе халех пуçăнма ыйтатăп. Ман сĕнӳ çакăн пек: ĕçе тыр вырма тухиччен тытăнас, платниксенчен ятарласа строительство бригади тăвас. Бригадир пулма Сахрун пичче килĕшет. Пура тунă çĕрте ĕлĕк те бригадир вăлах пулнă. Мĕнпур хатĕрĕсене тупассине эпĕ хам çине илетĕп.

„Илетĕн эсĕ ху çине,—терĕ ларăва ертсе пыракан Левентей хăй ăшĕнче.—Сăмах паратăн та, кайран манах вăрçма тытăнатăн. Эс—рядовой çын, санран, коммунист тесе, райком çеç ыйтма пултарать, ман пурин умĕнче те ответ тытас пулать. Кам пĕлет, темиçе пин чиксе хумалла-ха унта. Саншăн ху пуçланă ĕç хаклă, тырă мĕн тума çитет кăçал—эс ун çинчен шутламастăн. Тупнă ĕç. Ту-ха çак вăхăтра электростанци. Ун пирки ахаль те эпĕ темĕн чухлĕ сăмах илтнĕ. Ятман хăй таврăнсанах çав электростанци пирки тĕртсе илчĕ, пуçланă япалана та туса пĕтереймен, терĕ. Мана мĕне кирлĕ вăл? Мана уншăн никам та спасибо калас çук. Хисепĕ Ятманах тивет. Ялта вара нумайăшсем: „Ятман аплаччĕ, Ятман каплаччĕ, вăл электростанци те тутарма тытăннăччĕ“ теççĕ. Ак тутартăр халь. Курăпăр, мĕнле тутарĕ“.

Çапла шутларĕ Левентей. Анчах вăл хăйĕн шухăшне тӳрех каласа памарĕ, Ятмана хирĕç калама урăх сăлтав тупрĕ.

— Электростанцине туса ĕçе ярасси лайăх япала. Ун пирки сăмах та çук. Анчах эсир ан манăр, халь вăрçă вăхăчĕçке, халь пĕтĕм вăя фронта пулăшма парас пулать. Кашни пус укçа хисепре. Ку пĕрре. Тата колхозри ĕç вăйне илер-ха. Ятман: „Çынсем чылайăшĕ пушах“, тет. Пĕр ĕçрен пушансан, халь ыранах тепĕр ĕç тупăнать. Тыр вырмалла. Авăн çапмалла. Чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлеме кăна пĕр çирĕм çын ямалла. Торф кăларма Шупашкара пилĕк çын ăсатмалла. Ăçтан тупăпăр-ха эпир ĕç вăйĕ? Юрать, сиртен ыйтмаççĕ те, эсир пĕлместĕр. Эпĕ—председатель, ман пуриншĕн те ответ тытас пулать...

Вăл сăмахне вĕçлемерĕ, электростанци тăвассине хирĕç-и вăл, майлă-и—ăна каламарĕ. Анчах çынсем ăна лайăх ăнланчĕç: вăл хирĕç. Левентей, Ятман çине пăхса илчĕ те, ыттисене хăйсен шухăшĕсене калама чĕнчĕ.

— Куçма пичче, сан шутпа мĕнле?—терĕ вăл аллинчи хаçачĕ çине пăхкаласа ларакан Куççăр Куçмана.

— Ак паянхи хаçатра Сталин юлташ патне янă пĕр телеграммăна пичетленĕ,—терĕ хаçатне сарса Куççăр Куçма.— Уралта пысăк домна кăмаки туса пĕтернĕ, çавăн çинчен рабочисем Сталин юлташа рапорт параççĕ. Тĕлĕнмелле пек:

мӗнле-ха вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче домна кӑмакисем тӑваҫҫӗ? Хулана кайӑр-ха, сӑмахран, Шупашкарах кайӑр-ха, унта мӗн чухлӗ строительство курма пулать. Пурӑнмалли ҫурт тӑваҫҫӗ, шкул тӑваҫҫӗ, Атӑл леш енче ав Шупашкар валли пысӑк электростанци тӑваҫҫӗ. Левентей „вӑрҫӑ" тет. Ҫук, пирӗн вӑрҫӑ вӑхӑчӗ тесе электростанцине ҫӗртсе лартмалла мар. Тӗрӗссипе каласан, пирӗн пурте хатӗр: пралук пур, йываҫ, хӑма тавраш пур, двигательне эпир Ягманпа вӑрҫӑччӗнех илнӗччӗ, ӑна турттарса кӑна килмелле. Ман шутпа, кунта пӗрре те тавлашса тӑмалли ҫук, станцине тума тытӑнмалла.

Кӑтра Михала та ҫавнах каларӗ:

— Кая юлсан каю шӑтать, тенӗ ваттисем. Пуҫланӑ ӗҫе вихҫан та кая хӑварма юрамасть. Эп ӗҫе тытӑнасса тем пекех кӗтетӗп, халӑх та кӗтет. Ӑнлантарса парсан, пурте ӗҫлеме тухмалла. Хамӑр ялта хулари пек ҫутӑ пулать те, кам ӗҫлеме ӳркенсе тӑтӑр? Тата ҫакна ан манӑр: пирӗн промысла артелӗ пур-ҫке-ха. Ҫутӑ пулсан, хӗлле унта мӗн-мӗк кӑна тума пулмасть? Ку фронта пулӑшни пулмасть-и вара?

Ҫынсем Ятман майлӑ пулса ун сӗнӳне ырлани Левентее пӑртак иккӗлентерчӗ. Вӑл вара ыйтӑва пӗр хирӗҫмесӗр татма шутларӗ.

— Халӑх ӑҫталла—эп те ҫавӑнталлах,—тесе хучӗ вӑл хыттӑн.

„Лӑпӑрти,—терӗ ӑшра Ятман,—халӑх ӑҫталла—эп те ҫавӑнталла. Сан халӑха ертсе пымалла, а эс ун хыҫҫӑн сӗтӗрӗнетӗн, ҫитменнине тата пӑтратма, ӗҫе пӑсма пӑхатӑн. Принципсӑр этем". Ҫавӑнтах вӑл хӑйӗнчен-хӑй тата тепре ыйтрӗ: „Мӗнле суйлама пултарнӑ-ха ӑна председателе? Ҫак ҫӑмӑлттай ҫынна мӗнле ҫакӑн чухлӗ ҫын ӗҫ шанса панӑ? Вӑл председатель мар вӗт-ха—наказани". Ҫартан тавӑрӑнсанах Ятман хӑйне Левентейрен вӑл ун выранӗнче председатель пулнӑран кӗвӗҫетӗп пулӗ тесе шутланӑччӗ. Халь пӗлет ӗнтӗ, пӗр иккӗленмесӗрех калама пултарать: председательте ларнӑшӑн вӑл унтан нимӗн чухлӗ те кӗвӗҫмест. Ӗҫӗпе начар ҫын вӑл, чунӗпе илемсӗр ҫын, ҫавӑнпа юратмасть. Кирлӗ пулсан, кӑна вӑл Левентее хӑйне те куҫкӗретӗнех калама пултарать.

Вӑхӑт чылая кайнине кура ларура урӑх ыйту хускатмарӗҫ. Часах правленинче ҫутӑ сӳнчӗ, урамра унта та кунта та чӗлӗм тивретме ҫутнӑ шӑрпӑк ҫутисем курӑна-курӑна кайрӗҫ. Пӑртак тӑрсан вӑл ҫутӑсем те ҫухалчӗҫ. Урам, ҫуллахи тӗттӗм каҫ чатӑрне тата хытӑрах туртса пӗркенсе, шӑпах пулчӗ.

## XI

Ҫырма хӗрринче паян иртенпех пуртӑ сасси илтӗнет. Малтан пӗр-ик пуртӑ кӑна пӑртак ылмашӑнарах шаккатчӗҫ, унтан вӗсен ҫумне ыттисем хутшӑнчӗҫ. Ӗҫлекенсен телейне, каҫхине ҫума пуҫланӑ ҫумӑр та чарӑнчӗ, ирхи апат тӗлне хӗвел пӑхма пикенчӗ. Платниксем вара пиншакӗсене те хыврӗҫ.

— Пуртă тытманни нумай пулатчĕ-ха, тавах Ятмана ĕç тупса панăшăн,—терĕ Кăтра Михала, хыр пĕрени çине утланса ларса.—Эх, пĕрени сухăрлă, час çĕрмест ĕнтĕ ку! Туса-туса тĕреклĕ тăвар-ха. Тĕплĕ тунă ĕç икĕ ĕмĕр пурăнать, тет.

Вăл, аллине сурать те, пурттине майласа тытса, ĕçлеме тытăнать.

— Пурине туса çитерĕпĕр, турбинине хăçан илсе килеççĕ-ха?—тет ун çывăхĕнче тепĕр кĕреше чутлакан Сахрун мучи.

— Илсе килеççĕ. Сахрун, ун пирки калаçса татăлнă, Шупашкартан тягачпа илсе килеççĕ,—тет Кăтра Михала.—Анчах кĕркунне çĕр шăнсан лартмалла ан пултăр, чавма кансĕр пулать, эп ав мĕн çинчен шутлатăп.

— Çуркунне тумалла пулнă çак ĕçе, ака ĕçĕнчен пушансан.

— Çапла кирлĕ пулнă та çав, пире кăнтăрла иртсен кăна ăс кĕрет-çке, Сахрун.

— Вал юрĕ-ха, кирлĕ пулсан, сивĕре те ĕçлĕпĕр. Харама çеç ан пултăр.

— Мĕншĕн харама пултăр-ха ку ĕç?—ыйтать Кăтра Михала.

— Çутăлмĕ.

— Мĕншĕн çутăлмасть?

— Тума пĕлмĕпĕр.

— Кайран шалтан ăна специалистсем тăваççĕ, вĕсем çутăлмалла тăваççĕ ĕнтĕ, хулари пекех.

— Хулари пекех çутă пулĕ-ши?

— Çавăн пек пулмасăр. Пÿрт çуталса кăна ларать вара сан. Аслă ывăлу, таврăнсан, тĕлĕнсе кăна тăрĕ. Вот ку япала, вот кăна эп ăнланатăп, тейĕ.

Юнашарах хĕрарăмсем электростанцин шыв сиккийĕ валли çĕр чаваççĕ. Хуларан темле инженер килнĕ, вăл ăçта мĕн тумаллине кăтартса çÿрет, хăй патĕнчи çынсене тем çинчен ăнлантара-ăнлантара парать.

— Товарищ, столько хватит штоль?—кăшкăрать ăна иртсе кайнă чух Укахви.

— Чăвашлах ыйт, вăл—чăваш,—тет пĕр хĕрачи.

— Чăвашах-и? Эй, инженер юлташ, кун пек çитет-и?

Леш, вĕсем патне пырать те, аллинчи чертёжĕ çине пăхса, каласа хурать:

— Кунта тарăнăш виçĕ метр çурă пулмалла. Виççе пăхăрха, мĕн чухлĕ.

Хĕрарăмсем ун аллинчи хутланакан тимĕр таткине илсе виççе пăхаççĕ.

— Виççĕ. Çитет пулĕ? Унсăрăн сирĕн кустăрми чăтаймĕ.

— Чăтать. Тата пăртак чавăр. Ак çакăнтипе танлаштарăр. Вăл Людмила тăракан вырăна тĕллесе кăтартать.

Электростанци тунă çĕре халăх пуханнăçемĕн пухăнса

пырать. Улăх тăрăх хĕрсем килеççĕ, сăртран çинçе сукмакпа шкул ачисем ушкăнпа анаççĕ, çывăхри урамсенчен тухман çын пĕрре те юлман пулĕ. Колхозри ытти ĕçе çӳремен карчăксемпе стариксем те кĕреçе йăтса тухнă. Ĕçĕ кунта пурне те çитет—пĕрене хăпартмалла, кирпĕч йăтмалла, çĕр чавмалла, чавса кăларнă тăпрана пĕве патне ывăтмалла. Кашниех ĕçлет, мĕн вăй çитнĕ таран пулăшма тăрăшать. Çырма хĕрри, кăткă йăви пек, халăхпа хĕвĕшсе тăрать. Нумайранпа курман пулĕ Атăлкасси ялĕ пĕтĕм халăх çапла хавхаланса ĕçленине! Курнă-ши вăл хăçан та пулин кун пек картинăна?

— Людмила,—тет Ятман,—эс матур хĕрача пулаканччĕ, хĕрсенчен пĕр бригада организацилe те, ав, çавăнта инженер патне кай. Унта тепĕр шăтăк чавмалла.

Людмила çивчĕ куçĕсене вылятса ун çине пăхсанах вăл чăтаймасăр кулса ярать.

— Юрать-и?

— Юрать,—тет татăклăн Людмила. Вăл ырăнтан хускалсан та Ятман çинеллех пăхать. „Тавах, тусăм. Эп ача кăна мар ĕнтĕ, мана кун пек ĕç те хушма юрать. Кăна эп тахçанах кĕтнĕччĕ,“ теççĕ унăн хăюллă та пысăк куçĕсем.

Ятман шкул ачисемпе тăпра йăтнă çĕрте ĕçлекен учитель патне пырать те ăна тепĕр задани парать.

— Петр Иванович, арçын ачасене ил те, икĕ лав кӳлсе вăрмана вĕçтер. Çул хĕрринчех унта иккĕн çапă касаççĕ, çав çаппа кунта турттарма тытăн. Пире халь пĕве тунă çĕре çапă нумай кирлĕ пулать.

Ачасенчен пăрăнсанах ун патне „Çĕнĕ пурăнăç“ колхоз председателĕ Катрам Иванĕ пырса тăчĕ. Вăл утă çулнă чухнехи тумĕпех: пуçĕнче улăм шлепке, çийĕнче тĕрленĕ вăрăм кĕпе, пилĕкрен пурçăн шерепеллĕ пиçихи çыхса янă.

— Йышăнатăр-и, йышăнмастăр-и, турикассем килчĕç,—терĕ вăл, Ятмана алă парса.

Ятмана ку самаях тĕлĕнтерчĕ. Кам каланă турикассене эпир кунта ĕçлени çинчен? Ăçтан ăс çитнĕ вĕсен пире пулăшмашкăн пуçтарăнса тухма? Анчах турикассем атăлкассисене пулăшма тесе килмен иккен, вĕсем хăйсен станцине тума тухнă.

Катрам Иванĕ кӳршĕсем электростанцине туса пĕтерме шутлани çинчен илтсенех Левентей патне чупса пынă та станцине пĕрле тума сĕннĕ. Левентей: „Эп пĕлместĕп, Ятманран ыйт“ тесе каланă пулнă. Лешĕ, Ятман ăна пая хутшăнтарас çуккине пĕлсе, ун патне кайман, района вĕçтернĕ. Унта вара ăна „халăхна пуçтар та ĕçлеме тух, станцине пĕрле тăвăр“ тесе ăнлантарса янă.

— Уйрăлатăн пулсан, станцине те уйрăм тумаллаччĕ,—кăмăлсăррăн каларĕ Ятман.—Пирĕнпе мĕн тума çыхланатăн тата?

— Ку вăл пĕччен тумалли ĕç мар. Ав Энĕш шывĕ çинче колхозсем темиçешерĕн пĕрлешсе тăваççĕ, илтнĕ пулĕ...

Тӗрӗс калать старик, кунта та сӑмахпа Ятмана ҫапать! Пурне те пӗлет, мур илесшӗ. Вӑрҫасчӗ ӑна, ҫук, вӑрҫма май ҫук. Ак килчӗ вӑл халӑха ертсе, пуҫне ҫӗклемесӗр ӗҫлет ӗнтӗ. Турбинӑпа ытти япаласемшӗн тырӑ памалла пулсан, тырӑ парать, укҫан тӳлемелле пулсан, укҫан тӳлет, Левентей пек мар, пурне те тӗплӗ тӑвать, сӑмаха ҫилпе вӗҫтермест.

— Ӗҫле, ӗҫле, пӗрле тӑвӑпӑр ӗнтӗ,—тет ирӗксӗрех килӗшсе Ятман. Хӑй куҫ хӳрипе вӗсен калаҫуне итлесе тӑракан Липа ҫине пӑхать. „Ҫавӑн ҫынни вӗт, Турикас колхозници, ҫакӑнта вӑрҫас пулсан, пикенсех Катрама хӳтӗлемелле“ тет хӑй ӑшра.

Турикассем килнӗ хыҫҫӑн ӗҫ татах та кал-кал кайрӗ. Тасатмалли шӑтӑксене тасатса ҫитерчӗҫ, ҫӗнӗрен те чылай шӑтӑк алтрӗҫ, пӗве ҫине темиҫе ҫӗр кӗреҫе ӑмӑртмалла тӑпра ывӑтрӗҫ. Платниксем пурана витмелли хӑмапа вӗрлӗхсене йӑлтах хатӗрлесе хучӗҫ, чӳрече рамисене лартрӗҫ. Кӑнтӑрлахи апат хыҫҫӑн халӑх ӗҫе сахалтарах тухрӗ, нумайӗшӗсем, кунта пӗр-ик сехете ҫеҫ тухнӑскерсем, ытти ӗҫсене саланчӗҫ, ҫапах та ӗҫ ирхи кӳлӗмри пекех вӗресе тӑчӗ.

— Кун пек ӗҫлесен, станцине праҫникченех хута яраттӑмӑр,—терӗ Кӑтра Михала.—Турбинине ҫеҫ часрах илсе килччӗр.

— Ыран пӗр бригадӑпа ялта юпасем лартатпӑр,—терӗ Ятман.—Хатӗр юпасем нумай-и пирӗн?

— Ҫав колхоз правленийӗ патӗнчи кӑна.

— Вӑл сахал. Вӑл пӗр урама та ҫитмест.

— Ыран темиҫе ҫынна юпа шураттармалла пулать. Хӗрарӑмсем шӑтӑкӗсене чавччӗр.

— Ӗҫӗ нумай-ха,—пуҫне сулса каларӗ Ятман.—Япала та нумай кирлӗ—пралук, резина, машина ҫӑвӗ, лампӑсем. Чылай япалана хамӑр тимрӗҫ лаҫҫинче туптамалла пулать.

— Мӗн пултарнине туптатпӑр.

Платниксем патӗнчен пӑрӑнсан Ятман юхӑнса кайнӑ пӗвене юсанӑ ҫӗрте пулчӗ. Кунта пуринчен ытла хӗрсем ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем хушшинче каччӑсем те пур. Ҫавӑнпа та ӗҫ кунта питӗ савӑнӑҫлӑ пырать. Пӗр-пӗрне тӗрте-тӗрте яраҫҫӗ, кулаҫҫӗ, шӳт тӑваҫҫӗ.

— Эп Ятмана калатӑп ак, вара пӗлетӗр,—терӗ Алексей, вӗсем патне Ятман пынине курса.

— Мӗн, кӳрентереҫҫӗ-им сана, Алексей?

— Кӳрентерме кӑна мар, йӑлт пусмӑрласа ҫитерчӗҫ. Пӑх-ха, мана икӗ метр виҫсе пачӗҫ. Ман ӑна мӗнле пӗтерес?

— Иккӗ мар-ҫке, пӗрре ҫеҫ,—терӗ Людмила.

— Хӑйсем мана бригадир турӗҫ, хӑйсемех тата виҫсе парсах ӗҫлеттереҫҫӗ. Бригадирӑн ӗҫлемесен те юрать.

— Эс вӗсене хӑйсене виҫе-виҫе пар.

— Эпир ӑна шанмастпӑр, вӑл тӗрӗс виҫсе памасть!—кӑшкӑраҫҫӗ хӗрсем.—Хӑй юратаканнисене сахал виҫсе парать, юратманнисене нумай.

— Людмила, сана мĕнле виççе пачĕ?
— Мана кураймасть вăл.
— Ун вырăнне сана эп хам юратап,—тет Ятман.
— Çук, эсĕ те мана юратмастăн,—ответлет Людмила.

Çамрăксем, ывăннă пулсан та, каç пуличченех ĕçлерĕç. Ĕç пĕтерсен, вĕсем ушкăнпа çырмана шыв хĕррине анчĕç, кунта вара лайăх çăвăнса тасалчĕç, ун хыççăн тин килĕсене саланчĕç.

Чи юлашкинчен ĕçрен платниксем пушанчĕç. Вĕсем, пурттисене хучĕç те, пĕренесем çине ларса килеиччен чĕлĕм туртрĕç, анакан хĕвелпе ун тавракурăмĕ çине пăхса ыран мĕнле çанталăк пуласси пирки калаçкаласа илчĕç.

— Пĕр эрне çакăн пек уяр тăрать-ха,—терĕ шанчăклăн Сахрун пичче.
— Пĕр эрне таранах тăрĕ тетне?
— Тăрать,—çирĕплетрĕ вăл.
— Вот, Ятман, çак вăхăтпа усă курăр,—терĕ Кăтра Михала.—Пушаннă халăха кашни кун ĕçе кăларас пулать, пуçласа янă япалана тусах пĕтерес ĕнтĕ, тепĕр çула хăварас мар...

## XII

Вĕренсен çапла вĕт вăл: кашни каç урама тухас килет, кашни каç чун савнипе калаçас килет, унпа шурăмпуç хăпариччен, автансем шарлатса авăтма тытăниччен ларас килет. Икĕ каç тухнă хыççăн Ятманăн та чунĕ урамаллах туртрĕ. Епле кĕрсе çывран-ха халех амăшĕ чăланта туса панă чаршав айне? Пĕр айккинчен тепĕр айккине нумайччен çаврăнкаласа выртас пулать, нумай шухăш вĕçтерес пулать. Апла выртиччен йăмра айĕнчи е кÿлĕ хĕрринчи сак çинче иккĕн, иккĕн пулмасан ушкăнпа ларас. Анушкасен умĕнче мунча çумĕнче сарлака сак пур. Унта ларма çавтери лайăх. Атăл енчен каçхи нÿрĕ çил вĕрет, хутран-ситрен çил унтан пароход кăшкăрнă сасса илсе килет. Кÿлĕ хĕрринче тата та усă. Унта çанçурăмпа лĕп шыва кĕрсе ларнăн туйăнать. Кÿлĕ чÿхенет, хĕрачапа çывăх ларнăран сан çамрăк чуну та чÿхеннĕ пек вылянать. Людмила хăйĕн усă сассипе Украина юррисем юрлать, ял хĕрĕсем чăваш юррисемпе кăмăла килентереççĕ.

— Ну тата кала, тата кала,—тет Ятман çумне йăпшăннă Липа.—Эс каланине ман вĕçĕмсĕр итлес килет.

Ун куçĕсем темĕскере ĕмĕтленсе кÿлĕ çинелле пăхаççĕ. Кăнтăрла самаях тĕреклĕ пек курăнакансkер, Липа каччă çумĕнче пĕчĕк ача пек çеç тăрать. Ятман ăна вăрçă çинчен, партизансем çинчен, хăйĕн взводĕнчи салтак паттăрлăхĕпе Дон çинчи çапăçусем çинчен каласа парать. Вăл савăнăçлă япаласем çинчен пысăк çĕкленÿпе, хавхаланса, хурлăхлă япаласем çинчен вара макăрмаллах хурлăхлăн каласа пама пултарать. Липа ăна сывламасăр тенĕ пек итлет. Хутран-ситрен унăн сак

çичĕ вилĕм аллинчен тухнă, пурăнăçра питех те нумай пĕлекен çын хăйĕн саввийĕ пулнине те ĕненес килми пулать. Кунпа пĕрлех ăна кăмăллă та: çав тери маттур çын ăна юрататъ, унпа юнашар ларать, çак сăмахсене пĕр уншăн каласа парать.

— Ятман, итле-ха, Левентей сана мĕншĕн кураймасть вара?—кĕтмен çĕртен ыйтать Липа.

— Кураймасть тетне?

— Кураймасть çав. Паян пирĕн правленине Катрам Иванĕ патне пычĕ те тӳрех сан çинчен калаçма пикенчĕ. Фронтран таврăннă та çынсене ятласа кăна çӳрет, тет, каллех председателе ларасшăн, кирлĕ пулсан, паянах кĕме пултарать, такшин пит çунать председательте ĕçлессишĕн, тет.

— Ав мĕнле апла,—шухăша каять Ятман,—çавăн пекех калать-и?

— Çавăн пекех калать.

— Ухмах вăл, апла пулсан,—татăклăн каласа хурать Ятман.—Эпĕ ăна пăртак вăрçрăм ĕнтĕ, мĕншĕн тесен ăна вăл тивĕçлĕ, анчах председателе ларас шухăш ман пуçра та пулман.

— Сана ыттисем те „Ятман хаярланса таврăннă“, теççĕ. Мĕншĕн вăл, Ятман?—каллех ыйтать хĕр. Ăна Ятмана ытлашши ыйтусем панă пек туйăнать. Тен, чăнах та каçпа урамра ларнă чухне ун çинчен ыйтмалла марччĕ пулĕ? Анчах унăн пурне те пĕлес килет-çке-ха, Ятман çинчен çак темиçе кун хушшинче вăл чылай сăмах илтнĕ-çке-ха? Çын тĕрлĕ калама пултарать, Ятман вара ăна суяс çук.

— Чăнах та эп хаярланнă та пулĕ,—хăй тĕллĕн çеç калаçнă пек лăпкăн ответлет Ятман.—Ман чĕрем вăрçă вутĕнче ăшаланнă. Вăрçă хаяр, тăшман сĕмсĕр те усал, çавăнпа ку вăрçăра çынсем те хаярланаççĕ пулĕ. Ĕлĕк эпĕ мĕнле те пулин çитменлĕх курсан, тен, тепĕр чухне чĕнмесĕр те ирттерсе янă пулĕ, халĕ апла тума пултараймастăп. Халĕ çынсем начар ĕçленине курсан, ман чунăм тулашать: çакăн пек хăрушă вăхăтра начар ĕçлеме кам ирĕк панă пире? Халь çакăнта хамăр ялтан фронта кайнă çынсене пурне те пуçтарас пулсан, вĕсене эсир иртнĕ кĕркунне хăвăр кахалăрпа виçĕ гектар çĕрулмине юр айне туни çинчен каласа парас пулсан, вĕсем сире куç уçайми тиркесе, намăслантарса пĕтереççĕ вĕт?

— Пирĕн мар, сирĕн юр айне тунă,—тӳрлетет Липа.—Эпир пĕр метр та кăлармасăр хăварман.

— Те ĕлĕкхи йăлапа, эпĕ сана çав-çавах хамăр колхоз çынни тесе шутлатăп.

— Çук, ĕнтĕ, эп ют ял çынни. Ну, ну, каласа пĕтер...

— Эп хамăр ял çыннисене пĕлетĕп. Вĕсем ĕçре наян мар. Пĕркун улăхра утă çулнине куртăм та, чун савăнса кăна тăрать. Çавăн пек ĕçлесен, пирĕн тыл фронта темĕн те туса пама пултарать.

— Паян та лайăх ĕçлерĕмĕр,—тет Липа.
— Çавăн пек ĕçлемелле те.
— Ак тыр вырма тухсан тата та вăйлă ĕçлетпĕр. Пăхса кăна тăр.

Çапла вĕсем чыллайччен калаçса лараççĕ. Ирхине ирех ĕçе тухмалла мар пулсан, çутăличченех лармалла. Вăхăт ир енне сулăннă май, çĕр самаях сивĕнсе пырать, сывлăш ытларах нӳрелет. Ĕнтĕ курăк çинче ирхи сывлăм шăрçаланнă, каçхи шăрăк пачах иртсе кайнă, анчах çамрăксем ăна туймаççĕ. Вĕсен ăшри вĕри чакма пĕлмест, вĕсен пĕр-пĕрне чăмăртаса тытнă аллисем паçăрхи пекех тарлă.

Çывăхрах Алексейпа Людмила ларaççĕ. Вĕсем пуринчен ытларах шавлаççĕ. Ятманпа Липа хăйсем калаçман чухне вĕсем шӳт тунине итлеççĕ.

— Украинăра хĕр тупаймарăн-и вара?—кулать Людмила.
— Тупнăччĕ, анчах паллашса та ĕлкĕреймерĕм, вăл ялтан тухса каймалла пулчĕ.
— Инкек апла?—кулать хĕрача.
— Инкекĕ-масарĕ... Ун вырăнне ак хамăр ялтах украинка кĕтсе ларнă.

— Тепĕр украинкăна илсе килмеллеччĕ, вара иккĕн пулаттăмăрччĕ.

— Эп Люда, эс украинка пулнине ĕненместĕп. Эс мана, чăваш хĕрĕ пекех туйăнатăн. Мĕншĕн çапла вăл—эс чăваш хĕрĕ пек?

— Пĕлместĕп. Эс те мана пĕрре те чăваш пек туйăнмастăн, украинец пек туйăнатăн. Юрать-ха, асилтертĕн. Ăна эп сана хамах каласшăнччĕ.

— Ну, вот, калаçса татăлтăмăр,—кулчĕ Алексей,—эп украинец пек, эс чăваш пек. Мĕнле ăнланмалла ĕнтĕ кăна?
— Кирек те мĕнле.
— Алексей юлашки çĕр ларать, ыран каять пулас,—тет Липа.—Шел вĕт, çапла-и?
— Çапла пулмасăр,—тет Ятман, хĕре хăйĕн çумне хытăрах чăмăртаса.
— Ай, Ятман, эс хăюлланса кайнă. Ун пек юрамасть.

Ятман, такам илтесрен шикленнĕ пек, ăна шăппăн хăлхаран каласа хурать:
— Пĕрисем хаярланнă, теççĕ, теприсем хăюлланнă, теççĕ. Кам пĕлет, тен, чăнах та хаярланнă та, хăюлланнă та пулĕ. Пулма пултарать...

## XIII

Тепĕр кунхине çырма хĕрринче ĕç тата иртерех пуçланчĕ. Хĕвел Атăлăн чăнкă çыранĕ хĕрринчен хăпарса вăрман кати тĕлне çитсенех, хурăнлăхран кӳлĕ хĕрринчи хырă çине хăйĕн чăпар çунаттисемпе çатăлтаттарса куккук вĕççе

пырса ларчĕ. Вăл, колхозниксене ĕçе чĕннĕ пек, чарăна-чарăна темиçе ăстрăм авăтрĕ те, каяллах хурăнлăха вĕçсе кайрĕ.

Чи малтан çитнĕ Сахрун пичче, ыттисем килессе кĕтсе, пуртă аврин тимĕр савăлне шаларах çапса кĕртрĕ, шуратма тесе икĕ юман кĕрешне юнашар йăвантарса хучĕ.

Часах ун патне Турикас платникĕсем çитсе пурттисене пĕрене пуçĕсене тăрăнтара-тăрăнтара лартрĕç. Ват çынла картуса хывса сывлăх суннă хыççăн чĕлĕм пуррисем хăйсен пăхăр чĕлĕмĕсене чĕртсе ячĕç, чĕлĕм çуккисем лӳчĕркенсе пĕтнĕ хаçат татăкĕсенчен табак чĕркерĕç.

— Хулсем ыратмаççĕ-и, Мĕтри?—терĕ Сахрун пичче çамрăкрах платнике.

— Кăшт сураççĕ пек.

— Ну, вăл иртет. Малтанхи кун яланах çапла вăл.

— Эс, Мĕтри, юман кĕрешсене чутларах пар, вара хулу выляса кăна тăракан пулать,—кулчĕ Кăтра Михала.

Хĕрарăмсем шуйăхса килнине курсан, платниксем васкаса чĕлĕмĕсене сӳнтерчĕç те пурттисене алла тытрĕç.

Ятманпа инженер хĕрарăмсене ăçта мĕн тумаллине кăтартса пачĕç, вара чи йывăр ĕç—кĕреçепе çĕр чавасси ĕнерхи пекех çăмăллăн пуçланса кайрĕ. Пĕр ушкăнĕ станци таврашĕнче чаврĕ, тепĕр ушкăнĕ ялта лартса тухмалли юпа шăтăкĕсем алтрĕ.

Çул хĕрринче ĕçлекен хĕрарăмсем хушшинче Левентей инкĕшĕ те пуррине курса, Ятман унтан Левентей пирки ыйтрĕ.

— Ăçта сирĕн Левентей, иккĕмĕш кун кунта тухса курмасть?

— Килтеччĕ,—терĕ инкĕшĕ.—Çывăрса тăманччĕ-ха.

Хĕрарăмсем кулса ячĕç, вĕсене кура кулас мар тенĕ çĕртенех Ятман та кулчĕ.

— Нумай çывăрать,—терĕ вăл.—Колхоз председателĕн ялта чи сахал çывăракан çын пулмалла. Кала, тухтăр вăл, инженер ĕнерех ыйтатчĕ ăна.

Левентей кăнтăрлаччен те килсе курмарĕ. Кăнтăрла иртсен Ятманпа инженер ун патне правленине кĕчĕç. Унта та Куççăр Куçма пĕчченех ларать.

— Сан пуçлăх ăçта?—терĕ Ятман, ывăннипе часрах тенкел çине ларма васкаса тата хĕвелпе пиçнĕ пичĕ çинчи тарне шăлса.

— Апата кайрĕ.

— Ну, айда килне, шăрăхра уттарнăшăн сăра ĕçетпĕр,—чĕнчĕ вăл „Сельэлектро" инженерне.

Сăраран пуян вара Левентей, ăна вăл ăш каниччен ĕçтерчĕ. Сăри, шĕвĕскер, нимĕн чухлĕ те ӳсĕртмест, çапах та чуна уçса ярать. Вĕсем председательтен хулари тĕрлĕ предприятисенчен япаласем туянма шантару хучĕ илчĕç, «Сель-

электропа» тунӑ килӗшӗве алӑ пусрӗҫ. Инженер паян каялла килеймест иккен, ҫавӑнпа та вӑл Ятмана япала тиеме хӑйӗнпе пӗрле тепӗр ҫын илме хушрӗ.

— Пӗлетӗр-и, Ятман,—терӗ Левентей вӗсене ӑсатса,—эп сире лав та, ҫын та пама пултаратӑп, анчах турикассенчен илме май пур чухне мӗншӗн вӗсенчен илес мар? Пулӑшчӑр кӑшт.

— Ку сӑмаху санӑн тӗрӗс те пулӗ,—килӗшрӗ Ятман.— Шӑнкӑравла-ха эппин Катрам Иванӗ патне. Эпир станци ҫывӑхӗнче пулатпӑр, лавне унта ятӑр...

Тепӗр ҫур сехетрен лав, тусан кӑларса, Шупашкар ҫулӗ ҫинчи сӑрт хыҫне кӗрсе ҫухалчӗ. Катрам Иванӗ вӗсене питех те йӑлттам лаша панӑ иккен, кая юлса тухнӑ пулин те, вӑл хулана заняти пӗтичченех ҫитерчӗ. Малтанхи хут килнӗ чухне каласса татӑлнине пула Ятман илмелли япаласене хӑвӑрт илсе пӗтерчӗ, тӗттӗм пулнӑ ҫӗре вара яла каялла ҫитме ӗлкӗрчӗ.

— Строительсем, ак сире валли ҫӗнӗ япаласем,—терӗ вӑл киле саланма ӗлкӗреймен старикссене.—Тепӗр виҫӗ кунтан „Сельэлектро“пӗр машина хатӗр турттарса килет, вара монтажлама та юрать.

— Тӑвас пеккине часрах тӑвасчӗ, тепӗр эрнерен тыр вырма та тухмалла пулать пулӗ,—терӗ Сахрун мучи.

— Тыр вырма тухиччен платник ӗҫне пӗтересчӗ ҫав,— килӗшрӗҫ ыттисем те.

Ятман вара вӗсене хӑй темиҫе кун ӑшра тытса ҫӳрекен шухӑшне каласа пачӗ.

— Иртнӗ расра правлени ларӑвӗнче ӑс ҫитмен манӑн,— терӗ вӑл,— тӗрӗссипе ун пирки ҫавӑнтах каласса татӑлмалла пулнӑ. Ман шутпа пирӗн бригадӑна тыр вырнӑ чухне те кунтах ӗҫлеттермелле. Ака вӑхӑчӗ мар, сирӗнсӗр те ӗҫлӗҫ.

— Ҫӗмел тӑваканӗ кам пулать вара?—терӗ Мӗтри.

— Кунта нумай ҫын юлмасть—пирӗн колхозран пилӗкултӑ ҫын та Турикасран тепӗр виҫӗ ҫын. Ыттисем хирте пулаҫҫӗ. Ваттисем чылай вӗт-ха пирӗн...

— Ваттисем нумай, ҫамрӑксем, вӑйпитти ҫынсем сахал,— сӑмах тӗртсе хучӗ Сахрун мучи.

— Мана, паллах, хӗрарӑмсен командине яратӑр ӗнтӗ эсир?—терӗ Кӑтра Михала.

— Сана вӗсем патне, эс—бригадир.

— Сансӑр пуҫне—пӗтрӗҫ вара хӗрарӑмсем!

— Эсир килӗшетӗр пулсан, Левентейпе эпӗ хамах каласса татӑлӑп,—терӗ Ятман.—Ӗҫкунӗсем пирки ан пӑшӑрханӑр, ҫынтан кая илмӗр. Ҫапла, стариксем...

## XIV

Умра куҫпа виҫейми ыраш пусси сарӑлса выртать. Ырашӗ мӗнле тата—лашапа кӗрсе кайсан, пӗкӗ те пытанмалла. Инҫех те мар, лапамра, машина тикӗссӗн шатӑртатать,—кӑна Ятман

вырать. „Ёҫсӗр тунсӑхланӑ пулмалла ачи, кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлет, — тет ун машини сассине итлесе тӑракан Кӑтра Михала.— Ҫапла вӗт вӑл, нумай вӑхӑт тытман хыҫҫӑн сухапуҫ тыткӑҫӗ те ҫӑпала аври пекех, теҫҫӗ".

Унпа юнашар тӑракан Левентей ыраш пуссин тепӗр еннелле пӑхать, унта тепӗр бригада машини шатӑртатать.

— Санӑн та вӗренес пулать машинӑпа ӗҫлеме, Левентей,— тӗртсе калать Кӑтра Михала. — Ав, Ятман председатель чухне те машинӑпа тыр выратчӗ, халӗ те, ухсаххине пӑхмасӑрах, кирек мӗнле машинӑпа та ӗҫлеме пултарать.

— Мана кирлӗ мар, — тет Левентей.

— Мӗнле кирлӗ мар? — Пурӑнан пурӑнӑҫра тем те кирлӗ.

— Эп часах вӗренме каятӑп ак. Ман колхозра пурӑнас килмест.

— Ну, вӑл хӑвӑн кӑмӑлу.

Ҫакӑнпа вӗсен калаҫӑвӗ пӗр вӑхӑтлӑха чарӑнать. Вӗсем пӗр-пӗрне манса кайнӑ пек нумайччен ним чӗнмесӗр айккинелле пӑхса тӑраҫҫӗ. Иккӗшӗ те ҫӑварӗсене ыраш пӗрчи хыпнӑ, иккӗшӗн те хулпуҫҫисем ҫинче ҫап-ҫутӑ ҫурласем.

— Паллӑ ту, ак ҫак таран машинӑпа вырма юрать, — терӗ Михала.

Левентей пӗр пӗчӗк кӗлте вырса ҫыхрӗ те, ӑна ҫын ҫӳлӗш патак ҫине тӑхӑнтарса курӑнмалла лартса хучӗ. Вара вӗсем пусӑ тӑрӑх малалла кайрӗҫ. Кунталла килнӗҫемӗн ыраш сайраланса тата лутраланса пырать. Ӗнтӗ вӑл пилӗкрен те пӑртак ҫеҫ ҫӳлӗрех.

— Ҫакӑнта пӗлтӗр тислӗк тӑкмарӗҫ, — ӳпкелешрӗ Кӑтра Михала. — Ав тырри те начар пулчӗ.

— Кунта яланах начар пулать. Кӑмака ҫи вӗт, тӑмлӑ тӑпра.

— Тислӗк тӑксан, ҫемҫелет те ҫав, тислӗк тӑкмастпӑр.

— Пурпӗрех, — терӗ Левентей. — Пулман ҫӗре эс хуть те пин лав тислӗк тӑк.

— Ну, ҫук, ун пек мар, Левентей тусӑм, — терӗ Кӑтра Михала. — Йӑнӑшатӑн. Ҫӗр вӑл сӗтел ҫинчи турилкке пекех, мӗн хуратӑн унта—ҫавна илсе ҫиетӗн. Лайӑх вӑрлӑх акрӑн— лайӑх калча шӑтать, тислӗк нумай тӑкрӑн—тырри вӑйлӑ пулать.

Ҫапла калаҫса утса вӗсем улма пусси патне тухрӗҫ. Кунта вӗсен куҫне пачах урӑх тӗс, урӑх илем курӑнса кайрӗ. Улма ҫеҫкене ларнӑ май, пӗтӗм хир тем пысӑкӑш чечек пахчи пек туйӑнать.

— Пӑртак ҫумлӑрах, анчах ҫӗрулми аван ӳсет, — терӗ Кӑтра Михала. — Пӗлтӗр ҫӗрулми кӑшт ҫӗрме пӑхнӑччӗ, кӑҫал лайӑх пулассӑн туйӑнать-ха. Тата кӑларасса та кӑҫал, Левентей, иртерех кӑларма пуҫласчӗ.

— Иртерех пуçлăпăр. Анчах, Михала пичче, кăçал халăх сахалтарах-ха, епле кăларса пĕтерĕпĕр. Ытларах лартрăмăр вĕт...

— Ытларах лартни начар мар-ха. Çĕрулми пит кирлĕ япала, ăна ытларах лартмалла.

— Эс, Михала пичче, çав Петренко чĕкĕнтĕрĕсене кайса курнă-и?—терĕ Левентей, улма пусси çумĕнчи сип-симĕс ана çине кăтартса.

— Нумай пулмасть пире Ятманпа иксĕмĕре Петренко хăй илсе кайса кăтартрĕ. Лайăх ӳсет сахăр чĕкĕнтĕрĕ. Ятман тĕлĕнсе кайрĕ. Ку чисти Украинăри пек, тет.

— Ăста çынсем вĕт вĕсем, украинецсем, тем лартса ӳстерме те пĕлеççĕ.

Сăмах çинех вĕсене хирĕç ял енчен Людмила амăшĕ Петренко килет. Вăл Людмилăн ӳт тĕслĕ тутăрне хĕрле çавăрса çыхнă, аллине чукмар пек патак тытнă. Утасса хăй малалла ӳпĕнсе, пăртак сулланарах утать.

— Айтăр ман сахăр чĕкĕнтĕрне курма!—патне çитиччене кăшкăрчĕ вăл Левентейпе Кăтра Михалана.—Айтăр, айтăр!

— Мĕн курмалли пур ăна, вăл халех сахăр памасть вĕт!—тăрăхлам пек турĕ Михала.—Çав, выльăха çитерме туса парăн ĕнтĕ.

— Выльăха çитерме тата. Ху та аван çийĕн-ха кĕркунне.

— Мĕнле çиен ăна? Пирĕн сахăр савăчĕ çук вĕт. Малтан сахăр тума вĕренес пулать.

— Вĕрентетĕп. Пур япалана ăна çиме пĕлĕпĕр.

— Апла юрать хуть.

Петренко сахăр чĕкĕнтĕр ани патне çитсе вĕсене Украинăра сахăр чĕкĕнтĕрне мĕнле пăхса çитĕнтерни çинчен тĕплĕн каласа пама тапратрĕ. Хăй калас пеккине çавăрса калаймасть иккен те, ăнлантарас тесе аллисемпе çиларманĕ пек хăлаçланать.

— Сирĕн патăрта та пулать вăл. Пулмасть тетре? Куратăр ак. Епле хĕртет хĕвел, Украинăри пек. Ку çанталăкпа сахăр чĕкĕнтĕрĕ пулмасть-и? Куратăр ак. Шап-шар чĕкĕнтĕр пулать, ак çакăн пек.

Вăл аллисемпе чĕкĕнтĕр мĕнле шултра пулассине кăтартать. Левентейпе Кăтра Михала пĕрре Петренко çине, тепре чĕкĕнтĕр ани çине пăхаççĕ. Хăй те пăхма тем пекех интереслă вăл, ани те илемлĕ. Тĕлĕнсех каймалла—ун ани çинче пĕр çумкурăк та тупаймастăн, пĕтĕм ана шыв пек таса.

— Апла эс Украинăна каялла кайиччен пире сахăр тума вĕрентсе хăваратăн-ха?—терĕ Кăтра Михала.

— Вĕрентетĕп, вĕрентетĕп. Хам та сиртен нумай япала вĕренсе каятăп.

— Пирĕнтен хуть ытлашши нимех те вĕренеймĕн.

— О! вĕренмесĕр,—пуçне çĕклерĕ Петренко.—Кунта

халăх ĕçчен, вĕренме пулать. Нумай япалана вĕренме пулать.

— Апла питĕ аван. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç.

— Ыраш нуссин леш енче паçăрхи пекех тыр выракан машина кĕрлет. Ун сасси çухалнă пек пулать, пăртак çеç ўлесе тăрать, унтан каллех пĕтĕм вăйпа шатăртатма тытăнать. Машини те, кĕлте çыхакансем те кунтан курăнмаççĕ, анчах пĕр çухрăмра, сăртлă вырăнта, çурлапа выракансен пуçĕсем мĕкĕлтетни аванах курăнать.

Ятман паян иртенпе чылай пысăк лаптăка вырса пăрахрĕ ĕнтĕ. Лашисене кантарать те тата машинине çу ярать те, татах ĕçлеме тытăнать. Ун хыççăн темиçе хĕрарăм васкаса кĕлте çыхса пыраççĕ. Вĕсен хушшинче — çурри ытла хĕрачасем, çавăнпа ĕç кал-кал каять.

— Людмила, мĕнле, пилĕк ыратакан пулмарĕ-и-ха сан? — терĕ Укахви, ун патне кĕлте хума пырса.

— Çук-ха, сан мĕнле? — хăйĕн пекех тирпейлĕ кĕлтине çĕклесе каларĕ Людмила. Унтан вăл пĕр пилĕк утăмра шатăртаттарса иртсе каякан Ятмана темскер кăшкăрчĕ. Те вăл кăшкăрнине илтсе, те илтмесĕрех Ятман вĕсен тĕлне çитсен лашине тăпах чарчĕ те хĕрсем патне пычĕ.

— Шыв ĕçтерĕр-ха, хĕрсем, ăш пиçсе кайрĕ, — терĕ вăл.

— Ман шыв ăшăнса кайнă, сан пур-и чĕрессўнте, Людмила? — терĕ Укахви. Людмила пĕрре Ятман çине, тепре Укахви çине кулăшла пăхса илчĕ, унтан тин „халех" тесе хучĕ. Вăл çурлине тĕм çине пăрахса пĕчĕк ача пек çăмăллăн каялла чупса кайрĕ, пĕрре куç хупса иличчен унтан чĕресне йăтса та килчĕ. Ятман ун аллинчен чĕресне илчĕ те, Людмила çине пăха-пăха кулса, васкамасăр ĕçрĕ.

— Мĕн кулатăн эсĕ, Ятман?

— Ахалех, — терĕ Ятман, — Ман сантан сăра ĕçмелле-ха. Астăватни, пĕркун укăлча патĕнче тĕлпулсан, эс мана сăра ĕçтерме пулнăччĕ. Ху ĕçтермерĕн те.

Людмила шур шăлне кăтартса ахăлтатса кулса ячĕ.

— Эс ун чухне мана мĕншĕн улталарăн? Кала-ха, мĕншĕн ав çав ял ачи тесе суйрăн? Эп вăл чăнах калать тесе. Кай, ан юрат эс ăна, Укахви, суеççĕ вăл. Эпĕ те юратмастăп.

— Эсĕ мана ахаль те юратмастăн. Эсĕ... Алексее юрататăн.

— Ăна юратма пулатчĕ те, кайрĕ çав, — хуйхăрнă пек каларĕ Людмила.

— Халь апла каллех каччăсăр тăрса юлтăн?

— Каччăсăр.

— Ан суй.

— Ак, Укахвирен ыйт. Никам та çук.

— Ну, апла пулсан, эп сана питĕ лайăх каччă тупса паратăп. Юрать-и?

— Тупса пар-ха, тупса пар-ха, — çине тăрса каларĕ Людмила.

— Юрĕ, юрĕ. Ну, эп каллех вырма пуçлатăп. Çыхăр вăйлăрах, ĕлкĕрсе пырăр.

Ятман вĕсене хăпартлантарса машина патнелле утрĕ. Вăл каçхи апат вăхăчĕ çитиччен пĕр канмасăр ĕçлерĕ. Çынсем кăнтăрлахи апат турĕç, пăртак ларса канчĕç, çамрăкраххисем уçăлмалла шыва кайса кĕчĕç. Ятман çав-çавах лашисене хўме пек çўлĕ ларакан ыраш хĕррипе хăваларĕ. Каçхи апат вăхăчĕ çитсен вара вăл васкамасăр машина çинчен анчĕ те, пĕр ачана лашасене апатлантарма хушса, хăй хăмăл çинчен утса вырса пăрахнă хирĕн тепĕр хĕрринелле кайрĕ. Малтан ун куçĕсем ним çинче те чарăнса тăмарĕç, ыраш пуссин илемĕпе çеç киленсе пычĕç, кайран вăл çывăхрах çĕмелсем йышлăн ўссе ларнине асăрхарĕ, юлашкинчен ун куçĕсем ура айĕнчи сап-сар хăмăл çине ўкрĕç. „Ытлашши çўлтен мар-и?— шухăшласа илчĕ вăл.— Çук, çўлтен мар. Ўпкелешме май çук, машина тикĕс вырать". Сасартăк вăл пĕр вырăнтах пилĕк-ултă пучах выртнине курах кайрĕ. „Ку мĕн тата? Пучаха мĕншĕн пухмаççĕ вĕсем?" Утнăçемĕн ăна пухман пучахсем тата та йышлăн курăнакан пулчĕç, Ятман вара кĕлте çыхакансене вăрçмаллипех вăрçса илчĕ.

— Пучах нумай юлать, юлташсем!— терĕ вăл инçе те мар апатланса ларакан хĕрарăмсене.

— Ăçта?— пĕлмĕш пулчĕç лешсем.

— Эсир çыхнă çĕрте.

— Çук, эпир пĕр пучах та хăвармастпăр.

— Хăваратăр çав, нумай хăваратăр.

Ятман пĕшкĕнчĕ те, çĕртен пĕр тăруках темиçе пучах илчĕ.

— Куратра?

— Вăл пĕр çĕрте кăна. Ытла эс тата— пĕр пучах та хăварттарасшăн мар.

— Пĕр çĕрте кăна мар çав,— терĕ Ятман.— Ак, ĕненместĕр пулсан, тĕрĕслесе пăхатпăр. Кил-ха, Людмила, ман патака тыт.

Людмила, вăл мĕн хушассине пĕлмесĕр, ура çине çĕкленчĕ те Ятман патне пырса тăчĕ.

— Ак çак патака кирек те ăçталла ывăтса яр,— тыттарчĕ ăна хăйĕн кукăр патакне.

Людмила патака пĕтĕм вăйпа ывăтса ячĕ. Кăна кура хĕрарăмсем каçса кайсах кулма пикенчĕç.

— Ну, хĕрача! Епле ывăтать. Халь ху кайса ил ĕнтĕ!

— Çук, айтăр пĕрле каятпăр. Çав патак ўкнĕ çĕрте темиçе тăваткăл метр виçсе илетпĕр те, шутлатпăр— миçе пучах юлать,— терĕ Ятман. Вара хĕрарăмсем патак ўкнĕ çĕре чупса кайрĕç. Вĕсем ку вырăнта пĕр тăваткăл метрта тăхăр пучах тупрĕç.

— Куратра,— терĕ Ятман.— Халь шутлăр ĕнтĕ: гектарта миçе пучах юлать, миçе пăт тырă юлать? Юрамасть ун пек,

тăвансем. Эсир хăвăр тыррăра выратăр пулĕ вĕт, камăнне те пулин кĕрĕшсе вырмастăр пулĕ?

— Ара, пĕр тăкăнмасăр мĕнле пултăр-ха, — терĕ пĕр хĕрарăмĕ. — Кашни пĕрчĕшĕн çĕре пĕшкĕнейместĕн ĕнтĕ, Ятман. Тăкăнас пекки тăкăнатех вăл.

— Кун чухлĕ тăккалани хăвра сăтăр туни пулмасть-и ара? Мĕн, сире ўкĕтлемелле-им? Ман шутпа, эсир хăвăрах ăнланатăр, ўкĕтлеме кирлĕ мар. Хăвăрах шутлăр-ха: вăрçă вăхăчĕ, упăшкăрсем фронтра... Вĕсене камăн тăрантмалла?

Нумайччен калаçрĕ Ятман хĕрарăмсемпе хăйĕн патакки çине таянса. Калаçнă çемĕн ăшра шутла-шутла илчĕ: „Ах, юратмаççĕ вĕсем вĕрентнине! Вăрçаççĕ ĕнтĕ: пучах, пучах... Тупнă калаçмалли. Хăйсем тўсме çук нумай тăккалаççĕ. Çук, юратмасан та калас пулать. Пĕрре каласан, тепре каласан, çын хăйĕн ĕçне хăй тĕрĕслекен пулать, лайăхрах тума тăрăшать".

Хĕрарăмсен ку ушкăнĕнчен уйрăлса маларла утнă чухне те вăл çавăн çинченех шутласа пычĕ: „Йывăр япала вăл çынна тўрĕ кăмăлпа ĕçлеме вĕрентесси, анчах вĕрентес пулать. Çын колхозри ĕç çине хăйĕн ĕçĕ çине пăхнă пек пăхтăр. Ăнланччăр: вăрçă. Тăккалама юрамасть, начар ĕçлеме юрамасть. Хăшпĕрисем çиленĕç. Çиленччĕр, çапах та вĕрентес пулать, Левентей пек çын хўттинче ларма, мĕнпур шăтăк-путăка курмасăр тăма юрамасть.

## XV

Сехре Иванĕ паян питех те кая юлса вăранчĕ. Ĕнтĕ хĕвел чылай çўле хăпарнă, урамра ачасем кăшкăрашаççĕ, — вĕсем те выляма тухма ĕлкĕрнĕ, — картишĕнче хăй выççине пĕлтерсе качака çухăрать. „Мĕн пит нумай çывăрнă вара эпĕ паян?—ыйтрĕ хăйĕнчен-хăй Сехре. — Конюхран кăларнă пирки шухăшлакаласа выртрăм, çавăнпа ывăнса ним туйми çывăрса кайнă пулас". Качаки тепре çухăрса ярсан, вăл уншăн та ўпкелешсе илчĕ: „Качакана та кĕтĕве ярайман, халь килтех кун каçать ĕнтĕ. Ун валли йытпăрши тухса çăлас пулать". Вăл мĕнпур пек тумтирне тăхăнчĕ те, пăртак апат çырткаласа, картишне тухрĕ.

— Халех эп сана курăк татса парап, ай, мĕскĕн, — ачашларĕ вăл хăй патне пырса йăпшăннă качакине.

Пахчана тухсан, ун хăлхине тыр выракан машина кĕрлевĕ пырса кĕчĕ. „Паян тыр вырма та тухса кĕмелле пулĕ, унсăрăн вăрçĕç тата" — шухăшларĕ вăл. Тыр вырма каясси пирки ăна Укахви ĕнер те, паян та килсе каланăччĕ, анчах Сехре ирхине ирех тутлă ыйхине çĕнтерсе вырăн çинчен тăма вăй тупаймарĕ. Çак кунсенче ытларах наянланма ăна хăйне конюхран кăларнишĕн кутăнланни те пулăшрĕ пулас. „Темле ĕçлесен те, мана вĕсем юратмаççĕ-юратмаççех. Мĕн пит ир тухма тăрăшмалла вара манăн?" терĕ.

Вӑл пахчаран икӗ ҫӗкӗтем курӑк йӑтса кӗчӗ. Анчах та ку качакана кун каҫма ҫитмест, тесе шутларӗ, ӗнер хирте ӳкӑлчаран инҫе мар лайӑх курӑк ҫулса хӑварнине аса илсе, вӗрен илсе унталла утрӗ. Анчах Сехрешӗн инкек кашни утӑмрах тупӑнать мӗн: вӑл ҫулса пӑрахнӑ курӑк патӗнче шӑп кӑна Ятманпа Левентей калаҫса тӑраҫҫӗ. „Ай, аҫа ҫапманӗ, — терӗ хӑй ӑшӗнче Сехре Иванӗ, — каллех вӗсене тӗлпулмалла пулчӗ. Ним тума та ҫук, каялла каяймӑн, ҫавсен патнех пырас пулать ӗнтӗ."

— Ҫакӑнта ӗнер качака валли тесе курӑк ҫулса пӑрахнӑччӗ те, — йӑпшӑнса пычӗ вӑл тем ҫинчен тавлашса тӑракан Левентейпе Ятман патне. Ятман ун ҫине куҫ шуррипе ҫеҫ пӑхса илчӗ (кӑна вӑл лайӑх асӑрхарӗ), Левентей (тем тесен те, лайӑх ҫав Левентейӗн кӑмӑлӗ) ҫийӗнчех сӑмах хушрӗ.

— Итле-ха, Иван пичче. Темскер Кӑтра Михала унта Сехре темиҫе кун тыр вырма тухмасть тесе ӳпкелешет. Тухас пулать. Ӗҫ ҫинче килте ларни килӗшмест вӑл.

— Пӗлетӗп-ха, Левентей, — терӗ айӑплӑ сын сассипе Сехре. — Ӑшпа аптрарӑм-ха, ҫавӑнпа тухаймарӑм. Паян тухатӑп ак.

— Паян тухать ак вӑл кӑнтӑрла иртсен, — сӑмах хушрӗ Ятман.

— Ара ман качака пур вӗт-ха, ӑна тӑрантас пулать. Ак курӑк парса хӑваратӑп та каятӑп. Халь тыр вырма тин тухнӑ-ха, ӗҫлемелӗх пур.

— Пурте сан пек ӗҫлесен, пукравччӗнех ыраш вырӑпӑр-ха, — тата сивӗрех сасӑпа, хытӑраххӑн каларӗ Ятман.

— Эй, вырнӑ, халиччен те вырнӑ, эс ҫук чухне те вырнӑ, — парӑнмарӗ Сехре. — Нихҫан та пукрава ҫитермен.

Унтан вӑл, Ятман тата мӗн калать-ши тесе ун еннелле темиҫе хутчен ҫаврӑнкаласа пӑхрӗ те, курӑк ҫыххине хулпуҫҫи ҫине ҫӗклесе хурса, ялалла мекеҫленчӗ.

— Ак ҫакӑн пеккисемпе ытлашши ӑш кӑмӑллӑ пулмасан та юрать, — терӗ Ятман, леш чылай аякка кайсан. — Вӗсене халӑх умӗнче ытларах намӑслантармалла, ҫирӗпрех сынсен аллине памалла.

Тата икӗ кунтан Сехре Иванӗпе тепӗр инкек сиксе тухрӗ. Ку ҫапла пулса иртрӗ. Кӗтерне инке ирхине, ҫутӑлас умӗн, фермӑран килне таврӑннӑ пулнӑ. Ҫул ҫинче вӑл хӑйӗн сывӑхӗнче такам пулӑшу ыйтса майӗпен кӑшкӑрнӑ сасса илтех кайнӑ. Чарӑннӑ та, сын ӑҫта иккенне пӗлес тесе, итлеме тытӑннӑ. Чылай итлесе тӑнӑ хыҫҫӑн ҫеҫ вӑл ку сын ҫул хӗррипчи ишӗлнӗ пураллӑ пусӑран кӑшкӑрнине ӑнкарса илнӗ.

— Кам унта? — ыйтнӑ вӑл, пусӑ патне пырса тӑрса.

— Эпӗ, — тенӗ сын хӑйӗн сассинчен хӑй хӑраса. — Эпӗ, Сехре Иванӗ.

— Мӗн туса ларатӑн эсӗ унта ҫӗрхута?

— Ан та кала, Кӗтерне...

— Ну, тух часрах. Е эс тухма пултарăймасна?

— Тухаймастăп çав, — тенĕ Сехре. — Пулăш-ха эс мана. Ӳксе урана сиктертĕм пулас та, хускалма та çук.

Малтан Кĕтерне инке Сехре çинчен ним шутлама пĕлмерĕ. Мĕнле анса кайнă вăл унта? Ӳсĕр пулман пулĕ-çке? Кунта пурасăр пусă пуррине кашни пĕчĕк ачах пĕлет вĕт? Вăл, килне кайса вĕрен илсе килчĕ те, ун пĕр вĕçне Сехрене пачĕ.

— Ме, тыт хытăрах, эп сана хăпартатăп. Персе анвă ан пул, асту.

Вăл Сехрене пĕтĕм вăйран мекĕрленсе туртрĕ, вара пысăк асаппа çĕклесе хăпартрĕ.

— Ӳсĕр пулман пулĕ вĕт эсĕ?

— Ӳсĕр пулман. Тĕттĕм те, антăм кайрăм. Юрать шыв çук унта...

Сехре аран-аран çаврăнкаласа тумтирне шаккакалама тапратрĕ. Çавăнтах кĕтмен çĕртен ун тумтирĕ ăшĕнчен темле япала шапăрах тăкăнса анчĕ.

— Ку мĕн сан? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Кĕтерне инке.

— Тыр сăвăрнă çĕрте пултăм та, тырă кĕрсе тулнă.

Ку Кĕтерне инкешĕн пĕрре те ĕненмелле пулмарĕ. Вăл çийĕнчех тем тавçăрса илсе унтан татăклăн ыйтрĕ:

— Сан спичка пур-и?

— Пур. Мĕн тума?

— Кӳр-ха.

Сехре кĕсъинчен спичка кăларса пачĕ. Кĕтерне инке спичка йĕннине пĕр-иккĕ сĕрчĕ те, çал тавраш çутăлса кайрĕ. Вăл спичка тытнă аллине пусса аялалла антарчĕ, хăй пĕшкĕнсе куçĕсемпе пусă тĕпĕнче темскер шырарĕ. Унтан каллех татăклă ыйту пачĕ:

— Мĕн вырттать унта сан? Мĕн йăтса килеттĕн эсĕ?

Кĕтерне инке спичка çутса тĕрĕсленĕ хушăра сивчир ернĕ çын пек чĕтресе тăракан Сехре мĕскĕн сасла аран-аран: —Хыçрам илсе килеттĕм, çавă вăл, — тесе хучĕ.

— Мĕншĕн илсе хăпармарăн эсĕ ăна? Мĕншĕн хăвартăн?

— Ара, йăтса хăпараймăн, терĕм. Кайран хам анса илĕп, терĕм.

— Ну, апла пулсан, халех каялла ан та, илсе хăпар. Ме, тыт...

— Хăпартаймастăн эс апла, кайран хамах илсе хăпарăп. Итле-ха, Кĕтерне...

Вăл ӳкĕтлесе каланинчен Кĕтерне инке кунта ĕç таса маррине туйса илчĕ. Вара тата та хытăрах:

— Аннă пул часрах! — терĕ.

Сехре Иванĕ, кутăнланса, турткаланса тăнипе кунта ним те тума май çуккине сиссе, пусалла анса кайрĕ. Сехре тухсан, Кĕтерне инке аллине миххе чиксе ярсанах ку хыç-

рам мар иккенне туйса илчĕ. Ун аллине шултра та таса ыраш юхса кĕчĕ.

— Çук, суятăн, Иван, ку сан лайăх тырах.

— Лайăх тырри-масарĕ. Авăртма тесех илтĕм çав ĕнтĕ те... Килте пĕр пĕрчĕ тырă çуккă та.

— Илтĕн те, килне илсе çитерейменĕн?

— Инкек мар-и, Кĕтерне... Кĕтерне, эс этем пул ĕнтĕ, эп сантан турăран ыйтнă пек ыйтатăп... Ан калаçса çӳре. Вăрланă, тейĕç.

— Ара эс ахаль те вăрланă вĕт-ха? Ак эп сэна тытатăп та правленине илсе каятăп.

— Ан ухмахлан, Кĕтерне,—тархасларĕ Сехре.—Кунта пĕр икĕ пăта яхăн пулать. Пĕр пăтне ил хуть, шел мар...

Ку сăмахсене илтсен, Кĕтерне инке çав тери тарăхса кайрĕ, вăл чышкисене чăмăртарĕ те, Сехрене халь-халь тӳпелесе тăкас пек, ун çинелле тапăнса пычĕ.

— Эс мĕн мана пĕр пăт тырă вĕçне юлнă тетнем? Ы-ых, усал! Сан тыррупа варланап пулать! Эс ăна, наян, ĕçлесе илейместĕн те, вăрлама тытăннă.

Вăл ăна тата тем те пĕр каласа намăслантарса пĕтерчĕ. Çапах та хăй Сехрене колхоз правленине илсе каймарĕ. „Кай, путсĕр, санпа çӳре тата çĕрхута ыйăха татса" терĕ те, килне ячĕ. Тепĕр кунне вăл мĕн пулса иртни çинчен йăлтах правленинче каласа пачĕ.

## XVI

Пĕр-ик кун çумăрлă тăнă хыççăн, çанталăк каллех уяртса пăрахрĕ. Çынсем çак икĕ кун хушшинче хăмла çырлине çӳрерĕç, мунча хутса кĕчĕç, килти хăшпĕр ĕçсене тирпейлерĕç, паян вара, таврара нимле çумăр пĕлĕчĕ те çуккине курă, бригадирсем пырса каласса кĕтмесĕрех хире тухрĕç.

Кăтра Михала икĕ старикпе çумăрлă кунсенче витнĕ итеме юсарĕ, каç кӳлĕм çеç, мĕнпур ĕçсенчен пушанса, „кĕлтесем йĕпенсе выртмаççĕ-и-ха" тесе хире кайрĕ. Вăл çĕмелсене тĕрĕслерĕ, чылай кĕлтесене, шăтса ан каяччĕр тесе, çавра-çавра хучĕ, таврăннă чух çула май çуртырри пуссине кĕрсе тухрĕ. Ыраш вырса пĕтмен-ха, ĕнтĕ пăрçа çулмалла пулнă, урпа та йăлтах пулса çитнĕ. „Пăрçана çавапа çулăпăр, урпапа тулла çурлапах вырма лекет"—шутласа илчĕ вăл. Кăтра Михалана каллех ĕç тупăнчĕ—ун тепре çавасем туптас пулать. Левентей тата ăна колхоз картишĕнче ларакан темиçе урапана юсама хушнăччĕ. Унпа та тепĕр ик-виç кун ăшаланас пулать. „Юрĕ-çке,—тет Михала,—эпир Сахрунпа юсамасан, кам юсатăр ĕнтĕ. Ваттисем ытла ватăлчĕç, çамрăксем ун пек ĕçе пултараймаççĕ. Çавăнпа пурне те пирĕн тăвас пулать". Ак халь вăл хире тыр вырма та кайман, çапах та çурла илнĕ (тен, мĕн те пулин касса илмелли пулать). Итем çи-

не курма кăна, ĕç мĕнле пынине пĕлме кăна каять, çапах та аллинче пуртă (тен, мĕн те пулин юсаса хăвармалли пулать). Чăнах та, ун валли кашни утăмра ĕç. Пысăк хуçалăхра вăл çĕмрĕлет, ку çĕмрĕлет, ăна юсамалла, кăна юсамалла.

Яла Кăтра Михала тĕттĕм пулас умĕн çеç çаврăнса çитрĕ. Яла çитсен те вăл чи малтан киле кĕмерĕ, правленине кĕрсе тухрĕ. Вăл пырса кĕнĕ çĕре правленинче тин çеç хиртен таврăннă хĕрсем кĕпĕрленсе тăратчĕç. Хĕрсене курсан, Кăтра Михала халь хăй асăрханă типсе кайма пуçланă урпана аса илчĕ.

— Аван-и, савнă туссем?—яланхи пекех шÿтлесе сăмах хушрĕ Михала хĕрсене.

— Аван-ха, каччă,—терĕ пĕри. Ыттисем, унпа килĕшнĕ пек, хихиклесе кулса ячĕç.

— Хĕрсем, сире тупмалли юмах парам-и?

— Кала, кала, Михала пичче!—кăшкăрчĕç хĕрсем.—Халех пĕлетпĕр.

— Акарин те макарин, ыран-паян килмесен, ÿкетĕп те вилетĕп. Çав мĕн вăл, пĕлетре?

Хĕрсем, кам малтан тупса каласси не кĕтнĕ пек, пĕр-пĕрин куçĕсенчен пăхкаласа илчĕç, анчах никам та нимĕн те чĕнмерĕ.

— Пĕлеймерĕр? Вăл—урпа. Пирĕн урпа типсе кайнă, тăкăнма пултарать. Кĕçĕр ушкăнпа каймастăр-и?

— Тĕрĕс, кĕçĕр урпа кайса вырас пулать, хĕрсем,—терĕ председатель пÿлĕмĕнчен тухакан Куççăр Куçма та.

— Çук, каймастпăр,—терĕ паçăрхи сасах.—Михала пичче пырсан, каятпăр, вăл пымасан, тем тусан та каймастпăр!

— Кайăр ĕнтĕ, эпир сире пĕр-ик каччă парăпăр,—терĕ Михала.—Каччăсем пырсан, каятăр вĕт, Людмила?

— Эп каятăп.

— Ыттисем?

— Каймастпăр. Мĕн вăл пире пĕр-ик каччă! Кирлĕ мар вĕсем пире! Пире Михала пичче кирлĕ!

Тем пек турткалансан та, Кăтра Михала хĕрсенчен вĕçерĕнеймерĕ, юлашкинчен вара, аптранă енне, пыратăп тесе сăмах пачĕ.

— Юрĕ-çке ĕнтĕ, хамах пырăп. Эсир никама та мар, мана юрататăр пулсан, епле пырас мар-ха?

Килне таврăнсан, каçхи апат тунă хушăра, Михала пичче кĕçĕр хăй хĕрсемпе тыр вырма каясси çинчен çемьине те пĕлтерчĕ.

— Ан кĕвĕç, карчăк, кĕçĕр хĕрсене вăйлă шуйăхтаратăп,—терĕ вăл Кĕтерне инкене.

— Укахви, эс пăхкала унта, вăл ытлашши ан алхастăр,—терĕ лешĕ.

— Вăл мана чĕнмест-çке-ха.

— Çавăн çинчен шутлатăп-ха,—терĕ Михала пичче, хайĕн

сарă кăтра çӳçне кăтăр-кăтăр хыççа.—Те илсе каяс сана, те илсе каяс мар?

— Ан илсе кай, канлĕ çыврам,—терĕ Укахви.

— Çук, илсе каяс пулĕ, тетĕп. Унсăрăн урпа вырайМасăр юлатăн, кĕçĕр урпа вырма каятпăр.

— Урпа вырмасăр юлни ярмăрккăран юлни мар-ха вăл!

— Вырмасан, пăттине те çиейместĕн.

— Апла пулсан, пыратăп, пыратăп. Пăттинчен ытла урпа кĕркунне сăра тума кирлĕ.

XVII

Çырмара шăнкăртатса шыв юхать. Шывĕ тарăн мар, хăшпĕр çерте чĕркуççи тарăнăшĕ те çук пулĕ, анчах çăл шывĕ пек тăрă. Ятман икĕ вĕрлĕхрен тунă каçма çинчен пĕшкĕнет те, аялта хăйĕн сăнне курать. Ун айккинче катмар йăмрасем пуçхĕрлĕн ларнă пек курăнаççĕ. Пăхма шывĕ сивĕ пек, алла чиксе пăхатăн та, пĕрре те сивĕ мар. Килте пит çунă пулсассăн та, тепре çăвăнас килет. Каçмаран аяларах ачасем çырма ик айккипе пĕве тума тытăннă. Варрине пĕвеме вăй çитереймен те, унтан шыв илемлĕн шăнкăртатса юхса выртать. Вăл хытă шавламасть, таврара темле пăртак хурлăхлăрах юрă янранă пек илтĕнсе тăрать. Юррин сăмахĕсем те çук, кĕвви çеç пĕр чарăнмасăр янрать. Сасартăк Ятман хăлхине тепĕр юрă, таçтан аякран янраса килекен юрă кĕрсе каять. Кăна çынсем юрлаççĕ, ку юрă хиртен килет. „Хĕрсем халĕ те кĕмен-ши урпа вырса?—тет Ятман.—Çавсем юрлаççĕ. Эх, юрри!" Хĕрсем пĕр юрă хыççăн тепĕр юрă пуçлаççĕ. Вĕсенчен хăшпĕрне Ятман вăрçа кайиччен илтнĕ, хăшпĕрисем çĕнĕ юрăсем. Ятман вырăнтан хускалмасăр итлесе тăрать. Куçĕсем ун—тин тухнă хĕвел урисемпе кĕмĕл тĕслĕн çутăлакан шыв çинче, пĕтĕм тимлĕхĕ—хирте. Хутран-ситрен юрăпа пĕрле каллех шыв шăнкăртатса юхни илтĕнсе каять, вара юрăпа шыв юххи пĕр илемлĕ кĕвĕ пулса пĕрлешеççĕ.

Çырма хĕрринчен сăрта хăпарсан, Ятман юррăн сăмахĕсене те уйăракан пулчĕ. Вăл пĕлекен сăмахсемех, çывăх та ăнланмалла сăмахсем. Ак юрă чарăнчĕ. Пĕр-ик минут хĕрсем нимле юрă пуçлама аптраса тăчĕç курăнать. Тен, çĕрĕпе юрласа юррисем те пĕтрĕç пуль ĕнтĕ? Çук, хĕрсен виçĕ кун юрласан та юрă пĕтес çук. Унччен те пулмарĕ, вĕсем паçăрхинчен хулăмрах саспа Шевченкон „Реве та стогне Днiпр широкий" юррине пуçларĕç. Кăна вĕсене Людмила вĕрентнĕ ĕнтĕ. Кунта Ятман чăтса тăраймарĕ, Днепр хĕрринче çапăçнă чухне ялан çак юрра юрланине аса илчĕ те, хĕрсем хыççăн майĕпен хăй те тăсрĕ:

Реве та стогне Днiпр широкий,
Сердитий вiтер завива.
Додолу верби гне високi,
Горами хвилi пiднiма...

Юрӑ ҫывӑхарнӑҫемӗн ҫывхарса пычӗ, кун тӑрӑх Ятман хӗрсем ӗҫ пӗтерсе киле таврӑннине чухласа илчӗ. „Ах, ӗлкӗрейменрӗм, ман часрах машинӑна кӳлсе вӗсене хирӗҫ каймаллаччӗ",—терӗ хӑйне-хӑй.

Унӑн ӗҫрен таврӑнакан савӑнӑҫлӑ хӗрсене шӑп ҫав сӑрт ҫинче, яла кӗнӗ ҫӗрте тӗлпулса кӗтсе илес килчӗ,—вӗсем юрласа аялалла анчӑр, эсӗ машинӑпа ҫӳлелле хӑпар. Епле вӗсем хурсем пек карталанса килеҫҫӗ! Ав малта симӗс саппунлӑ ҫӳлӗ хӗрача пырать, таҫтанах паллать ӑна Ятман—Укахви. Унпа юнашар Людмила ярӑнса пырать. Ятман ун ҫине пӑхас мар тет, Укахви ҫине кӑна пӑхас тет, анчах куҫсем ун ҫине те, кун ҫине те пӑхаҫҫӗ. Хӗр ҫинчи симӗс саппун хитре, анчах тин тухнӑ хӗвел ҫинче Людмилӑн хӗрлӗ-чӑпар тӗслӗ кӗпи тата та хитререх. Вӑл ыттисем хушшинче уйрӑмӑнах палӑрса тӑрать, куҫа ытларах илӗртет. Ятман аса илес мар тенӗ ҫӗртенех ӑна укӑлча патӗнче тӗлпулнине аса илет. „Чечек вӗт вӑл, ҫурхи чечек!—тет Ятман.—Хӑйне тыткаланинчен илсен, ача кӑна-ха, анчах пӗвӗнчен пӑхсан—хӗр, ҫитӗннӗ хӗр. Юратма аптрамалла-ха ӑна, ҫамрӑк, анчах, пӑхатӑн та, ҫак хавасла хӗрачана юратмасӑр чӑтаймастӑн". Хӑй те пӗлмест, Людмила ҫинчен шухӑшласан темшӗн куҫ умне Липа тухса тӑрать. Сӑнран та, пӳрен те вӗсем пӗр евӗрлех, лешӗ аслӑрах ҫеҫ, ҫавӑнпа вӑтанарах парать, Людмиларан лӑпкӑрах, тирпейлӗрех, ӑслӑрах. Ҫамрӑкрах чухне ун пекех шухӑччӗ ӗнтӗ. Вӗҫӗмсӗр ыйтусем паратчӗ, куҫа кӗретчӗ, Турикасра ун кулли кӑна янӑраса тӑратчӗ.

Хӗрсем хыҫҫӑн хиртен каччӑсем таврӑнаҫҫӗ. Вӗсен хушшинче тӗп „каччи" те—Кӑтра Михала та пур. Вӑл ҫамрӑксене темле кулӑшла япала каласа парать, лешсем ун йӗритавра пуҫтарӑнса тимлӗн итлесе пыраҫҫӗ. „Ай, матур старик,—тет Ятман,—хӑй вунӑ ҫынна тӑрать. Тытать те ертсе каять халӑха. Вӑл калани пуриншӗн те закон. Вӑл бригадир ҫеҫ, председатель те мар, ҫапах та ӑна колхозӗпех итлеҫҫӗ, пӗлеҫҫӗ: вӑл—хуҫа, вӑл—асли, Кӑтра Михала каланине тумасан май ҫук".

Яла ҫитсен хӗрсен ушкӑнӗ киле таврӑннӑ хур кӗтӗвӗ пек саланса кайрӗ. Пӗрисем сулахаялла, теприсем сылтӑмалла пӑрӑнчӗҫ, чылайӑшӗсем ҫырманалла анчӗҫ.

— Ытлашши нумай ан ҫывӑрӑр, хӗрсем, пӑртак ҫеҫ куҫ хупса илӗр!—кӑшкӑрчӗ пӗри.

— Кӑнтӑрлаччен ҫеҫ ҫывӑратпӑр!—терӗ Укахви.

Урӑх Ятман ним те илтмерӗ, вӑл, машина ҫине ларса, ҫӗрле лайӑх каннӑ лашисене хирелле хӑваларӗ.

## XVIII

Турикассем тыр вырма хӑйсен кӳршисенчен икӗ кун кая юлса тухрӗҫ. Ырашпа ҫуртыррине Атӑлкасси колхозӗпе пӗр харӑс е унтан маларах та пуҫтарса кӗртме шутласа хувӑ

Катрам Иванĕ Липăран лешсем ыраш вырма тухни çинчен пĕлсен пĕççисене шартах çапрĕ.

— Эпĕ пĕрлех тухасшăнччĕ,—терĕ вăл.—Епле-ха пирĕн ниçта та ыраш пулса çитмен? Пĕр гектар та пулин...

— Ĕнер иксĕмĕр пăхса çÿрерĕмĕр-çке,—асаилтерчĕ ăна Липа.

Çапла, ĕнер вĕсем Липăпа пĕтĕм хире пăхса çаврăнчĕç. Тырри талккăшĕпех лайăх, тен, Атăлкасси колхозĕннинчен те вăйлăрах пулĕ, анчах вырма çемçерех. Паллах, паян та май çук. Атăлкассем паян икĕ бригадăпа выраççĕ.

— Ан хăра, Иван Карпыч, эпир вĕсене хăваласа çитетпĕр,—лăплантарчĕ Липа.—Иртнĕ çул та улма кăларма пиртен маларах тухрĕç, эпир пĕтертĕмĕр, вĕсен юр айне юлчĕ.

— Кăçал ун пек ĕçлес çук вĕсем,—терĕ Катрам Иванĕ.—Кăçал атăлкассемпе ăмăртма йывăр пулать.

Çапах „Çĕнĕ пурăнăç“ колхоз председателĕ кÿршисемпе ăмăртас шухăша пăрахмарĕ. Вăл ĕнтĕ ака вăхăтĕнчи пек кашни кун уя хăйĕн тахçанхи бинокльне çакса тухма тытăнчĕ. Хăпарать те ирех сăрт çине, Атăлкасси хирне лаппăшпех пăхса çаврăнать. Каç кÿлĕм ăна колхозниксем ку сăрт çинче тепре кураççĕ. Нумайччен тăрать вăл çапла, кÿршĕсен тырă мĕнле пулнине пĕлес тесе çĕмелсене шутлать, вырмалли тата миçе куна çитессине куçпа чухăмăн виçет. Кун хыççăн бригадăна пырать те, ахаль те хĕрсе ĕçлекен хĕрарăмсене васкатма пăхать.

— Ан васкат, хамăр та туятпăр,—тет ăна Липа.—Чунтан тăрăшатпăр. Хамăр председателе намăса хăвармастпăрах ĕнтĕ.

Ку сăмахсем старик кăмăлне çемçетсех яраççĕ.

— Çапла, çапла,—тет вăл.—Тăрăшас пулать. Маларах пĕтерсен хамăршăн та, патшалăхшăн та аван.

— Сăнатăн, сăнатăн эс, Иван Карпыч, кÿршĕсем епле ĕçленине, договор туса ăмăртăва чĕнместĕн,—терĕ пĕр хулăмрах сасла хĕрарăмĕ кĕлте çыххи тунă хушăра. Ку шухăша ыттисем те ырларĕç.

— Чăнах, чĕнес пулать вĕсене ăмăртăва!

— Договор тăвас пулать!

— Пурте алă пусатпăр!.

Катрам Иванĕ кăна кĕтменччĕ. Вăл хăй ăшра атăлкассемпе ăмăртнине никам та сисмест тесе, ăна пĕтĕм халăх пĕлсе тăрать иккен.

— Ан ухмахланăр!—чарчĕ вĕсене председатель.—Атăлкассем пирĕнпе договор туса вараланмаççĕ те. Вĕсем вăрçăччен республикĕпе малта пыракан Кольцовка колхозĕпе ăмăртатчĕç.

— Эпĕ пулсан, ăмăртăва чĕнмелле,—терĕ хăюллăн пасăрхи хулăм сасах.

— Чĕнмесĕр, камсем вара вĕсем?

— Çук, çук,—килĕшмерĕ Катрам Иванĕ. — Ан та калаçăр. Пысăк колхоз пĕр-пĕр пысăк колхозпа ăмăрттăр, эпир хамăр пекки тупăпăр.

Калаçу çакăнпа вĕçленчĕ, анчах вăрттăн ăмăрту пĕтмерĕ. Катрам Иванĕ Липа урлă Атăлкасси колхозĕ хăçан авăн çапма тытăннине те, патшалăха миçе центнер тырă панине те, çуртырри мĕнчухлĕ вырнине те пĕлсех тăчĕ.

Пĕррехинче каçхине ларнă чухне колхозри ĕçсем пирки кĕтмен ыйтусем панăран ăна Ятман: „Мĕн эсĕ вĕçĕмсĕр пирĕн колхоз çинчен ыйтатăн, ку сведенисем сан Катрам Иванне кирлĕ мар пулĕ те?"—тесе хучĕ. «Çавна кирлĕ» терĕ Липа.—„Мĕн тума?" —„Вăл сирĕнпе ăмăртать". Вара унăн ирĕксĕрех ку вăрттăн ăмăрту çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа памалла пулчĕ.

— Хам председатель мар, председатель пулсан, эп вăл старике чăнласах ăмăртăва чĕнмелле,—терĕ Ятман Липа каланине итлесе пĕтерне хыççăн.

— Чăнласа ăмăртма килĕшмест. Вăл мухтанчăк çын мар, ĕçе çынна кăтартма тумасть, çапах та сиртен юлма та шутламасть.

— Кун хыççăн эп сирĕн Катрама йăлтах юратса пăрахрăм,—кулса илчĕ Ятман.—Ĕлĕк, хамăр колхозра чухне, эп ăна ун пек хыпса ўкекен çын мар тесе. Вăл ĕçшĕн вилсе каять иккен. Матур, такшин те ырламалла, матур... Анчах ăмăртура эсĕ ху кам майлă? Эс пире хирĕç пулĕ-ха, ют ял çынни?

— Эп çурри сирĕн майлă, çурри Катрам Иванĕ майлă.

— Тĕрĕс калатăн, унсăрăн эпир сана тек яла кĕртместĕмĕр,—терĕ Ятман.— Урăхла каласан, эс икĕ колхозне те лайăх ĕçлеттересшĕн. Çапла-и?

— Çапла.

Ку каç вĕсем яланхи пек автансем автиччен лармарĕç, Ятман, машинăпа ĕçлесе ывăннăскер, çурçĕр çитиччченех килне кĕрсе юлчĕ. Ун вырăнĕнче урăх каччă пулсан, Липа кўренмеллипех кўренмелле ĕнтĕ, тепĕр каç сăмах та хушмалла мар, анчах Ятман çине çиленме те аптрамалла: вăл, тин аманса таврăннăскер, машинăпа тырă вырать, кун каçа темиçе çыншăн ĕçлет, такшин ĕçне те тăвать. Ăçтан-ха ăна «юрататăн пулсан—çутăличчен лар, саватăн пулсан—пирĕн яла ху пыр, хисеплетĕн пулсан киле çитиччен ăсатса яр» тесе калама пултарăн? Мĕн пытармалли пур: хĕрĕн ăна хăйне Турикасса çўретесси килет, çынган вăтана-вăтана кашни каç çырма урлă каçиччен ăна хăйсен умĕнче кăна кĕтсе ларасси килет. Тен çынсем: Ятманĕ те юрататъ, те юратмасть, ку çапах та килне килсех сĕкĕнсе çўрет, теççĕ пулĕ. Вĕсен килне кĕрсе курманха вăл, анчах ытлашши куçран пăхни паллах ĕнтĕ, ăна Липа хăй те сисет. Ун çинчен вăл пĕрре çеç мар шухăшланă. Пĕлмест Липа, темле кăмăлпа ытларах çавăрма пулать Ятмана—те вĕçĕмсĕр пăхăнса, итлесе, ăна пыма йывăр тесе каçсерен хăйĕн патне çўресе, те пăхăнмасăр, куçран пăхтарса, хыçран чуптарса.

Кашни хĕрĕн хăйне кура мăнкăмăллăхĕ, каччăна йăлăнтарас йăли пур. Ак Липа та шухăша кайса çырма енне утнă майăн хăйне тата тепĕр хут: тек каçмастăп, юратсан, темле йывăр пулсан та, хăех пырать, тесе сăмах парать.

Телее Липа çул çинче яла таврăнакан Анушкана тĕлпулчĕ, вара вĕсем савнисем пек уйăрăлма пĕлмесĕр чылайччен калаçса тăчĕç.

Анушка курс пĕтерсе таврăнать иккен, кĕраки вăхăтĕнче ăна пилĕк çухрăмри яла пĕр бригадăна ĕçлеме яраççĕ. Халь пĕр эрнене яхăн вăл килтех пурăнмалла.

— Эп тыр вырмасăр юласран хăранăччĕ, çапах çуртырри вырма ĕлкĕртĕм,—савăнса каларĕ вăл.

— Тыр вырасси нимех те мар-ха, эс ав трактористка пулса килтĕн, çавăншăн хĕпĕртемелле,—терĕ Липа.—Ман ĕненес те килмест, нивушлĕ ĕнтĕ эсĕ трактористка? Халь çакăнта трактор парсан, ларатăн та каятăн?

— Вĕреннĕ хыççăн ларса каймасăр,—тахçанхи тракторист пек каласа хучĕ Анушка.—Сана вĕрентсен, эс те ларса каятăн. Мотора чĕртетĕн, рычагне туртатăн, руле пăркалатăн—трактор кайрĕ те, Ятман пăхса кăна юлать.

— Сан Карачăму ăçта, ăна хăварчĕç-и?—ыйтрĕ Липа.

— Вăл юлчĕ. Эп унпа тек çӳреместĕп,—татса хучĕ Анушка.

— Мĕн пулчĕ тата?

— Унпа намăс курма кăна. Пĕлетĕн-и мĕн хăтланчĕ вăл МТС-ра? Унăн тăхăр сехет тĕлне мастерскойне пымалла пулнă, вăл, ыйăх чăпти, çывăрса юлнă. Директор: „Мĕнле çывăрса юлма пултартăн-ха апла?—тесе ыйтсан, ухмах: „Хамăр ял хĕрĕпе кинона кайнăччĕ те, час çывăрма выртаймарăм", тесе каласа панă. Лешĕ эпĕ Атăлкассинчен иккенне пĕлет, коридорта курчĕ те: „Эсĕ хăвăр ял каччине ытлашши ан çӳрет, вăл сан пирки ĕçе çывăрса юлма тапратрĕ" тесе кулать. Çавăнта хуть çĕр айне путса ан. Тата, пĕлетĕн-и, питĕ кутăн вăл, Карачăм. Темле ĕç хушнă та ăна, вăл итлемен, чăркăша кĕрсе кайнă, тет. Ăна каллех директор чĕнтернĕ. Ăна вăл: „Колхоза ан та ярăр, пурпĕрех ĕçлеместĕп, сирĕн патăрта лапăртатса пурăниччен хам ирĕкпе фронта каятăп" тесе каланă, тет. Мана курчĕ те, пĕр сăмах та шарламасть. Путлĕ нимĕн те ыйтса пĕлеймерĕм.

— Вăл нимех те мар,—терĕ Липа.—Çамрăк-ха, айван. Ури çине ĕне пусать те, иртсе каять. Эс ăна ан пăрах, лайăх ача вăл, Карачăм.

— Санăн ĕçсем мĕнле?—ăна калаçнă çĕртенех пӳлчĕ Анушка.

— Мĕн тĕлĕшĕнчен?

— Мĕн тĕлĕшĕнчен пултăр? Паллă ĕнтĕ, ăнланман пек пулать тата.

— Мухтанмаллах мар,—терĕ Липа.

— Пачах калаҫмастӑр-и?

— Калаҫасса калаҫатпӑр. Халь те пӗрле лартӑмӑр-ха, анчах сайра тӗлпулатпӑр. Хама мана килме аван мар, сӗкӗнне пек пулать, хӑйне пырса ҫӳреме инҫе. Халь тата уксах пулсан та машинӑпа тырӑ вырать.

— Ан тӗлӗнтер,—ӗненмерӗ Анушка.—Хӑрах урапала епле вырать вӑл?

— Вырать ҫав. Вӑл ӗҫшӗн ҫунакан ҫын вӗт.

— Телейлӗ пулатӑн эс унпа, Липа,—ӗнентерсе каларӗ Анушка.—Лайӑх ҫын вӑл, ун пеккине шыраса та тупаймастӑн. Ӗҫре ӗҫчен, сӑнран хитре, пӗвӗпе тӗреклӗ, кӑмӑлӗ—ылттӑн кӑмӑл. Тем пек аван мар пулсан та, эс каҫсерен ху килсе ҫӳре, ӑна ҫырма урлӑ каҫса ҫӳреме йывӑр, паллах. Юратмастӑн пулсан, ан та чӑрмантар, хӗр туптӑр та авлантӑр.

— Авлантӑр часрах, мана кун пек йывӑр...

— Мӗншӗн йывӑр?

— Ялан шухӑшласа ҫӳрес пулать. Ҫӗрӗн-кунӗн ун ҫинчен шухӑшлакан пултӑм. Пӗрре те куҫ умӗнчен каймасть. Тепӗр чухне ним тӑваймап енне макӑрас килет. Ӗҫе тухатӑп—ӑна курас килет, каҫ ҫывӑрма выртатӑп—каллех ҫав, ирхине тӑрсан чӳрече патне пыратӑп та, вӑл иртсе каяссӑн туйӑнать. Сан ҫавӑн пек пулнӑ-и, Анушка!

— Пулман,—кулчӗ лешӗ.

— Ун пек ухмаха ерме те пулать пуль?

— Пӗрре те ухмаха ерместӗн. Эс ан вӑтан, хӑйне кала, хӑйне...

— Унтан эп темшӗн вӑтанатӑп, Анушка. Хам ӑна тивӗҫлӗ мар пек...

— Ун пек ан шутла. Юратакан ҫынпа яланах ҫапла пулать: малтан эс ӑна хӑвӑнтан чаплӑ ҫын тесе шутлатӑн, кайран, хӑнӑхатӑн та, хӑвӑнпа пӗртан туятӑн.

— Эс чисти юратса курнӑ ҫын пекех калаҫатӑн,—терӗ Липа.

— Тӗрӗс калатӑп!

Ҫапла каласса вӗсем сӑрт хӗррине ҫитрӗҫ. Вӗсен шыв пек юхакан калаҫӑвӗ кунта та часах чарӑнмарӗ. Анушка, манӑн кӗрсе ҫыврас тесе, тантӑшне темиҫе хутчен те алӑ пачӗ ӗнтӗ, анчах сӑмахӑн вӗҫӗ ҫук та ҫук: хӑйӗн чунне те ытларах уҫса парас килет, юрату вучӗпе ҫунакан Липӑн сӑмахӗсене те итлес килет.

Вӗсене ҫывӑхрах пӗр лупас айӗнче хыттӑн авӑтма пикеннӗ автан сасси ҫеҫ уйӑрса ячӗ.

## XIX

Пурӑнӑҫра час-часах ҫакӑн пек пулать: пӗр-пӗр ҫӗрте ӗҫлекен ҫын, мӗншӗн те пулсан хӑйӗн руководителӗпе вӑрҫса каять те, кун хыҫҫӑн вара ӑна начар ӗҫленипе, вӑл хушнисене итлеменнипе пӑхӑнтарма тӑрать. Ҫын хӑйне руководитель

тĕрĕс хăтăрса тăкнине те пĕлет, çапах та ăшĕнчи мăнкăмăллăхĕпе кутăнлăхĕ ăна çакна йышăнма кансĕрлеççĕ-кансĕрлеççех. Халь эпир кун пек çынсене сайра куратпăр ĕнтĕ, анчах юлнă-ха вĕсем, теплере-пĕрре тĕлĕнтерсе илеççех хăйсен мыскарисемпе. Ак пирĕн Карачăмпа шăп çавăн пек мыскара пулса иртрĕ.

Колхозсене тухса кайиччен темиçе кун малтан Карачăма трактор бригадин бригадирĕ тăвасси çинчен калаçу пулнăччĕ. Карачăм паянхи пек астăвать, ку сăмаха МТС директорĕ хăй каларĕ. Çуракинче Иванов та начар мар ĕçлерĕ, çамрăк пулсан та, хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет, кĕраки вăхăтĕнче эпир ăна бригадир тăвасшăн, терĕ. Ун заместителĕпе вăрçса кайнă хыççăн ĕçсем пачах урăхла килсе тухрĕç иккен. Пĕрре ĕçе кая юлса тухни тата директор заместителĕ чирлĕ механикшĕн ĕçлеме хушнине итлеменни ăна яла каллех ахаль тракторист çеç туса ямалли сăлтав пулса тăчĕ иккен. Çитменнине иккĕмĕш бригадăна! Çав çуркунне хăйĕн тракторне те аран-аран юсанă ватă хĕр патне, Зоя патне!

Çав тери тарăхнă Карачăм директор пӳлĕмне кĕчĕ те, ун патĕнче механик ларнине пăхмасăрах, хыттăн-хыттăн каласа хучĕ:

— Кирек те мĕн тăвăр, эп Зойăпа ĕçлеместĕп, мана урăх бригадăна куçарăр,—терĕ.

— Мĕншĕн ĕçлеместĕн?—ыйтрĕ унтан директор.

— Ĕçлеместĕп, каланă сире. Эсир мана ун патне мăшкăласа çеç яратăр...

— Иванов, ан кутăнлан, Зоя—лайăх бригадир, кай та яла, тракторна тирпейле. Ан кансĕрлесе çӳре,—хăй унпа нумай тавлашма шутламаннине систерсе ура çине тăчĕ директор.

— Çук, ĕçлеместĕп, суда парăр, пурпĕрех ĕçлеместĕп.

— Ĕçлетĕн,—терĕ директор.—Ытах ĕçе пăсма тытăнсан, суда та паратпăр.

— Парăр, пĕрре те хăрамастăп.

— Ну, çитĕ, çитĕ,—кăмăлне çемçетрĕ директор.—Манăн санпа тавлашса тăма вăхăт çук.

— Апла мана урăх бригадăна куçармастăр?—çине тăчĕ Карачăм.

— Халь ун пирки сăмах та пулма пултараймасть. Çынсем пурте хăйсене çирĕплетсе панă колхозсене кайса пĕтнĕ иккен те, мĕн бригадăсене çĕмĕрмелли пур.

— Ну, кайран ан вăрçăр...

Карачăм директор патĕнчен пӳлĕм алăкне юриех хыттăн хупса тухса кайрĕ. Ун вĕрилĕхне пĕрре çеç мар курнă директор ку сценăран нимех те тĕлĕнмерĕ, çапах та ăна куннинче Карачăм чăнласах кутăнланассăн туйăнчĕ. Колхоза çитĕ те, трактора ĕççĕр лартĕ, вара уншăн пĕтĕм коллективăн намăс курмалла пулĕ. Вăл тепĕр икĕ сехетрен Карачăм патне хваттере кайса унпа чĕререн калаçас тесе шутларĕ. Ачи

çамрăк-ха, айван, вăл хăй мĕншĕн кӳреннине те тĕплĕ пĕлмест, тен, каласа ăнлантарсан, çилли иртĕ.

— Юнĕ вĕри вара унăн,—терĕ калаçăва хутшăнмасăр ларнă механик юлашкинчен.

— Мĕн каласси пур.

— Вирелле тăман чухне ĕçре матур хăй, трактора лайăх пĕлет. Ун пек ăста юсаканни сахал-ха пирĕн.

— Эпĕ те сăнакаларăм та, начар ĕçлемест пекчĕ. Бригадира лартас тесе те шутланăччĕ-ха. Нумай пулмасть тем инкекĕ сиксе тухрĕ. Михаил Никанорчпа вăрçса кайнă та, кăмăлне питĕ йывăра илнĕ.

— Иртĕнме памалла мар. Унăн хăйĕнчен асли хушнине итлемесĕр тăрас йăла пур. Ăна пĕтермесен, кайран унпа пушшех асап пулать.

— Алла илетпĕр,—терĕ директор.—Лăплансан ак унтан лайăх тракторист та пулмасть.

Каçхине вăл Карачăма тĕлпулаймарĕ. Лешĕ тĕттĕм пуличченех хăйĕн тракторĕ ларакан яла тухса кайнă иккен. Тепĕр кун ирхине телефонпа Атăлкассине шăнкăравласан, ăна Карачăм тракторне унта илсе çитерни çинчен пĕлтерчĕç.

Çамрăк каччăн бригадăна çитсен тулашса илмелли тепĕр сăлтав тупăнчĕ. Бригадир ăна ĕçлеме нихăш яла та мар, шăп Атăлкассине ярасшăн. Чылайччен тавлашрĕ вăл унпа, анчах Зоя хăйĕннех перет: „Хăвăр яла кай, унта эс кашни тĕмескене пĕлетĕн, ĕçлеме çăмăлтарах пулать". Карачăмшăн пулсан, урăх ял лайăхрахчĕ: унта вăл пуçлăхсене куçран пăхтарма, унпа вăрçма ытла çăмăлах маррине кăтартса пама пултаратчĕ. Хăйсен ялĕнче ĕçлемесĕр ларас çук, ашшĕ пĕлсен, темскер курса тăмалла пулĕ.

Бригада ĕçе тытăннă кун Карачăм тракторĕ хирти пĕччен çăка айĕнче пĕр хускалмасăр ларчĕ. Ирхине тракторист мотора чĕртме те тытăнса пăхрĕ, моторĕ пĕр-икĕ хутчен шаккакаласа та илчĕ, анчах темле пайĕ пăсăлнă пек пулчĕ те, Карачăм ăна тĕрĕслемесĕрех курăк çине тăсăлса выртрĕ. „Килсе юсаччăр, вара ĕçлетĕп", терĕ вăл. Çак вăхăтра ăна çуркунне хăй юсанă трактор кăшт пăсăлнишĕн никам та мар, Михаил Никанорчпа Зоя айăплă пек туйăнчĕ, вăл, тем пек кутăнлансан та, хăйне никам та ним те тума пултараймасть тесе шутларĕ. Плуг тытса пыма тата шыв йăтма колхозран ятарласа уйăрса панă çамрăк ача хăйĕн çине тĕлĕнсе пăхса тăнине асăрхасан, вăл ăна та, трактор пăсăлнă тесе, яла хăваласа ячĕ.

Кăнтăр тĕлĕнче вăл мĕнле ĕçленине курма икĕ çухрăмлă хир урлă Зоя пычĕ. Бригадир çитнĕ çĕре Карачăм харлаттарсах çыврать иккен. Вăл вăратсан та час вăранмарĕ.

— Эс, каччă, мĕн туса выртатăн?—çӳçĕнченех лăскарĕ ăна Зоя.

— Манăн трактор ĕçлемест.

— Мĕн пулчĕ тата?
— Коллектор пăсăлнă пулас.
— Эс тĕрĕслемерĕн-и вара?
— Тĕрĕслерĕм, ĕçлемест...

Бригадир трактор йĕри-тавра çаврăнкаласа унта-кунта пăхкаларĕ, пĕр çĕрте контакт çуккине тўрлетрĕ, урăх юсавлă мар вырăн ниçта та çук. Часах чĕртсе янă мотор лăпкăн та пĕр тикĕссĕн шаккама тапратрĕ.

— Эс тĕрĕслесе те пăхман, трактору чиперех ĕçлет. Каплах эсĕ ман бригадăна чи юлашки вырăна хăваран, асту. Каçхине манăн директора сводка парас пулать.

— Пар ара.

— Кун пек сводка пама та намăс. Мĕн тейĕ вăл?

— Трактор пăсăлнă, те.

— Ан суй. Трактору юсавлах. Эс çав Михаил Никанорчăн кутăнланатăн пулĕ-ха. Эп сана акă мĕн калатăп: эс унçине виçĕ çул çиленсе пурăнма пултаратăн, анчах ĕçе ан пăс, хăвăр колхозникĕрсем умĕнче ятна ан яр.

— Маншăн ан хăра, эп ĕçлĕп, хăвăн планна чипер тултар,—терĕ Карачăм.—Тупăннă бригадир, вĕрентет тата.

— Вĕрентмесĕр. Манăн саншăн ответ тытас пулать.

— Эпĕ хамшăн хамах ответ тытатăп.

— Тавлашни, кутăнланни вăл ответ тытни мар-ха, халĕ ĕçпе ответ тытас пулать. Ав, виççĕмĕш бригада пире ăмăртăва чĕнет. Паян ирех хут çырса янă. Сан савнийў те алă пуснă.

— Ăмăртчăрах. Эпир ăмăртусăрах хамăр плана тултаратпăр.

— Кун пек çывăрсан тултармасăр, тултаратпăрах ĕнтĕ. Ак каçхине вĕсен бригадине каятăп та Анушкана сан çинчен каласа паратăп.

— Кала ара, кам хăрать,—ĕçлеме хатĕрленнĕ пек, тракторĕ патнелле пăрăнчĕ Карачăм.

— Анушкана çеç мар, аçуна курсан, ăна та каласа кăтартатăп.

— Аннене те кала, вăл масар çинче выртать манăн.

Кутăн çыннăн хăлхи витĕр мар, теççĕ. Тĕрĕс пулас çав ваттисен çак сăмахĕ: витмест ун пек çынна сăмах, ик сехет сиксе тавлашать вăл, çапах та аслăраххин, аслăраххин канашне итлемест, ун асăрхаттарăвне нимпе те йышăнмасть. Паллах, Зоя вырăнĕнче тепри Карачăмпа урăхларах каласмаллаччĕ, ăна итлеттерме урăх майсем тупмаллаччĕ. Ку çамрăк-ха, кун кăмăлĕ хытайман-ха, вăл çынна ыр сăмахпа, тархасласа ўкĕте кĕртесшĕн. Çавăнпа та, çур сехете яхăн калаçрĕ пулин те, вăл кайиччен трактор вырăнтан хускалмарĕ, Карачăм бригадир кайсан ĕçлеме тытăнассине те нимпе те палăртмарĕ. Зоя, каçхине тепре килсе тĕрĕслетĕп терĕ те, бригада ĕçĕ пирки колхоз правленийĕпе калаçма ялалла утрĕ.

— Çĕнĕ бригадирăн пĕрремĕш кунĕ хитре мар пуçланчĕ,—терĕ Зоя.—Паянхи план çурри те тулмасть. Ĕçлеме тытăнсан,

Карачăмĕ ир кӳлĕмшĕн ĕçлесе тултарать-ха вăл, ĕçлеме тытăнмасан мĕн тумалла? Директора пĕлтермелле, суда памалла. Çук, ман ĕçсем начар.

МТС-ра чухне хăйне сан бригадунта Карачăм пулать тесен, Зоя савăнсах кайнăччĕ: Карачăма хăш бригада кăна йышăнасшăн пулман пулĕ! Паян та, виççĕмĕш бригадăри çынсем ăмăртăва чĕнсен, вĕсен чĕнӳне хăпартлансах йышăнчĕ, пирĕн начар ĕçлекенни çук, Карачăм пĕччен мĕне тăрать, терĕ. Карачăмăн чĕрине хурт çиме пуçланă мĕн, вăл хăйне тахçан вăрçнисемшĕн халь, хире тухсан кутăна пенипе таварасшăн мĕн. Утнăçемĕн ун пуçĕнче пĕр шухăш ытларах та ытларах çирĕпленсе пычĕ: çук, ăна эпĕ пĕччен пăхăнтараймастăп, манăн кунта кама та пулин пулăшăва чĕнес пулать. Паçăр вăл „аçуна калатăп“ тесе хăратмалла çеç каласа хучĕ, ăна, паллах, Карачăм та ĕненмерĕ, ак халь Зоя ку ĕçре вăтанса тăма юраманнине, ун ашшĕ чăнах та пĕтĕм ĕçе пĕр-пĕчченех юсаса яма пултарнине ăнланса илчĕ.

Тăкăрлăкран кĕрсе çырма патне, электростанци тунă çĕре тухсан, вăл çывăхри пĕр старикрен тӳрех Карачăмсен килĕ ăçтине ыйтре.

— Килĕ ял леш вĕçĕнчех,—терĕ старик.—Санăн килнех çитмелле-и?

— Мана ун ашшĕ кирлĕ,—таçта курнă кăтра çӳçлĕ старике сăнаса пăхрĕ Зоя.

— Ашшĕ часах килет ак. Вăл кунта ĕçлет, строительсен бригадирĕ...

— Апла, кăшт кĕтсе пăхам.

— Кĕтмелли пулсан кĕт, хĕрĕм. Эс хăш ялсем пултăн, пĕлме юрать-и?

— Эп—Çатракассем. Кунта трактор бригадипе ĕçлетĕп.

— Хĕрарăм бригадир ĕçлеттерет, терĕç. Эсĕ апла вăл?

— Эпĕ-çке...

— Унта пирĕн ял ачи те пур пулас. Шăп çак Сахрун ывăлĕ. Вăл мĕнле ĕçлекелет?

— Ĕçлени-масарĕ...—ал сулчĕ Зоя.

— Мĕн тата? Начар ĕçлет-и?

— Паян ирех выртнă та, ку таранччен ыйăха çапнă.

— Чим, чим,—чарчĕ ăна старик.—Машина мĕн туса ларать вара?

— Машина ĕççĕр ларнă.

— Ĕненместĕп!—терĕ хыттăн старик.—Мăйран пуссан та, ĕненместĕп. Сахрун ачи ун пек хăтланма пултараймасть. Апла вăл Карачăм мар, кам та пулин урăххи. Пирĕн ял çынни-и? Çук, çук...

— Кам ывăлне пĕлместĕп, анчах сирĕн ял çынниех çав, мучи.

— Кай, кай. Ку сăмаха никама та ан кала. Ăна яла та илсе ан кĕр.

— Ӗненместӗн пулсан, пырса кур. Айда пӗрлех каятпӑр.

— А Сахрун мучипе мӗнле? Кӗтместӗн-и?

— Кӗтсе илсен аванччӗ, эп ӑна калас тенӗччӗ. Вӑрҫтӑр вӑл ывӑлне, унсӑрӑн Карачӑм пӗтӗм бригада ятне ярать.

— Инҫе-и?— терӗ Кӑтра Михала.—Час ҫитсе килме пулать-и?

— Инҫе мар. Ҫӑка патӗнче.

— Ну, кайрӑмӑр апла. Ӗненместӗп. Пулма пултараймасть. Вӗсем ҫывхарнӑ ҫӗре Карачӑм тракторне пур енчен те ӗҫе кӑтӗрлесе ҫитернӗччӗ—мотора чӗртсе ямалла та ларса каймалла. Хӑйне пулӑшакан ача ӗнтӗ плугсене майлаштарса ҫаклатса ячӗ. Ҫав вӑхӑтра Карачӑм куҫпа мар, шалти туйӑмпа ҫурӑм хыҫӗнче ҫынсем тӑнине сиссе илчӗ. Пӗрне вӑл ҫаврӑнса пӑхмасӑрах палларӗ—Зоя, анчах тепри кам-ши? Мӗнле ҫынна илсе килчӗ вӑл Карачӑма вӑрҫма? Нивушлӗ ашшӗне сӗтӗрсе килчӗ? Бригадирпа юнашар Кӑтра Михала куҫне хӗскелесе, тутисене вӑрттӑн кулнӑ чухнехи пек пӗркелесе тӑнине курсан, Карачӑм хӑйӗн питне вӗри юн пӗҫертнине туйрӗ. „Кунпа тавлашма май ҫук, ку аттерен те хытӑ ятлать ӗнтӗ",—вӗҫрӗ пуҫра шухӑш.

Михала пичче калаҫуне йӗплӗ сӑмахсемпе пуҫларӗ:

— Пирӗн Карачӑм паян виҫӗ норма тултарнӑ, теҫҫӗ, ӗненмесӗр килсе курас терӗм,—ун патне ҫывӑхарса, хӑй каччӑран тӑрӑхланине пытармасӑр кулчӗ вӑл.

Зоя ӑна пулӑшма шутларӗ курӑнать:

— Ав мӗн чухлӗ сухаласа пӑрахнӑ, виҫсе пӗтерейместӗн.

— Комсомолец пример кӑтартать.

— Эп комсомолец мар,—терӗ Карачӑм, кунта чӗнмесӗр ирттерсе яма май ҫуккине курса.

— Ӑнланмалла,—чӑсарах аларӗ Михала пичче.—Комсомолец пулнӑ пулсан, вӑл ӗҫлетчӗ, комсомолец мар та—ӗҫлеместь. Э-эх, Карачӑм!..

Вара йӗкӗтӗн темиҫе минут хушши ӳпкевлӗ сӑмахсем, вӗри шывпа сапнӑ чухнехи пек пӑчӑхтаракан, ҫамкаран тар кӑларса чуна кайса тивекен сӑмахсем илтсе тӑмалла пулчӗ.

Вӑл сӑмахсене вӗриленсе, тавлашма тытӑнмасӑр, итлесе тӑма та йывӑр, анчах чӑтӑмлӑн итлес пулать: ват ҫын калать, Кӑтра Михала калать. Вӑрҫма та хитре вӑрҫать ӗнтӗ старикӗ, ӑҫтан сӑмахӗсене тупма пӗлет:

— Санӑн аҫу, йӑмӑку пур, ӗҫре юлташусем пур, ялу, кӳршӳ-маршу пур. Мӗнле вӑтанмастӑн-ха ҫавсенчен? Мӗнле пырса кӗретӗн-ха килне, укӑлча хапхине мӗнле чунпа уҫатӑн паян? Эс ӗнтӗ ҫамрӑк мар, ӑнланакан пулнӑ, санӑн хӑвӑн чысна упрама пӗлмелле пек. Е эс хӑвна та, юлташусене те, ял ҫыннисене те нимӗн чухлӗ те хисеплеместӗн-и? Асту: киле кӗрсен—чыс аслӑ, яла тухсан—ят аслӑ, тенӗ. Эп кирек те мӗн тӑвам, ман ҫумра никамӑн та нимӗн ӗҫ те ҫук тесе ан шутла. Сана машина шанса панӑ, эсӗ колхоз ҫӗрне сухалатӑн. Ҫапла...

Ун сӑмахӗсене мотор сасси хупласа хучӗ. Карачӑм:

— Бригадир юлташ, ан вӑрҫ, Карачӑм ӗҫлеме пуҫларӗ,— терӗ те, Кӑтра Михала каланине илтес мар тенӗ пек, юриех вӑйлӑ газ пачӗ. Трактор, хӑй хыҫҫӑн тем анлӑш хура тӑла сарса пынӑ евӗр касӑ хӑварса, пӗчӗккӗнех аяккалла шума тапратрӗ.

— Халь ӗҫ кайрӗ, халь Карачӑмна тытса та чараймастӑн ӗнтӗ,—терӗ Михала пичче.

— Темӗн-ҫке. Ӗҫлӗ-ӗҫлӗ те, кутӑнланмалли тепӗр сӑлтав тупса тепре трактор айне кӗрсе выртӗ.

— Ҫук, тек выртмасть. Сӑмах паратӑп: Карачӑм хамӑр ял хирӗнчен кайиччен тек наянланмасть. Кунтан кайсан—сирӗн ӗҫ, кирек те мӗнле ӗҫлеттерӗр, анчах кунта вӑл Атӑлкасси ятне ямасть.

Зоя ӑна ӗненчӗ. Вӑл Атӑлкассинчен хӑйӗн тракторӗ патне тавӑрӑннӑ хыҫҫӑн каҫхине тек Карачӑм патне кайса вӑхӑт иртермерӗ. Ун патне тек Михала пичче те пымарӗ, вӑл ывӑлӗ ҫинчен Сахрун пиччене каласа пачӗ те хире хӑйӗн бригадине васкарӗ.

Калас пулать, Кӑтра Михала пӗлтерни Сахрун пиччешӗн нихҫан кӗтмен хыпар пулчӗ. Вӑл халиччен Карачӑм пирки кун пек чуна ыраттаракан сӑмахсем илтменччӗ-ха. Ӑна, ҫамрӑксене, никамах та ырламан ӗнтӗ, ашшӗ те ку таранччен ача вырӑнне кӑна хунӑ-ха, ҫапах та вӑл ял ҫинче ята яни те пулман. Тем тесен те, ашшӗ хӑйӗн ывӑлне ал ӗҫне пӗчӗклех хӑнӑхтарнӑ, ҫынран кая юлса ӗҫлеме вӗрентмен. Тата ялтан кайни те нумаях пулмасть-ха. Хӑҫан вӑл ҫав териех пӑсӑлма пултарнӑ? Килте ашшӗ хушнине яланах итлекенскер, чӑнахах ҫапла кутӑн ҫын пулса ӳсет-и? Старик хӑй ӑсӗпе ҫапла шутларӗ: Карачӑм ашшӗ аллинчен вӗҫерӗннӗрен ҫакӑн пек чарусӑра тухнӑ, ӑна хӑй ӗҫленӗ ҫӗрте начар тыткалаҫҫӗ, хушнӑ ӗҫе епле тунине сӑнасах тӑрас вырӑнне, кашни йӑнӑшшӑн хӑтӑрас вырӑнне вӑл иртӗхнине курман пек пулаҫҫӗ. Ҫамрӑксем ниҫта та мар, шӑп ачаш тыткаланӑ ҫӗрте пӑсӑлса кутӑна каяҫҫӗ. Кӑна Сахрун пичче хӑйӗн вӑрӑм ӗмӗрӗнче нумай сӑнанӑ.

Ӑшра темӗн чухлӗ шухӑшларӗ пулин те, вӑл ывӑлӗ ҫӗрле киле таврӑнсан унпа калаҫнӑ хушӑра хӑйӗн ҫиллине пӗрре те палӑртмарӗ. Ывӑлӗ унпа ним пулман пекех кӑмӑллан калаҫрӗ, хирте ӗҫсем мӗнле пыраҫҫӗ тесе ыйтсан та „аван“ тесе тавӑрса хучӗ. Старик чӗлхе вӗҫне килнӗ сӑмахсене темиҫе хутчен те каламах тӑчӗ, ҫапах та ват ҫын тӳсӗмӗ ҫӗнтерчӗ-ҫӗнтерчех—вӑл нимӗн те шарламарӗ.

Тепӗр кунхине, Карачӑмпа унӑн пулӑшаканӗ хӗрсе ӗҫленӗ вӑхӑтра, хирти ҫӑка йывӑҫҫи патне вӑрӑм кӑна пӳ-силлӗ, пӑртак курпунрах ҫын пырса тӑчӗ. Вӑл витӗрех мар куҫӗсемпе трактора, унтан трактор патӗнче айкашакан трактористпа тепӗр ачана шыраса тупрӗ, вара вӗсем ҫинелле чылайччен тимсӗлсе пӑхрӗ. Часах трактор, нӑрӑ пек шуса, айлӑмалла анчӗ

те курăнми пулчĕ. Çын çаплах вырăнтан хускалмарĕ-ха, трактор анса кайнă еннелле тата тепĕр самант пăхса тăчĕ, вара, хăйĕн ăшĕ пусăрăннине туйса, яла кайма тесе сукмак еннелле пăрăнчĕ. Ку Сахрун пичче пулчĕ. Вăл, тем пек килес мар тенĕ пулин те, тӳссе тăраймарĕ, электростанци тунă çĕрте ĕçлекен бригадине тата аллинчи пурттине пăрахсах ывăлĕ патне çул тытрĕ. Хăй малтанах çапла шутласа хучĕ: патне çитместĕп, аякран çеç пăхса илетĕп, ĕçленипе ĕçлеменнине çеç куратăп, терĕ. Сукмакпа çырма хĕрринчен хăпарнă чухнех вăл мотор кĕрленине илтрĕ, вара старик ывăлĕ çывăрса выртнине курас шухăша пуçран хăваласа ячĕ.

Анчах пĕрре илтнĕ усал сăмах чĕрене йăлтах лăпланма памастех çав вăл. Каçхине, çывăрма таврăнас умĕн, Сахрун пичче кунта тепре килсе пăхрĕ—Карачăм çав-çавах ĕçлет, вăл ĕнтĕ çăка йывăççи леш енчи çĕр лаптăкне типçырма таранах сухаласа пăрахнă. Мĕнле ĕçлет вăл: нормине тултарать-и, тултармасть-и—старик ăна пĕлмест, уншăн пулсан халĕ ывăлĕ пĕр чарăнмасăр ĕçлени темрен те хаклă. Вăл кунта ывăлĕ тĕлĕнмелле чаплă ĕçленине курса унпа мухтанма килмен (кăна вăл тепĕр чухне тăвĕ), ăна çак хире Кăтра Михала сăмахĕсем илсе килнĕ. Кам ашшĕ-амăшне чĕререн ан тарăхтарччăр-ха „сан ывăлу ĕçлес вырăнне çавăнта çывăрса выртать“ текен сăмахсем! Вĕсене илтсен кирек-камăн та ывăл патне пырса ăна пĕтĕм чунхавалĕпе вăрçса тăкас килмелле. Çакăнта хăй куçĕ умĕнче çывăрса выртнине курсан, Сахрун пичче те ывăлне хаяррăн ятласа тăкнă пулĕччĕ, анчах, телее, çăка патĕнче вăл витресемпе ытти савăт-сапасăр пуçне урăх нимĕн те курмасть, унта никам та çывăрса выртмасть. Апла пулсан, халь ывăл патне кайма та, ăна ятлама та кирлĕ мар, вăл хăйĕн йăнăшне хăех тӳрлетме пултарать.

* * *

Усал ĕç тусан та, ырă ĕç тусан та çын чи малтан çакăн çине хăйĕн çывăх çыннисем—ашшĕ-амăшĕ, тăванĕ, тантăшĕ, савнийĕ мĕнле пăхни çинчен шутлать. Вĕсем мĕн калĕç, ку ĕçе вĕсем мĕнле хаклĕç?

Карачăм тракторне юсамасăр çывăрма выртса кутăнланнă чухне ăна-кăна тавçăрса та илмерĕ, вăл çакна ним çинчен шутламасăр, МТС пуçлăхĕсене кăшт та пулин куçран пăхтарас тесе çеç турĕ. Кăтра Михалапа Зоя пырса çитсен вара вăл хăй ытлашши ĕç тунине, кунпа никама та пăхăнтарма çуккине ăнланса илчĕ. Вĕриленни иртсе кайсан, хăйĕн айванлăхне хăй ăнлана пуçласан, Карачăм тӳрех кун пирки ашшĕпе Анушка мĕн каласси çинчен шутларĕ. Вăл теплере пĕрре киле кĕрсе тухсан, ашшĕпе ним пулман пек калаçрĕ пулин те, мĕн хапхаран тухса кайиччenех ашшĕ тулхăрса кайса, пĕтĕм çиллипе вăрçса тăкасса кĕтрĕ. Хирте ĕçленĕ чухне те ун куçĕсем ялан ашшĕн вăрăм кĕлеткине шырарĕç. Ку туйăм

ăна улталамарĕ, çапла, старик килмест-и-ха, тесе йĕри-тавра канăçсăррăн пăхкаланă хушăра вăл пĕррехинче çăкаран инçех те мар ашшĕ тăнине асăрхарĕ. Карачăм, вăл мĕншĕн килнине чунĕпе сиссе, ăна курсан та ĕçлеме пăрахмарĕ, куç хўрипе айккинелле пăхса тракторне вĕçĕмсĕр малалла хăваларĕ. Вăл пĕлнĕ пекех, ашшĕ ун патне çывăха пымарĕ, пилĕк минута яхăн тăнă хыççăн мĕнле килнĕ, çавăн пекех сисĕнчĕксĕр куçран çухалчĕ. Тепĕр кунхине Карачăм ашшĕне тата аякран курчĕ, палласса та ăна шурă кĕпинчен çеç палларĕ. Тек вара, темĕн чухлĕ сăнасан та, курăнни-туни пулмарĕ.

„Атте умĕнче ята кĕтĕм, ку аван мар,—терĕ Карачăм хăй тĕллĕн.—Халиччен ялан шанакансkер, халĕ хăйĕн ĕçне пăрахса хирелле туха-туха пăхать. Анушка мĕн тет-ши ĕнтĕ ман пирки? Пелет-ши вăл эпĕ хамăр пуçлăхсемшĕн мыскара туса ирттернине?"

Ун ыйхи çинчен Анушка çеç мар, таврари ялсенчи мĕнпур трактористсем пĕлеççĕ иккен. Каç пулас енне кайсан пуштă çўретекен хĕрача ăна сасартăк ултă çыру килсе тыттарчĕ. Улттăшĕ те трактористсенчен!

„Иванов юлташ, ыйăху тутлă пултăр, тĕлĕкре хăвăн пуçри картусна чăмласа тăракан тĕвене курмалла пултăр"... „Ыран, хамăр нормăна тултарсан, Карачăм, сан патна пырса çывăрма хўшĕ туса паратпăр, унсăрăн сан çине çумăр анма пултарать". „Карачăм, кунĕн-çĕрĕн ыйха чăм..."

Мĕн кăна çырса пĕтермен ку çырусенче! Никамран та мар, хăйĕнчен мăшкăласа çырнă пулсан та, Карачăм вĕсене кула-кулах вуларĕ, унтан, çийĕнчех çурса тăкса, татăк-кĕсĕкĕсене йĕри-тавра сапаласа ячĕ. Çапах та пĕр çыруне вăл çурмарĕ, çине-çине темиçе хут вуласа тирпейлĕн шалти кăсъине чиксе хучĕ. Матур Анушка: вăл çыруне ыттисем пек йĕкĕлтесе те кулса çырман, хăйсен ял ачине ун çинчен усал хыпар çўрени çинчен пĕр-ик сăмахпа пĕлтерсе, ăна ăмăртăва чĕннĕ. Мĕнех вара, ăмăртас Анушкапа! Çавăн пек ыр чĕреллĕ хĕрача чĕнўне мĕнле йышăнас мар?

Чăнах та, çак минутра ăна Анушка çав тери ăслă, йĕркеллĕ, ытарма çук кăмăллă çын пек туйăнчĕ: вăл пĕрре те тантăшĕ çинчен усал ят тухнипе усă курса, ăна тăрăхлама тăрăшмасть, ăна хăйĕн енне çеç кăчăк туртать, юлташла пулăшу çеç сĕнет. Апла пулсан, вăл Карачăма ыттисенчен ытларах хисеплет, уншăн ыттисенчен ытларах тăрăшать.

—Анушка!—тет Карачăм саспах.—Хитре хĕр Анушка! Ятунтан та хитре эсĕ, сăнунтан та чипер, анчах чĕрўнтен, кăмăлунтан тата хитререх. Сана аса илсенех, манăн шăм-шак çумне çунатсем хутшăнаççĕ, манăн вĕçĕмсĕр сана кăмăла каякан ырă ĕç тăвас килет. Ăмăртатпăр эппин, лайăхрах ĕçлеме хушатăн пулсан—ĕçлетпĕр!

Анчах çапла хавхаланнă, чун-чĕререн савăннă хыççăн Карачăм ĕçĕнче каллех кўренмелли сехетсем пуçланчĕç: мотор

чăкăмăçларĕ те, трактора нумайлăха чарса лартмалла пулчĕ. Çур сехете яхăн вăл нимле айăп та тупаймарĕ, бензин каймасть пулĕ тесе клапансене тасата-тасата, вĕçĕмсĕр малти тыткăçа çаварчĕ. Çук, трактор чĕрĕлмест. Юлашкинчен, тарăхса çитнĕ тракторист сайра-хутра çеç тĕрĕслекен пайсене сӳтме тапратрĕ. Сехет иртрĕ, икĕ сехет иртрĕ, тепĕр сменăри ĕçлекен Петĕр тракторист çитсен унпа та чылай айкашрĕç, çапах та машина, хăваласа та вырăнтан хускалман вăкăр пек, нимпе те парăнмарĕ. Ире хирĕç çеç мотора чĕртсен, вăл вăкăра витĕмлĕ пушăпа çапнă хыççăнхи евĕр, шартах сиксе васкамасăр малалла шурĕ.

— Ăнăçсăр, мĕн чухлĕ вăхăта сая ятăмăр,—терĕ Карачăм, юлташне руль тыттарнă хыççăн трактор çинчен сиксе юлса.

Юлташĕ, пĕр смена ахалех çыварса выртнă çын вăхăта шеллесе калаçнине ăнланасшăн пулса, ун еннелле чăр-р! пăхса илчĕ, анчах нимĕн те чĕнмерĕ.

Карачăм: канма киле каяс-и е кунтах пиншаксемпе пĕркенсе çĕр каçас тесе, кăшт шухăша кайса тăчĕ. Тĕрĕссипе киле каяс та килмест. Кунта çавтери уçă, кăнтăрла шăрăх çанталăк тăнă хире çĕрлехи сулхăн çапнă. Атăлкасси енчен тарланă çурăма уçăлтаракан вăштăр-вăштăр çил вĕркелет. Тӳпе çав-çавах кăн-кăваккăн куранать, тухăç енче çеç вăл, хĕвел çинĕрен тĕсне çухатма пуçланă пусма евĕр, самаях шупкаланма ĕлкĕрнĕ.

Ĕçре ывăннă çынăн утасси килместех ĕнтĕ. Карачăм, хăйсен япалисем выртакан çĕре тухрĕ те, пăртак çырткаланă хыççăн çĕре тĕшĕрĕлсе анса çийĕнчех тарăн ыйха путрĕ.

Тепĕр кун вăл питех те лăпкăн ĕçлерĕ, çамрăк çын кун пек лăпкă ĕçлесси сайра пулать. Тракторист кăмăлне пĕлнĕ пекех, машина та пĕрре те пăсăлса тарăхтармарĕ. Смена пĕтес умĕн Петĕр вăл планран ирттерсе виçĕ гектар ытлашши сухалани çинчен пырса каларĕ. Карачăм кăна ĕненме те пултараймарĕ, вăл сухаланă лаптăка хăйĕн аллипе хăй виçсе тухрĕ. Çапла, виçĕ гектар. Ĕçленĕ-тĕк ĕçленĕ паян! Ыранхи нормăна та кăшт çеç тултарайман; Анушкана çырса ярсан, ĕненес те çук.

Çак кунсенче Анушка Карачăмран кашни ирех блок-нотăн вараланса пĕтнĕ пĕчĕк татăкĕсем çине çырнă кĕске сводкăсем илсе тăчĕ. Нимех те çук вăл сводкăсенче, цифрăсем çеç. Çапах та вĕсем хĕрачашăн тем пекех хаклă. Гектар шучĕ пĕр кун ытларах, тепĕр кун—сахалтарах, анчах та планран кая пĕр цифра та çук. Мĕн пытармалли пур, Анушкан гектар шучĕсем унинчен нумай пĕчĕк ĕнтĕ, темле тăрăшсан та çамрăк трактористка вăл виçене çитерейместех. Анчах ку хĕрачана питех пăшăрхантармасть. Ăмăртăвăн результачĕсем куç умĕнче. Карачăм, унăн юратнă Карачăмĕ ăна тĕрĕс ăнланчĕ. Ку Анушкашăн пуринчен те хаклă, малтанлăха ку ăна ытлашшипех çырлахтарать.

## XX

Колхозра ӗҫсем нумайланса, кӑткӑсланса, ытларах хӗрӳлленсе пынӑҫемӗн Ятман пӗчӗккӗнех ҫакна лайӑх ӑнланса илчӗ: Левентей мӗнпур ӗҫе ертсе пыма пултараймасть ҫеҫ мар, чылай ҫӗрте кансӗрлет те. Ҫынсем ун председатель пулса пӗр иккӗленмесӗр хушса е вӗрентсе каланӑ сӑмахне пачах илтмеҫҫӗ, вӗсем хӑйсем мӗнле пӗлнӗ, ҫавӑн пек ӗҫлеҫҫӗ. Ӑнах та, кам ӑна чӑн-чӑн председатель вырӑнне хурать? Мӗнле путлӗ ӗҫ пуҫласа ӑна вӗҫне ҫитерчӗ Левентей? Мӗнле ӗҫре кӑшт йӗрке турӗ вӑл? Пуҫлӑх хӑйӗн вырӑнче пулсан, вӑл кашни утӑмра сисӗнсе тӑмалла. Ав, Кӑтра Михала бригадинче бригадирӑн ҫирӗп алли мӗнпур ӗҫре курӑнса тӑрать, ытти ҫӗрте ҫак ҫирӗп алӑ ҫук. Левентей кунне пӗрре хире тухса курать, правленинче алӑ пусмалли хутсене алӑ пусать, телефонпа района кирлӗ сведенисене пӗлтерет, анчах ҫакна пӗтӗмпех вӑл темле хӑй тӗллӗн ҫуралнӑ хӑнӑхупа, ячӗшӗн ҫеҫ тӑвать, унӑн ӗҫӗнче Ятман нимле хавхалану та, нимле чӗрӗ туйӑмпа пуҫарулӑх та курмасть.

Ялти ҫынсем хӑйне хисепленипе хисеплеменнине ним вырӑнне те хуман Левентей районри руководительсем умӗнче ҫавҫавах ырӑ ятлӑ пуласшӑн иккен-ха. Темиҫе кун каялла колхоза райҫӗрӗҫ пайӗн заведующийӗ килсен, ӑна вӑл ҫав тери тараватлӑн пӑхса ячӗ, колхозри ӗҫсем ҫинчен пӗр сехете яхӑн тем пекех мухтанчӑклӑн каласа кӑтартрӗ.

Паян ирхине Ятман правленинче Левентей ун куҫӗ умӗнчех суя сводка панине курчӗ. Вӑл района ӗнер ыраш вырса пӗтертӗмӗр, патшалӑха виҫӗ обозпа икҫӗр центнер тырӑ леҫрӗмӗр тесе хыпарлать.

— Эс ыраш вырса пӗтертӗн те-и ӗнтӗ?—терӗ Ятман, ӑна кӑшт та пулин вӑтантарма ӗмӗтленсе. Левентей кулса ҫеҫ илчӗ:

— Вӗсемшӗн пурпӗрех мар-и? Паян пӗтермен-тӗк—ыран пӗтеретпӗр, ыран мар-тӑк—тепӗр кун.

— Апла санӑн вырма тухнӑ кунах ыраша йӑлтах пухса кӗртрӗмӗр тесе пӗлтермеллеччӗ. Ырларах паратчӗҫ.

— Э-э, тусӑм ӑна чеен тӑваҫҫӗ ҫавӑ, ӗненмелле пултӑр,— унсӑрӑн колхоз ятне яма пулать.

Ҫав вӑхӑтра Ятман ҫартан таврӑнсанах вӑл кӑҫал куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялав илме ӗмӗтленни ҫинчен калаҫнине аса илчӗ. Ҫакӑн пек суя сводкӑсем парса „кӗрешет" ӗнтӗ вӑл Хӗрлӗ Ялавшӑн, колхоз ячӗшӗн ҫакӑн пек „тӑрӑшать". Капла пулсан, ӗҫсем нумаях малалла каяссине кӗтмелли ҫук. Райисполкомпа райкома пӗлтерес пулать те, часрах вырӑнтан кӑларса сирпӗтес пулать.

Ку ӗҫ хыҫҫӑн Ятман, Левентей пирки вӑл мӗнле те пулин виҫене ларса юсанмӗ-и-ха тесе шутласа пурӑнаканскер, ӑна нихӑш енчен те шанми пулчӗ. Вӑл хӑйне Левентее ӗҫрен мӗнтаран часрах кӑларсан, колхозшӑн ҫавӑн чухлӗ лайӑхрах пу-

лать тесе татса каласа хучĕ. Тен, райисполкомпа райком, вăл мĕнле çыннине тĕплĕ пĕлсе, ăна ĕçрен кăларасси çинчен ыйту лартиччен Левентей тата çулталăк ытла улталакаласа пурăнĕ, анчах ку колхозшăн усăллă пулас çук, çавăнпа та, аван мар тесе тăмасăрах, ĕçе юрăхсăр председателе хирĕç Ятманăнах сăмах пуçлама тивет.

Часах Ятманшăн Левентее ĕçрен кăларас ыйтупа райкома кайма хистекен тепĕр сăлтав та тупăнчĕ. Пĕр касхине, ĕçрен ывăнса таврăннă хыççăн çывăрма выртас тенĕ чухне, ун патне Кăтра Михала пырса кĕчĕ. Вăл ăна председатель çинчен тата тепĕр тĕлĕнмелле япала каласа кăтартрĕ.

Левентей касҫулĕм правлени членĕсене пухнă пулать те, итем çинчи тырра колхоз кĕлетне кĕртес вырăнне ĕçкунĕсем тăрăх çавăнтах колхозниксене валеçсе пама сĕннĕ пулать. Патшалăха тырă парса татиччен тата колхозри кирлĕ пек фондсене хывса çитеричченн тырра ĕçкунĕсем тăрăх валеçме юраманнине пĕлсе тăракан Кăтра Михала кăна хирĕç пулнă, вăл çапса типĕтнĕ тырра тӳрех хатĕрлев пунктне леçме сĕннĕ. Вара Левентей правлени членĕсемпе „апла пулсан малтан актива çеç валеçетпĕр“ тесе калаçса татăлнă.

— Кам вара ун активĕ?—ыйтрĕ унтан Ятман.

— Хам та пĕлместĕп.

— Сан хăвăн тырă пур пулĕ вĕт-ха?

— Манăн пур, ман пирки сăмах та пулма пултараймасть. Ыттисене парасшăн ĕнтĕ вăл тата хăйне илесшĕн.

— Пĕлместĕп, тем хăтланатăр унта,—сиввĕн kалаpĕ Ятман.

— Хăтланасси-масарĕ... Эпĕ калатăп: патшалăха парса татмасăр, мĕнпур фондсене тумасăр валеçме юрамасть, тетĕп. Вăл урăхла ăнлантарма пăхать. Парас пеккине эпир кирекхăçан та паратпăр, тет. Эпĕ: саккун-саккунах, ăна пăсма юрамасть, тетĕп. Вăл: тĕрĕс, саккуна пăсма юрамасть, анчах пăсмасăр айккинчен иртсе кайма юрать, тет.

— Ăнланать-и вăл—куншăн ăна тытса хупаççĕ вĕт!

— Пултараççĕ. Мĕншĕн тесен ку сăтăрла ĕç. Патшалăха памалли тырра килсерен валеçсе лар-ха... Çавăнпа та эпĕ тӳрех сана калас терĕм. Вăл, коммунист, тытса чартăр, терĕм.

— Чаратпăр. Кун пек пулсан, ăна председательте те тытма май çук. Вăл пĕтĕм колхоза тĕп туса хурать.

— Тĕрĕс!—терĕ Кăтра Михала хыттăн.—Кун пирки те эп сана тахçанах каласшăнччĕ. Мĕн çав пули-пулми çынна тытса усратпăр çак эпир? Элле пирĕн çынсем çук-и? Никам та председатель вырăнне хумасть, çапах та нихăшĕ те шарламастпăр... Тахçанах кăларса сирпĕтмелле. Вĕренме каятăп тесе çӳрет. Кайтăр мур шăтăкне! Тасални паха...

Малтан Ятман колхоз правленийĕ хăйĕн чĕленесм хушшинче тырă валеçме тытăнни çинчен никампа калаçмасăрах райкома пĕлтерес тенĕччĕ, анчах кайран вăл шухăша пра-

хăçларĕ, тĕплĕ ыйтса пĕлес, Левентейпе хăйпе калаçса пăхас терĕ. Сĕлĕ вырса таврăнсан, вăл Левентей пӳрчĕ патне пырса чӳречерен шаккарĕ. Чӳречерен Левентей амăшĕ пăхрĕ.

— Левентей пур-и? —терĕ Ятман. Лешĕ ăна чĕнес вырăнне такампа калаçса илчĕ. Ятман пĕр сăмаха çеç илтрĕ— „Ятман", терĕ амăшĕ. Пӳртри çынни „кĕтĕр" терĕ пулас та, вăл вара чӳречене уçмасăрах: „пур" терĕ.

Ятман сисет: ăна çак çурта кĕме йывăр, кĕрес те килмест, халь ун Левентейпе ним çинчен те тавлашас килмест. Анчах, мĕн тăвас тетĕн, кĕрес пулать, тен, юлашки хут пулĕ, çапах та тепре вăрçас пулать.

Левентей ăна сиввĕн йышăнчĕ, ĕлĕкхи пек вăл Ятман пĕр сăмах каланă çĕре вунă сăмах шатăртаттарса тăкмарĕ. Çук, ку та тĕлĕнтермерĕ ăна. Кăна вăл шăп вырăнлă тесе шутларĕ, мĕншĕн тесен, Левентей ĕлĕкхи пек юрама тăрăшса пакăлтатнă, вĕсен хушшинче мĕн пулса иртнине манса кайса хитре сăмахсем калама тăрăшнă пулсан, ăна татах та ытларах йĕрĕнтерне пулĕччĕ.

— Эс чирлемен пулĕ те, пит тухса çӳреместĕн? — терĕ Ятман.

— Чирлемен-çке. Паян хире те тухса кĕтĕм.

— Станци тунă çĕрте мĕнле унта ĕçсем?

— Вот çавăнта пулман вара. Ху кайса курман-и?

— Эп ялан машинăпа. Ниепле те вăхăт тупаймастăп. Ак, пушанатăп та, тепре Шупашкара кайса килетĕп.

— Кайса кил, кайса кил. Тата, Ятман, шутласа хур-ха эс, мĕнчухлĕ укçа, мĕнчухлĕ тырă кирлĕ пулать станцине тума? Смета пекки туса хатĕрле. Оборона фондне тырă нумай памалла теççĕ, тен, станци валли юлмĕ те.

— Райкомра пулап-ха ыран, калаçăп,—терĕ Ятман. Унтан, май тупăннă чух, Левентейне хăйне ыйту пачĕ:

— Тырă тенĕрен эп санран пĕр япала ыйтса пĕлесшĕнччĕ. Эсир ĕнер правлени ларăвĕ туса иртнине тет-и унта?

— Пухăнса калаçрăмăр.

— Мана мĕншĕн чĕнмерĕр?—терĕ Ятман.

— Сана чĕнесси... Лару тесех пуçтарман ăна, эс те, Куçсăр Куçма та пулманччĕ.

— Мĕнле тырă валеçесшĕн вара эсир? Уншăн пĕлетни сана мĕн тăваççĕ? Тытса хупаççĕ. Тырă кăçал кăна валеçместпĕрçке-ха эпир? Яланах çапла тунă: патшалăха парса татнă, МТС-а панă, фондсем тунă, ыттине вара ĕçкунĕсем тăрăх валеçнĕ. Кăçал эс çĕнĕ номер шутласа кăларатăн.

— Эпир хамăр хушăмăрта кăна кăшт валеçесшĕнччĕ.

— Япалана саккун тăрăх тăвас пулать, Левентей. Эс устава пăсатăн. „Хамăр хушăмăрта". Мĕн тени пулать вăл „хамăр хушăмăрта" тени? Эсĕ никам та пĕлмест тесе шутланă ĕнтĕ. Ятман та сисмест тенĕ. Сисеççĕ, ачам. Ку ĕнтĕ сан скандал пулчĕ. Кăна сӳтсе-явас пулать.

Левентей ăна хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ, чĕлхе вĕçĕнче тăракан „сўтсе явăр“ текен сăмахĕсене те каламарĕ. Ятман сак çумне таянтарса хунă патаккине алла тытса унпа урайне шаклаттарса илчĕ, унтан, пуçĕнчи салтак картусне тўрлетсе, ура çине тăчĕ.

— Ну, ман çине ан çилен,—терĕ вăл,—çитес ларура эп сан çинчен ыйту лартатăп. Курайман сăр тăвать тесе ан шутла. Пĕркунхи пек Ятман ман вырăна председателе кĕресшĕн тесе те калаçса ан çўре.

Урама тухсан, Ятман çул хĕрринче Сехре Иванĕпе Кăтра Михала калаçса тăнине курчĕ. Сехре Иванне курсан, вăл ўкĕнсе илчĕ. „Каллех манса кайрăм, çакăн ĕçĕ пирки калаçса илмеллеччĕ. Мĕн суда памасăр тăраççĕ ăна?“ терĕ.

— Кайрăмăр пĕве патне!—чĕнчĕ вĕсене Ятман.

— Халех пыратпăр!—терĕ Кăтра Михала.

Сехре Ятмана пĕр сăмах чĕнмесĕр ирттерсе ячĕ. Вăл чылай аякка кайсан тин кăмăлсăр саспа каласа хучĕ:

— Мĕн вăл пурне те хăваласа çўрет?

— Хăваламасть-çке, чĕнчĕ çеç,—кулчĕ Михала пичче.

— Ăна никам та хушман пулĕ-çке? Ĕлĕк председатель пулнă та ĕнтĕ, халь те хуçа пулас килет. Хуçа пулма лайăх вĕт, хăваласа кăна çўре.

— Ай, эс ăна юратмастăн пулас, Иван?

— Мĕн пур вара ун çумĕнче ытлашши юратмалли?

— Усалли те нимĕн те çук-çке? Лайăх çапăçса орден илсе килнĕ, кунта та кăшт ĕçе юсасшăн.

— Эпĕ пур çĕре те сăмсине чиксе çўрекен çынна юратмастăп. Кам вăл пирĕншĕн? Мĕне суйланă ăна?

— Кам вăл тетĕн? Çавна халь та пĕлместĕн-и? Вăл—рядовой колхозник, кирлĕ пулсан, председатель те. Хуçа. Вот кам вăл!

Сехре ку сăмахсене хирĕç нимĕн те калаймарĕ. Нимле сăмах та тупайман енне кăсъинче табак енчĕкĕ шырама тытăнчĕ.

* * *

Кăтра Михала бригади, ыраш пухса кĕртсе, çуртырри вырма тухрĕ. Ĕçсем бригадир шутланинчен чылай ăнăçлăрах пулса пычĕç. Тыр вырма тухиччен Михала пичче кăçал çынсене ĕçе кăларма йывăр пулать, хĕрарăмсем ачи-пăчисене, выльăх-чĕрлĕхе, çумпахчасемпе садсене пăрахса хире тухас çук тесе пăшăрханнăччĕ. Çынсен ăнланăвĕ пысăк иккен, вĕсем, темле йывăр пулсан та, колхоз производствинчен пăрăнмаççĕ, вăйпитти арçынсемсĕр ĕçлесех килхуçалăхне тирпейлесе пыма та, колхоз ĕçне тума та ĕлкĕреççĕ.

Харкашасси пулатех ĕнтĕ вăл: малтан бригадăри темиçе хĕрарăм васкаса вырнă хушăра пучах тăкăннине ним вырăнне хумасăр ĕçлерĕç; Михала пичче вĕсене кăшт хăтăркаласа

илчӗ, пӗриккӗшӗнне, тӑккаланчӑк нумай тесе, вырнӑ каҫалӑкне йышӑнмарӗ, вара ӗҫ самаях юсанчӗ. Халь хӑмӑл ҫине пӑхма та кӑмӑллӑ: пучах ҫукпа пӗрех, старик, хӗпӗртенипе, хӗрарӑмсемпе шӳтлесе те илет:

— Йӑмӑксем, питӗ таса выратӑр, пӗрне те хурлама ҫук.

— Санӑн вӑрҫас килет-и?

— Бригадирӗн вӑрҫас килмесӗр. Вӑрҫмасан, кӑтартмасан, эпӗ бригадир та мар.

— Эсӗ, сӑлтав туп та, хӑвӑн кӑмӑлна каяканнипе харкаш кӑна.

— Пурте лайӑх ӗҫлетӗр пулсан, епле харкашас-ха манӑн?

— Ав тепӗр бригадӑна кай, начар ӗҫлеҫҫӗ, халӗ те ыраш вырса пӗтерейменҫҫӗ,—тет пӗр хӗрарӑмӗ.

Ытти бригадӑсем кӗртыррине тата икӗ кунтан вырса пӗтерчӗҫ. Ҫынсем ыраш ҫӗмелӗ купаланӑ хушӑра Кӑтра Михала бригадинчи стариксем сӗлӗпе пӑри сурачӗсем купаларӗҫ. Кӗлте ураписем кӳлнӗ лашасене хирелле хытӑрах хӑваланӑҫемӗн ҫӗмелпе тулнӑ ыраш пусси пушансах пычӗ. Транспорт бригади (калас пулать, колхозниксем ку ята кӑҫал пӗрремӗш хут илтрӗҫ) хатӗрлев пунктне ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр тырӑ турттарчӗ. Часах колхоз патшалӑха ыраш ытлашшипех парса татрӗ, ҫитес ҫулшӑн та чылай центнер парса хучӗ.

Ҫынсем виҫӗ ерне лайӑх ҫанталӑк тӑнӑшӑн савӑнса ӗҫлерӗҫ, Тата икӗ эрне хушши ҫумӑр пулман пулсан, вӗсем пӗтӗм ӗҫе тирпейлесе пӗтеретчӗҫ, анчах чи юлашкинчен, паян-ыран ҫуртырри вырса пӗтерес тенӗ чухне, йӗпе-сапа пуҫланса кайрӗ.

— Аҫа ҫапманӗ,—вӑрҫса илчӗ Михала пичче,—памарӗ вӗт пӗтерме. Пӗр шӗвелсе кайсан, лар вара чӳречерен пӑхса.

Вӑл правленине Куҫсӑр Куҫма патне кайса ларчӗ, ун умӗнче тепре сурса ҫанталӑка вӑрҫса илчӗ. Унтан, ытла каласма юратман Куҫмана ӗҫлеме чӑрмантарас мар тесе, правленинчен тухса ферма еннелле утрӗ.

— Эс мӗн ӗҫсӗр ҫӳретӗн?—алӑкран кӗрсенех ыйту пачӗ ӑна арӑмӗ.

— Ӗҫсӗр ҫӳреместӗп, ӗҫ шыраса ҫӳретӗп,—терӗ Кӑтра Михала.

— Ӗҫ шыраса ҫӳретӗн? Эп сана темле ӗҫ те тупса пама пултаратӑп. Акӑ, сӑмахран, ферма участокӗнче ҫӗрулми кӑлармалла. Мӗнтен начар ӗҫ вӑл сан валли?

— Начар ӗҫех мар. Анчах ӑна ферма работникӗсем кӑлармалла пулӗ, тетӗп эпӗ. Е кам та пулин килсе кӑларса парасса кӗтетӗр-и?

— Ан хӑра, хамӑрах кӑларӑпӑр,—терӗ парӑнсӑ Кӗтерне инке.—Иртнӗ ҫул та хамӑрах кӑларнӑ. Ак, тытӑнатпӑр та, ҫумӑр витӗрех кӑларма пуҫлатпӑр, сиртен маларах кӑларса пӗтеретпӗр.

— Кӑлармасӑр. Мӗн тума уяртасса кӗтсе лармалла-ха? тен, юр ҫӑвиччен те уяртмӗ те, вара унччен кӗтсе лармал-

ла-и? Эп паçăрах Левентее каларăм-ха: мĕн кĕтсе тăмалла, кăлармалла та сарайĕнче çил çинче типĕтсе пуçтарса хумалла, терĕм.

— Хĕрсем ăçта?—терĕ Кĕтерне инке.

— Итем çинче. Ыраш çапаççĕ.

— Эс мĕншĕн çапмастăн?

— Эп Ятмана шыратăп-ха, çанталăк кун пек тăнă чухне темиçе платникпе çав электростанцие туса пĕтерес тетĕп. Штоп сан фермăра çап-çутă пултăр. Çапла-и?

— Эй, сире шансан, вăл вунă çулта та пулмасть.

— Мĕншĕн пулмасть?

— Мĕне кĕтсе тăратăр тата? Ĕç пĕтнĕ вĕт?

— Пуçтаратпăр çав ĕнтĕ.

— Сахрун чирлесе ӳкрĕ те, ĕçĕ те чарăнса ларчĕ. Тунăннă платниксем...

Çул çинче Левентее курса, старик ăна Сахрун вырăнне хăйне лартма сĕнчĕ. Лешĕ унпа килĕшес çуккине малтанах пĕлсе, вăл председателе капла туни тĕрĕс пулнине нумайччен ĕнентерсе тăчĕ.

— Çук,—терĕ лешĕ,—эсĕ бригадир. Сана урăх ĕçе лартма юрамасть. Станцине туса пĕтерĕпĕр-ха ăна, вăл ниçта та тармĕ.

— Эпĕ унта та, кунта та ĕлкĕретĕп, бригадăри ĕçе пăрахать тесе ан шутла эсĕ.

— Çапах та юрамасть, Сахрун пиччех туса пĕтертĕр, паян самай пек терĕ, тухать ак вăл ĕçе.

Ятман унпа станци çинчен сăмахланинчен ытларах Левентее кăларнă хыççăн колхоз председательне кама лартасси çинчен калаçрĕ.

— Пĕтĕм ял халăхĕ сан çине пăхать,—терĕ вăл.—Пирĕн ялта хастар çынсем нумайччĕ, анчах вĕсем пурте фронтра. Сана тумалла пулать председатель. Ĕçлесе пăх ватăлса çитиччен.

— Кирлĕ мара ан калаç,—чарчĕ ăна Кăтра Михала.—Эс пур çинче кама председателе лартма пултаратпăр эпир? Паллах, сана суйлатпăр.

— Ĕлĕкхи пек ик уреллă пулсан, хирĕç пулмăттăмччĕ, куратăн—эп ухсах çын.

— Кансĕрлемест. Эс урупа ертсе ан пыр, пуçпа ертсе пыр.

— Çапах та председатель пулаймастăп. Эп ун çинчен шухăшласа пăхнă.

Ку Михала пиччешĕн ăнланмалла пулмарĕ-ха. Колхозри мĕнпур ĕçе хутшăнакан, машинăпа тыр вырма та пултаракан, кунĕпе ура çинче çӳрекен Ятман, хăрах уреллă тесе, председателе кĕме хăраса тăрать. Мĕншĕн? Нимĕн те паллă мар. Тен, вăл района ĕçлеме кайма шутлать пулĕ?

— Эс яланах ĕçлĕ çын пулаканччĕ, пĕр пытармасăр кала ĕнтĕ: председателе ларма сана мĕн кансĕрлет?—терĕ Кăтра Михала, çине тăрса.

— Ну, калам эппин: ҫитес кунсенче мана райком вĕренме ярасшăн. Вот мĕн.

— Ав, мĕнле. Ку начар япала мар. Анчах вĕренме вăрçă пĕтсен кайăн ĕнтĕ. Халĕ колхозра никам та ҫук-ҫке-ха.

— Пушă чухне каяс. Кайран, пĕр ĕҫе кӳлĕнсен, пулмасть вăра манран каясси.

— Вĕренсе тухсан кам пулатăн?

— Уята куç курать. Тен, председатель те пулма лекĕ.

Ятман ăна колхоз председателĕ пулма ахальтен çеç сĕнмест иккен, вăл ун пирки райкомра та калаçса пăхнă. Калаçнăçемĕн вăл старике ытларах ӳкĕтлеме, колхозниксен пухăвĕнче хăйĕн ҫинчен ыйту лартас пулсан, турткалашса тăмасăрах килĕш тесе ыйтма пикенчĕ. Вĕсем ялти паллăрах ҫынсене пурне те шутласа тухрĕç, председателе лартма юрăхлă ҫын чăнах та тупаймарĕç. Те хăйĕн сăпайлăхне пула, те кĕтмен çĕртен пысăк ĕç сĕннĕрен хăраса ӳкнипе Михала пичче Ятман сĕннине ниепле те йышăнасшăн пулмарĕ. Колхоз председательне суйлани ăна хăйне ытлашши чыс туни пуласшăн туйăнчĕ, вăл кăна хăй пултарайман пысăк ĕç тесе шутларĕ. Çавăнпа та килĕнче кун пирки арăмĕ хăтăрса тăкни ăна пĕрре те тĕлĕнтермерĕ. Утмăла ҫывăхарса ҫитнĕ ҫынран мĕнле председатель пултăр? Кĕрекере килĕшекен сухал председатель сĕтелĕ хушшинче епле килĕштĕр? Арăмĕ: чипер ĕҫлес вырăнне Левентей пек кахал пуласшăн тесе хăртса пĕтерсен, вăл ăнсăртран килсе кĕнĕ шухăша пуҫран йăлтах кăларса пăрахрĕ. Фермăна кайма хатĕрленнĕ Кĕтерне инке ăна Сехре Иванĕ ҫинчен тĕлĕнмелле япала каласа култарса пĕтерчĕ, вара старик Ятманпа калаҫни ҫинчен пĕр вăхăтлăха пачах та маннă пек пулчĕ.

Сехре Иванĕпе чăнах та кулăшла ĕç пулса иртнĕ иккен. Ҫынсем хĕрсе ҫуртырри вырнă вăхăтра вăл хăйĕн садĕнчи пулнă-пулман панулмине йăлтах пуçтарнă та, ещĕксене тултарса икĕ лавпа хулана турттарса кайнă.

Кунта вăл ăна самаях хакла сутма, икĕ лав панулмирен темиҫе пин тенкĕ укҫа тума пултарнă. Анчах ҫывăхра сутас пулсан, вăл мĕнпур панулмине ещĕке тирпейлесе хурса та кайман пулĕччĕ, вăл ăна хаклăрах хакпа сутма ĕмĕтленнĕ. Ухмахах мар ҫав Сехре: унăн колхозра ĕçкунĕ ҫукпа пĕрех, унпа хĕл каҫиччен тăранса пурăнмаллăх тырă илеймĕн, ҫавăнпа пĕртен-пĕр качакапа садпахчи ҫине ытларах шанас пулать.

Кĕтернене хăй каласа панă тăрăх, вăл килĕнчен йĕркеллех тухса кайнă. Тĕшмĕше ĕненекенскер, хăй хапхаран тухнă-тухманах ҫул урлă каçма пултаракан ула кушакне апат парса, пӳрте хупса хăварнă. Телее, урам тăкăрлăкне ҫитсен ăна икĕ тулли витрепе шыв ăсса хăпаракан Тарье тĕлпулнă. Ку вара ун ăшĕнчи шиклĕхне пĕтĕмпех сирсе янă. „Тулли витрене хирĕç пулсан, ҫул ăнаканччĕ, чиперех кайса килетĕп пулас-ха", тенĕ Сехре Иванĕ. Халĕ ĕнтĕ ăна тепĕр япала çеç хăратнă—вăл

çул çинче Ятмана е Кӑтра Михалана курасран шикленнӗ. Ытти çынсенчен ӑна никамах та нимле сиен те кӳме пултарайман, Ятманпа Кӑтра Михала, çав тери хытӑ вӑрçнисӗр пуçне, Сехрене каялла илсе кӗме пултарнӑ. Хирте ӑна çул хӗрринчен инçере мар тыр выракан колхозниксем кула-кула ӑсатса янӑ.

Хулара Сехре ещӗкӗсене пароход çине тиенӗ те Атӑл тӑрӑх анаталла çул тытнӑ. Чылай кайсан вӑл, ку пароход çинчен анса, Урала кайма Кама парохочӗ çине ларнӑ. Илтнӗ вӑл таçтан: Уралти хуласенче панулми хаклӑрах, унтан самаях пуйса таврӑнма пулать. Çавӑнпа та Сехре çул вӑрӑмминчен те, вӑхӑт нумай иртнинчен те хӑраса тӑман, Кама тӑрӑх хӑпарнӑ та хӑпарнӑ. Хайхи пӗр пысӑк хулара, панулмине автомашина çине тиесе, пасара илсе пынӑ. Укçалла кӗрӗшнӗ шофер унӑн тем пысӑкӑш ещӗкӗсене аран-аран çӗклесе çӗрелле антарнӑ.

— Ӑçтан илсе килтӗн эсӗ кун чухлӗ панулмие, миçе пин тенкӗлӗх сан кунта?—тенӗ вӑл.

— Чӑваш республикӗнчен.

— Лайӑх панулми мар пулас, темле усал шӑрш кӗрет.

— Питӗ лайӑх. Çисен чӗлхӳне çӑтса яратӑн. Ак, тутанса пӑх. Сехре, васкаса пӗр ещӗкне уçнӑ та, çиелти улӑмне сирсе, пӗр ывӑç панулми туртса кӑларнӑ. Анчах ун ывӑçӗнче нимле панулми те пулман, хуралса, çӗрсе кайнӑ шӑршӑллӑ япаласен муклашкисем çеç выртнӑ. Хыпӑнса ӳкнӗ Сехре çавӑнтах тепӗр ещӗкне уçнӑ—унтан та çӗрӗк шӑрши çеç кӗнӗ, виççӗмӗш ещӗкӗ те, пиллӗкмӗшӗ те, тӑваттӑмӗшӗ те йӑлтах пӑсӑлнӑ пулнӑ.

— Э-э, тусӑм, сан таварна пасара илсе кӗме те юрамасть, куншӑн халех штраф параççӗ. Укçа хушса тӳле те, хула тулашӗнчи пӗр çырмана кайса тӑкӑпӑр,—тенӗ шофер, кӑвакарса кайнӑ хуçа çине куларах пӑхса.

Сехре çапла тунӑ та. Вӑл юлашки укçине шофера тӳленӗ те, панулмине йӑлтах хула тулашне тухса тӑкнӑ, киле вара выçлӑн-тутлӑн тенӗ пек аран-аран çитнӗ.

Яла таврӑнсанах вӑл хӑйӗн хуйхи-суйхи çинчен каласа пама фермӑна Кӗтерне инке патне кӗнӗ.

— Апла сана çиленсе пурӑнмасть-ха вӑл?—ыйтрӗ Михала пичче арӑмӗнчен.

— Çиленмест пулас. Пӗркунхине, тырӑ вӑрлани çинчен правленире каласа парсан, кӑшт чӗнмесӗр çӳрекелерӗ, халӗ манпа ним пулман пекех калаçать. Унӑн кӑмӑлӗ ытла усалах мар вӗт. Наян вӑл, тӗнче наянӗ, анчах шӑмарса çӳрекен çын мар.

Вара Кӗтерне инке Сехрене хӑйне темиçе хутчен каланӑ шухӑша упӑшкине те каласа пахрӗ.

— Авлантарас пулать ӑна. Ӗçченрех хӗрарӑм тупса парас пулать те, вӑл унран пачах урӑх çын туса хурать. Ун чунӗ чӳпӗк пекех вӗт, темле те хуçкалама пулать.

— Ку тӗрӗс те пулӗ, ӗлӗк, арӑмӗ виличчен, вӑл ун пек марччӗ,—терӗ упӑшки те.

* * *

Ятман шухӑшлани тӗрӗс пулчӗ: председательте ирӗксӗртен ӗҫленӗ пек калаҫса ҫӳрекен, яланах вӗренме каяссипе хӑратакан Левентей ӗҫ хӑйне кӑларасси патне ҫитсен сасартӑк шӑртланса ӳкрӗ. Вӑл Ятмана тем те пӗр каласа вӑрҫса пӗтерчӗ, унтан хӑйӗн тӗрӗслӗхне кӑтартса пама района тухса вӗҫтерчӗ.

Ҫапла вӗт вӑл: хӑйне пырса перӗнсен, час-часах халиччен усал пек тытман ҫын та хаярланса каять, ялан витсе тӑракан ырӑ ҫивиттине сирсе пӑрахса, хӑйӗн тӑшманӗсене хирӗҫ мӗнпур ирсӗр меслетсемпе ҫапӑҫма тытӑнать. Райкомпа райисполкомра Левентей Ятман ҫинчен суйса, темӗн те шухӑшласа кӑларса, элеклесе калама пултарнине пӗтӗмпех каласа тӑкрӗ. Ятман куншӑн нимӗн чухлӗ те кӳренмерӗ, ҫакӑн хыҫҫӑн вӑл Левентей йӑнӑшпа ҫеҫ колхоз руководителӗ пулнине, хӑйӗн этем пахалӑхӗсемпе вӑл нимле пысӑк ӗҫе те юрӑхсӑррине тата та ытларах ӑнланса илчӗ.

Ҫапах та унӑн Левентей пирки района тата иккӗ кайса килмелле пулчӗ.

Хӑйне райкомра хӳтӗлесе тӳрре кӑларайман хыҫҫӑн Левентей аллисене лаштӑрах усрӗ, тавлашса, мухтанса ҫӳреме мар, килне таврӑнна хыҫҫӑн тек правленине те пырса курмарӗ. Пухӑва унсӑрах пухрӗҫ. Колхозниксем пухӑнса ҫитнӗ тӗле ӑна чӗнме ярсан, ун патне чупса кайса килнӗ ача Левентей чирлӗ тесе пӗлтерчӗ. Ачи Левентее картишӗнче курнӑ имӗш, вӑл унта вутӑ ҫурса тӑнӑ. Ятман кунтан та тӗлӗнмерӗ: намӑсне ҫухатнӑ ҫынтан тем те кӗтме пулать, колхозниксем хӑйӗн ҫинчен кусҫӗретӗн каланине итлеме хӑракан Левентей чирлӗ мар ҫӗртенех чирлӗ тесе те суйма пултарать.

Председатель килмен пирки пуху правлени отчетне те итлеймерӗ. Колхозри ӗҫсем ҫинчен Ятманӑн хӑйӗнех кӗскен каласа памалла пулчӗ. Левентей отчет туса парасса шанса тӑраканскерне, ӑна пӗр хатӗрленмесӗр-тумасӑр сӑмах калама ҫӑмӑлах пулмарӗ. Вӑл ҫартан таврӑннӑранпа хӑй мӗн курнине пӗр пытармасӑр каласа пачӗ.

— Юлташсем!—терӗ вӑл.—Эсир пирӗн колхоз вӑрҫӑччен мӗнле ӗҫленине лайӑх астӑватӑр. Вӑрҫӑччен вӑл районра малта пыракан колхоз пулнӑ. Эпир ҫулсеренех кӳршӗ ялсенчен тухӑҫларах тырпул туса илеттӗмӗр. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессипе те пирӗн колхоз яланах пӗрремӗш шутланнӑ. Эпир кашни ҫул никамран ытларах ҫырла-ҫимӗҫ сутаттӑмӑр, пирӗн пулӑ кӳлли таврара чи чапли пулнӑ, пирӗн утар темӗн чухлӗ пыл панӑ. Ҫакна илсе шутласан, ӗлӗкхинчен нумай начар ӗҫлетпӗр, юлташсем. Пирӗн колхоза халӗ районра кайра пыракан

колхоз теме çук, анчах вăл малта та пымасть. Чылай колхозсем пиртен вăйлăрах тырпул туса илеççĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, вĕсем çĕре пиртен лайăхрах ĕçлеççĕ.

Ку сăмахсене каланă май вăл сĕтел çывăхĕнчи ватăсем çине пăхса илчĕ. Вĕсем ăна тăнласа итлеççĕ. Такăшĕ тĕрĕс тенĕ евĕр пуçне сулнăн туйăнчĕ, вара Ятман тата хăюллăнрах калама пуçларĕ.

— Хăшĕ-пĕрисем халĕ вăрçă вăхăчĕ, çĕре лайăх ĕçлеме мар, шуратса хăварма та йывăр теме пултараççĕ. Ку пĕрре те тĕрĕс мар. Начар сухалама вăй çитеретпĕр пулсан, паллах, лайăх сухалама та вăй çитеретпĕр. Тата çакна манмалла мар: пĕр çул начар сухаласа е çĕртме туса хăвармасăр хытарса янă çĕр темиçе çуллăха пăсăлса юлать. Пирĕн кашнинчех лайăх сухалама тăрăшас пулать, тепĕр çулхи ĕçе кăçалах çăмăллатас пулать.

— Лашасем çитмеççĕ,—терĕ хыçалтан пĕри.

— Тĕрĕс, лашасем çитмеççĕ—килĕшрĕ Ятман.—Лашасем вăрçăра. Пирĕн вăрçă çавна пĕлтерет те ĕнтĕ: çынсем çитмеççĕ, туртăм вăйĕ çитмест, тыррине вара халичченхинчен ытларах акса тумалла. Пирĕн ялта лашасем çитмеççĕ теме те çук-ха, эпир тепĕр чухне пасара та лашапа каятпăр. Чылай ялсенче вăкăрсене, хĕсĕр ĕнесене кӳлеççĕ, пирĕн те çавăн çинчен шухăшласа пăхас пулать.

— Çавăн вĕçнех юлтăмăр-и ĕнтĕ?

— Вăкăрпа кĕлте кӳрес пулсан вара кунне пĕрре кăна хутлас пулать.

— Лашасене фронта тата та пама лекет, юлташсем,—терĕ Ятман,—хăвăрах куратăр—вăрçă ыранах пĕтме пултараймасть. Тăшман Сталинград патнелле тапаçланать. Ăна тытса чарма, каялла хăваласа ярса хамăр çĕршывран кăларса сирпĕтме сахал мар вăй хумалла пулать. Вăкăрпа ĕçлессине кулăш вырăнне ан хурăр. Çынсем çӳреме вĕрентнĕ те, кунне пĕрре кăна хутламаççĕ, вăкăрпа тырă та турттараççĕ, вăрмана та каяççĕ, суха та тăваççĕ.

Çав вăхăтра алăк уçăлса хупăнчĕ те, ларакансем хыçĕнче ватăрах çын кăххăм! кăххăм! тесе ӳсĕрни илтĕнчĕ. Çыннине хăйне курмарĕ пулин те, Ятман ăна сассинчен лайăххăнах палларĕ—ку Сехре пулчĕ. Вара вăл хăй калас тенĕ тĕп шухăш çине куçрĕ, колхозри çынсем çинчен калама тапратрĕ.

— Ман шутпа, колхозри ĕçсем начарланни чи малтан лашасем сахалланнинчен килмен, колхозниксенчен чылайĕшсем, колхозра ĕçлесси çинчен манса, хăйсен хуçалăхĕнче çеç ĕçлеме тытăннинчен килнĕ. Ĕлĕк пирĕн ялта колхоз ĕçне хутшăнман, тыр вырнă вăхăтра е авăн çапнă чухне килте ларакан çын пулнă-и? Пачах пулман. Халĕ шутласа тухăр-ха—ĕç вăхăтĕнче ялĕпе миçе çын килте ларать? Колхозниксем хĕрсе тырă выраççĕ, çав вăхăтра пĕри хăйĕн ĕни валли утă хатĕрлет, тепри Урала панулми сутма каять, тата тепри хăйĕн пах-

чинче кĕштĕртетет. Хăшпĕр çынсем, хăйсене колхоз ура çине тăратнине манса, хăйсемшĕн çеç ĕçлеме пикенчĕç, колхозлă пурăнăçран пăрăнса каллех пĕччен хуçалăх çулĕ çине тăчĕç. Ан манăр, юлташсем, пирĕн тĕп пуянлăх вăл—колхоз. Патшалăхăн тĕп тĕрекĕ—колхозра, уйрăм хуçалăхлă хресченсенче мар. Колхозсене пула эпир Хĕрлĕ Çара тăрантармаллăх, промышленноçа ĕçлеттермеллĕх тырă парса тăратпăр. Уйрăм çынсем çапла шутлаççĕ ĕнтĕ: колхоз—кирлĕ япала, вăрçă хыççăн унта ĕçлетпĕрех, унтан тырă нумай илме пулать, ĕçе машинăпа тăваççĕ, анчах халĕ пирĕншĕн пахчари çĕрулмипе килкартинчи ĕне шанчăклăрах, çавăнпа чи малтан килти ĕçсене тирпейлемелле, теççĕ. Ун пек шутлакансем пирĕн ялта та сахал мар. Илĕр-ха акă...

Кунта вара ун сăмахĕнче колхозри çынсен ячĕсемпе хушамачĕсем кайрĕç. Пухăва çавăнтах чун кĕчĕ: çынсен куçĕсем палăрмаллах чĕрĕлчĕç, ларакансем унта та кунта пĕр-пĕрин çине пăха-пăха илчĕç. Сехре Иванĕ алăк патне никам курмалла мар чĕркуçленсе ларнă пулин те, çынсем куçĕсемпе ăна та шыраса тупрĕç, Ятман вăл Урала панулми сутма кайни çинчен каланă чухне пĕтĕм халăх каçса кайсах кулчĕ.

— Иван пичче те хăйĕн садĕнчи панулми çинчен кăна шухăшланă, колхоз тыррине ним вырăнне те хуман,—терĕ Ятман.—Вăл панулми сутса тăранса пурăнма ĕмĕтленнĕ. Анчах колхоз тырри садри панулминчен нумай шанчăклăрах-мĕн. Ӳстермесĕрех калатăп, кăçал пирĕн колхозниксем ĕçкунĕ пуçне икшер килограмм ытла тырă илеççĕ, тата çĕрулмипе ытти пахча-çимĕçĕ те чылай тивет. Иван пичче 300 ĕçкунĕ тунă пулсан, колхозран пĕччен икĕ çул тăранса пурăнмаллăх тырă илетчĕ. Халь акă унăн панулми те çук, тырă илмелĕх ĕçкунĕ те çук. Кам айăплă кунта? Иван пичче хăй айăплă. Колхозра ĕçлес пулать. Вăл—пирĕн пуянлăхăн тĕп çăлкуçĕ.

Малалла ĕнтĕ Ятманăн колхоза епле ертсе пыни çинчен калама тиврĕ. Кун çинчен вăл питех те асăрханса, колхозниксем хăй ĕлĕк председатель пулнă та, халĕ ĕнтĕ ыттисене пурне те тиркет тесе каласран çавтери сыхланса каларĕ. Анчах председатель пирки калама ăна колхозниксем хăйсемех пулăшрĕç. Левентей тесессĕнех, унтан та кунтан йĕплĕ сăмахсем илтĕнсе кайрĕç. Вĕсенчен Ятман халăх председатель çине мĕнле пăхнине тата тĕплĕрех чухласа илчĕ.

— Левентей-и? Мĕн председатель вăл! Инкек!

— Килте йытă пăтратман çынна ял хушшинче колхоза ертсе пыма лартнă.

— Пулмасть унтан пуçлăх.

— Наян вăл!

— Кăлармалла ăна!

Çынсем именсе те хăраса тăмарĕç, пĕр хускатса панă япала Левентей çинчен пикенсех калаçрĕç. Вара часах пухăва çакă

паллă пулса тăчĕ: председателе вырăнта хăварма май çук, колхоза ертсе пыма халех урăх çынна суйлас пулать. Ятманпа районран килнĕ юлташ хăйсен шухăшĕсене каласан, йĕри-таврa вĕсемпе килĕшнĕ сасăсем илтĕнсе кайрĕç.

— Тĕрĕс!

— Тахçанах çавна лартмалла пулнă.

— Михала—халăх ĕçĕшĕн тăрăшакан çын.

Кĕтесре такăшĕ „Çамрăкраххи тупаймарăр-и мĕн?" тесе хучĕ.

Анчах вара çийĕнчех темиçе сасă хупласа лартрĕ:

— Ватă пулсан та—чунĕ çамрăк.

— Темле çамрăкран та ирттерет!

— Ан тавлашăр, Михалана тумалла председатель!

— Çавна тумалла—ĕçĕ те пĕтрĕ!

Кăтра Михала пирки тавлашнă май çынсем Ятмана мансах кайнă мĕн, пĕр старикĕ: „Эп ăнланаймастăп, пирĕн ĕлĕкхи председатель—Ятман мĕнрен начар пулчĕ-ха?" тесе ыйтсан тин ларакансем хăйсенчен хăйсем тĕлĕннĕ пек „Чăнах та!" — тесе хучĕç.

Ятманăн вара ирĕксĕрех хăйĕн пирки те каламалла пулчĕ.

— Май çук-тăк, Михаланах суйлас пулать, килĕшетпĕр,— терĕç колхозниксем. Председателе суйлама урăх хушамат асăнни пулмарĕ. Колхозниксем пурте Кăтра Михалашăн сасăларĕç.

* * *

Пуху пĕтсен, райком инструкторĕ Ятмана Левентей патне кĕрсе тухма сĕнчĕ.

— Кирлĕ мар,—терĕ лешĕ.—Ун патне кĕрсе кăмăла та пăсмастăп.

— Çапах та интереслă,—терĕ инструктор.—Чирлĕ-и, чирлĕ мар-и, мĕн шутлать, мĕн калаçать.

— Чирлĕ марри паллах. Ирхине эп ăна хамах куртăм.—Ну, паян пуху пухатпăр-и?—тетĕп.—Пухăр,—тет.—Санăн отчет тумалла пулать,—тетĕп.—Кирлĕ пулсан, тăватпăр,—тет.

Инструктор ăна ирĕксĕрлесех Левентей патне илсе кайрĕ.

Левентей пулса иртнĕ тавлашусем хыççăн Ятман тек нихçан та ун патне ура ярса пусас çук тесе шутланă курăнать, вĕсем пырса кĕрсенех вăл тĕлĕннипе куçĕсене те чарса пăрахрĕ.

— Кильăрах,—терĕ вăл тенкелсем сĕнсе.

Ăна çак вăхăтра хăйне тыткалама çавтери йывăр пулчĕ, вăл ниçта та ларма пĕлмерĕ, „кильăрах" тенисĕр пуçне нимле сăмах чĕнеймерĕ. Тути çинчи ирĕксĕртен çуралнă кулă паллипе таçта аякалла пăхакан куçĕсем унăн ултавлă кăмăлне тата вăйлăрах палăртса тăчĕç. Ятманпа инструктор çав-çавах сăмах хушманнине кура вара, калаçăва хăйĕн пуçласа яма тиврĕ.

— Сасартăк темĕн пулчĕ мана, пĕртăруках пуç та, вар та, ыратма тытăнчĕ. Пухăва та пыраймарăм...
— Ирттертĕмĕр ĕнтĕ сансăрах,—терĕ Ятман.
— Отчетсăрах иртрĕ-и?
— Отчетсăрах.
— Тепĕр куна хăвармаллачĕ. Кун пек мĕнле вара?
— Эс тепринче те чирленĕ пулсан?—терĕ инструктор янракан уçă сассипе,—вара мĕн тумалаччĕ?
Левентей, унăн шухăшне тĕрĕс ăнланса, хăйне такам кӳрентерне пек каласа хучĕ:
— Эп юри чирлемен, мĕншĕн ун пек калатăр? Отчет хатĕр манăн.
— Халь кирлĕ мар ĕнтĕ, пухăва ирттертĕмĕр. Сана колхоз председателĕнчен хăтарас терĕç.
— Тахçанах хăтармалла пулнă. Хăçантанпа ыйтатăп эпĕ... Тен, мĕнпур калаçу пĕр тавлашусăрах, ним харкашусăрах иĕтетчĕ пулĕ, анчах ĕçе каллех Ятман вĕрилĕхĕ пăсса пăрахрĕ.
— Итле-ха, Левентей, мĕнле суйласа лартнă сана председателе?—терĕ вăл, сăмах шала кĕрессине пĕлмесĕр.
— Халăх суйланă,—терĕ Левентей.
— Ĕçлессӳ килмен. Мĕн тума килĕшнĕ эсĕ?
— Вăй çитнĕ таран ĕçленĕ. Эс кайнăранпа икĕ çул ертсе пынă. Ĕçлемен пулсан, вăрçă вăхăтĕнче икĕ çул председательте тытмĕччĕç. Эс киличчен Левентей пултараймасть тесе калани пĕрре те илтменччĕ-ха...
— Пысăк чыс панă сана...
— Халăх панă, эсĕ мар.
— Халăх панă?—çиленсе кайрĕ Ятман.—Халăх сана председателе суйласа, пĕр енчен хисеп тунă, тепĕр енчен сан çине тем пысăкăш обязанноçсем хунă. А эсĕ? Эсĕ чысне йышăннă, мĕншĕн тесен вăл кăмăллă япала, анчах обязанноçсене йышăнман. Вот сан çавăнпа çапла килсе тухрĕ те.
— Мĕнле килсе тухрĕ?
— Сана паян председательтен кăларчĕç. Акă мĕнле килсе тухрĕ.
— Эсĕ уншăн питĕ савăнатăн ĕнтĕ,—сиксе тăчĕ Левентей.— Сана шăп çавă кирлĕ пулнă. Эс хăвна çеç ăслă çын тесе шутлатăн, сан шутпа ыттисем пурте ухмах. Çапла-и?
— Сана председательтен мана çапла кирлĕ пулнăшăн мар, хушнă ĕçшĕн ответлăх туйманшăн кăларнă.
— Тĕнче хĕсĕр мар, кунта кăларнă пулсан, урăх çĕрте ĕç тупатпăр.
— Хушнă ĕçшĕн ответ тытни урăх çĕрте те кирлĕ,—парăнмарĕ Ятман.—Пуçлăх пулсан пушшех...
— Тен пуçлăх та пулăпăр.
— Пуçлăхран пур çĕрте ыттисенчен ытларах ыйтаççĕ, Левентей,—терĕ инструктор та.

Пĕр пăсăлнă калаçу вара тек ниепле те юсанса, йĕркеленсе каяймарĕ. Сăмах çине сăмах хирĕнчĕ, кăмăла хирĕç кăмăл тăчĕ. Ятманпа инструктор тухса кайсан та Левентей ăшра хăйнех хўтĕлерĕ. „Тупăннă юлташ,—терĕ вăл.—Мана пулăшас вырăнне пур çĕрте те ман çула пўлме тăрăшать. Мĕн таврăннăранпах чĕрре кĕрсе пычĕ, пур-çукшăнах кашни утăмра вăрçма тăчĕ. Халĕ ăшĕ канчĕ ĕнтĕ, халĕ хăй юратнă çынна суйлаттарчĕ."

* * *

Каçхине колхоз правленине чăп тулли халăх пуçтарăнчĕ. Унта хĕрлĕ пусмапа витнĕ сĕтел çине репродуктор лартнă. Халь репродуктор пĕтĕм пўлĕме сэвăнăçлă юрăпа янратса тăрать-ха, анчах пурте кĕтеççĕ, тепĕр темиçе минутран радиопа Сталин докладне пама тытăнмалла. Çынсем шăпах лараççĕ, вĕсем доклад пуçланасса чĕререн хумханса кĕтеççĕ. Шавланине юратман ватăсем кĕтесре хĕвĕшекен çамрăксем çинелле канăçсăррăн пăха-пăха илеççĕ.

— Шăпланăр унта алăк патĕнче!—тет тĕпелтен Ятман.

Хĕрарăмсем унăн хутне кĕреççĕ:

— Çамрăксем! Майĕпентерех!

— Пăрахăр унта шавлама, ачасем!

Часах пĕтĕм ял халăхĕпе тулнă пысăк пўлĕм шăпах пулса тăчĕ, радио та музыка пама пăрахрĕ. Стариксем хывнă çĕлĕксене хулхушшине хытăрах хĕстерчĕç. Çынсем темле асамлă вăй тĕртнипе малалла, хĕрлĕ пусма сарнă сĕтел çинчи репродуктор патнелле туртăнчĕç. Ак репродуктор, передача пуçланассине систерсе, хыттăн шавлама тытăнчĕ. Ун шавĕнче таçта çакăнтан инçе те мар пек туйăнакан куçа курăнман пўлĕмре çынсем калаçнă тата ўсĕрнĕ сасăсем илтĕнчĕç. Унччен те пулмарĕ, унта тăвăллăн алă çупни кĕрлесе кайрĕ.

— Октябрьти Социализмлă Асла революци 25 çул тултарни çинчен доклад тума Государство Оборона Комитечĕн Председательне Сталин юлташа сăмах паратăп,—терĕ пĕр арçын сасси. Вăл сасă çавăнтах темиçе пин çын тăвăллăн алă çупни айне пулчĕ.

— Сталина сăмах пачĕ,—терĕ Ятман. Хăй çавăнтах ура çине тăрса алă çупса ячĕ. Ун хыççăн правлени пўлĕмĕнчи пĕтĕм халăх çĕкленчĕ. Пĕр вăхăт хушши кунта та, таçти чаплă ларури пек, тăвăллăн алă çупни кĕрлесе тăчĕ.

Сталин хăйĕн докладне майĕпен, лăпкăн пуçларĕ. Вăл çапла пĕр сассине хăпартмасăр сехете яхăн каларĕ. Сĕтел пĕр вĕçĕнче упăшкипе юнашар ларакан Кĕтерне инкене ку доклад тунă пек мар, хăй тахçан пĕлекен çынсемпе туса ирттернĕ юлташла калаçу пек туйăнса кайрĕ. Епле вăл тĕплĕн хăй калассине лайăх пĕлсе тата итлекен çынсем хăйне лайăх ăнланассине шанса калать. Кĕтерне инке куçĕсем Сталин

тĕпелте çакăнса тăракан портречĕ çине ўкеççĕ. Унта та епле лăпкă вăл, епле ăнланмалла! Курать Кĕтерне инке—Сталин никам çине те мар, ун çине пăхать, хăйĕн йăваш куçĕсемпе, тути айĕнче пытанса тăракан ăслă куллипе ăна саламлать.

— Халĕ ĕнтĕ пирĕн заводсем, колхозсемпе совхозсем, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăр, çителĕклĕ ĕçлесе пыраççĕ, кун пирки иккĕленмелли çук,—тет вăл. „Çапла,—тет Кĕтерне инке.—Ĕçре ўркенсе тăмастпăр-ха ăна. Ĕçленĕ, хам та ĕçленĕ, упăшка та, хĕрсем те. Ĕçпе пулăшмалла пулсан, яланах пулăшма хатĕр. Ан иккĕлен, Сталин юлташ, ĕçре тăшмансене маххă памăпăр-ха“.

— Çынсем типтерлĕрех, хастарлăрах, дисциплинăллăрах пулса тăчĕç, вăрçă хушнă пек ĕçлеме вĕренчĕç. Тăван çĕршыв умĕнчи тата ăна фронтра хўтĕлекенсем умĕнчи—Хĕрлĕ Çар умĕнчи хăйсен тивĕçне ăнланса илме тытăнчĕç. Хăйсен гражданла тивĕçне ăнланман çынсем, çăвар карса тăракан, наян, кахал çынсем тылра сахаланнăçемĕн сахалланса пыраççĕ. Йĕркеллĕ, дисциплинăллă çынсем, гражданла тивĕç витĕр витнĕ çынсем йышлăланнăçемĕн йышлăланса пыраççĕ,—тет малалла Сталин юлташ. Кĕтерне инке ун сăмахĕсене хăйсен колхозĕнчи ĕçсем çине, хăйсен колхозĕнчи çынсем çине куçарать. „Халăх тăрăшать, ăна тўрех каламалла,—тет вăл.—Малтанхи çул нумайăшĕ ĕçе виççĕ-тăваттă пырса каласан та тухмасчĕç. Пушă мәрри çине, ачасем чирлени çине перетчĕç, вăрçатчĕç, тулашатчĕç. Халь бригадирсем ирсерен кил тăрăх шаккаса та çўремеççĕ, çынсем хăйсемех тухаççĕ. Пур ĕнтĕ наянсем те, анчах эпир халь вĕсене начар мар вĕрентетпĕр“.

Çулпуç фронтри ĕçсем çинчен калать, нимĕçсен вăхăтлăх çĕнтерĕвĕсене ăнлантарса парать. Вăл пулас çĕнтерў çинчен, Хĕрлĕ Çар нимĕçсене тытса чарма кăна мар, аркатса тăкма та пултарасси çинчен калать.

— Эпир çĕнтеретпĕр, кун пирки нимле иккĕленў те пулма пултараймасть,—тет вăл. Çак сăмахсене илтсен, Кĕтерне инке чĕрере вăй хутшăннине туйнă пек пулать. Хăлхара пĕр сăмах, лăпкăн та шанчăклăн каланă сăмах янăраса тăрать: эпир çĕнтеретпĕр, эпир çĕнтеретпĕрех!

Лере, юнашарти куçа куранман пўлĕмре, каллех нумайччен алă çупаççĕ. Колхозниксем шăп. Вĕсем çулпуçăн пĕр сăмахне те сиктересшĕн мар. Колхозниксем те алă çупаççĕ, анчах сассăр—чĕрепе.

Ятман çынсем çине пăхать те, курать: лере алă çупни ытларах кĕрленĕ майăн кунти çынсен куçĕсем ытларах ялтăраççĕ. Сталин çакăнта сĕтел патĕнче тăнă пек, çынсем пĕчĕккĕнех ун патнелле туртăнаççĕ. Кашнин чĕрере савăнăçлă туйăм ытларах çĕкленсе пырать. Сталин тăшманран тăрăхланă чухне лери залра çынсем кулсан, кунта та колхозниксен пичĕсем сасăсăр, илемлĕ кулăпа сарăлаççĕ. Куççемвара тата ытларах

çутăлаççĕ. „Мĕн çĕклет, мĕн савăнтарать çынсене çакăн пек йывăр вăхăтра, мĕн çуталать вĕсен куçĕсенче?“—тет Ятман. „Пурăнăç пек пысăк савăнăç, хурçă пек çирĕп шанчăк,—тет ăна шухăш.—Çак халăх хăйĕн вăйне шанса тăрать, вăл пĕлет: ку таранччен никам çĕнтерейменнине халь, çирĕмпилĕк çул иртсен, пуççăр нимĕçе парăнас çук ĕнтĕ. Халăх савăнать, мĕншĕн тесен, унăн çак хăрушă вăхăтра ăсларан та ăслă çулпуç—Сталин—пур. Вăл хăйĕн çулпуçĕпе мухтанать“.

Лере каллех пĕтĕм пӳлĕме кисрентерсе алă çупаççĕ. Пĕр чарăнмасăр, тăваллăн çупаççĕ. Çине тăрса, вăйларанвăйлă çупаççĕ. Ятман курать: ак унти хускану кунта куçать. Кунта та çынсен аллисем çĕкленеççĕ. Правлени пӳлĕмĕ те чылайччен алă çупнипе кĕрлесе тăрать.

Унтан пӳлĕм шăпланать. Доклад пĕтрĕ. Репродуктор калаçма чарăнчĕ. Анчах колхозниксем вырăнтан та хускалмаççĕ-ха. Пĕр вăхăт хушши никам та нимĕн те чĕнмест. Кашни хăйĕнпе çеç калаçать. Кашнине доклад пĕтĕм чĕререн хумхантарнă.

— Ăнланмалла-и, юлташсем?—тет Ятман.

— Ăнланмалла! Ăнланмалла!—теççĕ çынсем.

Часах пӳлĕмре доклад тăрăх калаçу пуçланать. Иккĕн калаçаççĕ, виççĕн калаçаççĕ, тăваттăн-пиллĕкĕн уйрăлса сăмахлаççĕ. Доклад çынсене йăлтах хускатса ячĕ, вĕсен пуçĕнче темĕн чухлĕ шухăш çуратрĕ. Мĕнчухлĕ ыйту кунта: союзниксем çинчен, Хĕрлĕ Çар çинчен, Ленинградпа Севастополь, Сталинградпа Моздок, Японипе Турци çинчен. Сĕтел патĕнче темиçе арçын иккĕмĕш фронт пирки сӳтсе-яваççĕ.

— Пулатех апла иккĕмĕш фронт?—тет Сахрун пичче.

— Пулатех!

— Çапах та мĕн нумай кĕттереççĕ-ха вĕсем? Хатĕр мар-шим?

— Пурте хатĕр, тет, салтакĕсем валли пурне те валли тӳмме лартса пĕтерейме́н, тет.

— Тӳмме лартасси кăна юлнă пулсан, нумай тăмаççĕ апла?

— Паллах, нумай тăмаççĕ.

Тем çинчен калаççан та, сăмах юлашкинчен хăйсен çыннисем çине, ашшĕсемпе упăшкисем, шăллĕсемпе пиччĕшсем çине куçать.

— Никам та тытса чараймарĕ нимĕçе, пирĕн тытса чарчĕç, тет Сталин. Çавсем çинчен калать вĕт-ха вăл? Çавсем тытса чарчĕç ĕнтĕ эсреле?

— Часрах çапса аркатчăр Гитлера, часрах таврăнччăр.

Çапла калаçса тăнă вăхăтра юнашар пӳлĕмре, колхоз клубĕнче, хуткупăс сасси янраса каять.

— Эй, юлташсем, халь хамăр вечера айтăр,—тет колхоз председателĕ Кăтра Михала.—Праçник тĕк праçник пултăр! Пăртак кайса савăнар.

Колхоз Октябрь праçникне пӗр çӗрте мар, виçӗ çӗрте—кашни бригадӑра уйрӑмӑн—уявларӗ. Пӗрремӗш бригада çыннисем пурте правленинех юлчӗç. Кунта тепӗр пӳлӗмре уяв ячӗпе кӑшт сӑра туса лартнӑ тата хуларан эрех те илсе килнӗ.

— Кӗрӗр, кӗрӗр,—терӗ Кӑтра Михала кӗрекенелле иртсе.—Çын патӗнче мар, хамӑр патӑмӑрта, вӑтанса ан тӑрӑр.

Пӳлӗмре кукӑль пӳремеч шӑрши кӗрет. Сӗтел çине ӗçмеçиме купаланӑ. Тӗпелте ик-виç хӗрача пичкерен сӑра тултараççӗ. Часах ак çынсен умне кашнин умнех пӗр курка сӑра тата пӗр черкке эрех пырса ларчӗ.

— Пӗрремӗш черккене хамӑр аслӑ çулпуçӑмӑршӑн, Сталин юлташ сывлӑхӗшӗн ӗçетпӗр. Сывӑ пултӑр Сталин юлташ!—терӗ Кӑтра Михала, пурне те черкке çӗклеме сӗнсе.

Иккӗмӗш черккене фронтри тӑвансемшӗн ӗçрӗç. Куннинче алӑсенче черккесем ытларах тытӑнса тӑчӗç. Нумайӗшӗсен куçӗсенчен куççуль юхса анчӗ. Анчах никам та саспа макӑрса ямарӗ. Çынсем çапла йӗпе куçсемпе чылайччен пӗр чӗнмесӗр тӑчӗç. Кӑтра Михала та вӗсене нимӗн те каламарӗ. Çук, кунта никама та йӑпатма кирлӗ мар. Кӑмӑлсем çемçелчӗç, анчах вӑл иртет.

— Хӗрарӑмсем, савӑнӑçларах!—кӑшкӑрчӗ Кӗтерне инке.—Ӗçре нихçан пуçа усманнине ӗçкӗре кичеммӗн ан ларӑр ӗнтӗ!

Хӗрарӑмсем те, арçынсем те пӗчӗккӗн уçӑлса хӑюлланса пычӗç. Купӑсçӑ чӑваш ташши калама пуçларӗ, вара çынсем пӗчченӗн те, мӑшӑрӑн та ташлама пикенчӗç. Пӑртак хӗрнӗ хыççӑн стариксем те ташша тухрӗç.

— Ну, купӑсçӑ, Михала пичче ташшине пуçла-ха,—терӗ Ятман.—Михала пичче ташласшӑн ларать. Манса кайман-и эс ун кӗввине?

— Манман,—тет Карачӑм, вара тӑхӑр кукӑрлӑ ташӑ кӗвви пуçлать. Ку—„Михала пичче ташши". Ку кӗвве ялта кашни ача пӗлсе тӑрать.

Хӑй чылайччен авкаланса халӑха култарнӑ хыççӑн Кӑтра Михала Кӗтерне инкене сӗтӗрме пырать.

— Карчӑк, пулӑш, куран стариккӳ ывӑннӑ.

Кӗтерне инке хыççӑн ытти хӗрарӑмсем, унтан хӗрсем тухаççӗ. Хӗрсем ушкӑнпа, çине тӑрса, такмакласа ташлаççӗ.

Сар хӗвелӗ ӑшӑтать,
Çутӑ тӗнче савӑнать.
Хӗрлӗ Çарта савни пуртан
Манӑн чунӑм савӑнать.
Чуптан савнӑ сар ачана
Хӗрлӗ Çара ӑсатрӑм.
Юрататӑп, кӗтеп терӗм,
Ӑшӑ чунне йӑпатрӑм.

Вӗсем хӗрнӗçемӗн хӗрсе пыраççӗ, тата хытӑрах такмаклама тытӑнаççӗ:

Савнă чунăм, утар-и,
Уй хапхине çитер-и?
Уй хапхине çитсессĕн
Ал тытса уйрăлар-и?
Шăнкăрч, эсĕ хатĕр пул
Ирхи юрă юрлама.
Савни, эсĕ хатĕр пул
Сусăрлансан сиплеме.
Эп каятăп, эс юлан,
Эсĕ маншăн ан кулян!
Сыхлар тăван çĕршыва
Урнă йытă Гитлертан!

Ташă хыççăн пӳртре çавра юрă пуçланать. Хĕрсем çавтери çинçе саспа, арçынсем хулăм саспа ăмăртмалла „Тухать-и те тухмасть-и“ юрра тăсаççĕ. Ĕнтĕ урамра та юрă сассисем илтĕнеççĕ. Кăна ытти бригадăсенчен ĕçкĕрен таврăнакансем юрлаççĕ.

— Савăнăр, юлташсем!—тет чылаях ӳсĕрĕлме ĕлкĕрнĕ Кăтра Михала.—Хĕрĕх тантăш—хĕр тантăш, утмăл тантăш ул тантăш—пурте савăнăр. Хăй сĕтел хушшинче калаçса ларакан Ятмана ĕçтерме туртăнать.

— Ятман, пăхап та, эс урах ларатăн. Давай ĕç! Кил, иккĕн шаккаса ĕçетпĕр.

— Çитет сана, эс ӳсĕрĕлме пуçланă, атте.—тет сăра тултаракан Анушка.—Ак вĕсем аннепе шаккаса ĕçеççĕ. Ав, куран анне те урах ларать.

Вăл амăшĕпе Ятман валли эрех тултарать те, çине тăрса ĕçтерме тытăнать. Лешсем ĕçмеççĕ, ăна кура Анушка тата ытларах куçа кĕрет, вĕсене шалтти ĕçтермесĕр те чарăнмасть.

— Сан хĕрне курмастăп-ха эпĕ,—тет питрен сар хĕр пек хĕрелсе кайнă Кĕтерне инке.—Чĕнмерĕн пулать-и вара Липăна ĕçке?

— Вĕсем хăйсем те ĕçкĕ тăваççĕ, çавăнпа килеймерĕ пулĕ.

— Э-э, ун пек юрамасть, Ятман. Пĕрле ĕçсе çиес пулать, пĕрле савăнас пулать. Çамрăклăх вăл çавăн чухне илемлĕ.

— Кăвтăрла ĕçпе çӳресе кураймарăм, те килет, те килмест,—пытармасăр каларĕ Ятман.

— Ай, тĕрĕс мар тăватăн, тусăм. Эс, ĕç тесе, кун пек пачах хĕрарăмсăр тăрса юлатăн. Кайран ӳкĕнмелле ан пултăр, çунат сарнă кайăк унталла-кунталла пăхкалĕ те, пăр-р! вĕçсе кайĕ, хӳрине те курса юлаймăн. Пĕркунах каларăм эп сана, хĕрĕ саншăн вилет, урăх никампа та çӳремест. Эс мана ĕнен ĕнтĕ...

Вĕсем çапла пăшăлтатса ларнине Кăтра Михала асăрхать те, курка йăтса каллех ĕçтерме пырать.

— Ятман, эс хуть хĕр тупса хĕрпе калаçса лар. Вăл пур, ман арăма тупнă та, тек унпа вăрттăн калаçса ларать.

— Çавăрас тетĕп-ха ăна,—тет Кĕтерне инке.

— Çавăрас... Çавăрас... Ятмана карчăк кăна мар, хĕр те тупса парăпăр-ха. Ав, тулта Липа тăратчĕ...

— Ăçта?—чӳрече витĕр курас пек кармашса пăхрĕ Кĕтерне инке.

— А çухатрăр-и? Çав кирлĕ сире. Вăл халь çук ĕнтĕ, ун çумне пaçăрах пĕр каччă çулăхатчĕ.

Хăй çавăнтах Ятмана ирĕксĕрлесе сăра ĕçтерет.

— Ан хăра, Ятман, хĕр тармасть вăл, сăра пĕтме пултарать.—Хĕр вăл... Мĕнле каланă-ха юрăра? Чĕн тилхепе шарт турĕ, манăн савни карт турĕ; карт турĕ те мăрт турĕ, хăех килсе чуптурĕ. Килет ак. Ытах килмесен, хам Анушкана наратăп, Липăран пĕрре те кая мар, çамрăкрах çеç.

— Анушкан хăйĕн каччи пур унăн, эс сисместĕн пуласха,—купăсçă çинелле кăтартать Кĕтерне инке.

— Э-э, чăнах та,—тет Михала пичче.—Манăн хамăн та кĕрӳ начар мар. Тракторист!

Ятман Липăна правлени çурчĕн тепĕр пӳлĕмĕнче шыраса тупрĕ. Вĕсем Людмилăпа темрен каçса кайсах кулса тăраççĕ.

— Айтăр киле, хĕрсем!—терĕ Ятман, вĕсем патне пырса.

— Халех-и?—терĕ Людмила.—Ташлар-ха, тепрер курка сăра ĕçер.

— Ура сывă пулсан, эп санпа кĕçĕр гопак ташламалла та...

— Гопак калама пĕлмест вăл, Карачăм.

— Вĕрентетпĕр.

Пысăк пӳлĕме каялла кĕрсен вĕсем чăнах та Карачăма гопак кала тесе аптратма тытăнчĕç. Лешĕ, хĕрсене итлесе, чылайччен купăсне ĕнерсе ларчĕ, унтан тара ӳкиччених асапланнă хыççăн ĕç тухманнине кура, юриех темле ăнланмалла мар кĕвве хыттăн чăсса ячĕ. Хĕрсем, чупса пырса, купăса çавăнтах тытса чарчĕç, итлемен купăсçăна çав-çавах гопак калама хистерĕç.

— Тухмасть, пултараймастăп,—терĕ Карачăм, купăсне çĕре лартса.

Çавăнтах вĕсем патне пĕр вăхăтлăха çухалнă Анушка та пырса тăчĕ.

— Мĕн пултараймастăн эсĕ, Карачăм?

— Гопак калама. Туртса кăларнă ав Людмила: гопак та гопак...

— Çынсем ыйтаççĕ тĕк—кала, мĕнле купăсçă эсĕ, хĕрсем ыйтнă кĕвве те калаймасан?

Карачăм, ун çине „эс те пулин хĕрхенместĕн" тенĕ пек йăвашшăн пăхрĕ те, купăсне ирĕксĕрех тепĕр хут алла илчĕ.

— Тухмасть, мĕн тавас-ха ĕнтĕ манăн?

— Тăрăш, вара тухать,—терĕ Анушка пăхăнтаракан сасăпа.

* * *

Колхоз электростанцине çĕнĕ çул иртсен ĕçе ячĕç. Мĕн чухлĕ савăнăç пулмарĕ пуль ялта ăна ĕçе янă чухне! Электростанци çурчĕ патĕнче хăй тĕллĕнех митинг пулса иртрĕ.

Унта вăрçă вăхăтĕнчи пархатарлă ĕçе ырласа хĕрўллĕ сăмахсем каларĕç, Хĕрлĕ Çарпа унăн чаплă çулпуçĕ Сталин юлташ ячĕпе нумайччен „урра" кăшкăрчĕç. Такăшĕ митинга Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче нимĕçсене аркатса тăкни çинчен хыпар илсе çитерчĕ, вара халăх хавхаланăвĕ пушшех ўссе кайрĕ.

— Сталинград патĕнче нимĕçсен 22 дивизине хупăрласа илнĕ!

— Фельдмаршал Паулюса хăйне те тыткăна илнĕ!

— Пирĕн çарсем хупăрланă нимĕçсене пĕтерсе пыраççĕ.

Çак хыпарсем çĕрĕн-кунĕн вăрçă шухăшĕпе пурăнакан, хамăр çар нимĕçсене тытса чарасса тем пек кĕтсе тăракан çынсене çавтери савăнтарчĕç. Сталинград парăнман! Сталинград патĕнче пирĕннисем çĕнтерне! Çынсем чунпа-чĕрепе çакна туйса илчĕç: нимĕçсене хирĕç пыракан вăрçăра пысăк улăшăну пулса иртрĕ, Хĕрлĕ Çар тăшмана шăп та шай вăл Атăл хĕрне тухма ĕмĕтленнĕ вăхăтра çапса хуçрĕ, ку ахаль çĕнтерў мар, питех те пысăк çĕнтерў.

Митинг хыççăн турбинăна ĕçе ячĕç те, пралук тăрăх пĕтĕм ялĕпе ток саланчĕ, сасартăк мĕнпур çуртра Ильич лампочки çутăлчĕ. Çутăласса çурри ĕненсе, çурри ĕненмесĕр пурăнна карчăксем киле халиччен нихçан пулман çутă килсе кĕнĕрен шартах сикрĕç.

— Çакă-и ĕнтĕ вăл электрицă тени?—лампочкăна аллипе хăра-хăра хыпашларĕ Матĕрне карчăк.

— Самăй çакă.

— Пăх-ха, хĕвел пекех çутатать, куçа шартарсах пăрахрĕ.

— Хăнăхатăн,—терĕ Кĕтерне инке.

— Çакна темиçе çул каяллах тăвасшăнччĕ те ĕнтĕ. Гитлер кансĕрлерĕ. Ха, епле лайăх унпа—куçа кăна мар, чуна та çутă. Çĕрĕпе ĕçле. Краççын кирлĕ мар, тĕтĕм тухмасть. Хĕрў çеç памасть, хĕрў парсан, апат та пĕçермелле те...

— Мĕнле вăл хĕрў памасть? Плиткă пулсан, унпа наччасах яшка пиçет. Шупашкара кайăр та плиткă илĕр, вара яшка пĕçермелли те пулать. Вутсăрах яшка пĕçеретĕн,—тет Кĕтерне инке.

Хăй вăл çутă парсанах малтанхи сăмахпа Алексее аса илчĕ.

— Алексей ялан çакна асăнатчĕ. Анне, час ак электрицă пулать, çĕрле те, кăнтăрлахи пекех, çутăра ларатпăр, тетчĕ. Курайĕ-ши мĕскĕн? Çаврăнса килейĕ-ши?

— Вăрçă вăхăтĕнчех электрицăллă пултăмăр та, вăрçă пĕтсен, нимĕçе çĕнтерсен мĕнле пурăнма тытăнăпăр эпир!—терĕ Михала пичче.—Çакна куратăн та, ал хăй тĕллĕнех ĕç патне туртăнать.

Каçхине Михала пичче çутă пўлĕмре арăмĕпе нумайччен ĕçлĕн калаçса ларчĕ. Урамран чупа-чупа кĕнĕ Укахви вĕсем капла мĕн çинчен калаçнине пĕлесшĕн пулса алăк патĕнче итлекелесе те тăчĕ, çапах та вĕсен сăмахĕнчен путлĕ нимĕн

те ӑнланаймарӗ. Кӑтра Михалапа Кӗтерне инке хушшинче вӑл каҫ ҫакӑн пек калаҫу пулса иртрӗ.

— Вот, карчӑк,—терӗ Михала пичче,—эпир кунта мӗшӗлтететпӗр-мӗшӗлтететпӗр,—усси фронта те ҫитет, те ҫитмест. Ҫынсем фронта мӗнле пулӑшаҫҫӗ пулӗ тетӗн эс? Ҫынсем хӑйсен укҫипе кӑна самолёт илеҫҫӗ!

— Ан ухмахланса лар, — вӑрҫса тӑкрӗ карчӑкӗ.—Мӗнле ҫын самолёт илме пултартӑр? Ӑна пасарта сутмаҫҫӗ вӗт?

— Пӗлетӗп, карчӑкӑм, пасарта сутмаҫҫӗ, заводра тӑваҫҫӗ. Ҫынсем заводра пӗр самолёт туса кӑлармалӑх укҫа параҫҫӗ. Пӗлетӗн-и?

— Вӑл пит хаклӑ тӑрать пуль?

— Хакли-масарӗ—ҫӗр пин тенке яхӑн.

— Пӗр ҫын ҫӗр пин тенкӗ ӑҫтан парайтӑр?

— Параҫҫӗ ҫав.

— Кам панӑ вара?

— Ан васка, хамах каласа парӑп. Саратов облӑҫӗнчи пӗр колхозра Ферапонт Головатый текен колхозник самолёт илме пӗччēнех ҫӗр пин тенкӗ хывнӑ. Ҫакӑн ҫинчен Сталина пӗлтернӗ те, Сталин ӑна хӑйӗн ячӗпе телеграмма янӑ. Хӗрлӗ Ҫаршӑн тӑрӑшнӑшӑн тав тӑватӑп, сан укҫупа самолёт тума хушӑп, тенӗ. Куртӑн-и?

Кӗтерне инке малтан упӑшки шӳт тӑвать пулӗ тесе шутларӗ, вӑл ӑна пӗрре те ӗненмерӗ. Ӑҫтан-ха пӗр ҫын ҫӗр пин укҫа тупса патӑр? Пӗр колхоз ҫавӑн чухлӗ пухса панӑ пул сан ҫеҫ...

— Вӑл пуян пулӗ ҫавтери, унсӑрӑн ахаль колхозникӑн ҫӗр пин тенкӗ укҫа пулма пултараймасть.

— Пуянни-масарӗ, пухнӑ ҫав ӗнтӗ вӑл, перекетленӗ. Сталин патне янӑ ҫырӑвӗнче те вӑл ҫаплах ҫырать: хам перекетленӗ укҫаран, тет.

Юлашкинчен Кӗтерне инке ӗненчӗ пулас, нимӗн те шарламарӗ. Пӑртак ларсан ҫеҫ упӑшкинчен:

— Пӗр ҫын панӑ пулӗ те-ха, ун пекки тата пур-и?—терӗ.

— Пур ҫав. Ахаль пулсан сапла калаҫмӑттӑм та... Тата пур. Головатый хыҫҫӑн ыттисем те параҫҫӗ. Чӑваш ҫӗршывӗнчи ҫынсем те параҫҫӗ. Ак, сӑмахран...

Кунта вӑл арӑмне паян хаҫатран вуласа пӗлнӗ ҫынсем ҫинчен каласа пачӗ, вӗсем государствӑна самолёт е танк тума ҫӗршер е аллӑшар пин пани ҫинчен пӗлтерчӗ. Улатӑр патӗнчи пӗр вырӑс ҫӗр пин панӑ, Пӑрачкав патӗнчи пӗр хӗрарӑм аллӑ пин тенкӗ панӑ. Елчӗк патӗнчи пӗр колхоз председателӗ ҫӗр пин тенкӗ хывнӑ.

— Ҫапла,—тет Михала пичче арӑмне.—Ҫынсем ывӑлӗсем валли танксем илеҫҫӗ, сан пек хытса лармаҫҫӗ.

Ку юри тӗртсе каланӑ сӑмахсене илтсен, Кӗтерне инке вӗри шывпа сапнӑ чухнехи пек сиксе ӳкрӗ.

— Мĕн вăл „хытса ларать?“ Кам хытать? Мĕн эс паян мана тарăхтарса ларатăн?

— Ан вăрç,—терĕ Михала пичче лăпкăн.—Чăн сăмахшăн ан çилен. Хытлăху пур ĕнтĕ сан, ăна ан пытар. Мĕнчул тырă сан халь пӳлмере? Çав тырра хăçан çисе яран-ха?

— Пур тырра çисе ярăпăр ăна. Тепĕр çул выçлăх пулас пулсан, мĕнпе пуранас тетĕн?

— Ха, ха, ха!—кулчĕ унтан упăшки.—Ав мĕншĕн ун чухлĕ тырă тытса усрать вăл! Выçлăхран хăрать. Халь ĕлĕкхи выçлăх пулмасть ĕнтĕ вăл, карчăк. Пĕр çĕрте пулмасан та, тепĕр çĕрте тыра пулать, сан пĕтсен те, теприн пур. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхра çынсем пĕр-пĕрне выçă вĕлермеççĕ. Тĕлĕнтеретĕн эс, Кĕтерне. Çынсем ытлашши тырра фронта параççĕ, эс тепĕр çул валли тытса усрасшăн. Мĕнле намăс мар-ха сана?

— Мĕн, пирĕн ытлашши нумай-им?—парăнмасть Кĕтерне инке.

— Шутла-ха,—тет Михала пичче.

Вĕсем вара мĕнпур илнĕ тата кивçен панă тырра тĕплĕн шутлаççĕ. Ăна укçа çине куçарса пăхаççĕ. Тырăсăр пуçне вĕсен сутмалли сухан, кишĕр, çĕрулми нумай иккен. Весенчен те чылай укçа тухать.

— Куратăн-и, мĕн чухлĕ пуçтарăнать,—тет Михала пичче.—Самолĕт илме çитмесен те, танк илме ытлашшипех çитет, карчăк. Парас мар-и?

— Пар ара. Ан пар тесессĕн эс мана хытă тетĕн. Пар, кăмăлу тултăр.

— Чăнах-и?—сиксе тăчĕ упăшки.—Паратпăрах-и, карчăк?

— Памасăр. Хĕрсем пур, хамăр ĕçлетпĕр. Çынсем вилменнине эпир вилес çук.

Михала пичче арамĕ патне пырса, ун аллине ярса тытрĕ, унтан леш сисмен çĕртенех арăмне çамкаран чаплаттарса чуптуса илчĕ.

— Вот арăм ман! Арăм мар—ылттăн, тупата туршăн, ылттăн! А эп ӳкĕнсе пурăнап: мĕншĕн качча илнĕ çакна, мĕншĕн качча илнĕ, тетĕп. Çакна илмесĕр кама илмелле пулнă-ха?

— Э, усал,—хăмсарчĕ ăна Кĕтерне инке,.—Ватсупнă...

— Ан вăрç,—чарчĕ Михала пичче.—Кăмăллă пул. Патшалăха вăрçса панă укçа кирлĕ мар, ăна таса кăмăлран панă укçа кирлĕ. Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм. Эп патшалăхпа мар, хам ухмах упăшкапа вăрçатăп. Тем кирлĕ-кирлĕ мар сӳпĕлтетме юрататăн çак эсĕ...

Каçхине Кăтра Михала çемьи апат çинĕ хыççăн та нумайччен сĕтел хушшинчен тухмарĕ. Кĕтерне инке сĕтеле шăлса тасатрĕ те, ыттисем вара Сталин юлташа мĕнле телеграмма ярасси çинчен сӳтсе-явма пуçларĕç. Анушка аллине хутпа ручка илчĕ. Вăл нумайччен асапланчĕ. Темиçе хутчен çырса тултарнă хут листине çура-çура тăкрĕ. Чылай асаплансан,

ушкӑнпа пурин кӑмӑлне те каякан ҫыру ҫырса хатӗрлерӗҫ. Анушка вара ак ҫак сӑмахсене шултра саспаллисемпе таптасан тепӗр хут куҫарса ҫырчӗ: «Мускав, Кремль, Верховный Главнокомандующине Иосиф Виссарионович Сталин юлташа.

Хаклӑран та хаклӑ ҫулпуҫ Сталин юлташ! Пирӗн халь пӗр ӗмӗт, пӗр тӗллев—нимӗҫ путсӗрӗсене тытса чарасси, вӗсене пӗтерсе тӑкасси. Эпир, колхоз хресченӗсем, ҫакна пурӑнӑҫлассишӗн нимӗскере те хӗрхенсе тӑмӑпӑр. Эпӗ, Молотов ячӗпе тӑракан колхоз членӗ Кудрявцев Михаил Данилович, хам перекетленӗ 50 пин тенкӗ укҫана Хӗрлӗ Ҫара валли боевой техника тума хыватӑп. Вӑл укҫапа танк илсе, танкне ман ывӑла Алексей Михайлович Кудрявцева пама ыйтатӑп.

„Молотов" колхоз членӗ Кудрявцев М. Д".

Юлашкинчен ҫавӑн пекех пысӑк саспаллисемпе адресне ҫырса хучӗ.

— Ме, атте, ал, пус,—терӗ Анушка, хутне ун патнелле шутарса.

— Пуриншӗн те ал пус,—терӗ Кӗтерне инке. Михала пичче вара васкамасӑр тата тӑрӑшса аяла хӑйӗн хушаматне ҫырса хучӗ.

* * *

Ятман паян ирхине колхоз правленине тул ҫутӑлнӑ-ҫутӑлманах пычӗ. Анчах Кӑтра Михала унтан та иртерех ситнӗ иккен. Вӑл ӗнтӗ вӑрман касма кайма хатӗрленнӗ хӗрсемпе калаҫса тӑрать.

— Колхоз председателӗ пит ир килнӗ,—терӗ Ятман, ӑна саламласа.

— Халӑха вӑрмана ямалла-ха, ҫывӑрма вӑхӑт ҫук.

— Инҫе ямалла-и?

-- Инҫе. Вӑрнар таврашнех.

— Хӗрӗсем матур, кайса ӗҫлӗҫ. Мана паян вӗренме каяс ыйтупа района чӗнеҫҫӗ-ха. Ҫула май лав тупӑнмасть-и, тесе кӗрсе пӗлес терӗм.

— Лав-и? Лав пулать. Ак хӗрсемпе каятӑн,—терӗ Кӑтра Михала.

— Вӗсем лавпа каяҫҫӗ-и вара?

— Лавпа пулмасӑр, ҫакӑн пек чаплӑ майрасене ҫуран ҫӳрететӗп-и вара эпӗ? Обязательно лавпа леҫетпӗр.

Чӑнах та Ятман хулана хӗрсемпе ларса кайрӗ. Райкомра ӑна нумай тытмарӗҫ, кӑнтӑрла иртнӗ тӗле вӑл киле каялла таврӑнчӗ. Ятман хӑҫан вӗренме каяссине пӗлнӗ пек малтанах сӑра тума хунӑ амӑшӗ каҫ кӳлӗм вара пичкине пуҫласа, килен-каяна сӑрапа хӑналама тапратрӗ. Часах пӳрте Карачӑм, Кӑтра Михала, Куҫсӑр Куҫма тата ыттисем те килсе кӗчӗҫ. Вӗсем ӗҫкине ӗҫмерӗҫ те темелле, калаҫасса вара ҫурҫӗр иртиччenex калаҫса ларчӗҫ.

Тепĕр кун ирхине амăшĕ çутăлнă-çутăлманах колхозран лав кӳлсе килчĕ. Иккĕшĕ те çула тухма ăшă япаласем тăхăнчĕç те, çуна ăшне кĕрсе ларчĕç. Хăйне ăсатма Ятман юриех никама та чĕнмерĕ, хула кăтартмалла амăшнех илсе каяс терĕ. Колхоз правлени тĕлне çитсен, Ятман чăтаймарĕ, амăшне хăварса унта чупса кĕрсе кайрĕ. Правленинче никам та çук иккен, пĕр карчăк çеç дежурнăй вырăнĕнче ыйăхласа ларать. Вăл, витĕрех куçлă марскер, ăна палласа та илеймерĕ, вара Ятман унпа сывпуллашмасăрах алăк патнелле васкарĕ. Çав вăхăтра тĕпелте телефон хыттăн янăраса кайрĕ, вăл вара каялла çаврăнса ун патне чупса пычĕ.

— Атăлкасси итлет!—терĕ Ятман трубкăна тытса.

— Атăлкасси-и?—терĕ арçын сасси.

— Çавă, çавă.

— Кам ку?

— Ятман.

— А-а, Ятман. Здравствуй! Ку—райком секретарĕ... Эс тухса кайман-и-ха? Паян каятăн апла... Ну, халь эс хутпа кăрандаш илсе çырса пыр-ха. Кунта сире валли питĕ кирлĕ телеграмма пур.

Ятман кĕсъинчен наччасах хутпа карандаш кăларса çырса пыма пикенчĕ.

— Ку телеграммăна эсир Кудрявцева хăйне парăр,—терĕ телефонпа секретарь,—каçхине çичĕ сехетре пуху пухчĕр. Пухăва эпир те çитетпĕр. Вот, çапла...

Алри трубкăна хурсан, Ятман пĕр вăхăт хушши ним тума аптраса тăчĕ. „Дежурнăя ярас-и е хамăн кайса парас? Ку карчăк çухатса пĕтĕм ĕçе пăсса пăрахмĕ-и?" Вăл телеграммăна карчăка памарĕ, амăшĕ патне тухрĕ те, ăна питĕ кирлĕ ĕçпе Кăтра Михала патне каймалли çинчен ăнлантарса, лашине каялла çаврăнчĕ.

— Мĕн пулчĕ тата? Вăл та пымасть пулĕ те?—терĕ амăшĕ.

— Пымасть. Ăна çак хута памалла. Кăтра Михалана Сталин телеграмма янă.

— Мĕн тесе телеграмма янă вара вăл ăна?

— Танк илме укçа панăшăн тав туса,—терĕ ывăлĕ.

— Айтур, мĕнле паллă çын пулса кайрĕ Михала. Сталин та хут ярать иккен ăна...

— Çапла çав!

Кăтра Михала тĕлĕнче ун умне пĕлĕт çинчен лапах ӳкнĕ пекех Людмила тухса тăчĕ.

— Ятман!—терĕ вăл, ун патне чупса пырса.—Манăн хулана каймалла, лартса каятни?

— Лартса каймасăр, пĕрле кайма хаваслăрах пулĕ.

— Эпĕ Михала пичче патне кĕрсе тухатăп та, наччасах вĕçтеретпĕр. Ăна Сталинран телеграмма килнĕ. Акă, кур...

Людмила телеграммăна хăй аллине илчĕ, вĕсем вара васкаса Михала пичче патне кĕрсе кайрĕç.

— Аван-и?—терӗ Ятман пӳрте кӗрсе.—Кайма тухнӑ япала каялла килтӗм. Колхоз правленине кӗтӗм те, ман тӗлех телефон шанкӑртаттарчӗ. Пырса тытрӑм—райком секретарӗ калаҫать. Ме, телеграмма ил, тет. Илтӗм—Сталин телеграмми! Акӑ...

Михала пичче ӗненмесӗр хутне ярса тытрӗ те, чылайччен ним чӗнмесӗр ун ҫине пӑхса тӑчӗ. Юлашкинчен тин, пӗтӗм пит-куҫран ҫутӑлса, „чӑнах та“ тесе хучӗ. Унтан телеграмма алран алла куҫрӗ. Ӑна Кӗтерне инке те, Анушка та, Укахви те темиҫешер хут вуларӗҫ.

— Ӗненес те килмест,—терӗ Михала пичче майӗпен.—Сталин телеграмми!.. Савӑнӑҫ, ман пӳрте кӗрейми, чӗрене вырӑнаҫайми савӑнӑҫ...

— Эп ахаль те савӑнӑҫлӑн тухса каяттӑмччӗ ялтан, кунта чуна ҫӗклесе яракан тепӗр япала тупӑнчӗ,—терӗ Ятман.—Телеграмма. Телеграммине хам ятпа янӑ пекех туйӑнать. Саламлатӑп сана, Михала пичче.

Ятман ун патне пырса, ӑна алран хыттӑн тытса чӑмӑртарӗ. Михала пиччене Людмила та ал тытрӗ.

Вӗсене тӗпелелле чӗнчӗҫ, анчах Ятман унталла иртмерӗ.

— Ҫук, ман ларса тӑма вӑхӑт ҫук. Ман вуниккӗ тӗлне хулана ҫитес пулать. Ахаль пулсан, эп кӗҫӗр каяс та ҫук. Кӗҫӗр яла районран килеҫҫӗ, пуху пулать. Райком секретарӗ: пуху пухчӑр, эпир каҫ пулнӑ тӗле ҫитетпӗр, терӗ. Питӗ шел, эпӗ хам пулаймастӑп. Луччӗ тепре сывпуллашар, Михала пичче. Тавах сана мана ҫапла савӑнтарса кӑларса янӑшӑн.

Вӗсем ашшӗпе ывӑлӗ пек пӗр-пӗрне ҫавтери ӑшшӑн алӑ тытса уйӑрӑлчӗҫ.

— Чипер кайса кил, Ятман,—сывлӑх сунчӗҫ ӑна пурте. Ятман вара, пуринпе те ал тытса, ҫуна ҫинче ларакан амӑшӗ патне тухрӗ.

— Санпа уйӑрӑлмалла мар-ха, санпа хулана ҫитичченех каласса каятпӑр-ха,—терӗ вӑл хӑй ҫумӗнче пӗчӗк ача пек сиккелесе пыракан Людмилӑна.—Уйӑрӑлас пулсан та эпӗ санпа хӑвӑнпа тӗлпулнӑ ҫӗртех—укӑлча патӗнчех уйрӑлнӑ пулӑттӑмччӗ...

— О, эпӗ эс вӗренсе таврӑниччен пурӑнатӑп-ха, кунтан эпӗ сан туйӑнта ташламасӑр каймастӑп,—терӗ Людмила, ҫуна ҫине ларса.

Тепӗр вунӑ минутран виҫӗ ҫын ларса пыракан хыҫлӑ ҫуна пӑрпа витӗннӗ ҫырма урлӑ каҫса, кӗрт хӳсе кайнӑ вӗтлӗх патнелле ҫывхарчӗ. Вӑрмана кӗрес умӗн Ятман каялла ҫавӑрӑнса тӑван ялӗ ҫинелле пӑхса илчӗ. Ялӗ курӑнмасть те ӗнтӗ халь. Ҫуртсем, кӗрӗк тӑхӑннӑ пек, йӑлтах шур юрпа витӗннӗ. Йамрасем ҫеҫ шурӑ тӗс ҫинче кукӑр-макӑр хура йӗр пек курӑнаҫҫӗ. „Акӑ вӑл кирек ӑҫта кайсан та чуна ялан хӑй патне туртакан чӑваш ялӗ,—терӗ ӑшра Ятман.—Аякран пӑхсан вӑл вилнӗ пек, ҫак хӑрушӑ вӑрҫа пула унта пӗр чун та

юлман пек. Анчах ял вилмен, вăл ĕçлет, вăл тулли пурăнăçпа пурăнать. Пăхма вăл калама çук тӳлек, унта çынсем çав тери лăпкă пурăнаççĕ пек. Анчах халь ял лăпкă мар, ял— çапăçать, вăл хăйĕн мĕнпур вăйне нимĕç мурĕсене тĕп тума парать.

— Людмила, лайăхрах пĕркен, шăнатăн,—терĕ вăл ларчăк çинче унталла та кунталла пăхса пыракан хĕрачана.

— Çук, шăнмастăп,—терĕ Людмила.—Ку сивĕ маншăн ним те мар.

Вăл юриех Ятман еннелле—çиле хирĕç çаврăнса ларчĕ. Ун пичĕсем хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайнă. Куçĕсем кулаççĕ, таçти аякри ĕмĕте курнă пек, темле савăнăçлăн кулаççĕ.

*Пĕрремĕш кĕнеке вĕçĕ.*

ЯКОВ УХСАЙ

# Влтава шывӗ хӗрринче

*Поэма*

1

Карпатри ту-чакăл урлă
Тӗтӗм витӗр çакăнта
Килнӗ чух, эпир çулта
Куртăмăр инкек те хурлăх.

Çапăçу кӗрленӗ майăн
Пытăмăр эпир вутра;
Юлчӗç нӳрлӗ тăпрара
Пытанса туссем чылайăн.

Яланах çӗршыв пахалӗ
Кӗрешсе вилнисене, —
Эп вӗсен ятне-сăнне
Чӗремре усратăп халӗ.

Юлташсен чаппе хисепӗ
Пырӗ йышлă ӗмӗре, —
Çывăрсан та, — тӗлӗкре
Вӗсене куратăп эпӗ.

Вăрçăра тăват çулталăк
Ир те, каç та кантăрла
Çиçӗмле те кăварла
Хăватне кăтартрӗ халăх.

Карпатри ту-чакăл урлă
Хӗсрӗмӗр тăшмансене,
Ватă Прага хулине
Кӳртрӗмӗр телей те кулă.

Пирӗн халăх ирхиве
Килнӗ кун — хула илемлӗ.
Сарăлчӗ чехсен çине
Ирӗкри тӗнче хӗвелӗ.

Нимӗҫе ҫапса-хирсе
Пӗтӗмпе ҫӗнтернӗ хыҫҫӑн
Ҫамрӑк чехсемпе хӗрсен
Умӗнчеччӗ хӗрлӗ пурҫӑн.

Ҫӗнӗрен ҫӗленӗ лайӑх
Ялавсен ҫуначӗсем
Вӗлкӗшетчӗҫ, ҫил вӗрсен,
Кантӑксем ҫинче нумайӑн.

Пирӗн ҫар, татти-сыпписӗр
Ҫапӑҫса, телей кунне
Карпатри тусем ҫине
Илсе килчӗ тӗтӗм витӗр.

Пирӗн пысӑк халӑх чунӗ
Вӑрҫӑра тӗреклӗрен
Килчӗ-ситрӗ инҫетрен
Чех сыннин хаваслӑ кунӗ.

Ҫавӑ кун эпир курман-и,
Ватӑ Прага хулинче
Пурччӗ пирӗн тум ҫинче
Нимеҫ хирӗсен тусанӗ.

Аслӑ ҫӗнтерӳ сехечӗн
Малтанхи минутӗнче
Салтаксен флягисенче
Эльба шывӗ чӳхенетчӗ.

Шӑрӑхра тутлах пулмин те,
Влтава хӗррине ларса,
Хурҫӑ каскӑпа ӑсса
Чех шывне ӗҫетпӗр ӗнтӗ.

Ҫитмӗл ҫич чӗлхеллӗ халӑх
Килчӗ вӑрҫӑ ҫулӗпе, —
Килчӗ ӗмӗр тӑршшӗпе
Ватӑ Прага асӑнмалӑх.

Ҫирӗм пилӗк ҫухрӑм яхӑн
Хулана ҫитме юлсан,
Пирӗн ҫул ҫинче тусан
Пӗр мӑскал та ҫукчӗ ахӑр.

Айккипе ем-ешӗл садлӑ
Тикӗс те яка ҫула
Шӑпӑрпа шӑла-шӑла
Юриех иккен тасатнӑ.

Хăйсене тертрен хăтарнă
Çынсене хăналама
Халăх тухнă урама
Хĕпĕртӳллĕ, пархатарлă.

Çирĕм пилĕк çухрăм яхăн
Хулана çитиччченех
Ик енче тăратчĕ чех,
Аллинче апатчĕ чехăн.

Чех çынни сума сăвасшăн:
Уншăн хаклă тус салтак.
Çавăнпа ăна пăртак
Эрехне те сыптарасшăн.

Кам кăна кунта пулмарĕ,
Кам чĕлхи-ши янрамар?
Пулчĕ вырăс та армян,
Пушкăрт та Хусан тутарĕ.

Савнă Сталинăн портречĕ
Курăнчĕ çуртсем çинче.
Прагăна пĕр танк çинче
Кĕтĕм эп, чăваш поэчĕ.

Кăмăллă чехсен эшкерĕ
Юрласа хисеплени.
Кăшкăрса „Наздар!" тени
Çул çинче пĕр май кĕрлерĕ.

Атăл сывлăшĕ халь уçă.
Ун тăрни пырса курмач
Хирсенче те пулчĕ ман
Канăçсăр çап-çамрăк пуçăм.

Хам атте каларĕшле,
Туй каччи пекех чиперрĕн
Кăнтăрла, ирпе, çĕрле
Сарлакан утса çӳрерĕм.

Илттĕр, терĕм, Шупашкарăм
Инçетри сăвва-юрра,
Çавăнпа та Прагăра
Калава çырма пуçларăм.

2

Лапкипе каштанлă Прагăн
Хĕрринче тăватă кун
Канмалла пулать салтакăн, —
Канчĕ пирĕн батальон.

Урама танксен эшкерĕ
Кĕрлесе кĕрсессĕнех,
Салтаксем тавра çӳрерĕ
Пасарти пек ушкăн чех.

Тем тесен те, лăпланмасăр
Чĕнчĕ-чĕнчĕ те мана
Аллăран иртмен профессор
Илсе кайрĕ хăнана.

Кӳрнĕ пулĕ пысăк хурлăх,
Йывăр пурнăç тӳснĕ-тĕр, —
Тăсăлатчĕ пичĕ урлă
Пĕрĕнчĕклĕ тарăн йĕр.

Пĕр сехет те çывăрмасăр
Виçĕ тавлăк килнĕрен,
Асфальта та янратмасăр
Утрăм эпĕ ерипен.

Çул çинче шăмшак хăвачĕ
Питĕ хăшкăлнă пирки
Тимĕр пек пусса анатчĕ
Йывăррăн куç хупанки.

Пĕлĕтсен татки те сукчĕ
Уӊ чухне хула çинче.
Курăнчĕ профессор çурчĕ
Влтава шывĕ хĕрринче.

Пăлтăрне кĕрсе, профессор
Пӳрнипе шаккасанах,
Тăпсине юрлаттармасăр
Алăк уçăлчĕ ярах.

Тĕпеле иртме хăймарăм, —
Атăсем тусанлă-çке.
Тухрĕ пĕр яштак хĕрарăм,
Кăвакарнă çӳçлĕскер.

— Ларăр, пан, атя паллашăр,
Сывлăх сунăр арăма, —
Йыхăрчĕ мана профессор
Тĕпеле иртсе ларма.

— Уралтан-и, Мускавран-и? —
Арăмĕ çапла ыйтсан:
— Эпĕ, терĕм, килтĕм, пани,
Инçетри Шупашкартан.

Эпĕ темĕн те каласшăн,
Пит нумай каламалли.
Хирĕсем хитре чăвашăн,
Халĕ Атăл та тулли.

Урамра хĕрсем пирте
Вайăра çĕрле шап-шурă
Курăннă пек ушкăн хурăн
Йĕркипе ларать хирте.

Ĕмĕрхи хуйхи-суйхи
Иртсе кайнă халь чăвашăн.
Пуплĕттĕм, анчах та маншăн
Питĕ йывăр чех чĕлхи.

Шупашкар тесен, тĕлне
Ниепле те тупаймасăр,
Пăхрĕ вăрахччен профессор
Географи карттине.

Манăн халăх тĕнчере
Пысăк мар-тăр, пĕчĕк пулĕ,
Малашне тивлетлĕ çулĕ
Паларĕ историре.

Аслă вăрçă хирĕнче
Çапăçнă чăваш ачин те
Тĕреленнĕ ячĕ ĕнтĕ
Кĕрешӳ кĕнекинче.

Вăхăт çитĕ, малашне
Халахăм тата хăпарĕ,
Чех поэчĕ те куçарĕ
Чăвашсен юррисене.

Чылаях нумай темтепĕр
Çыртăм хамăн сăвăра,
Çырнине пурне те эпĕ
Каламан профессора.

Нимĕçĕн тусанĕнчен
Çăванса тасалнă хыççăн
Йывăр ыйхă пуснинчен
Уçăлма пуçларĕ куçăм.

—Тĕпеле иртер-ха, пан,
Лайăх мар пăртак сыпмасăр,—
Тесе тытрĕ хулăмран,
Ерипен утса профессор.

Урамри лутра каштан,
Пайăрка çутта кӳртмесĕр,
Кантăка хупланăран,
Пӳлĕмĕ пĕртте хĕвелсĕр.

Ик енне картинăсем
Йĕркипе çакса тултарнă,
Авалхи хашакĕсем
Ылттăн тĕслĕ, пархатарлă.

Пăнчăллă кĕркке пулла
Кăтартать пĕчĕк ӳкерчĕк, —
Кайрĕ манăн кăмăла
Паллă мар темле художник.

Тахçанах, ача чухне,
Илĕртетчĕ ял çаранĕ.
Кайнă эпĕ ут çине
Лашапа-и е çуран-и.

Урапа уречинчен
Хамăн пӳ лутра пулин те,
Эпĕ варăш кĕпçинчен
Шăхличи майланă ĕнтĕ.

Пурччĕ аттепе пĕрле
Çывăрма çӳхе шăналăк,
Лайăхчĕ пăхма çĕрле
Çăлтăрлă уяр çанталăк.

Илĕм-тилĕм ирхине
Хĕвелччен сиксе тăраттăм,
Тикĕс шывăн аврине
Вăлтана ярса лараттăм.

Тĕтĕм пек çăра шăна
Хăлхана, куçа кĕретчĕ,
Хĕлĕхĕ пĕрре кăна
Юлнă купăс пек сĕрлетчĕ.

Алăри йĕлме хулла
Çамрăк пĕкĕ пек аваттăм,
Пăнчăллă кĕркке пулла
Хамăн урлă ывăтаттăм.

Ку художник чĕринче
Çутçанталăка юратнă,
Çавăнпа та пир çинче
Сăрĕсем пуян, хăватлă.

Талантпа, таса чунпа,
Ахалех, укҫа ыйтмасăр,
Ҫырнă. Манăн шухăшпа
Килĕшетĕр-и, профессор?

Савăнса ĕҫлес йĕрки
Пулнă пулĕ ун типтерлĕ, —
Терĕм эп. —Таса пирки
Нимĕҫсем ăна вĕлернĕ, —

Терĕ те диван ҫине
Таянса профессор ларчĕ,
Шурă ҫӳҫлĕ лĕпкине
Икĕ аллипе пытарчĕ.

Аллинчи тымарĕсем
Кӳкĕрт пек кăвак та тарăн.
Инкексем те асапсем
Курнă пулĕ вăл, мăнтарăн.

— Теветкел картинăна
Ӳкерекенĕ — манăн ывăл,
Ҫавăнпа пăхма мана
Питĕ йывăр, питĕ йывăр.

Ҫамрăклах такан ҫинче
Татăлчĕ ачан кунҫулĕ, —
Тенĕ хыҫҫăн куҫĕнче
Сăрхăнчĕ вĕри куҫҫулĕ.

Сивĕ чирĕ тытнă пек
Пичĕ тăрăх тарĕ анчĕ.
Вăл тумламăн тек те тек
Сивĕ шыв сыпса йăпанчĕ.

Тытамак хускаласси
Ерипен ҫухалнă хыҫҫăн
Янăрарĕ ун сасси
Малтанхи пек питĕ уҫҫăн.

Ватă Прага тĕрминче
Ултă ҫул чĕрин кăварĕ
Ялкăшса ҫунни ҫинчен
Вăл мана нумай каларĕ.

Ир те, каҫ та яланах
Тамăкри ҫынсен асапĕ
Йывăрри ҫинчен пайтах
Ваттисен суя халлапĕ.

Тӗнчене хăртас пирки
Тискертен тата тискер ӗç,
Юмахра хальччен çукки,
Шутласа кăларнă нимӗç.

Çынсене кăмакара
Пиҫӗпе вӗсем çунтарнă,
Кӗл çинче килте вара
Кишӗрпе хăяр ларттарнă.

Пухнă-мӗн вӗсем кӗлне
Хăйсене кура тирпейлӗ.
Хăй çуралнă çӗршывне
Куртăрччӗ халь Генрих Гейне!

Куртăрччӗ эсрел Берлинӗ
Чул купи пек выртнине:
—Тавтапуç!—тесе ун чунӗ
Мухтӗччӗ Совет Çарне.

Пӗтересшӗн пулчӗ нимӗç
Славянсен поэзине,
Çарăк лартăп, терӗ имӗш,
Поэтсен тăпри çине.

— Шухăшу ытла нумай-и,
Юхтарар-и пуçăнтан, —
Нимӗçсем хӗненӗ майăн
Ихӗрнӗ профессортан.

— Хăвăра патшалăх кирлӗ,
Чăн та кирлӗ çӗр çинче, —
Тенӗ те ăна пуç хӗрлӗ
Çакнă икӗ уринчен.

Çур сехет-и, ытларах-и
Вăхăт иртнӗ. Ват çынна
Антарса фашист хурахӗ
Чикнӗ сивӗ ваннăна.

Ăн кӗрсен, пӗр нимӗç ларнă
Утланса кăкри çине,
Вăтăрса çăлса кăларнă
Пайăрка кăвак çӳçне.

Пӳлӗмӗ, хӗвелсăр пӳлӗм,
Аялта, çӗр айӗнче.
Темиçе хутчен те вилӗм
Ларнă унăн умӗнче.

Мĕншĕн-ха ăна хĕненĕ
Шăммине ватичченех?
Ма тесен, вĕренткеленĕ
Халăхне профессор-чех.

Хăй тăван çĕрне типтерлĕ
Савакан çынсен тирне
Перчетке тума сӳтернĕ
Нимĕçсем кунта чухне.

---

Арăмне: — Итле-ха, карчăк, —
Терĕ те чӳречине
Яр уçса профессор ларчĕ
Тепĕр хут диван çине.

Янракан асфальт çинче
Йышлă танк вĕçĕ-хĕррисĕр
Кĕрлени урамсенче
Кĕчĕ ешĕл çулçĕ витĕр.

Никама та пăхăнмасăр
Çĕнекен çара курма
Куççулне шăлса профессор
Тухрĕ аслă урама.

Хĕн те, мăшкăл та инкек
Курнă чух йĕрмен те пулĕ,
Савăнсан, тухать иккен
Харсăр çыннăн та куççулĕ.

Каллĕ-маллĕ варкăшса,
Хулара сехет те çурă
Кисрентерчĕ сывлăша
Вырăсла хăватлă юрă.

Танксемпе çынсем çине,
Орденсем çине илемлĕ
Йăлтăр-ялтăр сутгине
Сапкалатчĕ май хĕвелĕ.

Çĕнтерӳ уявĕнче
Хĕпĕртенĕ Прага кунĕ
Юлĕ куçăм умĕнче,
Хальхин пек хĕвеллĕ çунĕ.

Каштансен шăршиллĕ, уçă
Урамран урамалла
Иксĕмĕр çӳренĕ хыççăн
Килтĕмĕр килне калла.

Урамра парса тултарнă
Алăри чечексене
Çамрăк пек хуçа хастарлăн
Лартрĕ савăтсем çине.

Тусĕ-йышĕ улттăн-çиччĕн
Пухăннă самантсенче
Апатпа эрех тулличчĕ
Сарлака сĕтел çинче.

Тĕрмерен ĕнер кăна-мĕн
Хăтăлнă профессора
Сырăнчĕç калаçнăçемĕн
Ваттисем йĕри-тавра.

Пухăннăччĕ хĕр те каччă,
Илтĕнми çӳре-çӳре
Çăмăллăн кăна ташлатчĕç
Тепĕр кӳршĕ пӳлĕмре.

Ман тăван çĕршыв хисепĕ
Тĕнчере кĕрленĕрен,
Чаплă çын пек лартăм эпĕ
Варринче, кĕрекере.

Ман çумра юмарт профессор
Пăхăр халĕ, курăр-ха,
Хĕрсене те чакармасăр
Тултарать тĕппи курка.

Пӳрнеске пек пĕчĕкçеççĕ
Черккесем памасть хуçа.
Хăнисем те тĕлĕнеççĕ
Шăкăл-шăкăл калаçса.

— Пĕчĕккĕн те хулăм сассăр
Кăйттăм-кайттăм пурăнни
Пĕттĕр халĕ, — тет
профессор,—
Çирĕп пултăр чех çынни!

Çичĕ ют вăрри-усалĕ
Çĕршыва таптамасла
Пирĕн чехăв чун-хавалĕ
Пултăр ĕнтĕ вырăсла.

Вырăс халăхĕн хăвачĕ
Чехсене, мана, сире
Тĕрмерен çăлса кăларчĕ
Ирĕке, таса çĕре.

Çулăм витĕр вăл, çунмасăр,
Пин-пин çухрăм аякка
Паттăр килчĕ, — тет
профессор. —
Йăтăпăр тĕппи курка!

Кĕленче куркасене
Йăтрăмăр эпир пĕр харăс.
Янк ĕçсе курка тĕпне
Кăтартман чехсем пулмарĕç.

Анакан хĕвел ури
Пĕлĕт витĕр тăсăлатчĕ,
Хĕрлĕ те йăри-яри
Чÿрече çинче вылятчĕ.

3

Хулари урамсенче
Утрăм эпĕ урлă-пирлĕ.
Ялавсем çуртсем çинче
Çĕртмери пилеш пек хĕрлĕ.

Шăрăхра ытла нумай
Пăчăхса çÿренĕ хыççăн
Тарласа йĕпеннĕ май
Антăра пуçларĕ пуçăм.

Кĕвенте пек авăнса
Курăнать хула кĕперĕ.
Сулхăн çил унта таса
Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕркелерĕ.

Эпĕ чул кĕпер çинче
Айккине пырса таянтăм,
Уçă сывлăш нÿрĕнче
Кăмăс ĕçнĕ пек йăпантăм.

Влтава шывĕ аялта
Сарă тĕслĕ те пăтранчăк.
Шухăш хыççăн шухăш та
Пуçăма килсе капланчĕ.

Çуркунне, çулла, хĕлле
Виç патшалăх витĕр иртрĕм,
Чĕрене касса куллен
Илĕртрĕ тăван уйхирĕм.

Халĕ ĕнтĕ çуркунне
Шурĕ те çаранĕ лайăх.
Çавăнпа та ун енне
Кăнтăртан каять хуркайăк.

Ешӗл курӑк айӗнче
Тунката та, чул та путнӑ.
Ҫырмари валаксенче
Сивӗ шыв шерпет пек тутлӑ.

Влтава шывӗ хӗрринче
Лашасен сасси пӗр авӑк
Эрлӗклӗ ҫинҫе-ҫинҫе
Илтӗнчӗ мана сасартӑк.

Юхӑм хӑйӑрлӑ пирки
Вӗсене ӗҫме хӗн-хурлӑ.
Ҫухрӑм пек вӗсен мӗлки
Выртвӑччӗ касхи шыв урлӑ.

Хытӑ ҫимӗҫ ют ҫӗрте
Лашасен чунне хуҫман-и, —
Ҫавӑнпа та илӗртет
Вӗсене тӑван ҫаранӗ.

Чӗлхепе явса ҫиме
Шурути унта сипетлӗ.
Кашлинчисӗр ҫереме
Сывлӑм шывӗ те йӗпетнӗ,

Выртмана ҫӳренисем
Вӗсене асне килеҫҫӗ, —
Тунсӑхлана лашасем
Ҫавӑнпа та кӗҫенеҫҫӗ.

Шухӑш, шухӑш нумайшар
Килнӗрен ҫума пӑхманччӗ, —
Пынӑ-тӑнӑ юнашар
Артиллери лейтенанчӗ.

Хуп-хура ҫӑра ҫӳҫне
Сылтӑма ярса якатнӑ.
Симӗсрех пилоткине
Уставри пек чалӑш лартнӑ.

Вӑрӑм хӑрпӑк айӗнчен
Куҫӗсем ҫунса пӑхаҫҫӗ:
Вучӗ пур кӑмӑлӗнче,
Пур чеелӗх те пӑртакҫӗ.

Ҫакӑн пек качча хӗрсем
Ҫул ҫинче пӗрре курсассӑн,
Тепӗр хут курса вӗсен
Каласас килет ачашшӑн.

Пысӑк вӑрҫӑ тӗтӗмне
Тӳснӗ хыҫҫӑн сисеймеп-и:
Хӑм енчи этемсене
Тавҫӑрма вӗреннӗ эпӗ.

Хулари кӗпер ҫинче
Паллашсан, чӗре сисмен-и:
Иксӗмӗр те пӗр енчен,
Иксӗмӗр те Атӑл енӗ.

Вӑл та мирлӗ ҫулсенче
Ман пекех ӗҫленӗ, кулнӑ,
Етӗрне районӗнче,
Пӗр ялта, учитель пулнӑ.

Тахҫанах паллашнӑ пек
Туслашса калаҫнӑҫемӗн
Шухӑш хыҫҫӑн шухӑш тек
Ҫыхӑнса кӑна пырать-мӗн.

Ашшӗ-амӗш чӗлхине
Кам ӑҫта манма пултарӗ,
Чӑвашла сӑвӑсене
Лейтенант нумай вуларӗ.

Иксӗмӗр пекех хитре,
Иксӗмӗр пек хӗпӗртӳллӗ
Чӑвашсем ытти ҫӗртре
Сӑвӑсем вулаҫҫӗ пулӗ.

Ҫапӑҫса чӑваш ачи
Кӑнтӑрла та ирлӗн-каҫнӑ
Тиссӑпа Дунай ҫинчи
Кӗперсем ҫинчен те каҫнӑ.

Чикмепе Кавал хушши
Янӑрӗ чӗлхем хӑвачӗ, —
Тенӗччӗ Ҫеҫпӗл Мишши,
Тӑвӑлпа телей поэчӗ.

Хамӑр Атӑлӑн тӑрни
Ҫитеймен ҫӗрте те халӗ
Пирӗн юрӑ янрани
Илтӗнсе тӑрать сахал-и?

Малалли историнче
Пирӗн нацин ҫулӗ аслӑ,
Ҫавӑнпа та ҫӗр ҫинче
Эпӗ питӗ те хаваслӑ.

Прагӑра, кӗпер ҫинче
Калаҫса санпа йӑпантӑм,
Етӗрне районӗнче
Уснӗ ҫамрӑк лейтенантӑм!

Мӗн кӑна чӗлхе ҫине
Килнине пурне те хапӑл
Иккӗн асӑннӑ чухне
Шухӑшран каймарӗ Атӑл.

Ватӑ Прага хулинче
Савнӑ тусӑм, лейтенантӑм,
Йышлӑ халӑх хушшинче
Хамӑра пӑхса мухтантӑм.

Пирӗн Ленинла тӗнче
Ҫӗнтерсе илмен пулсассӑн,
Эп те, эс те ҫӗр ҫинче
Вилмеллеччӗ пӗр хавассӑр.

Ӗнтӗхсе мӑян ани
Кашласси те питӗ паллӑ,
Ҫӳрӗччӗ чӑваш ҫынни
Ҫичӗ пушӑт ҫӑпаталлӑ.

Прагӑри урамсене
Янратса пӗр харӑс паттӑр
Иксӗмӗр те пуҫсене
Каҫӑртса кӑна утатпӑр.

Куртӑн-и, пире хыҫран
Кӗвӗҫсе пӑхса ҫӳрерӗ
Самӑр питлӗ акӑлчан,
Королевство офицерӗ.

Пӗр-пӗр лордӑн килӗнче
Офицер ҫуралнӑ пулӗ,
Пӗр самант та ӗҫ ҫинче
Тарламан черченкӗ хулӗ.

Ҫуралсан та, ун айне
Сарнӑ вырӑн ҫич минтерлӗ;
Ҫичӗ тарҫӑ сӑпкине
Ир те каҫ ачаш сиктернӗ.

Каснӑ та кӑвапине
Ҫыхнӑ пурҫӑнпа типтерлӗ,
Ӳн ҫинчен король патне
Ҫавӑнтах хыпар ҫитернӗ.

Ялăм пулнă тĕнчере
Сухапуçлă та çурлаллă.
Эпĕ пĕр хура пӳртре
Кĕркунне çĕрле çуралнă.

Никĕсĕ муртайнăран
Тайлăк-тайлăк ларнă пӳртĕм.
Яваннă урай таран
Кикентен те йӳçĕ тĕтĕм.

Шăрăхра ыраш вырма
Ман аннем çулла çӳренĕ;
Лăштăр-лăштăр сăпкама
Туртаран çакса силленĕ.

Ăмăрткайăк пĕлĕтре
Ярăнса илемлĕ каннă,
Ун хура мĕлки çĕре,
Ман куçа ӳксе выляннă.

Пĕчĕкрен мана атте
Сухапа сӳре тыттарнă.
Эпĕ утнă уйхирте
Мунчари пек хулăм тарлă.

Ĕçлесе хам вăйăмпа
Эпĕ ӳснĕ, аталаннă,
Хулпуççийĕм çавăнпа
Сарлака та манăн анлă.

Пĕтĕм аслă тĕнчере
Ман çĕршыв сасси кĕрлерĕ.
Вечĕхсе пăхать пире
Королевство офицерĕ.

4

Прагăран çĕршывăма
Тепĕр кун каяс чухне
Тухрăм эпĕ уçăлма
Влтава шывĕ хĕррине.

Сарă та анчах таса
Ватă уйăх тухнипе
Курăнатчĕ карăнса
Кăн-кăвак çӳлти тӳпе.

Йывăççен çулçисене
Чăштăр-чăштăр силленçи
Вĕркелетчĕ пит çине
Тапхăр-тапхăр сулхăн çил.

Тумтире хыва-хыва
Хутӑм эпӗ хам ҫирен,
Тикӗс те хура шыва
Утса кӗтӗм ерипен.

Лӗкӗллӗ ҫемҫе тӗпне
Урасем пӑтратнӑран,
Пухрӑм, терӗм, хам ҫине
Пылчӑк мурӗ мӑй таран.

Сикрӗм эпӗ карӑнса,
Сулса ятӑм ик алла,
Ӑнталтӑм вара ансат
Малалла та малалла.

Эпӗ, Атӑлӑн ачи,
Ватрӑм талпӑннӑ чухне
Купцасен сакки ҫинчи
Кӗмӗл пек ҫӑлтӑрсене.

Каллӗ-маллӗ ишнӗҫем,
Пӗвӗм ывӑннӑ енне,
Утӗм-тирӗм ҫӳҫенсен,
Тухрӑм эпӗ хӗррине.

Хӑйӑртан силле-силле
Эпӗ тӑхӑнтӑм тума,
Влтава шывӗ ҫинелле
Тытӑнтӑм ҫаплах пӑхма.

Выртрӑм эп чавсаланса
Пӗр ҫерем татки ҫинче.
Ҫӳҫсене авкаласа
Ҫил вӗрет ҫырма енчен.

Яп-яка шыв ҫийӗ халь.
Пулӑ та сикмест пӗртте.
Иҫмасса пӗр кӑвакал
Хӑпаринччӗ пӗлӗте.

Хӑйӑрлӑ тӑпра сасси
Чӑйӑлтатрӗ инҫетре, —
Пулчӗ манӑн курасси
Хамӑр салтакпа хӗре.

Сарӑ та анчах таса
Уйӑх ялкӑшнӑ чухне
Пӗр-пӗрне хулран тытса
Иккӗш пычӗҫ шыв хӗрне.

Уйрӑлса каяс чухне
Иккӗш те кӑмӑлӗнчен
Юратса калаҫнине
Эп итлерӗм вӑрахчен.

**Хӗр**

Хур чӗппи пек сарӑ уйӑх,
Шыв ҫине ишме тухсан,
Кӑтӑша каять чех уйӗ,
Ҫывӑрать сӑртпа васан.

Ҫӑлтӑрлӑ хума ачашшӑн
Ӑшӑ ҫил силленӗ чух
Каҫсерен сана курасшӑн
Ҫакӑнта хурланӗ чун.

Куртӑн-и, вӗҫет хуркайӑк
Пирӗн урлӑ ҫурҫӗре.
Эсӗ те, тӑванӑм, кайӑн
Ху ҫуралнӑ уйхире.

**Салтак**

Кайӑп ҫав.

**Хӗр**

Сана юратӗ
Тепӗр хӗр, анчах чӗрем
Касӑлса ялан ыратӗ
Йывӑр хуйхӑ ӳкнӗрен.

**Салтак**

Савнӑ тусӑм, ҫырӑ куҫӑм,
Эпӗ хӑвӑрт кайнӑран
Тарӑхса пӗртте ан хуҫӑл,
Ан эрлен те ан хурлан.

Чи хитри сана ыталӗ
Ху пӑртакҫӑ илӗртсен.
Мансӑр та кунта сахал-и
Шӗл кӑвар пек куҫлисем.

**Хӗр**

Нумайне нумай, анчах
Чӗрене ҫунтараканӗ
Хурчӑка пекех ача
Аякри килне ӑсанӗ.

Урату манра хăпарчĕ
Пĕтĕм кăмăл тĕпĕнчен.
Эпĕ, çамрăк кăвакарчăн,
Юлăп ĕнтĕ пĕр пĕччен.

**Салтак**

Эпĕ манăп-и мана
Хуп сăпки парса сиктернĕ,
Хурăн шывĕ те ĕçтернĕ,
Пӳрт те панă вăрмана?

Халĕ манăп-и мана
Тӳсĕмлĕ, кервен ӳт-тирлĕ
Çитĕнтернĕ, тутă хирлĕ,
Тутлă шывлă вăрмана?

Çитнĕçемĕн, çитнĕçемĕн
Чун-вартан сава-сава
Эпĕ пырăп хам чĕремĕм
Тунсăхланă çĕршыва.

Юлĕ сăртăр, юлĕ хирĕр,
Юлĕ шывăр инçетре.
Вĕсене мансан та, пурпĕр
Эсĕ юлăн чĕрере.

**Хĕр**

Çĕршывна пĕр вĕçĕмсĕр
Мухтама, тăванăм, чарăн!
Туйăнать-им манăн çĕр
Кăйттăм-кайттăм та начаррăн?

Каштанпа хупланнă Прагăн
Пĕлĕчĕ епле тӳлек!
Кӳкĕрт çулăмĕ пекех
Курăнать вăл кăн-кăвакăн.

Ман тăван çĕре çăласшăн
Эсĕ, тусăм, тăкнă юн.
Пирĕн хулара тархасшăн
Хӳхĕм вырăн туп та юл!

Ман аттен çуртне тиркемĕн,—
Ик енче те ешĕл сад.

**Салтак**

Нумайрах калаçнăçемĕн
Сăмахху чуна касать.

Пирĕн харсăр йĕкĕтсем
Нимĕçрен хăтарнă Прагăн
Тап-таса урамĕсем
Вăрăм та çатма пек такăр.

Хулара мана чи лайăх
Ылттăн çурт парнелеме
Тытăнсан та, эпĕ кайăп
Хам çуралнă хирĕме.

Хĕр

Чĕннипех те, тусăм, эсĕ
Юратман иккен мана.

Салтак

Юратсан, эппин ӳкес-и
Йăванас-и сан ума?

Хĕр

Юрату тени кăваррăн
Ялкăшса çунать пулсан,
Тинĕсрен те тарăн-тарăн
Шухăшу хускалĕ сан.

Çĕршывна та эсĕ манăн,
Эсĕ манăн аннӳне,
Чĕрӳне пĕрер çуркамăн
Татса парăн чех хĕрне.

Салтак

Урлă-пирлĕ пин-пин çухрăм
Иртрĕм эпĕ тĕнчере,
Юратса курманччĕ эпĕ
Сан пекех хитре хĕре.

Эпĕ кайăп, эпĕ кайăп,
Пулăп хамăн çĕр çинче;
Сан юмарт сассу, саркайăк,
Янтăрĕ хăлхамсенче.

Хам çумри пек юлĕ çывăх
Сан сăну, кăвак куçу.

Хĕр

Юратсан, кайма та çылăх.
Ан тăктар вĕри куççуль.

Пăрахса каян-и, тусăм,
Чĕринчен савакана?

## Салтак

Чи хакли—тăван çĕршывăм
Тĕнчере пĕрре кăна.

* * *

Салтакпа хĕр кайнă хыççăн
Нумайччен çерем çинче
Тарăн шухăша каюçăн
Выртрăм шывăн хĕрринче.

Хĕрĕнчен салтак юлташăм
Уйăрăлнă пекех, ыран
Аллăма сĕлтсе ачашшăн
Эпĕ кайăп Прагăран.

Тĕлĕкре курса тĕлленĕп
Эпĕ çӳлĕ çуртсене,—
Пистолет пекех тĕлленĕ
Тăррисем пĕлĕтсене.

Каштанпа хупланнă Прагăн
Хӳхĕм çурчĕсем çинчен
Çырнă юррăмпа такмакăм
Вĕçĕ Атăл хĕрринче.

Ма тесен, çĕнӳ уявĕ
Пынă шавлă кунсенче
Ман тăван çĕршыв ялавĕ
Вĕлкĕшрĕ вĕсем çинче.

1945—1947

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

# Чăваш совет литератури

1

Октябрьти Социализмлă Аслă революци пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсене ĕмĕрхи пусмăртан ирĕке кăларчĕ. Этемлĕхĕн историллĕ кунçулĕнче çĕнĕ самана—совет самани пуçланчĕ. Мĕнпур тăванла халăхсем ирĕклĕ çĕр çинче хăйсен ирĕклĕ, çĕнĕ пурăнăçне тума тытăнчĕç.

Большевиксен партийĕ ертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе, пирĕн чăваш халăхĕ те, Октябрьти революцире ура çине тăрса, çĕршыври мĕнпур халăхсемпе пĕрлех социализм тăвас ĕçе ĕçченĕн хутшăнчĕ. Мĕнпур тăванла халăхсемпе пĕрлех, чăваш халăхĕ те Отечественнăй аслă вăрçăра хăйĕн пысăк паттăрлăхне кăтартрĕ. Мĕнпур тăванла халăхсен йышĕнче халĕ вăл вăрçă хыççăнхи Сталинла çĕнĕ пилĕкçуллăха пурăнăça кĕртес тесе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет.

Совет влаçĕ çĕнтерӳллĕн утса тухнă вăтăр çул хушшинче пирĕн чăваш халăхĕ хăйĕн çĕршывне чечекленекен республика туса хучĕ. Патша колонийĕ пулнă юхăнчăк та тĕттĕм кĕтесрен чăваш çĕрĕ хĕвеллĕ сад-пахчи пулса тăчĕ. Чăваш ĕççынни, хура пӳртсенчен, упа варĕсемпе сĕм вăрмансенчен çутталла тухса, ĕмĕрхи пусмăр чулĕ пусса тăнă хул-çурăмне тӳрлетсе, ирĕклĕх юррисене юрласа ячĕ. „Этем-çке мĕн эпĕ те!—терĕ чăваш“ (С. Эльгер).

Аслă çулпуçĕсем Ленинпа Сталин вĕрентнипе чăваш халăхĕ хăйĕн культурине—формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă культурине ӳстерсе çитĕнтерчĕ. Чăваш халăхĕн мĕнпур культура çитĕнĕвĕсенче пирĕн тăван литература хăйĕн тивĕçлĕ те хисеплĕ вырăнне йышăнса тăрать. Вăл пĕтĕм совет çĕршывĕпе пĕрле, хамăрăн тăван республикăпа пĕрле, нумай нациллĕ пĕтĕм совет литературипе пĕрле аталанса ӳсет.

Чăваш литератури питех те çамрăк. Революциччен ăна çитĕнтерес тĕлĕшпе ĕçлекенсем пĕрерĕн те икшерĕн кăна шутланнă. Чăваш халăхĕн çырулăхĕ те 1871 çулта çеç пуçланса кайнă. Анчах иртнĕ XIX-мĕш ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсемччен чăваш халăхĕн çырулăхĕ пулманнишĕн, унăн „хут çине çырнă литератури“ пулманнишĕн, вăл тĕттĕмлĕхпе тĕшмĕшлĕх тыткăнĕнче асапланнишĕн халăх хăй пĕрре те айăплă мар. Çавăн-

шăн пĕтĕмпех патша влаçĕ, помещиксемпе капиталистсен стройĕ айăплă. Ахаль каламан çав ĕнтĕ ĕлĕкхи саманара „чăваш кĕнекине ĕне çисе янă" тесе.

Анчах пирĕн халăх, çĕршыври ытти халăхсем пекех, ĕмĕрĕмĕр çутталла туртăннă. Халăх хăйĕн ирĕкĕпе телейне шыранă. Вăл хăйĕн нихăçан сӳнми ĕмĕчĕсене нумай тĕрлĕ юрăсенче, юмахсемпе халлапсенче палăртнă. Халăх тĕттĕмлĕх саманин тискер хăвачĕсемпе—ултă пуçлă, вуникĕ пуçлă çĕленсемпе кĕрешекен паттăрсем çинчен юрăсем хывнă. Халăх сăвви-юррисене, унăн сăмах вĕççĕн çӳрекен творчествине, халăх чунне тĕнчере нимĕнле тискер вăй та пусарса вĕлерме пултарайман. Халăхăн ĕмĕр-ĕмĕр чĕррĕн тапса тăнă творчестви, пурăнăç малалла кайнă май, пирĕн илемлĕ литературăна çуралса ӳсме чĕрĕ сĕткен паракан хăватлă çăлкуçĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Çавăн пек хăватлă çăлкуçĕсенчен тепри вара вăл—вырăссен классикăллă, революцилле-демократилле литератури.

Пирĕн çамрăк литературăн, аслă вырăс литературинни пек, темиçе ĕмĕр хушши пухăнса пынă традицисем çук. Анчах пирĕншĕн—малта тăракан вырăс литературин ĕмĕрхи пуянлăхĕсем пĕрре те ют мар. Çав аслă та пархатарлă традицисем чăвашсен чăн малтанхи писателĕсемшĕн те чун пекех çывăх пулнă.

Çавăрăнса пăхар-ха иртнĕ кунсем çинелле! Чăваш халăхĕ хушшинчен тухнă чăн малтанхи писатель-этнограф Спиридон Михайлов, хамăр тăван халăх çĕрĕ çине культура хĕлхемне ӳкерме ĕмĕтленсе, хăйĕн произведенийĕсене, тăван çырулăх пулманнине кура, вырăсла çырнă. Чăваш çырулăхĕ те чăн малтан пуçласах вырăс çырулăхĕн никĕсĕ çинче çуралнă. Ĕлĕк араб çырулăхĕпе усă курнă халăхсем халĕ, Совет саманинче, вырăс алфавичĕн никĕсĕ çине куçнине шута илсен, кӳ тĕлĕшпе пирĕн чăваш халăхĕ хăйĕн çырулăхĕшĕн савăнма тата тăван вырăс çырулăхне тавтума кăна пултарать.

Çыру чĕлхине тупнă хыççăн чăвашсен малтанхи писателĕсем—Михаил Федоров, Игнатий Иванов, Тайăр Тимкки, Константин Иванов, Полоруссов-Шелепи, Михаил Акимов тата ыттисем те творчество ĕçне вырăссен классикăллă литературинчен вĕренсе пынă. Революцичченхи кашни писателĕн ĕçĕнчех эпир Пушкинпа Лермонтов, Кольцовпа Некрасов вăйĕсене туйса тăратпăр.

Анчах чăваш литературин чăн-чăн ирĕклĕ аталану çулĕ Октябрьти революцирен пуçланать. Çитмĕл çичĕ чул айĕнче пусăрăнса тăнă халăх таланчĕн çăлкуçĕ, хăватлăн çӳлелле тапса тухса, асамат кĕперĕн мĕнпур тĕсĕсемпе ялкăшма тытăнать. Аслă вырăс литератури ĕмĕрхи пуянлăхĕ пĕтĕм халăх тивĕçĕ пулса тăрать. Çапла икĕ вăй—икĕ çăлкуçĕ—чăваш халăхĕн пултарулăхĕпе вырăс литературин революцилле-демократилле традицийĕсем пĕр-пĕринпе таччăн пĕтĕçнĕ май,

пĕр аслă юхăмпа малалла аталанса пыракан чăваш совет литератури пуçланса каять.

Этемлĕх ĕмĕртен пухса пынă пĕлӳлĕхпе культура пуянлăхне тишкĕрсе ăса илме кирли çинчен В. И. Ленин вĕрентнине пирĕн чăваш совет писателĕсем хăйсен творчество ĕçĕнче пурăнăça кĕртсе пыма тытăнаççĕ. Вĕсем тăван халăхăн пултарулăхне, вырăс писателĕсен произведенийĕсене, çавăн пекех революцичченхи чăваш писателĕсен опытне те тимлĕн тĕпчесе вĕренеççĕ. Уйрăмах пирĕн литературăна малалла аталанма вырăссен хальхи совет литератури—тĕнчери чи малта тăракан, чи идейăллă та чи революциллĕ литератури пархатарлăн пулăшса пырать.

Халĕ ĕнтĕ эпир совет саманинче вăтăр çул пурăнса иртternĕ хыççăн, хăюллăнах çапла калама пултаратпăр: чăваш совет литератури—пирĕн Тăван çĕршыври нумай нациллĕ мĕнпур совет литературин пĕр пайĕ, хамăрăн халăха социализм тума пулăшакан вăйсенчен пĕри пулса тăчĕ.

„Совет литературин ăнăçăвĕсем социализм строительствин ăнăçăвĕсенчен тухса тăраççĕ. Унăн ӳсĕмĕ пирĕн социализм стройĕ тунă ăнăçусемпе çитĕнӳсене палăртса тăрать",—тенĕ А. Жданов юлташ совет писателĕсен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш съездĕнче.

Совет литератури, пĕтĕм çĕршыв аталанăвĕпе пĕрле çитĕнсе пырса. творчество тĕлĕшĕпе хăйĕн çĕнĕ принципĕсене туса хучĕ. Çав принципсене аслă Сталин икĕ сăмахпа социализмла реализм принципĕсем тесе пĕтĕçтерчĕ, писательсене вара „этем чунĕн инженерĕсем" тесе ят пачĕ. Çапла вара Иосиф Виссарионович Сталин совет писателĕсен пурăнăçри, обществăри вырăнне, вĕсен тĕллевĕсемпе задачисене, яланхи пекех, кĕскен те яруççăн, витĕмлĕн те ăслăн ĕмĕрлĕхех кăтартса пачĕ.

Социализмла реализм принципĕсене пурăнăç, пирĕн революциллĕ самана çуратнă. Вăл принципсем иртнĕ саманасенчи литература пуянлăхне Ленин вĕрентнĕ пек тишкĕрӳллĕн тĕпчесе ăса илнĕ никĕс çинче тата çĕнтерӳллĕ социализм строительствипе социализмла культура ӳсĕмĕн опытне тĕплĕн вĕренсе пынă никĕс çинче ӳссе çитĕнчĕç.

Социализмла реализм—совет литературин тĕп творчество меслечĕ. Вăл халичченхи мĕнпур литература меслечĕсенчен хăйĕн революциллĕ активлăхпе уйрăлса тăрать. Вырăссен классикăллă литератури кивĕ общество йĕркисене критикăлакан литература пулнă пулсан, Российăри рабочи класпа пĕрле, коммунистсен партийĕ ертсе пынипе çитĕнекен литература вара пусмăрлăх обществин никĕсĕпе йĕркисене çĕмĕрме чĕнекен, революцире çуралса тухнă çĕнĕ общество йĕркисене çирĕплетме пулăшакан литература пулса тăрать. Кивĕ саманари мĕнпур çĕрĕк япаласене, „кивĕ тĕнчен тăхлан ирсĕрлĕхне" çĕмĕрмелле, çĕннине çирĕплетмелле, çĕнĕ тĕнче тума тухнă

хăюллă та паттăр этеме мухтаса юрламалла,—революципе пĕрле аталанса пынă литературăра эпир çак задачăна чăн малтан вырăссен аслă писателĕ А. М. Горький хăйĕн творчествинче лартнине куратпăр. Литературăн çĕнĕ принципĕсем Горькин революцичченхи творчествинчех уçăмлăн паларма тытăнаççĕ. Тĕнчене тĕпрен урăхлатса çĕнетме тивĕçлĕ герой—чăн-чăн истори тăвакан ĕççынни Горький произведенийĕсенчи тĕп герой пулса тăрать. Çавăнпа та эпир А. М. Горькие социализмла реализм никĕсне хывакан̆ĕ тесе хисеплетпĕр.

Социализмла реализм никĕсĕ çинче çитĕнсе выракан çĕнĕ литературăпа çĕнĕ искусство вĕсем этемлĕх культурин халичченхи аталанăвĕнчен татăлса каймаççĕ, вĕсем çав культурăна çĕнĕ саманара çĕнĕлле майсемпе, мĕнпур общество аталанăвĕн законĕсене кура, малалла ӳстерсе пыраççĕ. Çĕнĕ литература классикăллă реализмăн паха енĕсене,—унăн гуманизмĕпе патриотизмне, халăх чунĕшĕн çывăх туртăмĕсемпе шухăшĕсене,—историллĕ çĕнĕ условисенче татах та çӳлерех çĕклет.

Совет литературин тĕп меслечĕ—социализмла реализм художнике революциллĕ майсемпе аталанса пыракан пурăнăçа тĕрĕс, истори тĕлĕшĕнчен конкретлăн сутатса пама хушать. Историллĕ тĕрĕслĕх—социализмла реализмăн тĕп принципĕ. Вăл художнике творчество тĕлĕшĕпе, çавăн пекех форма тĕлĕшпе те калама çук анлă ирĕклĕх, вĕçĕ-хĕррисĕр пуян майсем парать. Иртни çинчен те, паянхи çинчен те, ыранхи çинчен те çырма пултарать художник. Вăл хăйĕн творчествинче нумай тĕрлĕ формăсемпе усă курма пултарать, анчах вăл, общество аталанăвĕн законĕсене лайăх пĕлсе тăрса, пурăнăçа тĕрĕс çутатса патăр кăна. Ыранхине курма вара ăна революциллĕ романтизм пулăшать.

Халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ, пирĕн парти, пирĕн пĕтĕм халăх яланах ыранхине витĕр курса тăрса ĕçлеççĕ. Коммунизмăн çутă малашлăхне палăртса тăракан аслă плансем халăха паянхи ĕçпе кĕрешӳре хавхалантараççĕ. Совет художникĕн те çавăн пекех ыранхине витĕр курса тăрса ĕçлемелле. Çавăнпа та пирĕн совет литературинче, А. М. Горький творчествинчен пуçласа, социализмла реализм революциллĕ романтизмпа таччăн пĕтĕçсе пырать. Çакăн пек творчествăллă пĕтĕçӳ вăл совет халăхĕн паттăрлăхĕпе патриотизмне, совет çыннин революциллĕ шухăшĕпе чунне, унăн çутă ĕмĕчĕсене тарăнраххăн та анлăраххăн уçса пама пулăшать.

Пирĕн чăваш совет писателĕсем çĕнĕ саманари литературăн çĕнĕ принципĕсене—социализмла реализмпа революциллĕ романтизм принципĕсене чăн малтан вырăс совет писателĕсенчен вĕренсе пыраççĕ.

## II

Чăваш совет литературин ÿсĕм çулне пăхса тухсассăн, унта эпир мĕнпур Тăван çĕршыв аталанăвĕпе таччăн сыхăнса тăракан виçĕ тапхăр куратпăр. Тăван литература çулйĕрĕн тапхăрĕсем пĕтĕмпех пирĕн социализмла çĕршыв аталанăвĕн тапхăрĕсемпе килĕшсе тăраççĕ.

Пĕрремĕш тапхăр—Октябрьти социализмла революци кунĕсенчен пуçласа Сталин юлташ «аслă улшăну çулталăкĕ» тесе ят панă çула çитиччен, иккĕмĕш тапхăр—1930 çултан тытăнса Отечественнăй аслă вăрçă тапраниччен пырать. Литература аталанăвĕн виççĕмĕш тапхăрĕ вара Отечественнăй вăрçăпа пĕрле уçăлать те çак вăрçăра паттăр совет халăхĕ тунă аслă çĕнтерÿпе пĕрле малалла сарăлса пырать.

Чăн та, кашни тапхăртах хăйне кура уйрăм сыпăксемпе пусăмсем пуррине палăртма пулать.

Пĕрремĕш тапхăрта эпир хамăр чăваш литературин граждан вăрçи çулĕсенчи тата хуçалăха юсаса ура çине тăратас ĕç пынă вăхăтри пусăмĕсене, иккĕмĕш тапхăрта—социализм строительстви анлăн сарăлса кайнă çулсенчи тата Сталинла Конституцие йышăннă хыççăнхи пусăмсене палăртма пултаратпăр. Виççĕмĕш тапхăрти литературăра вара аслă вăрçă кунĕсем тата çав вăрçăра тунă çĕнтерÿ хыççăнхи мирлĕ строительство кунĕсем палăрса тăраççĕ.

Çак тапхăрсемпе пусăмсем вĕсем—пирĕн социализмла çĕршыв ÿссе пынă тапхăрсемпе пусăмсем. Пурăнăçри кашни тапхăр литературăра та хăйĕн сăнне хăйне май палăртса хăварнă. Мĕншĕн тесен пирĕн литература ÿсĕмĕ пĕтĕм пурăнăç ÿсĕмĕпе таччăн çыхăнса тăрать, общество лартакан задачăсене татса парассишĕн ĕçлет.

Совет государстви аталанăвĕн пĕрремĕш тапхăрĕнчи чăваш литератури икĕ сыпăка пайланать, терĕмĕр эпир. Чăн малтанхи сыпăк вăл—Октябрьти революципе граждан вăрçи вăхăтĕнчи литература пулса тăрать.

Революци чăваш халăхĕн политикăллă активлăхĕпе обществăллă ăнланулăхне ĕмĕрхи ыйăхран вăратса çав тери çÿллĕ пусăма çĕклерĕ. Революциллĕ кĕрешĕве ĕççыннисен анлă массисем хутшăнчĕç. Халăхăн чи паттăр ывăлĕсем, алла хĕç пăшал тытса, тин çеç çуралнă Совет çĕршывне тăшмансенчен хÿтĕлеме тухрĕç.

Совет влаçĕ хăйĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах çĕршыври мĕнпур халăхсене халиччен нихăçан пулман политикăллă правасемпе ирĕклĕхсем пачĕ. Нумай чĕлхеллĕ халăхсем пĕр-пĕринпе тăванлашрĕç, хĕрарăм арçынпа пĕр тан правасем илчĕ, нациллĕ культурăсене аталантарма анлă çулсем уçăлчĕç. Совет государстви ĕççыннисен аллине пичетпе сăмах ирĕклĕхĕ пачĕ. Халăх пултарулăхĕн çăлкуçĕсем хăватлăн тапса çĕкленчĕç. Çав аслă хавхаланулла тапхăрта, ĕлĕк „вак

халăхсем" тенĕ ытти халăхсенни пекех, пирĕн чăваш халăхĕн те çĕнĕ саманари çĕнĕ литератури çуралчĕ. Аслă ирĕке тухнипе хавасланнă пултаруллă чăваш çамрăкĕсен уçă сассисем янăраса кайрĕç. Тăван халăх Çеçпĕл Мишшин, Иван Ахахăн, Тал-Мăрсан кĕрешӳ вучĕпе çунакан юррисене илтрĕ. Октябрьчченех çырма тытăннă писательсем—Шелепи, Тăхти, М. Акимов, К. Ефремов, Ф. Павлов тата ыттисем те, чăн-чăн пултарулăх çулĕ уçăлнипе хавхаланса, çĕнĕрен литература ĕçне пикенчĕç.

Революцин малтанхи тапхăрĕнчи вырăс литературине илессĕн, эпир кунта аслă саманапа пĕрле хускалнă халăх хăйĕн пĕтĕм улăпла пĕвĕпе, улăпла сăнарĕпе литературăна хăватлăн та талккишлĕн пырса кĕнине куратпăр. Революциллĕ вырăс писателĕсен чăн малтанхи произведенийĕсенче уйрăм çыннăн, пĕччен çыннăн сăнарĕ мар, халăх сăнарĕ тĕп вырăн йышăнать. Çапла В. Маяковскин „150.000.000" поэми, А. Серафимовичăн „Хурçă юхăм" романĕ, А. Малышкинăн „Падение Даира" повеçĕпе ытти çавăн пек произведенисем çуралаççĕ.

Революципе пĕрле ӳссе çитĕннĕ малтанхи чăваш поэчĕсем те уйрăм çынсене мар, талккишлĕн, массăллăн кĕрешĕве çĕкленнĕ халăха кураççĕ. Ку тĕлĕшпе Çеçпĕл Мишшин пĕтĕм поэзийĕ, Ахахăн „Икĕ виле" калавĕ, Тал-Мăрсан „Хĕрлĕ ялав" сăвви уйрăмăн палăрса тăраççĕ. Çеçпĕлĕн „Çĕн Кун аки" сăввинче пирĕн куç умне хулпуççипе кăвак пĕлĕте перĕнекен чăваш çынни тухса тăрать. Ахахăн „Икĕ виле" калавĕнче ĕмĕрхи ыйăхран вăраннă халăх, вĕçĕ-хĕррисĕр хум пек, хĕвелтухăçнелле—тăшмана хирĕç куçса пырать. Тал-Мăрсан „Хĕрлĕ ялав" сăввинче эпир татах пĕтĕм ĕççыннисен çав аслă сăнарнех куратпăр. „Хĕвел çутти айĕнче Хĕрлĕ ялав хумханать, пĕтĕм тĕнче ĕççынне вăл ыйăхран вăратать", тесе çырать поэт.

Çапла пирĕн чăваш совет литератури малтанхи утăмсенчен пуçласах хăйĕн кунçулне, хăйĕн аталану çул-йĕрне тăван халăхпа, халăх пурăнăçĕпе таччăн çыхăнтарать. Урăхла каласан, çамрăк чăваш литературинчи революциллĕ-демократиллĕ традицисем, 1905—07-мĕш çулсенчи революци тапхăрĕнчех çуралнă традицисем, çĕнĕ саманара çĕнĕ хăват илсе малалла аталанса пыраççĕ.

Эпир пурте çакна лайăх пĕлсе тăратпăр. Михаил Федоров хăйĕн „Арçури" поэминче, чуралăхпа тĕшмĕшлĕх тыткăнĕнче асапланакан мĕскĕн Хветĕр хутне кĕрсе, хурлăхлă юрă юрланă пулсан, малтанхи революципе пĕрле çунатланса хăпарнă Константин Иванов хăйĕн „Нарспи" поэминче этем тивĕçлĕхĕшĕн, ирсĕр мăшкăла хирĕç хăюллăн çĕкленнĕ Сетнерпе Нарспи сăнĕсене кăтартса панă. Ку çеç те мар, Константин Иванов чăваш ĕççыннисене—„вăранăр, тапранăр!" тесе, тӳрех кĕрешĕве тухма та чĕннĕ. Çакă революциллĕ кĕрешӳ

сасси вара Тайăр Тимкки сăввисенче тата уççăнрах илтĕннĕ. Н. И. Полоруссов-Шелепи те çавăн пекех, хăйĕн малтанхи сăввисенче ĕççыннисен юнне нумай ĕмнĕ ылханлă çĕлен ĕмĕрлĕхе пĕтесси çинчен çырса, тăван халăхăн çĕнтерӳ шанчăкне хăпартнă.

Октябрь хыççăнхи чăваш сăвăçисем вара, ĕмĕртен ирĕклĕхе ĕмĕтленнĕ пирĕн халăх революциллĕ кĕрешĕве хастаррăн хутшăннине кăтартса парса, хамăрăн çĕнĕ саманари çĕнĕ литературăна çĕнĕ сывлăш кĕртеççĕ. Çапла ĕнтĕ пирĕн литературăн пархатарлă традицийĕ—революциллĕ-демократиллĕ традици пĕр татăлмасăр малалла аталанса, хăватланса пырать. Малашне, социализм саманинче, вара эпир пирĕн литература чăннипех те халăх литератури пулса тăнине куратпăр.

Чăваш совет литератури çинчен çырнă чухне эпир тивĕçлипех Çеçпĕл Мишшине чăн мала лартатпăр. Вăл пирĕн халăхăн совет саманинчи литературине пуçарса яраканĕ пулса тăрать. Çеçпĕл Мишши хăйĕн сулăмлă произведенийĕсенче революципе пĕрле вăраннă тăван халăхăн политикăллă ăнлавĕсемпе шухăшĕсене поэзи чĕлхипе пуринчен малтан пĕтĕçтернĕ, вăл халăхăн сăн-сăпачĕпе чунне çав тапхăрта пуринчен тарăнрах та анлăнрах çутатса панă. Вырăс поэзийĕн аслă опытне вĕренсе ăса илсе, вăл чăваш поэзине чăннипех те çĕнĕ çул уçса панă, литературăна çĕнĕ, революциллĕ сывлăш кĕртнĕ. Революци вăхăтĕнче çĕнĕ сăмах, çĕнĕ поэзи кирлине туйса тăрса, вăл унччченхи поэзин ансăр формисенчен ирĕклĕн сывлама, халăхпа пĕрле юрласа утма май паракан сăвă формисем патне кусна.

Çеçпĕл Мишши—хăй поэзийĕн пĕтĕм ăшчикĕпе революциллĕ романтик пулса тăрать. Унăн пысăк пултарулăхне революциллĕ шухăш, революциллĕ хăват çĕклентерсе, çулăмлантарса тăрать. Çав романтизмла сывлăша эпир Ахахпа Тал-Мăрса пултарулăхĕсенче те уçăмлăн туйса тăратпăр. Ĕмĕрхи пусмăрлăхпа чуралăхран малтанхи хут çут тĕнчене, аслă ирĕке тухнă чăваш çамрăкĕсемшĕн çĕнĕ совет самани чăннипех те юмахри çутă кун пек курăнса кайнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Вĕсен сăввисем, çуркуннехи кайăксен хавасла юррисем пек, вĕçĕ-хĕррисĕр çĕкленӳллĕ те савăнăçлă сăвăсем пулнă.

Совет стройĕ граждан вăрçи вут-çулăмĕнче туптанса, çирĕпленсе пынă май, чăваш халăхĕн культура вучахĕсем те çийĕнчех сарăлса, вăйланса пыраççĕ. Ĕмĕр-ĕмĕр çутталла туртăннă халăх, хаяр вăрçă пынине пăхмасăрах, хăйĕн нацилĕ культурине аталантарма тытăнать. 1918 çулта Хусанта чăваш театрĕ çуралать, чăваш çамрăкĕсем живописпе музыка ĕçне вĕренме пикенеççĕ. Граждан вăрçи вăхăтĕнче чăвашла хаçатсемпе журналсем йышлăн тухма пуçлаççĕ. Çапла Хусанта „Канаш" (халĕ „Чăваш Коммуни") хаçат, 5-мĕш армии

Политотделĕ çумĕнче—„Чухăнсен сасси“, 2-мĕш армин Политотделĕ çумĕнче—„Хĕрлĕ салтак“ хаçатсем, „Хĕрлĕ Урал“, „Хĕрлĕ ялав“, „Шурăмпуç“, „Çĕнĕ пурăнăç“, „Çамрăк коммунист“, тата ытти хаçатсемпе журналсем тухса тăраççĕ. Вĕсем литература ĕçне чĕрĕлсе аталанма чылай пулăшаççĕ.

Революцилле-лирикăллă поэзипе пĕрлех, совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче драматурги те паллă вырăн йышăнать. М. Акимовăн „Вăхăтсăр вилĕм“, „Илюк“ драмисем, К. Ефремовăн „Пуян Карук“, Ф. Павловăн „Ялта“, „Сутра“ пьесисем халăх хушшинче алçырăвĕсемпех анлăн саралаççĕ. Çав пьесăсенче кивĕ, чуралăх тĕнчине ылханса питлени, пурăнăçри кивĕ йĕркесемпе йăласенчен тăрăхласа кулни тĕп вырăн йышăнса тăрать. Павловăн „Ялта“ пьесинче тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнчи чăваш ялĕнче класс кĕрешĕвĕ çивĕчленсе кайнине кăтартса панă. Çапла вара пирĕн драматургсем, кивĕ тĕнчепе унăн йĕркисене хаяррăн питлесе, халăха çĕнĕ тĕнчене чунран юратма хавхалантарнă.

Çав вăхăтра тухнă чи пысăкрах произведенисенчен пĕри—пирĕн поэзире Тăхти çырнă „Колчак“ поэма пулса тăрать. Паянхи куçпа пăхсан, ку поэма чылай кивелнĕ пек туйăнать пулин те, граждан вăрçи вăхăтĕнче вăл хăйĕн ĕçне тунă. Контрреволюцин тискер сăн-сăпатне, Колчак çарĕ мораль тĕлĕшĕнчен ишĕлсе пынине поэт сатира чĕлхипе витĕмлĕн кăтартса парать. Ĕççыннисем тăшмана çĕнтересси поэмăра уçăмлăн палăрса тăрать. Çавăнпа та Тăхти поэми граждан вăрçи фрончĕсенче чăваш красноармеецĕсем хушшинче анлăн саралнă, ăна пĕр-пĕринчен илсе е çырса илсе вĕреннĕ.

Чăваш совет писателĕсен малтанхи пысăк мар йышне çав çулсенче çамрăк писательсем—Хумма Çеменĕ, Н. Васянка, С. В. Эльгер, П. Осипов хутшăнаççĕ.

Тĕнче вăрçин юнлă уйхирĕ тăрăх утса тухнă С. В. Эльгер, хăйĕн малтанхи шухăшĕсене пĕтĕçтерсе, „Ешĕл хурăн“, „Этем“, „Чăваш хресченне“, „Карпатра“, „Кам тĕнчере усăллă“, „Çуркунне“, „Чăваш çынни, паттăрлан!“ ятлă сăввисене çырать. Çав сăвăсенче поэт, ĕмĕрхи чуралăхран тухнă чăваш ĕççыннине саламласа, çĕнĕ тĕнчешĕн паттăррăн кĕрешме чĕнет, чăваш çынни Октябрьти революци хыççăн çеç чăнчăн этем тивĕçлĕхне тупнишĕн хĕпĕртет.

Кив самана иртиччен
Пире ялан хĕсетчĕç,
Кирек мĕнрен, пур енчен
Чăваш ятне тиркетчĕç...

Аранах çав кив тĕнче
Тăрса юлчĕ авала...

Ĕнтĕ чăваш умĕнче
Урăх кунçул пулмалла.

Чăваш çынни, паттăрлан,—
Ху ĕмĕрне ан çывăр!
Вĕренӳпе маттурлан—
Тĕттĕмлĕх вăл пит йывăр!—

тесе çырать Эльгер 1918 çулта „Чăваш çынни, паттăрлан!" ятлă сăввинче.

Чăваш халăхĕн творчествăллă вăй-хăватне ĕненмен хăшпĕр çынсем: „Чăваш халăхĕн иртнĕ кунçулĕ те, малашлăхĕ те çук; чăваш—мĕскĕн халăх" тесе сӳпĕлтетнĕ. Çак ирсĕр елеке вĕсем революциччен те революци хыççăн та сарма пăхнă. Çав йышши элекçĕсем мĕнле çынсем иккенне кайрантарах эпир лайăх пĕлтĕмĕр. Вĕсем халăх тăшманĕсем, буржуаллă националистсемпе вĕсен хӳрешкисем пулса тăчĕç. Çавсене хирĕçлесе çырнă пекех, Эльгер хăйĕн „Ирĕклĕхшĕн çунакан" ятлă сăввинче чăваш халăхĕ авалтанпах паттăр халăх пулнине, пурăнăçĕ тепле йывăр пулнă пулин те, вăл пурĕпĕрех ирĕклĕхшĕн çуннине палăртать.

Ирĕклĕхшĕн çунакан
Чăваш халăхĕ, асту:
Яланах-мĕн, авалтан
Пулнă санăн хастару.

Çакă аслă тĕнчере
Халăх майлă пурăнма
Миçе хутчен хĕсӳре
Эс тапратнă пăлханма?!

Пусмăрлăха тарăхса
Хĕç тытмасăр эс тӳсмен.
Тăшман вăйпе çапăçса,
Юн юхсан та шикленмен.

Е эс Разин Степанпа
Çӳçентернĕ тăшмана,
Е Пугачев тусупа
Кисрентернĕ пусмăрна,—

тесе çырать поэт. Халăхăн иртнĕ кунçулне истори тĕлĕшĕнчен тĕрĕс ăнланса илме тăрăшни малашнехи творчество ĕçĕнче Эльгере историллĕ анлă произведенисем патне илсе пырать.

Çеçпĕл Мишшин революцилле-романтикăллă поэзийĕ çапла вара Семен Васильевич Эльгерĕн реализмла поэзийĕпе пĕтĕ-

ҫет, малашне пирӗн литературӑра чӑваш совет поэзийӗн вӑйлӑ та анлӑ юхӑмӗ ӳссе хӑватланса пырать.

Граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнчи литературӑна пӗтӗмӗшпе илсе пӑхсассӑн, эпир унта чи малтанах чӑваш халӑхӗн революципе хускалнӑ паттӑрлӑхӗ палӑрса тӑнине куратпӑр. Чӑваш писателӗсем кивӗ, пусмӑрлӑх тӗнчине ылханса пиглеҫҫӗ, ҫӗнӗрен ҫуралакан тӗнчене саламласа хаваслӑ юрӑсем юрлаҫҫӗ. Драмӑлӑ вӑхӑт драмӑсем ҫуратать. Ҫӗнӗ тӗнче хаваслӑхӗ ҫӗнӗ юрӑсенче шӑранать.

1920 ҫулхи июнӗн 24-мӗшӗнче Чӑвашсен Советлӑ Социализмлӑ автономине туса хурасси ҫинчен аслӑ Ленин алӑ пуснӑ декрет тухать. Ҫак историллӗ хыпара чӑваш ӗҫҫыннийӗсем ҫав тери хавасланса кӗтсе илеҫҫӗ. Нумай ӗмӗрсем хушши ҫав тери тискер чурлӑхпа ирсӗр мӑшкӑл тӳссе пурӑннӑ хыҫҫӑн чӑваш халӑхӗ хӑйӗн вӑрӑм кунҫулӗнче малтанхи хут хӑйӗн советлӑ социализмлӑ государствине пӗтӗҫсе пурӑнма, хӑйӗн нациллӗ культурине ӳстерсе чечеклентерме политикӑллӑ аслӑ правасем илет. Халӑхӑн паттӑр ывӑлӗсем шурӑ поляксене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ-ха, анчах ӗҫҫыннисем ҫав вӑхӑтрах пурӑнӑҫа юсама тытӑнаҫҫӗ.

Автономи ҫуралнӑ май, Шупашкар хули админстрацие хуҫалӑх тата культура центрӗ пулса тӑрать. Кунта пирӗн ҫамрӑк литературӑн ҫамрӑк вӑйӗсем пухӑнма пуҫлаҫҫӗ. 1920 ҫулта „Канаш" хаҫат Хусантан Шупашкара куҫать. Халӗ ӗнтӗ тӗп хулара чӑваш типографийӗ организациленет, чӑвашла кӗнекесем йышлӑн пичетленес ӗҫ пуҫланса каять. Кӗнекесем пичетлес ӗҫ совет влаҫӗн малтанхи ҫулӗсенчех мӗн тери вӑйлӑн аталанса пынине пӗр тӗслӗх илсе кӑтартсан та ҫителӗклӗ. Сӑмахран 1881 мӗш ҫултан пуҫласа 1890-мӗш ҫула ҫитиччен, 10 ҫул хушшинче, пурӗ 17 чӑвашла кӗнеке 2060 экземпляр пичетленсе тухнӑ пулсан, 1920 мӗш ҫулта, пӗр ҫул хушшинче кӑна, чӑвашла 59 кӗнеке 261.200 экземпляр тиражпа пичетленсе тухнӑ.

Ҫамрӑк литература вӑйӗсем ҫамрӑк столицӑра—Шупашкарта пухӑнса пыраҫҫӗ. Малтанах кунта писательсемпе журналистсем, „Канаш" хаҫат тавра пӗтӗҫеҫҫӗ. Хаҫатра писательсен произведенийӗсем нумай пичетленсе пыраҫҫӗ. Кунтах 1920 ҫулта Ҫеҫпӗл Мишшин чӑваш поэзине малалла аталанма анлӑ ҫул кӑтартса паракан „Сӑвӑ ҫырассипе ударени правилисем" ятлӑ програмӑллӑ статьи пичетленсе тухать.

Граждан вӑрҫи пӗтсе хуҫалӑха юсас ӗҫ пуҫланнӑ ҫулсенче литературӑна ҫӗнӗ вӑйсем—Г. Алендей, М. Трубина, Иван Мучи, Д. Исаев, П. Хузангай, Т. Кели, Курак тата ытти писательсем хутшӑнаҫҫӗ.

Халӗ ӗнтӗ писательсен чылаях пысӑк йышне пӗр хаҫат кӑна ҫителӗксӗр пулнӑ. Коммунистсен партийӗ, нациллӗ литературӑна вӑйлӑн ӳстерме пулӑшас тесе, ҫӗнӗрен журналсем уҫма ирӗк парать. Ҫапла вара писательсемпе журналистсен

„Канаш“ союзĕ 1924 çулта „Сунтал“ ятлă литературăпа художество журналĕ кăларма тытăнать. Журналăн 1924 çулхи январь уйăхĕнче тухнă пĕрремĕш номерĕнче редакци хăйĕн ĕç программине палăртса çапла çырнă: „Вулакана çак журнал чăваш ĕççыннин пурăнăçĕпе, унăн ăсхакăлĕпе паллаштарĕ... Хуйхăллă кĕвĕсем хыççăн савăнăç сулне тупмалли йĕрсене кăтартĕ. Çамрăксене ăслă, йĕркеллĕ, çивĕч, хастар, маттур пулма чĕнĕ... Киввине ишекен, çĕннине тăвакан „Сунталăн“ ĕмĕрне вăрăмлатма пулăшар!“ тенĕ.

„Сунталăн“ çав номерĕнче Н. И. Шелепин ĕмĕр-ĕмĕр асран кайми „Ленин“ ятлă сăвви пичетленсе тухнă.

Камăн варĕнче
Ўтленсе пулса,
Кам кăкри сĕтне
Çисе ўсрĕн-ши?

Кам чĕрки çинче
Выляса кулса,
Хĕвел шевли пек
Йалт-йăлт сикрĕн-ши?..

Пĕтĕм çĕр çинчи
Ĕçхалăхĕшĕн
Сан ят чăн-чăнах
Чăн çутă çăлтăр,—

тесе çырнă унта поэт. Çавăн пекех ку номерте Хумма Çеменĕн „Пирĕн вăй... вăй!..“ ятлă калавĕ тата Хузангайăн пĕрремĕш сăввисем пичетленсе тухнă. Хумма Çеменĕ хăйĕн çав калавĕнче граждăн вăрçи хыççăн чăваш çамрăкĕсем— малтанхи комсомолецсем çĕнĕ пурăнăç тума тытăннине, ялти чухăнсем—Куçук ашшĕпе Иван амăшĕ те çĕнĕ, совет йĕркисене ăнланма пиккеннине кăтартса панă. Тĕрĕссипе Хумма Çеменĕн çав калавĕ пирĕн литературăра чăваш ĕççыннин çĕнĕ политикăллă ăнланăвĕ çуралнине кăтартса паракан пĕрремĕш калав пулса тăрать. Ку калава паянхи кун та чăваш шкулĕсенче вĕренеççĕ.

„Сунтал“ журналсăр пуçне, вăл вăхăтра Мускавра „Ĕçлекенсен сасси“, Чĕмпĕрте (Ульяновскра) „Атăл юрри“ ятлă журналсем тухса тăраççĕ. Вĕсенче литература произведенийĕсем чылай пичетленеççĕ. 1925 çулта сатирăпа юмор журналĕ „Капкăн“ çуралать. Унта пирĕн паллă сатирикăн Иван Мучин пултарулăхĕ вăйлăн ўссе çитĕнет. Çавăн пекех журнал тавра çамрăк кулăшçăсем вăй илсе ўсеççĕ.

Литература идеологиллĕ вăйлă кĕрешўре аталанса пырать. Малтанхи çулсенче чăваш писателĕсен организацине тата

„Сунтал“ журнала буржуаллă националистла, тăшманла элементсем сăрхăнса кĕрсе, çав пичет органĕсемпе хăйсем майлă усă курма пăхрĕç. Хăшпĕр писательсем, буржуаллă националистсен танатине лексе, феодалла-патриархаллă аваллăха мухтаса сăвă-юрăсем çырчĕç. Буржуаллă национализм сĕрĕмĕпе кулакла идеологи хăшпĕр паллăрах писательсен творчествинче те вăйлăнах сисĕнчĕ (Осиповăн „Трахом юрри“, Рзайпа Хузангайăн 1926—1927 çулсенчи сăввисем). Хузангайăн пултарулăх çулĕрне пăхса тухсан, эпир çав çулĕр питĕ вылянчăклă та шуçлак пулнине куратпăр. Миçе татăк пулса пĕтмерĕ Хузангайăн пултарулăх çулĕ, миçе тĕрлĕ сасăпа, кам евĕрлĕ кăна юрласа пăхмарĕ Хузангай! Есенин патĕнчен Маяковский патне, унтан Пастернакпа Ахматова патнелле те çулăнса пăхрĕ вăл. Хузангай национализм сĕрĕмĕнчен хăтăлса çитменни юлашки вăхăтра та, Отечественнăй аслă вăрçă хыççăн та, курăнчĕ („Саркел“ поэма).

Пирĕн большевиксен партийĕ чăваш писателĕсен организацийĕнчи йăнăшсене вăхăтра тӳрлетсе пычĕ, хăшпĕр писательсен творчествинчи сиенлĕ шухăшсене çийĕнчех тăрă шыв çине кăларчĕ. Писательсен йышне партипе комсомолта ӳссе çитĕнекен çĕнĕ вăйсем, талантлă çамрăксем хутшăнчĕç. Чи талантлăрах писательсем чăваш халăхĕн революциллĕ кĕрешĕвĕн историйĕпе, социализм строительствипе çыхăнса тăракан темăсем тăрăх анлă произведенисем çырчĕç. Çапла „Сунтал“ журналта Эльгерĕн „Хĕнхур айĕнче“ поэми, Исаев Мĕтрин "Çулăмри ял" повеçĕпе „Рабфак хĕрĕ“ тата „Чăптаçă Лисук“ калавĕсем пичетленеççĕ. Хумма Çеменĕ граждăн вăрçи вăхăтĕнчи чăваш ялĕ çинчен, хуçалăха юсаса ура çине тăратас ĕç хĕрсе пыни çинчен, кулаксене хирĕç кĕрешни çинчен витĕмлĕ произведенисем çырать („Штрум“, „Станцăра“ т. ыт. те). Литература критики аталанма тытăнать (Исаев, Кели). Драматургире П. Н. Осиповăн çĕнĕ пьесисем („Кушар“, „Айтар“) тухаççĕ.

Çав тапхăрти чи паха произведенисенчен пĕри вăл—С. В. Эльгерĕн „Хĕнхур айĕнче“ поэми пулса тăрать. Ку поэмăра поэт, чăваш халăхĕн историллĕ иртнĕ кунçулне тĕрĕс ăнланса илсе, чăваш ĕççыннийĕсем Пугачев çыннисемпе пĕрле хăйсен ирĕклĕхĕшĕн паттăр кĕрешĕве çĕкленнине анлăн та тарăнăн кăтартса панă. Хумма Çеменĕпе Исаев Мĕтри калавĕсенче вара эпир Совет саманинче чăваш ĕççыннин çĕнĕ ăнланăвĕ çитĕнсе пынине, пирĕн литературăна чăннипех те çĕнĕ саманари çĕнĕ çынсем килсе кĕнине, ĕмĕрхи тĕттĕмлĕхрен тухнă чăваш халăхĕн ывăл-хĕрсем çутталла—çĕнĕ культура патнелле хавхаланса туртăннине куратпăр.

Халăх хуçалăхне юсаса çитернĕ май пирĕн парти историллĕ çĕнĕ аслă задача—совет çĕршывне индустриализацилес задача кăларса тăратать. Сталинла индустриализаци политики халăхăн ĕçри хастарлăхне татах та ытларах хавхалантарса çĕклет. Чăвашсем вăрманĕсенче те малтанхи пысăк предпри-

ятисен никĕсĕсене хываççĕ. Культура ĕçĕ малалла сарăлса пырать. Халăха талккишĕпе хут вĕрентес ĕç пуçланать, Тĕттĕмлĕхпе тĕшмĕшлхе хирĕç, ĕмĕрхи инкеке—трахома чирне хирĕç ĕççыннисем культпохода тухаççĕ.

Çака çĕнĕ çĕкленўллĕ вăхăтра литература ĕçне татах çĕнĕ вăйсем хутшăнаççĕ. Граждан вăрçи вăхăтĕнчи Çĕпĕр партизанĕ Данилов-Чалдун „Сунтал" страницисем çинче партизан калавĕсене пичетлеме тытăнать. Комсомолта çитĕнекен çамрăксен —Уйăп Мишшин, И. Тукташăн, А. Пэттокин, Л. Агаковăн, К. Пайрашăн сассисем илтĕнсе каяççĕ. Вĕсем литературăна çĕнелнĕ ялтан хăйсен çĕнĕ темисемпе килсе кĕреççĕ.

Ку вăхăтри чăваш литературине пĕтĕмĕшпе илсен, эпир унта çак темăсене çутатса панине куратпăр: чăваш халăхĕн ĕлĕкхипе хальхи пурăнăçĕ, Октябрьти социализмала революци кивĕ тĕнчене аркатса тăкса Совет влаçне çирĕплетсе хуни, граждăн вăрçи пĕтнĕ хыççăн халăх хăйĕн хуçалăхне юсаса çитерни, Совет çĕршывĕ индустриализаци ĕçĕнче малтанхи пысăк утăмсем туни, культура ўссе чечекленсе пыни, ĕççынисен пурăнăçĕпе йăлисем çĕнелсе пыни,—çак темăсем пурте вĕсем чăваш писателĕсен çав вăхăтри произведенийĕсенче тĕп вырăн йышăнаççĕ.

III

Чăваш совет литературн аталанăвĕн пĕрремĕш тапхăрĕ Октябрьти Социализмла Аслă революци кунĕсенчен пуçласа Сталин юлташ «аслă улăшăну çулталăкĕ» тесе ят панă 1929 çула çитиччен пырать терĕмĕр пулсан, иккĕмĕш тапхăр вара 1930 çултан тытăнса Отечественнăй аслă вăрçă тапраниччен пырать.

Совет çĕршывĕ пирĕн ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче социализм строительствинче çавтери чаплă та аслă çĕнтерўсем туса пырать. Социализмла индустри, чи малтан машинăсемпе станоксем тăвакан индустри, хăватлăн та хăвăрттăн ўсет. Тăван çĕршыв сăн-сăпачĕ, çавăн пекех пирĕн чăваш республикин пейзажĕсем те тĕпренех улăшăнаççĕ. Ĕлĕкрех армути кашласа ларнă вырăнсенче, Куславкка варĕсемпе Çĕмĕрле вăрманĕсенче чăваш халăхĕн историйĕнче малтанхи хут пысăк заводсем ўссе лараççĕ. Вĕсенче чăваш ĕççыннийĕсем, пирĕн çамрăксем çĕнĕ техникăна вĕренме пикенеççĕ.

1929—1930 çулçенче хресченсем колхозсене массăллăн кĕреççĕ. Çапла вара вĕсем пĕччен хуçалăхăн ансăр та тăкăскă çулĕ çинчен историллĕ çĕнĕ çул çине—социализм çулĕ çине тухаççĕ. Ĕçхресченĕсене çак аслă çул çине кăларма пирĕн большевиксен партийĕ малтанах хатĕрлесе пынă. Социализмла индустри ялхуçалăхĕ валли тракторсемпе машинăсем йышлăн туса кăларма тытăннă. Шултăра машинăсем валли 20—25 пусăмлă ансăр анасем мар, йăрансăр анлă уйхирсем, коллективлă пысăк хуçалăхсем кирлĕ пулса тăнă. Хресченсем

талккишĕпех колхозсене кĕнĕ май кулаксене, капитализмăн çакă чи юлашки тискер класне, тĕппипех пĕтерес ĕç пуçланса кайнă. Çав вăхăт тĕлне Совет Союзĕнче ĕнтĕ кулаксене пĕтерме, вĕсем хирĕç тăнине çапса хуçма, вĕсем класс пулса тăнине пĕтерме тата вĕсен хуçалăхне колхозсемпе улăштарма материальнăй никĕс çителĕклĕ пулнă.

Ялхуçалăхĕнчи çĕнĕ, колхоз стройĕ çапла вара хаяр класс кĕрешĕвĕнче аталанса пынă.

Халăхăн социализм строительствинче хускалса çĕкленнĕ хастарлăхĕ, çĕршыври класс кĕрешĕвĕ чăваш совет литературинче те питĕ уçăмлăн палăрса юлать. Индустриализаципе коллективизаци тапхăрĕнчи чăваш литературин тематикипе идейăллă содержанийĕ вăйлăн пуянланса пычĕ. Литература пурăнăçа анлăраххăн та тарăнраххăн кăтартса парас çул çине тухрĕ. Чăваш писателĕсен произведенийĕсенче çав тапхăрти класс кĕрешĕвĕ, халăхăн социализм строительствинчи паттăрлăхĕ уççăн палăрса тăрать. Поэтсем хăватлă индустриллĕ çĕршыва, йăрансăр уйхирлĕ колхозлă яла саламласа хаваслă сăвăсем çыраççĕ.

Аслă строительство площадкисене курса çӳрени, хĕрӳллĕ пурăнăçпа таччăнрах çыхăнма тăрăшни хăшпĕр писательсене, сăмахран, Хузангая, кивĕ, пăтранчăк шухăшсенчен тасалса пыма, „Магнитту“ тата „Çĕрйĕркелӳ“ пек поэмăсем çырма пулăшать. Уйăп Мишши чăваш çĕршызĕнче социализма индустрипе колхозсем çитĕнсе пыни çинчен хĕрӳллĕ сăвăсем çырать. Историллĕ чаплă стройкăсене кайса курнă хыççăн унăн „Автогигант“, „Днепрострой“ поэмисем çуралаççĕ.

Ялта ӳссе çитĕннĕ чăваш ачисем чăваш çĕршывĕн уйхирĕсенче малтанхи хут трактор курса тĕлĕннипе хавасланчĕç. Хулана кайса, малтанхи хут завод шавне илтнипе çунатланчĕç. Ахальтен мар ун чухнехи сăвăсенче тĕлĕннипе çуйăхакан „ах“ та „эх“ сасăсем пуринчен ытларах илтĕнетчĕç. Поэтсем хастарлансах ударлă бригадăсен маршĕсем, сăвăлла рапортсем, лозунгсем çыратчĕç. Гигант-строительствăсен планĕсем çаплипех рифмăланса поэмăсене кĕретчĕç. Сăвă-юрăсенче тракторсем, станоксем, гудоксем, молотилкăсемпе „триерсем“ янраса кĕрлени илтĕнетчĕ. Штурмлă кунсемпе каçсен вăхăчĕ! Поэтсем васкатчĕç, нумай чухне сăвă пахалăхĕ çине те çаврăнса пăхмасчĕç. Ку пирĕн поэзин риторикăллă вăхăчĕ пулчĕ.

Çĕршывра социализм строительстви малалла анлăн сарăлса пырать. Халăх мĕнпур йышши тăшмансене çĕмĕрсе малалла утать. Пирĕн литература та çаплах вăйлă кĕрешӳре аталанса пычĕ. Литература организацине хĕсĕнсе кĕнĕ халăх тăшманĕсем—буржуаллă националистсемпе троцкистла-бухаринла агентсем литературăна шалтан сăтăрлама хăтланчĕç, художествăллă сăмахпа хăйсен тăшманла ĕçĕнче усă курма пăхрĕç.

Чăваш пролетари писателĕсен ассоциацийĕ (вăл 1927 çулта „Канаш“ Союза урăхлатса йĕркеленĕ хыççăн пуçланса кайнă) малтанхи вăхăтрах çĕршыври пролетариат майлă тăракан писательсене пĕтĕçтерме тăрăшнă пулсан, кайрантарах политикăллă пысăк йăнăшсем тума тытăнать. Çав организаци çĕршывра пулса иртнĕ политикăллă улăшăнусене шута илмест. Организацире тĕрлĕ ушкăнсемпе группăсем пулса тăраççĕ. Творчество тĕлĕшĕпе ĕçлес вырăнне, вĕсем пĕр-пĕрне кышлама тытăнаççĕ.

ЧАПП-а ертсе пыракансем писательсене вĕрентсе çитĕнтерес вырăнне, тĕрлĕ администрациллĕ майсемпе хĕссе, хĕсĕрлесе пыраççĕ, чылай писательсен творчестви ÿссе пынине шута илмеççĕ. Кайрантарахри çулсем вара литература фронтне ертсе пырас ĕçре камсем ларнине витĕрех кăтартса пачĕç. Анчах совет платформи çинче тăракан писательсен йышĕ, коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, литературăри тăшманла элементсене, вĕсен агентурине вăхăтра тăрă шыв çине кăларчĕ, çапса аркатрĕ. Пирĕн парти литературăпа унăн кадрĕсене малалла патваррăн ÿсме пулăшса, çул кăтартса пачĕ.

Партин Центральнăй Комитечĕ 1932 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнче литературăпа художество организацийĕсене урăхлатса йĕркелесси çинчен йышăннă историллĕ постановлени пĕтĕм совет литературине малалла аталантармалли программа пулса тăчĕ. Чăваш пролетари писателĕсен ассоциацине салатса ярса, ун вырăнне чăваш совет писателĕсен союзне туни пирĕн тăван литературăна анлă ÿсĕм çулĕ çине кăларчĕ.

1934 çулта Мускаври совет писателĕсен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш съезчĕ пулса иртрĕ. Съездра пĕтĕм совет литературин историллĕ опытне анлăн та тарăнăн пĕтĕçтерсе, А. М. Горький доклад туса пачĕ. Совет писателĕсем умне парти лартакан задачăсем çинчен ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн секретарĕ А. А. Жданов юлташ доклад туса пачĕ. Вăл совет литературин сталинла принципĕсене—совет писателĕсем хăйсен творчествинче социализмлă реализма революциллĕ романтизмпа пĕтĕçтерсе пыма тивĕçлине уçăмлăн кăтартса пачĕ. Çак съезд хыççăн совет писателĕсем умĕнче татах та аслăрах историллĕ çул уçăлчĕ.

Литература пурăнăçĕнче пулса иртнĕ çак пысăк улăшăнусем мĕнпур совет писателĕсене творчество ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарчĕç. литературăн çĕнĕ хунавĕсене патваррăн та шанчăклăн ÿсме пулăшрĕç. Çак çулсенче ĕнтĕ çамрăк писательсен—Я. Ухсай, И. Ивник, А. Алга, С. Шавлы, Г. Краснов, И. Малгай, В. Бараев, Ф. Уяр, М. Кибек тата ыттисен пултарулăхĕсем кашни хăйне май аталанса пычĕç.

Аслă Совет çĕршывĕ, социализмла общество туса çитерсе, социализмран майĕпе коммунизма куçас тапхăра кĕрет. Çĕршыври тăванла халăхсен пурăнăçĕпе маллла каймалли çулйĕрне Сталинла Конституци хĕвелĕ çутатма тытăнать. Чăваш

совет литератури те идейăллă çĕнĕ пусăма çĕкленет, унăн тематики пуянланать. Поэтсем Ленинпа Сталин çинчен, Тăван çĕршывăн чапĕпе мухтавĕ çинчен, халăхăн Сталинла Конституци тапхăрĕнчи паттăрлăхĕпе патриотизмĕ çинчен, хамăрăн юратнă çĕршыва тăшмансенчен хӳтĕлесси çинчен çĕнĕ те паха сăвă-юрăсем, поэмăсем çыраççĕ. Прозăра пысăк произведенисем—малтан романсемпе повеçсем çураласçĕ. С. В. Эльгер, умлă-хыçлăнах тенĕ пек, икĕ роман—«Вăрçă кунĕсем» тата «Шурăмпуç килсен» ятлă романсем çырса кăларать.

Халăхăн историллĕ кунçулне тарăнăн тĕпчесе вĕренсе, С. В. Эльгер „Вăрçă кунĕсенче" çирĕмĕш ĕмĕр пуçламĕшĕнчи чи трагедиллĕ тапхăра—тĕнчери пĕрремĕш вăрçă тапхăрне тата çав вăрçăра халăхăн революциллĕ ăнланăвĕ ӳссе пынине кăтартса парать. Унăн „Шурăмпуç килсен" романĕнче эпир татах историллĕ пысăк тапхăра—1905—07-мĕш çулсенчи халăх революцин тапхăрне, чăваш ĕççыннисем хушшинчен çав революципе пĕрле халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешĕве çĕкленнĕ паттăрсен сăн-сăпачĕсене куратпăр.

Пирĕн литературăра прозăллă анлă произведением çуралма тытăннă çулсенче Леонид Агаков хăйĕн „Пĕрре çуркунне" ятлă пысăк повеçне çырса пĕтерет. Ку произведенире граждан вăрçи хыççăн чăваш ĕçхресченĕсем ялхуçалăхне юсама тытăннă паллă тапхăра кăтартса панă. Повеçри уйрăмах паха образ вăл—Тарас коммунистăн образĕ пулса тăрать. Совет çĕршывĕнчи пурăнăçа илсессĕн, пирĕн пур ĕçе те коммунистсем ертсе пыраççĕ. Писатель Леонид Агаков çакна тĕрĕс ăнланса илнĕ. Граждан вăрçи фронтĕнчен тин кăна таврăннă Тарас, ларса канмасăр, сывлăш çавăрмасăр тенĕ пек, тӳрех общество ĕçне тытăнать. Вăл ялти кулаксене хирĕç, контрреволюцин ирсĕр хӳрешкисене—Махорка шайкине хирĕç кĕрешекен чухăн хресченсене ертсе пырать, вĕсене совет влаçĕн политики çинчен ăнлантарса парать, ялти активлă вăйсене çĕнĕ пурăнăç тума пĕтĕçтерет. Тарас образĕ вăл пирĕн чăваш совет литературинче коммунистăн чăн малтан палăрнă образĕ темелле. Писатель ăна питех те ĕнентермелле тĕрĕс те чĕррĕн кăтартса панă. Кунпа пĕрлех, Леонид Агаковăн „Пĕрре çуркунне" повеçĕ пирĕн чăваш писателĕсем, пурăнăçа тĕплĕнрех вĕренсе пырсан, социализмла реализм меслетне çирĕпрех вĕренсе алла илес шанчăка, прозăра анлă произведенисем пама пултарас шанчăка татах та ытларах çирĕплетет.

Пĕтĕмĕшпе илсен, прозаиксемпе поэтсем Сталинла Конституци çулĕсенче çĕршывра, çавăн пекех хамăр республикăра пулса иртнĕ социализмла улăшăнусене тарăнраххăн ăнланса илме тăрăшни сисĕнет.

Çак çулсенче Уйăп Мишши „Ĕмĕрсен ĕмĕчĕ", „Карели каçĕ", „Çилхи витĕр çил вĕрет" ятлă, хĕрӳллĕ те тарăн лирикăллă сăввисене, Ухсай Яккăвĕ „Халăхсен ылттăн кĕнеки,"

„Туй“ ятлă поэмисене, Александр Алга „Иккĕн“, „Шыв арманĕ“ ятлă поэмисене, Иван Ивник хăйĕн ăшă кăмăллă лирикине, И. Тукташ çĕршыв оборонине тĕреклетме чĕнекен юрри-сăввисене çырать.

Ирĕк халăхсем тăчĕç, чăн-чăн хуçалла,
Улăштарчĕç тĕпрен çĕнетсе çĕр питне.
Çĕршывра юмахри пек тĕнче уçăлать.
Пурнăçларĕ çĕршыв ĕмĕрсен ĕмĕтне,—

тесе çырать Уйăп Мишши „Ĕмĕрсен ĕмĕчĕ“ ятлă сăввинче, пĕтĕм чăваш халăхĕн шухăш-кăмăлне палăртса.

Кĕрле, хаваслăхăн такмакĕ,
Шавла мĕнпур çĕршывĕпех!
Йăлттам поэзи урхамахĕ,
Чуптар вĕçес пек сиккипе!
Умра хитре çанталăк кунĕ,
Умра хĕвел шевли сикет.
Умра ирĕк халăх саккунĕ,
Илемлĕ ылттăн кĕнеке.
. . . . . . . . . . . . . .
Саккун тивлечĕпе ешерчĕ
Пахча пекех çĕршывăмăр;
Хавас ĕмĕтпеле çĕкленчĕ
Никам çĕнми хăватăмăр.
Пур халăхсем те пултаруллăн
Телей саккунĕ илтĕмĕр;
Сывпултăр аслă Сталин-улăп,
Нихçан сӳнми хĕвелĕмĕр,—

тесе çырать Яков Ухсай „Халăхсен ылттăн кĕнеки“ поэмăра, Сталинла Конституцие пĕтĕм халăх ячĕпе саламласа. Çапла вара поэтсен лирикăллă сăвви е поэми халăх лирики пулса тăрать.

„Туй“ ятлă поэмăра Яков Ухсай колхозлă ялти пуян та культурăллă пурнăçа, çĕнĕ ялăн çĕнĕ çыннисемпе çĕнĕ йăлисене, кăтартса парать. Çапла пирĕн совет поэзийĕнче реалистла çĕнĕ поэма çуралать.

Çав çулсенче поэтсем коллективлă пысăк ĕç тăваççĕ: чăваш халăхĕ ячĕпе Аслă СТАЛИН патне сăвăллă çыру çыраççĕ. Çав çыру—этемлĕхĕн аслă генийĕ, халăхсен Çулпуçĕ Сталин ячĕпе хывнă литературăллă чаплă памятник пулса тăрать. Çырура чăваш халăхĕн пурнăçне сĕм аваллăхран пуçласа Сталинла Конституци тапхăрне çитиччен художествăллă пысăк ăсталăхпа сăнласа панă.

Поэзипе проза пекех, драматурги те çĕнĕ утăмсем тăвать.

П. Н. Осипов хăйĕн „Айтар" ятлă драмине чылай çĕнетет, çĕнĕ саманари çĕнĕ çынсене кăтартса паракан „Кулленхи симфони" ятлă пьесине çырать. Çамрăк драматург А. Калган „Анисса" пьеса çырса кăларать. Н. Айзман комеди енĕпе ĕçлет. Авалхи саманара чăваш ĕççыннисем Пугачев пăлхавне хутшăнни çинчен Ухсай поэт „Тутимĕр" ятлă сăвăллă трагеди çырса кăларать. Тĕнчери пĕрремĕш вăрçă умĕн чăваш ялĕнче революциллĕ шухăшсем вăйланса пыни çинчен поэт Ст. Шавлы „Çиçĕм çиçет" ятлă драмăлла поэма çырать.

Çавăн пекех вырăспа ытти халăхсен классикăллă произведенинийĕсене чăвашла куçарас ĕç те вăйлăн сарăлать. Чăваш литератури А. Пушкин, М. Лермонтов, Л. Толстой, Т. Шевченко, А. Чехов, М. Горький, В. Маяковский, Джамбул произведенийĕсемпе хăйĕн пуянлăхне тата ытларах ÿстерчĕ.

Пирĕн литература хăйĕн ÿсĕм çулĕпе çаплах малалла вăйлăн те çирĕппĕн аталанса пычĕ. Унăн пĕтĕм ÿсĕмĕнче, ялан-хи пекех, вырăс совет литературин пархатарлă влиянийĕ палăрса тăрать.

## IV

Фашистла нимĕç захватчикĕсем пирĕн юратнă Тăван çĕршыва вăрă-хурахла тапăнса кĕни, çавăн хыççăн пуçланса кайнă Отечественнăй вăрçă чăваш литературин ÿсĕмне чарса лартмарĕ. Çав аслă вăрçăпа пĕрле пирĕн литература аталанăвĕн çĕнĕ тапхăрĕ уçăлчĕ. Вăрçă кунĕсенче чăваш писателĕсен политикăллă тата творчествăллă активлăхĕ ытларах ÿсрĕ.

Паттăр Совет Çарĕ Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче улăпла кĕрешнине, чăваш халăхĕ тылра вăя хĕрхенмесĕр ĕçленине чăваш писателĕсем хăйсен произведенийĕсенче чылаях анлăн çутатса пычĕç.

Вăрçă кунĕсенче поэт—фронтовик Ухсай Яккăвĕ пĕр дивизири чăваш-боецĕсен ячĕпе тăван халăх патне сăвăласа çырнă çырăва вулакансем питĕ паха поэма вырăнне хурса йышăнчĕç. Унăн „Вăрçă хирĕнче" ятлă кĕнекинчи лирикăллă сăвăсем пирĕн паттăр воинсен шалти кăмăл-туйăмĕсене туллин кăтартса пачĕç. Поэт-фронтовик П. Хузангай вырăс халăхĕн паттăр хĕрĕ Зоя Космодемьянская çинчен „Таня" ятлă поэма тата чăваш халăхĕпе ытти халăхсен вăрçăри тăванлăхĕ çинчен „Аптраман-тавраш" ятлă поэма çырса кăларчĕ. Уйăп Мишши „Салтак амăшĕ" поэма, „Малалла, хĕвеланăçнелле" ятлă сăвă кĕнеки пачĕ. Граждан вăрçи вăхăтĕнчи партизан Данилов-Чалдун, Отечественнăй вăрçă фронтне ватлăха пăхмасăрах хăй ирĕкĕпе кайнăскер, „Фронтра" ятлă калав кĕнеки çырса хăварчĕ.

Писатель-фронтовик Леонид Акагов „Тăван юншăн", „Вилĕмрен те вăйлăрах" повеçсем, „Çапăçу хирĕнче", „Фронтри ачасем" ятлă калав кĕнекисем çырчĕ. Çамрăксен юратнă ли-

рикĕ Иван Ивник Отечественнăй вăрçă синчен пысăк поэмăн „Ылхан“ ятлă прологне çырса хăварчĕ. Унта поэт ирсĕр фашистсене халăхăн хаяр ылханăвĕпе витсе питлерĕ. Стихван Шавлы „Киев пионерĕ“, „Зоя“, „Матур Якур“ ятлă поэмăсем çырчĕ, „Йыхрав“, „Поэт сасси“ ятлă сăва кĕнекисем кăларчĕ. Çакăнпа пĕрлех вăл вырăссен авалхи паттăрсем çинчен хывнă юрăсене чăвашла куçарса пысăк ĕç турĕ. А. Алга, И. Тукташ, И. Малгай, Ф. Уяр, Долгов-Хутарсем, К. Пайраш, Иван Мучи тата ытти писательсем çĕнĕ сăвă-юрăсемпе калавсем пачĕç.

Чăваш халăх поэчĕсем Н. Шелепипе С. Эльгер вăрçă кунĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Н. И. Шелепи „Çулпуçне“, „Чĕнетĕп“ ятлă сăва кĕнекисем кăларчĕ, С. В. Эльгер Ленин хулине паттăррăн хӳтĕлесе пуçне хунă чăваш халăх ывăлĕ Иван Смирнов çинчен „Вăл вилĕмсĕр“ ятлă поэма çырчĕ.

Драматургсенчен Н. Айзман „Лиза Короткова“ ятлă пьеса çырса, тылра арçын вырăнне юлнă хĕрарăмăн паттăрлăхне уççăн кăтартса пачĕ. Драматург Кăлган акăлчансен аслă драматургĕ Шекспир çырнă „Отелло“ ятлă чаплă трагедине чăвашла куçарчĕ. Грибоедовăн „Ăса пула инкек“ комедине Хузангай поэт куçарса кăларчĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче литературăна çĕнĕ вăйсем хутшăнчĕç: К. Турхан („Йăмраллă ял“ повесть), С. Аслан („Аслати“ повесть). Н. Евстафьев, В. Давыдов, В. Урдаш, А. Афанасьев („Тĕнче уççи“ поэма) тата ыттисем те.

Чăваш халăх творчестви малалла аталанса пычĕ. Халăх хушшинче хамăрăн аслă Тăван çĕршывпа унăн паттăрĕсене мухтавлакан, çĕршыв тăшманĕсене—сĕмсĕр те ирсĕр нимĕççесене ылханса питлекен çĕнĕ халап-юмахсем, ваттисен сăмахĕсем çуралчĕç.

Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех чăваш писателĕсем „Фашизма хирĕç фольклор“ ятлă кĕнеке пухса кăларчĕç. Халăх юрăçи Кашкăр Микули сатирăллă çĕнĕ сăвă-юрăсем такмаклаcа пачĕ. Çав такмаксенче вăл пирĕн пĕтĕм халăх шухăшне пĕтĕçтерсе каларĕ. Акă, илер-ха унăн „Тĕп пултăр фашист!“ сăввине:

Çап фашиста урараи,—
Вăл малалла ан уттăр!
Хăйĕн юнлă урипе
Пирĕн çĕре ан пустăр.

Çап фашиста аллинчен,—
Тупрана вăл ан илтĕр.
Тăван халăх вăйĕпе
Текех ан киленейтĕр.

Чик фашиста хырӑмран,—
Пирӗн тырра ан ҫитӗр!
Ҫӗлен-калта ӑшӗнче
Ҫӑкӑр-тӑвар ан ҫӗртӗр,—

тесе ҫырать ватă такмакҫă. Ҫак сăвăсене вуланă чухне тăшмансене кунтан хаяртарах ылханса питлеме те ҫук пек туйăнать. Кунта тăшман тупăкĕн хуплачине тимĕр пăта ҫапса лартни илтĕнсе тăрать.

Отечественнăй аслă вăрҫă вăхăтĕнче литературăн пур жанрĕсем те—поэзи, проза, драматурги ăнăҫлăн малалла аталанса пычĕҫ. Пирĕн литература шухăш-тĕлĕшĕнчен тарăнланчĕ, ăшчикĕпе формисем енчен пуянланчĕ. Тăван ҫĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн юратни, совет ҫыннин социализмла патриотизмĕ, совет халăхĕ тăшмана хаяррăн курайманни, Совет Ҫарĕн воинĕсемпе партизансем ҫаратуҫă-нимĕҫ ҫарне хирĕҫ паттăррăн кĕрешни, тылри ĕҫченсем фронта вăя хĕрхенмесĕр пулăшса тăни, фронтпа тыл ҫав аслă кĕрешӳре ҫирĕп пĕрлĕхлĕ пулни, Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ татах та ытларах тĕрекленни,—ҫаксем пурте чăваш совет литературин Отечественнăй аслă вăрҫă вăхăтĕнчи тĕп темисем пулса тăчĕҫ. Вăрҫăра писательсен тавракурăмĕ (горизончĕ) сарăлса аслăланчĕ. Совет Ҫарĕн паттăр воинĕсемпе пĕрле пирĕн чăваш писателĕсем Берлинра та, Порт-Артурта та, Сахалин утравĕ ҫинче те пулса курчĕҫ.

Пирĕн совет поэзине пуҫарса яракан Ҫеҫпĕл Мишши, чăваш ачине аслă ĕмĕр халаласа:

Ĕмĕрлĕхе яту сан юлĕ,
Шупашкартан Кавал таран,
Ҫĕрпӳ, Чикме, Етĕрне урлă
Юрру сассийĕ кайĕ сан,—

тесе ҫырнă пулсан, чăвашсен хальхи поэчĕ Ухсай чаплă ҫĕнтерӳҫĕ совет ҫыннин мăнă кăмăлне палăртса:

Тĕтреллĕ Висла леш енче ҫӳреп-и,
Кĕретĕп-и Карпат ту-чакăлне,
Ăҫта кайсассăн та, илтетĕп эпĕ
Тăван чĕлхемĕн ҫепĕҫ сассине...

Орёл та, Киев та, Варшава,
Белград та, Будапешт та, Порт-Артур...
Татти-сыпписĕр пычĕ вăрҫă шавĕ,
Унта чăваш чĕлхин те пайĕ пур,—

тесе ҫырма пултарчĕ.

Çав шухăшах палăртать „Бранденбург хапхи умĕнче“ ятлă сăвăра Александр Алга та:

Нумай çĕршыва, юлташсем, çитсе куртăмăр.
Пит вăрăм çулсем пулчĕç юнлă, тар-шурлă,
Çапах ўкермерĕмĕр хамăр чыса:
Урал тăвĕнчен килсе ялкăшнă вутăмăр
Хăюллăн вĕçет Бранденбург хапхи урлă,
Рейхстаг ишĕлет нимĕçле йынăшса.
Асаплă та тертлĕ пулчĕ кунçулăмăр.
Кам кăмăлĕ-чунĕ тулашмĕ хаярран,
Кам манĕ юн çунă тăватă çула?!
Вĕçсем ĕнтĕ, савнăç пек, шухă вут çулăмăр,
Хура урамсем тăрăх ярăм та ярăм,
Тăшман йăвине тĕк юлми эс тулла!

Ку сăвă айне „Берлин, 1945 ç.“ тесе паллă тунă. Çакă вăл хăех тĕнчере çав тери аслă ĕçсем пулса иртни çинчен калать. Шухăшласа пăхăр-ха ĕнтĕ: чăваш сăвăçи паттăр Совет çарĕпе пĕрле Берлина çĕмĕрсе кĕнĕ те унта Бранденбург хапхи умĕнче, чăвашла сăвă çырать.

Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн юратни, ылханлă тăшмана хаярран курайманни чăваш писателĕсен патриотизмĕпе пултарулăхне хăватлăн çулăмлантарса ячĕ. Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн пинă çав аслă кĕрешўре чăваш совет писателĕсем хăйсен хĕрўллĕ сăмахĕпе тăван халăха çĕнтерў тума хавхалантарчĕç. Совет халăхĕ, пĕтĕм вăя хурса кĕрешсе, хăй ĕмĕтленнĕ хаклă куна кĕтсе илчĕ. Аслă çĕнтерў хĕвелĕ тухрĕ!

Халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин хамăр çĕршыва мирлĕ саманара аталантармалли çĕнĕ пилĕкçуллăх планĕ туса пачĕ. Çĕршывра çĕнĕрен мирлĕ те хĕрўллĕ ĕç юрри пуçланчĕ. Совет халăхĕ, çĕнĕ пилĕкçуллăха хăвăртрах пурнăçа кĕртес тесе, фронтри пекех, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Халĕ ĕнтĕ пирĕн чăваш писателĕсем хăйсен тăван халăхне çак пултаруллă ĕçре çĕнĕрен-çĕнĕ произведенисемпе хавхалантарса пыраççĕ.

Партин Центральнăй Комитечĕ 1946 çулта литературăпа искусство ыйтăвĕсем çинчен историллĕ постановленисем йышăнчĕ. Жданов юлташ, писательсен паянхи аслă задачисене палăртса, çав тери анлă та тарăн шухăшлă доклад туса пачĕ.

Тĕрĕссипех каламалла, вăрçă пĕтсенех пирĕн писательсем хушшинче лăпланса ларма пăхакан уйрăм çынсем тупăнчĕç. Вĕсем Атăл хĕрринче пĕччен тунсăхласа ларакан кукăр йăмрасем çинчен, „кăлăхах шуралнă“ çўç пайăркисем çинчен ўкĕнчĕклĕ те нăйкăшакан сăвăсем çырма тытăнчĕç. Драматургире

совет халӑхӗн ӗҫӗпе кӗрешӗвне тӗрӗс мар кӑтартса паракан пьесӑсем („Тӑван ҫӗршывра“, „Салют хыҫҫӑн“, „Ҫӗрпе кӑвак тӳпе“) тухрӗҫ.

Ҫӗршывра социализмла общество туса ҫитерне, тӗнчери вӑйлӑ тӑшмансене—фашистла Германипе империалистла Японие ҫапса аркатнӑ ҫӗнтерӳҫӗ-совет ҫынни пирӗн литературӑра хайӗн улӑпла сӑнарӗпе тухса тӑраймарӗ.

Партин Центральнӑй Комитечӗ хайӗн историллӗ постановленийӗсенче тата А. А. Жданов юлташ Ленинград журналӗсем ҫинчен тунӑ докладӗнче писательсемпе вӗсен организацийӗсенчи политикӑллӑ йӑнӑшсемпе пысӑк ҫитменлӗхсене ҫивӗччӗн критиклесе, совет литературине малалла ӑнӑҫлӑн аталантармалли аслӑ программа кӑтартса пачӗҫ.

«Пирӗн совет литератури халӑх интересӗсемпе, Тӑван ҫӗршыв интересӗсемпе пурӑнать тата пурӑнма тивӗҫлӗ те,— терӗ Жданов юлташ.—Литература вӑл—халӑхшӑн тӑван ӗҫ пулса тӑрать. Ака мӗншӗн ӗнтӗ сирӗн кашни ӑнӑҫлӑ ӗҫе, кашни паха произведение халӑх хайӗн ҫӗнтерӗвӗ тесе хаклать.. Писатель событисен хӳри вӗҫӗнче ҫапкаланса пыма пултараймасть, вӑл халӑхӑн малти речӗсенче пыма, халӑха аталану ҫулне кӑтартса пыма тивӗҫлӗ. Социализмла реализм меслетне ҫирӗп тытса пырса, хамӑрӑн пурӑнӑҫа ырӑ кӑмӑллӑн та тимлӗн вӗренсе пырса, хамӑр аталану процесӗн тупсӑмне тарӑнтараххӑн ӑнланса илме тӑрӑшса, писатель халӑха вӗрентсе пыма тата ӑна идея тӗлӗшӗнчен хӗҫпӑшаллантарса пыма тивӗҫлӗ. Совет ҫынниничи лайӑх туйӑмӗсемпе пахалӑхӗсене суйласа пӗтӗҫтерсе, унӑн кусӗ умӗнче унӑн ыранхи кунне уҫса парса, пирӗн ҫав вӑхӑтрах хамӑр ҫынсене вӗсем мӗнле пулма тивӗҫлӗ маррине те кӑтартса памалла, ӗнерхи кунӑн юлашкийӗсене, совет ҫыннисене малалла кайма чӑрмантаракан каяшсене тӑрӑ шыв ҫине кӑлармалла. Совет писателӗсем пирӗн ҫамрӑксене хастарлӑ та паттӑр пулма, хӑйсен вӑйӗсене шанса та ӗненсе тӑма, нимӗнле йывӑрлӑхсенчен те хӑрамасӑр тӑма вӗрентсе ҫитӗнтерес ӗҫре халӑха, государствӑна, партие пулӑшма тивӗҫлӗ».

Кунта ӗнтӗ совет писателӗсем умӗнче тӑракан политикӑллӑ тата творчествӑллӑ задачӑсене ҫав тери уҫҫӑн кӑтартса панӑ. Ҫав задачӑсене тӗрӗс пурӑнӑҫа кӗртсе пырсан кӑна пирӗн писательсем аслӑ совет саманине тивӗҫлӗ произведенисем пама пултараҫҫӗ.

Партин Центральнӑй Комитечӗ йышӑннӑ историллӗ постановленисене ҫирӗп асра тытса, пирӗн писательсем государствӑпа халӑх умӗнчи ответлӑха тарӑнраххӑн туйса ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Чӑн та, партин аслӑ кӑтартӑвӗсене пурӑнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе эпир мӗн кирлине пурне те тӑвайман-ха. Анчах ҫапах та эпир хамӑрӑн малтанхи утӑмсене палӑртма пултаратпӑр.

Чылай писательсем васкама, «пурăнăç тăрăх» çиелтен шăйăрттарма пăрахрĕç. Вĕсем халĕ хăйсен произведенийĕсене тĕплĕнрех шухăшласа çыраççĕ. Çак иртнĕ çулталăк хушшинче А. Алга Панфилов дивизийĕнчи 28 герой çинчен поэма çырчĕ, хайĕн фронт сăввисене пĕтĕçтерсе „Тăватă çулталăк" ятлă сăвă кĕнеки кăларчĕ. Я. Ухсай „Пĕр полк çинчен хунă сăмах", „Шăпчăк" ятлă икĕ поэма тата „Салтак кĕнеки" ятлă сăвă кĕнеки пачĕ. Уйăп Мишши „Чăваш çĕршывĕ" ятлă лирикăллă поэма пачĕ. Л. Агаков ачасем валли „Ылтăн вăчăра", „Вăрçă ачисем" ятлă икĕ пысăк повесть çырса пĕтерчĕ. Юлашки повеçшĕн вăл ача-пăчасем валли çырнă произведенисен конкурсĕнче иккĕмĕш преми илме тивĕçлĕ пулчĕ. Драматургсенчен Н. Айзман паянхи колхоз пурăнăçĕ çинчен—„Шуçăм килсен", А. Кăлкан—„Кўршĕсем", В. Алагер фронтпа тыл паттăрĕсем çинчен—„Икĕ юлташ" ятлă пьесăсем çырса пĕтерчĕç. Уйрăм писательсем прозăпа пысăк калăплă произведенисем парас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Н. Мранька революцичченхи чăваш ялĕ çинчен—пысăк роман, Хв. Уяр „Пăлхав" повеçĕн иккĕмĕш пайне çырать, повеçĕн пĕрремĕш пайĕ „Тăван Атăл" альманахăн 1945 çулхи 21—22-мĕш кĕнекинче пичетленнĕччĕ. Çак произведенире Уярăн пысăк пултарулăхĕпе таланчĕ палăрчĕ. П. Хузангай, С. Шавлы, И. Тукташ, Н. Евстафьев поэтсем çĕнĕ сăвă кĕнекисем кăларчĕç.

Кăçал Октябрьти социализмлă аслă революци 30 çул тултарнă май Чăвашсен государство издательстви Çеçпĕл Мишши, Хумма Çеменĕ, Д. Исаев, Н. Шелепи, С. Эльгер, М. Трубина, М. Данилов-Чалдун, Я. Ухсай, И. Ивник, А. Алга писательсен суйласа илнĕ произведенийĕсен уйрăм кĕнекисене кăларать. Паллă писательсен произведенийĕсене малтанхи хут çавăн пек суйласа илсе уйрăмшар кĕнекесем кăларни кашни писателĕн творчествипе анлăнрах та тĕплĕнрех паллашма май парать, çавăн пекех тата вăл пирĕн литература фондне пуянлатать.

Писательсен Союзĕн „Ялав" журналĕпе „Тăван Атăл" альманахĕнче паянхи куна, паянхи геройсен сăн-сăпатне кăтартса паракан калавсемпе очерксем, сăвăсемпе поэмăсем туха пуçларĕç. Анчах, хальхи вăхăт ыйтнипе танлаштарсан, ку ĕçе пĕрре те çителĕклĕ теме çук. Пирĕн прозăпа драматурги уйрăмах вăраххăн ўсее пыраççĕ. Вырăс литературинче проза ертсе пыракан тĕп жанр пулса тăчĕ пулсан, эпир хамăрăн чăваш прози пирки çакна калама пултараймастпăр-ха. Çавăн пекех критика та литературăна ертсе, çул кăтартса пыракан вăй пулса тăман. Пирĕн критиксем хальхи литературăна анализ тăвас тĕлĕшпе, писательсен паянхи ĕçĕнчи çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсене çутатса парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Писательсем хушшинче чăн-чăн творчествăллă дискуссисем хускалса каймаç-ха. Кунта хускатса, пуçарса, çул кăтартса пыраканни, паллах, критика пулмалла.

Пирĕн большевикла критика литературăн пысăк идейăлăхĕшĕн ҫине тăрса кĕрешме тивĕҫлĕ. Социализмла реализм принципĕсем чăваш литературинче мĕнле пурăнаҫа кĕрсе пынине конкретлă произведенисене анализ туса ҫутатса парасси—пирĕн критикăн тĕп задачисенчен пĕри пулса тăрать.

Ҫĕршывпа халăх умĕнче, уйрăмах пирĕн ҫамрăк ăру умĕнче писательсем пысăк парăмра тăраҫҫĕ-ха. Тăван республикăн паянхи пурăнăҫне, республикăра пулса иртнĕ социализмла пысăк улшăнусене, пирĕн рабочисемпе колхозниксем тата совет интеллигенцийĕ вăрҫă хыҫҫăнхи Сталинла пилĕкҫуллăха пурăнăҫа кĕртес тесе хастаррăн та паттăррăн ĕҫленине эпир, писательсем, халлĕхе кирлĕ пек ҫутатса парайман. Совет влаҫĕ пулнăранпа республика ҫĕрĕ ҫинче ҫĕнĕ хуласем, шултăра промышленноҫăн ҫĕнĕ предприятийĕсем ӳссе ларчĕҫ. Эпир хамăр пурăнакан ҫĕр те, пирĕн таврари ҫынсем те пĕтĕмпех улшăнчĕҫ. Ҫĕнелнĕ ҫĕр ҫинче ҫĕнĕ ҫынсем коммунизм тăваҫҫĕ. Ҫĕнтерӳҫĕ совет ҫыннине паянхи литературăра пĕтĕм улăпла сăн-сăпачĕпех курас килет.

Ҫак иртнĕ 30 ҫул хушшинче чăваш совет литератури пысăк утăмсем турĕ. Ҫав утăмсене тишкĕрсе тухсан, эпир хăюллăнах ҫапла калама пултаратпăр: хамăр чăваш халăхĕ утса тухнă ҫул-йĕрĕ, чăваш республикинче пулса иртнĕ социализмла улшăнусене чылаях анлăн ҫутатса паракан произведенисем пирĕн пур.

Тăван халăхăн авалхи йывăр пурăнăҫне, ытти халăхсемпе туслă пулса вăл хăйĕн ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн паттăррăн кĕрешнине Ф. Павловăн „Ялта", П. Осиповăн „Айтар" пьесисенче, С. Эльгерĕн „Хĕнхур айĕнче" поэмипе „Шурăмпуҫ килсен" тата „Вăрҫă кунĕсем" ятлă романĕсенче, Я. Ухсайăн „Тутимĕр" трагедийĕнче кăтартса панă. Октябрьти революципе граждан вăрҫи ҫулĕсенче пирĕн халăх ҫĕршыври политикăллă пурăнăҫа малтанхи хут чăн-чăнах массăллăн та активлăн хутшăннине, ҫĕршывра ҫĕнĕ тĕнче ҫуралнине, унтан пĕтĕм халăх хăйĕн хуҫалăхне кĕсама хĕрӳллĕн ĕҫе хутшăннине, ҫак аслă ĕҫе коммунистсен партийĕ ертсе пынине эпир Ҫеҫпĕл Мишшипе Ахах сăввисенче, Хумма Ҫеменĕпе Исаев Мĕтри тата Данилов-Чалдун калавĕсенче, Леонид Агаковăн „Пĕрре ҫуркунне" повеҫĕнче куратпăр. Индустриализаципе коллективизаци тапхăрĕнчи халăх хавасланăвĕ, чăваш ялĕнче ҫĕнĕ, социализмла йĕркесемпе йăласем ҫитĕнсе пыни уйăп Мишшипе Илья Тукташ, Петр Хузангайпа Андрей Петтоки сăввисенче, Иван Мучипе М. Трубина, К. Пайрашпа Долгов калавĕсенче, Н. Мранькапа Н. Айзман пьесисенче палăрса юлчĕ. Сталинла Конституци саманинче совет ҫыннисен патриотизмĕ, вĕсен творчествăллă активлăхĕ тата ҫӳллĕрех пусăма ҫĕкленнине эпир Ухсайпа Ивник, Алгапа Шавлы поэмисемпе сăввисенче, Уярпа Кибек калавĕсенче куратпăр,

Отечественнăй вăрҫăпа Аслă ҫĕнтерӳ самани тата вăрҫă

хыççăнхи мирлĕ строительство ĕçĕ чăваш писателĕсен çĕнĕрен-çĕнĕ произведенийĕсенче палăрса пырать.

30 çул хушшинче пирĕн литературăра паха та пысăк произведенисем ытла та сахалах мар çуралчĕç пулсан, çав тапхăрти творчество ĕçĕнче пирĕн талантлă писательсем чылаях ӳссе çитĕнчĕç пулсан, çакă вăл эпир хамăр умра тăракан пысăк задачăсене малашне татах та ăнăçлăрах татса парас шанчăка çирĕплетет. Литература ĕçне çĕнĕ вăйсем хутшăнаççĕ. Çамрăксенчен юлашки вăхăтра Алексей Афанасьевпа Егор Афанасьев, Василий Давыдовпа Валентин Урдаш, Степан Асланпа Василий Алендей, Анатолий Анатпа Алексей Воробьев, Александр Титовпа Александр Клеменьтев тата ыттисем те чылай пысăк шанчăк парса ĕçлеме тытăнчĕç.

Ленин—Сталин партийĕ литературăпа искусство работникĕсене чи малта тăракан пĕлӳпе—общество аталанăвĕн законĕсене пĕртен-пĕр тĕрĕс те тарăн çутатса паракан марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăшаллантарса пырать. Совет литературин творчествăллă меслечĕ—социализмла реализм, революциллĕ романтизмпа пĕтĕçсе пырса, писательсене çав тери анлă майсем уçса парать.

Октябрьти революципе пĕрле ура çине тăнă чăваш халăхĕн пултарлăх çăлкуçĕсем иксĕлми хăватлă. Чăваш писателĕсен йышĕ, çав пархатарлă çăлкуçĕсенчен вăй илсе тăрса, тĕнчери чи малта пыракан, чи идейăллă та чи революциллĕ вырăс совет литературин творчествăллă опытне вĕренсе пырса, аслă Сталин саманине тивĕçлĕ анлă та чаплă литература ӳстерсе чечеклентерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕ. Эпир хамăр умма Совет государствипе совет халăхĕ лартнă пысăк задачăсене татса паратпăрах, мĕншĕн тесен пире кулленхи творчество ĕçĕнче большевиксен партийĕ тата мухтавлă аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ хăй вĕрентсе, пулăшса, çул кăтартса пыраççĕ.

В. ДОЛГОВ

# И. Н. Ульяновăн педагогикăри ĕçĕсем çинчен калакан кĕнеке*)

1946 çулта Мускавра питех те паха кĕнеке пичетленсе тухрĕ. Çакă вăл—Н. И. Алпатов çырнă „Педагогическая деятельность И. Н. Ульянова“ ятлă кĕнеке. Унта пĕтĕм тĕнчипе паллă революционерăн, В. И. Ленинăн ашшĕ çинчен, Илья Николаевич Ульяновăн пурăнăçĕпе ĕçĕсем çинчен тĕплĕн çырса панă.

Халăха çутта кăларас ĕçре хăйсен ĕмĕрне ирттерекенĕ чаплă çынсем хушшинче И. Н. Ульянов чăннипех те малти вырăнсенчен пĕрне йышăнса тăрать. Вăл хăйĕн пархатарлă ĕçĕсемпе чăваш халăхне те калама çук пысăк усă панă. И. Н. Ульянов тăрăшнипе XIX-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурпайĕнче Чĕмпĕр кĕпĕрнинче пурăнакан чăвашсем хушшинче сахал мар шкулсем уçăлнă, вĕсенче çĕршер чăваш ачи вĕренсе тухнă, хут пĕлекен пулнă, хăйсен ăспуçне уçса çут тĕнчене куракан пулнă.

И. Н. Ульяновăн пурăнăçĕпе ĕçĕсене пирĕн лайăх пĕлмелле, вĕсем çинчен чăваш ĕçсыннисене каласа памалла.

Шăпах çак шухăшсене асра тытса, эпир Н. И. Алпатов кĕнекинче çав пĕтĕм совет халăхĕшĕн хаклă çын çинчен, аслă Ленин ашшĕ çинчен мĕн-мĕн çырнине кĕскен каласа парасшăн.

1

Н. И. Алпатов кĕнекин пĕрремĕш сыпăкĕнче И. Н. Ульяновăн çамрăк чухнехи пурăнăçĕ çинчен çырнă.

Илья Николаевич ашшĕ, Николай Васильевич Ульянов, хресчен çемьинче ÿссе çитĕннĕ. Пурăнăçĕ çитсе пыман пирки вăл Астрахань хулине куçнă та хулан чухăн çынсем пурăнакан пайĕнче пĕчĕк пÿрт илнĕ, çĕвĕ çĕлесе пурăнма тытăннă. Çакăнта вара 1831 çулхи июнĕн 26(14)-мĕшĕнче И. Н. Ульянов çуралнă.

Николай Васильевич çемьи пысăк çемье пулнă, чухăн пурăннă. Ачисем пурте вĕренме тăрăшнă, анчах нихăшĕ те шкула çÿреймен,—çуклăх хупласа тăнă.

1838 çулта Н. В. Ульянов вилнĕ. Тăватă ача тăлăха юлнă. Ун чухне аслă ывăлĕ Василий 16 çула кайнă, кĕçĕнни—Илья 7 çулта çеç пулнă.

---

*) *Н. И. Алпатов.* Педагогическая деятельность И. Н. Ульянова. Учпедгиз. 1946 г., 170 стр.

Василий Ульянов, ашшĕ вырăнне юлса, йăмăкĕсемпе шăлнĕне хăй ĕçлесе илнĕ укçапа усранă, ĕçлеме вĕрентнĕ. Пиччĕшĕ куллен-кун пулăшнипе Илья Николаевич хут вĕренме пуçланă, 1843 çулта Астрахань хулинчи гимназие кĕнĕ.

Гимназире вĕрентекен преподавательсенчен И. Н. Ульяновшăн, пуринчен ытла, А. В. Тимофеев ăшă кăмăллă çын пулнă. Вăл вырăс чĕлхи тата литература вĕрентнĕ. Çак преподаватель гимназистсене ырă шухăшсем панă, пайтах пулăшнă, тăван чĕлхене тата литературăна юратса пурăнма вĕрентнĕ. А. В. Тимофеев гимназире литература ыйтăвĕсем тăрăх калаçусем туса ирттернĕ. Унта гимназистсем хăйсем çырнă сочиненисене вула-вула панă. Çырма вара вĕсем Пушкин, Лермонтов, Гоголь, Тургенев, Жуковский пултарулăхĕ çинчен çырнă. И. Н. Ульянов çав калаçусенче икĕ сочинени вуласа панă: вĕсенчен пĕри „Объяснение некоторых синонимов" ятлă, тепри—„О сатирическом направлении в русской литературе" ятлă пулнă.

Тимофеевсăр пуçне, гимназире математикăпа тата физикăпа вĕрентекен преподавательсем—Н. М. Степанов, С. А. Озембловский, С. А. Колесников паллă вырăн йышăнса тăнă, вĕсем хăйсен ĕçĕнче чăн-чăн ăста пулнă, вĕренекенсене хăйсен пĕтĕм пĕлĕвĕсене пама тăрăшнă, математикăна юратма вĕрентнĕ.

И. Н. Ульянов пур предметсемпе те лайăх вĕренсе пынă, гимназирен кĕмĕл медальпе вĕренсе тухнă (ку вахăтчен çак гимназирен пĕр çын та кĕмĕл медальпе вĕренсе тухман).

1850 çулта Ульянов Хусан университетне физикăпа математика факультетне вĕренме кĕнĕ.

Хусанти университетра XIX-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче ĕçленĕ профессорсем хушшинче нимĕçсем ытларах пулнă. 30-40-мĕш çулсенчен тытăнса вырăс халăхĕнчен тухнă профессорсен хисепĕ çак университетра йышлăлансах пынă. Вĕсем хушшинче малти вырăнта тăраканĕ—чаплă математик, профессор Н. И. Лобачевский пулнă.

Прогрессивлă шухăшсене мала хурса ĕçлекен Лобачевский лекцийĕсене И. Н. Ульянов питех те пысăк кăмăлпа итленĕ. Лобачевский халăхшăн ĕçлеме чĕннĕ, халăх хушшине наука пĕлĕвĕсене сарма тăрăшнă.

„И. Н. Ульянов—Лобачевский ученикĕ пулнă", тет кĕнеке авторĕ Н. И. Алпатов (17 стр.).

Йывăр пурăнăçа пăхмасăрах, 1854 çулта И. Н. Ульянов Хусан университетĕнче вĕренсе пĕтернĕ те хăйĕн çырса панă ĕçĕшĕн математика наукисен кандидачĕн ятне илнĕ.

Çакăн хыççăн вăл Пензăра дворянсен институтĕнче физикăпа математика преподавателĕ пулса ĕçлет.*

---

*) Дворянсен институчĕсем Российăра 1833 çул хыççăн пуçланса кайнă. Вĕсем вăтам шкулсем пулнă; вĕсене дворян ачисене вĕреннĕ чухне ытти сословин ачисенчен уйăрас тесе уçнă.

И. Н. Ульяновăн ĕçĕсемпе шухăш-кăмăлĕсене, унăн сăнсăпатне уççăнтарах кăтартса парас шутпа Н. И. Алпатов унăн тусĕсем çинчен, унпа пĕрле ĕçленĕ çынсем çинчен те çырать. И. Н. Ульянов тусĕсем хушшинче Захаров, Логинов, Ауновский преподавательсем пулнă. Вăл Захаров патĕнче хваттерте пурăннă. Çавăнтах Ишутин кружокĕн пулас членĕсем—Каракозовпа Ишутин пурăннă. Захаровпа Логинов, тет кĕнеке авторĕ, И. Н. Ульянова Чернышевскипе Добролюбов кĕнекисемпе паллаштарнă. Анчах та, „Илья Николаевич революционер пулман", унăн шухăшĕсем, хăйсен прогрессивлăхĕпе палăрса тăнă пулин те, лăпкă шухăшсем пулнă; И. Н. Ульяновăн шухăшĕсем унчухнехи малта пыракан вырăс просветителĕсен шухăшĕсем пек пулнă (*Алпатов*, 23 стр.).

И. Н. Ульянов хăйĕн ĕçне лайăх пĕлекен ăста педагог, çемçе кăмăллă çын пулнă. Вĕренекенсем ăна питех те юратнă. Пĕвĕ енчен вăл типшĕмрех, пысăках мар çын, хăмăр куçлă пулни çинчен çыраççĕ ун патĕнче вĕреннĕ çынсем. И. Н. Ульяновăн мăшăрĕ, Мария Александровна Бланк—Ленин амăшĕ—шухăшсем тĕлĕшпе малта пыракан врач хĕрĕ пулнă.

1863 çулта И. Н. Ульяновпа М. А. Бланк Чулхулана куçаççĕ. „Кунта, Чулхулара, вăл педагогика ыйтăвĕсем çине хăй мĕнле пăхассине йĕркелесе çитерет, К. Д. Ушинскин, Золотовăн, Н. И. Корфăн положенийĕсене малалла аталантарать. Çак хулара—Добролюбовăн тăван çĕршывĕнче—Илья Николаевич Н. А. Добролюбовăн педагогика çинчен çырнă статьисене ăса илет..." (28 стр.).

Анчах та гимназири ĕç И. Н. Ульяновшăн çителĕксĕр, унăн сарлакăшĕ ансăр пулнă. Вăл, Швейцарин аслă Песталоцци педагог пекех, халăх хушшине туртăннă, халăх хушшине пĕлÿсем сарса, унăн пурăнăçне лайăхлатма тăрăшнă. „Вăтам шкулсенче педагог пулса ĕçлени уншăн çителĕксĕр пулма тытăннă" (*М. И. Ульянова*).

## II

1869 çулхи сентябрĕн 6-мĕшĕнче И. Н. Ульянова Чулхуларан Чĕмпĕр кĕпĕрнине халăх шкулĕсен (училищисен) инспекторĕ пулса ĕçлеме куçараççĕ (1874 çултан тытăнса вăл Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи халăх училищисен дирекцине ертсе пырать). Чĕмпĕре куçнă вăхăтранпа унăн пурăнăçĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланса каять; Ульянов ку ĕçре тата та ытларах халăхпа çыхăнса тăма тытăнать.

Кĕнеке авторĕ Н. И. Алпатов, И. Н. Ульяновăн ĕçхĕлне тĕплĕнрех çутатса парас тесе, Чĕмпĕр кĕпĕрнин вăл вăхăтри лару-тăрăвĕ çинчен, Чĕмпĕр хули мĕнле хула пулни çинчен çырса панă. Ун чухне Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи халăх çĕрĕçĕпе ытларах пурăннă. 1869 çул тĕлнелле çак кĕпĕрнери 1.300.000 çынран 75.000 çеç хула çынни пулнă, 15.000 çын фабрикăпа заводсенче ĕçленĕ.

Чĕмпĕр хули—дворянсен хули пулнă. Унта культурăллă пурăнăç шайĕ питех те аялта тăнă.

Земство статистики тăрăх, 1866 çулта Чĕмпĕр кĕпĕрнинче 639 шкул пулнă, вĕсенче 10 пин ача вĕреннĕ. Анчах та, чăннипе илсен, çав шкулсенчен нумайĕшĕ хут çинче çеç шутланнă. Вăл шкулсене уйрăмăн илсен, кашнинче вăтамран 8—16 ача çеç вĕреннĕ. Кĕпĕрнен 53 вулăсĕнче шкулсем вуçех те пулман.

Шкулсем кивĕ те начар çуртсенче хĕсĕнсе ĕçленĕ. Вутă çитмен, çĕмĕрĕк кăмакисенчен пĕрмаях тĕтĕм тухса тăнă. Вĕренекенсен учебниксем, хутпа карандаш çителĕксĕр пулнă е пачах та пулман. Çитменнине тата учительсем йышĕнче çурри ытла пупсем пулнă. Пĕлӳпе педагогика ăсталăхĕ енчен пĕтĕм учительсен хисепĕн 12%-чĕ кăна шкул ĕçне чăннипех те юрăхлă пулнă теме юрать.

Учительсем çулталăк пуçне вăтамран 68 тенкĕ шалу илнĕ.

„Тĕрĕссипе каласан,—тет Н. И. Алпатов,—И. Н. Ульянова ĕçе яриччен Чĕмпĕр кĕпĕрнинче халăха çутта кăларас енĕпе никам та ĕçлемен" (38 стр.).

Ку ĕç унчухне ытти нумай кĕпĕрнесенче те çавăн пекех пулнă. Çакăн çинчен шухăшласан, ирĕксĕрех В. И. Ленин сăмахĕсем аса килеççĕ:

„Халăх учителĕсене шалу парасси çинчен сăмах пырать пулсан, Россия чухăн. Учительсене питех сахал тӳлеççĕ. Халăх учителĕсем выçă лараççĕ, вутă хутман, пурăнма юрăхсăр çуртсенче шăнса ĕнтĕркеççĕ. Халăх учителĕсем хресченсем патĕнче хĕлле пӳрте илсе кĕртнĕ выльăхĕсемпе пĕрле пурăнаççĕ. Халăх учителĕсене кашни урядникех тарăхтарать, ялти кашни черносотенец е хăйĕн ирĕкĕпе ĕçлекен охранникпа сыщик хĕсĕрлесе тарăхтарать, тĕрлĕ пуçлăхсем учительсене тапăнса хĕсĕрлени çинчен ĕнтĕ каламалли те çук. Халăха çутта кăларнă çĕрте тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекенсене тӳлес пулсан, Россия чухăн, анчах харампыр дворянсене миллионшар, вуншар миллон тенкĕ тăкса панă чухне, вăрçă авантюрисене тунă чухне, сахăр завочĕсен хуçисемпе нефть королĕсене тата ытти çавăн пек харампырсене укçа панă чухне, Россия пуян" (*В. И. Ленин.* Собрание соч., т. XVI, 3-мĕш изд., 412 стр.).

Тем пекех йывăр пулин те, И. Н. Ульянов пĕтĕм вăйне шкул ĕçне парса ĕçлеме тытăнать. Хăйĕн ĕçне вăл икĕ енчен туса пырать: пĕрремĕшĕнчен, вăл учительсен йышне лайăхлатать, иккĕмĕшĕнчен, шкулсенче вĕрентессин пахалăхне çĕклет.

Шкулсем лайăх ĕçлеме тытăннă май хресченсем шкул çине урăхла пăха пуçланă. Шкул ыйтуне вĕсем пухусенче сӳтсе-явнă, шкулсене пулăшма тăрăшнă. Шкулсенче вĕрентессине тата учительсен кадрĕсене хатĕрлессине илсен, çакна каламалла: И. Н. Ульянов хăйĕн педагогика ĕçĕнче

К. Д. Ушинский шухăшĕсене тытса пырса вĕсене практикăра пурăнăça кĕртнĕ.

Çÿлтерехре эпир вăл вăхăтра Чĕмпĕр кĕпĕрнинче учительсем сахал пулнине палăртрăмăр. И. Н. Ульянов учительсене хатĕрлес ĕçе—вăраха ямасăр пурăнăçламалли задача тесе шутланă.

Вăл çулсенче Чĕмпĕрте педагогика курсĕсем ĕçлесе тăнă. И. Н. Ульянов хăйĕн тĕллевне пурăнăça кĕртмешкĕн шăпах çав курссенче учительсем хатĕрлессине лайăхлатнинчен тытăнать.

Чĕмпĕр хулинчи педагогика курсĕсем 1873 çулччен ĕçленĕ. Çак çулхине вара вĕсене хупнă та Пăрачкавра (с. Порецкое) учительсен семинарине уçнă.

Ку семинари çумĕнче те Ульянов курссем туса ирттернĕ. Сăмахран, вăл 1876 çулта çулла Пăрачкавра Улатăр, Кăрмăш, Ардатов уезчĕсенчи учительсене пухса вĕрентет. 1884 çулхи çулла çавнашкал курссене вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнче туса ирттернĕ.

Чĕмпĕрти педагогика курсĕсенче пуçламĕш шкулсем валли хатĕрленĕ учительсем—чăннипех те ĕçлеме пултаракан учительсем пулнă. Вĕсене „ульяновецсем", тенĕ*. Вăл учительсем çинчен В. Н. Назарьев акă мĕн çырнă: „Нимĕн иккĕленмелли те çук, И. Н. Ульянов ертсе пынă педагогика курсĕсенче вĕренсе тухнă çĕнĕ йышши учительсем унчухнех вăхăта хитрелетекен çынсем пулнă" (*В. Н. Назарьев.* Вешние всходы,-„Вестник Европы", № 4, 1898 ç.).

Халăх учителĕсем Илья Николаевича хăйсен тусĕ, хăйсене хÿтĕлекен çын тесе шутланă. Пĕр-пĕр учитель йывăр пурăнăça лексен-тусан, ăна И. Н. Ульянов сăмахпа та, ĕçпе те пулăшнă, хĕрхеннĕ, йăпатса кăмăлне çĕкленĕ. Анчах та вăл хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстерме тăрăшман, кахал учительсене тÿсме те пултарайман. Ĕçлекен, пĕтĕм вăйпа, тÿрĕ кăмăлпа ĕçлекен учителе Ульянов мухтанă, уншăн пĕтĕм чун-чĕререн савăннă.

И. Н. Ульянов чăваш шкулĕсенче ĕçлекен учительсене те нумай пулăшнă. Унăн çак тĕлĕшри паха ĕçĕсене пирĕн пушшех те лайăх пĕлмелле, çамрăксене каласа памалла.

## III

Чăваш ачисене хут вĕрентес енĕпе И. Н. Ульянов мĕнтери пысăк кăмăлпа тăрăшса ĕçлени çинчен Алпатов кĕнекин VI-мĕш сыпăкĕнче çырса панă.

Вăл вăхăтра Чĕмпĕр кĕпĕрвинче пурăнакан мордвасем, чăвашсем, тутарсем кĕпĕрнери пĕтĕм халăх хисепĕнче 31% таран шутланса тăнă.

---

* Кун пирки А. И. Ульянова-Елизарова хăйĕн „Из воспоминаний об Ильиче" ятлă статьинче лайăх çырса панă.

„Кĕпĕрнене Илья Николаевич киличчен,—тет Н. И. Алпатов.—вырăс мар халăхсен ачисемшĕн светски шкулсем пулманпа пĕрех“ (89 стр.).

Алпатов каланă тăрăх, вырăс мар халăхсене çутта кăларас ĕçĕн задачине пурăнăçа кĕртес çĕрте И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлев пĕр-пĕрне нумай пулăшнă. Çакăн çинчен çырнă май, кĕнеке авторĕ И. Я. Яковлева „Ульяновăн чи çывăх помощникĕ“ (89 стр.), „чи çывăх тусĕ“, „соратникĕ“, тет (90 стр.); Яковлев „чăваш ачисене хут вĕрентес, вĕсене валли шкулсем тăвас тĕлĕшпе час-часах ăна (Ульянова.—*В. Д.*) хăйĕн шухăшĕсене кала-кала панă, Ульянов çак ĕçре яланах пулăшса пынă“ (90 стр.).

Çак кĕнеке Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн ĕçĕнче Иван Яковлевича И. Н. Ульянов мĕнтери нумай пулăшнине кăтартса парать. Чĕмпĕрти шкул чăваш шкулĕсем валли учительсем хатĕрленĕ, вырăсларан чăваш чĕлхине кĕнекесем куçарнă, çĕнĕ учебниксем çырнă. Вăл шкул, чăваш ачисене вĕрентсе, вырăс культурипе паллаштарнă, чăвашсен куçĕсене уçнă, ăс панă. Çавăнпа та чăвашсем хăйсен ачисене çав шкулта вĕренме çĕршер çухрăмран илсе пынă (96, 97 стр. вулăр).

Шăпах çав паха ĕçсене асра тытса ĕнтĕ пирĕн литературăн малтанхи классикĕ Константин Иванов Чĕмпĕрти шкул çинчен 1908 çулта акă мĕнле йĕркесем çырнă:

Вĕсен чĕри Чĕмпĕрте,
Аслă чăваш шкулĕнче.
Кĕнекесем çаптарчĕç.
Çын хушшине салатрĕç.
Кĕçке ĕнтĕ куçĕсем
Уçăлаççĕ чăвашсен.
Кĕçке курма пуçларĕç,
Тĕнче кура пуçларĕç.
Çав ĕçсене кам турĕ,
Сак таранччен тăрăшрĕ!
Çак таранччен тарăхса,
Чăвашсемшĕн тăрăшса
Кун çулĕнче курнине
Кам каласа парĕ-ши?
Кам ырă ят сарĕ-ши?

(*„Хальхи самана“*).

Ульяновпа Яковлев ĕçĕ чăваш халăхĕн историйĕнче питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. И. Я. Яковлева илес пулсан, ку тĕлĕшпе В. И. Ленин сăмахĕсем пирĕншĕн ертсе пыракан кăтарту пулмалла*. Анчах çапла пулин те, иртнĕ вăхăтсенче буржуаллă националистсем Яковлев çинчен тем те пĕр каласа тултарчĕç, вăл: „патшан шанчăклă тарçи“, „Столыпин евчи“, терĕç.

---

* Эпĕ кунта В. И. Ленин Чĕмпĕр кĕпĕрнин исполкомне янă икĕ телеграммăна асра тытатăп.

Тăван халăх çине, унăн историйĕ çине çĕлен-калталла пăхакан тăшмансем çеç çавăн пек сивĕ те усал сăмахсем калама пултарнă.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе чăваш халăхĕ çав тăшмансен ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларчĕ, пĕтерсе тăкрĕ.

И. Н. Ульянов пирĕн халăха çутта кăларас ĕçре И. Я. Яковлева пулăшнă та, хăйĕн ăслă канашĕсемпе хавхалантарнă та:

„И. Н. Ульянов шкула пĕтĕм чун-чĕререн парăнса ĕçленипе ыттисене те ĕçре хавхалантарнă", тет Алпатов. (99 стр.).

## IV

Чăваш халăхĕн тусĕ—И. Н. Ульянов—хĕллехи тăманлă кунсенче, шартлама сивĕсенче, кĕрхи йĕпе-сапара Чĕмпĕр кĕпĕрни тăрăх çӳренĕ, шкулсене пырса вĕсен ĕçĕсене тĕпченĕ, чăваш шкулĕсенче пулнă, вĕсене ырă кăмăлпа пулăшнă, чăваш ачисем хут вĕреннĕшĕн хĕпĕртенĕ*.

1870 çулта декабрь уйăхĕнче И. Н. Ульянов Хутарта пулнă (ку сала унчухне Кăрмăш уездне, Чĕмпĕр кĕпĕрнине кĕнĕ, халĕ Çĕмĕрле районне кĕрет). Пуху пухтарнă вăл унта. Илья Николаевич Хутарти чăвашсен пухăвĕнче шкул уçасси çинчен каласа панă. Хутар хресченĕсем ырă çынăн сĕнĕвне пĕтĕм чĕререн хапăл туса йышăннă, шкул тăвас çĕрте ăна пулăшма тытăннă.

Вăл вăхăтра Кăрмăш уездĕнче 12—13 яла пĕр шкул тивнĕ (кĕпĕрнере 4—5 ял пуçне пĕр шкул пулнă). Çакна шута илсе, И. Н. Ульянов Кăрмăш уездĕнче шкулсем уçма тытăннă. Хутар шкулне вăл 1870 çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнче (çĕнĕ стильпе декабрĕн 18-мĕшĕнче) уçнă**. Çак шкулăн малтанхи çулсенче хăйĕн пайăр çурчĕ пулман. 1873 çулта çеç шкул çуртне туса çитернĕ (вăл çурт Хутарта халĕ те ларать). Вăл шкулăн малтанхи учителĕ, И. Н. Ульянов вĕрентнĕ çын—Александр Рождественский пулнă.

---

* И. Н. Ульянов чăваш шкулĕнче пулни çинчен Н. К. Крупская „В. И. Ленин и вопросы народного образования" ятлă паха статья çырса хăварнă („Юный коммунист" журналăн 1-мĕш №-рĕ, 1939 ç.).

** Кăрмăш уездĕнчи земство управи çак шкула хирĕç пулнă; унта шкул уçтарасшăн мар пулса, И. Н. Ульяновран мĕншĕн вăл унта шкул уçни çинчен хут çырса пама ыйтнă. Илья Николаевич вара 1871 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче акă мĕнле ответленĕ:

„...При открытии коей (школы.—*В. Д.*) в декабре 1870 г. в училище поступило 12 мальчиков, а в феврале текущего года учитель донес мне, что учащихся было уже 28 человек. *Такой прилив учащихся из чуваш и в такое короткое время, по-моему мнению, может считаться достаточным доказательством о пользе и необходимости существования училища в с. Ходарах...*" (Чăваш тĕп архивĕ, 207 фонд, 1-мĕш № дело, 46 лист, *курсив манăн—В. Д.*).

Хутар шкулĕн малтанхи выпускĕнче 12 ача вĕренсе тухнă. Вĕсене вĕрентсе кăларнă кун И. Н. Ульянов иккĕмĕш хут Хутара килнĕ*.

1872 çулта Хутар шкулĕ çинчен И. Н. Ульянов çакăн пек çырнă: „Хутарти училищере, 1870 çулта уçнăскерĕнче, 30 ача вĕренет, вĕсенчен вырăс ачисем—9. Вĕренекенсене 3 группăна уйăрнă. Вĕренӳ тĕлĕшпе шкулăн лару-тăрăвĕ лайăх. Учитель тăрăшса ĕçленине пула учениксем программăна ăнăçлăн вĕренсе пыраççĕ, вĕреннĕ материала ăнланаççĕ, ăна хăйсен сăмахĕсемпе каласа пама пултараççĕ“ (*Алпатов*, 96 стр.).

А. И. Ульянова-Елизарова каланă тăрăх, И. Н. Ульянов ĕçленĕ вăхăтра Чĕмпĕр кĕпĕрнинче вунçичĕ çул хушшинче 450 шкул туса лартнă, çапла вара, вăтамран илсен, кашни çул пуçне 26—27 шкул тивет**.

И. Н. Ульянов лартнă шкул çурчĕсем çутă та таса, ăшă пулнă. Коридор, пӳртекӳ (пăлтăр), шкул çумĕнчех учитель валли хваттер пулнă. Шкул çурчĕ тавра анлă килкарти тытса панă, пĕр пуçĕнче пахча-çимĕç лартмалли вырăн, тепĕр пуçĕнче—ачасем вылямалли площадка пулнă (эпĕ астăвасса та Хутарти шкул çавăн пекчĕ).

Ялти хресченсем хăйсен шкулне юратнă, çулсерен пулăшса тăнă, учительсемпе шкулсем валли вăрмантан вут-шанкă кăларнă.

И. Н. Ульяновран халăх ютшăнман: вырăсĕ, чăвашĕ, тутарĕ, мордвинĕ,—пурте унăн ырă кăмăлне туйса тăнă. Вăл вĕрентсе кăларнă учительсене те халăх юратнă, „ульяновецсем“ тесе чĕннĕ.

И. Н. Ульянов тăван çĕршывăн чăн-чăн гражданинĕ, патриочĕ пулнă. Тăван çĕршыва, Российăна вăл пĕтĕм чунхавалĕпе юратнă, ăна хăйĕн пĕтĕм пĕлӳне, пурăнăçне панă.

И. Н. Ульянов 1886 çулти январĕн 12-мĕш числинче вилсе кайнă. Кăнтăрла виçĕ сехетре вăл çулталăк отчётне çырса ларнă. Ывăннă пек пулнă та ручкине хурса кăштах канас тесе выртнă. Юнашар пӳлĕмре çемьи апат çисе ларнă. Ачисем, ашшĕне канма кансĕрлес мар тесе, шавламасăр ларнă.

Çак вăхăтра Илья Николаевич сасартăк кабинечĕн алăкне уçнă та юлашки хут хăйĕн юратнă çемьи çине пăхса илнĕ хыççăн каллех кабинета кĕрсе кайнă.

Унăн мăшарĕ, Мария Александровна, кабинета кĕрсе пăхнă та Илья Николаевич чĕтĕресе выртнине курнă. Пилĕк сехетре вара çак паллă çынăн, Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи халăх шкулĕсен директорĕн, В. И. Ленин ашшĕн, Илья Николаевич Ульяновăн чĕри ĕмĕрлĕхех тапма пăрахнă.

---

* Хутара пырсан, И. Н. Ульянов яланах Илья Ногаев патне чарăннă. Илья Ногаев, Ефрем Ногаев, Хрисанф Таньков тата ыттисем те И. Н. Ульянов çинчен пире кала-кала паратчĕç.

** „Рассказы о Ленине“. Сборник воспоминаний. ЦК ВЛКСМ. Издательство детской литературы, 1939 г. 18 стр.

## V

И. Н. Ульянов Российăра хамăр çĕршыври педагогика науки тытăнса кайса, аталанса пынă вăхăтра пурăннă. Хусанти университетра вĕреннĕ чухне ăна Н. И. Лобачевский паха воспитани панă. Çак аслă математикăн прогрессивлă шухăшĕсене И. Н. Ульянов ăсра тытса ĕçленĕ.

XIX-мĕш ĕмĕрĕн 50—60-мĕш çулĕсенче педагогика ыйтăвĕсем те пысăк вырăн йышăнса тăракан пулаççĕ. Белинскипе Герцен çынсене воспитани парас тĕлĕшпе çĕнĕ задача кăларса тăратаççĕ. Вĕсем каланă тăрăх, педагогика çынсене общество пурăнăçа активлăн хутшăнса ĕçлеме вĕрентмелле. Çак вĕрентĕве Чернышевскипе Добролюбов малалла аталантараççĕ.

Илья Николаевич физикăпа математика наукисене çеç мар юратнă, вăл педагогикăна, историе, илемлĕ литературăна та пĕтĕм чунхавалĕпе юратса вуланă. И. Н. Ульянов пуринчен ытла Рылеев, Некрасов, Добролюбов çырнисене килĕштерсе вуланă. Вăл час-часах Рылеевăн çак юррине хуллен юрлама юратнă:

> По духу братья мы с тобой,
> Мы в искупленье верим оба,
> И будем мы питать до гроба
> Вражду к бичам страны родной.

„Илья Николаевичра,—тет кĕнеке авторĕ,—этем тата гражданин лайăх пĕрлешсе тăнă" (133 стр.).

Унăн пайăр пахалăхĕсенчен пĕри гуманизм пулнă. Гуманизм ăна халăхшăн усă тăвас çулпа янă, вăл унăн шухăшкăмăлне йĕркеленĕ.

И. Н. Ульяновăн тепĕр пахалăхĕ—вăл халăхшăн ĕçлеме юратни. Çапла вара вăл шкул ачисене те ĕçе юратма, ĕçре тăрăшма вĕрентнĕ. Пур ĕçре те вăл тимлĕ пулнă, пур ĕçе те вăхăтра тунă.

И. Н. Ульянов нихăçан та хăйне мăнна хуман,—çакă вăл унăн сăпайлăхĕнчен, тӳрĕ кăмăлĕнчен килсе тăнă.

Илья Николаевич тăван çĕршывăн патриочĕ пулнă. Хăйĕн мĕнпур пахалăхĕсене вăл халăха панă, ывăлĕсемпе хĕресене панă, унчухне шкулсенче вĕреннĕ çамрăк ăрава панă, халăхшăн, тăван çĕршывшăн тивĕçлĕ ĕç тума вĕрентнĕ.

Унăн ячĕ совет халăхĕшĕн хаклă; çутă сăнарĕ çывăх. Çавăнпа та эпир Илья Николаевич Ульянова сума суса ырă кăмăлпа асăнатпăр, унăн ĕçĕсене вĕренетпĕр.

## ТУПМАЛЛИ

стр.
Аслă Мускава (*чăваш поэчĕсен саламĕ*) . . . . . . . . . . . . 3
Кузьма Турхан—Йăмраллă ял (*роман*) . . . . . . . . . . . . . . 18
Яков Ухсай—Влтава шывĕ хĕрринче (*поэма*) . . . . . . . . . . 120

**Критикăпа библиографи**

Аркадий Эсхель—Чăваш совет литератури . . . . . . . . . . . 142
В. Долгов—И. Н. Ульяновăн педагогикăри ĕçĕсем çинчен калакан кĕнеке . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 167

---

Ответственный редактор Я. Г. Ухсай.
Редколлегия: В. А. Долгов, М. Я. Сироткин, Ф. Е. Уяр, С. В. Эльгер.

Адрес редакции: г. Чебоксары, Дом печати.

НТ 05171. Подписано к печати 30/Х 1947 г. Заказ № 681. Объем 11,0 п. л.
Тираж 4000 экз.

г. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при Совете Министров Чувашской АССР.

ЧУВАШ...